# УМСĂМАХ

Тĕн кĕнекисен авторĕсем нумайăшĕ хăйсем мĕн çырнине хăйсем пекех çыравçăсем е Турă çинчен вĕрентекенсем вулассине шута илсе çыраççĕ. Ахаль, ĕретри, çын валли çырнă тĕн кĕнекине сайра тĕл пулатăн. Сирĕн аллăрти çак кĕнекене вара Турă çинчен вĕрентекенсемпе философсем валли мар, „урамри çын“ валли çырнă. Манăн çав çынна пурăнăçăн çĕнĕ йĕрки çинчен, икĕ пин çул ĕлĕкрех Галилея çĕрĕнче çӳренĕ пĕр çын кăтартса панă çул, пурăнăça пырса кĕмелли çул, çинчен каласа парас килчĕ.

Хире-хирĕçле шухăшсене эпĕ хускатмасăр хăварма тăрăшрăм: çав шухăшсем час-часах христиансен йышне пайăн-пайăн уйăрса пĕтерме çеç пулăшнă. Тата эпĕ кунта та, кулленхи пурăнăçăмри пекех, христиансен ĕненĕвĕ пирки никампа килĕшсе те, никам умĕнче чакса та хамăн шухăшăмран пăрăнман.

Эпĕ пĕр иккĕленӳсĕр ĕненетĕп: пурăнăç кĕрлевĕнче ĕретри ахаль тенĕ çын чунĕпе те, ăсĕ-хакăлĕпе те выçса çитнĕ, вăл халĕ Турра пĕлнĕрен, Турăпа пĕрле пулнăран килекен канăçлăхшăн хыпса çунать.

Эпĕ ăнланатăп: ку кĕнеке пĕрисене килĕшмĕ, тепĕрисене, тен, килĕшĕ те. Паянхи фарисейсене, хăйсен „тĕрĕслĕхĕн“ тумтирне тăхăнса капăрланма юратакансене, вăл, паллах, кăмăла килмĕ; çавăн пекех, пирĕн ĕненĕвĕн никĕсне хирĕçлекен паянхи садукейсем те ăна хапăл тумĕç... Водород бомбине тунăранпа вара, кобальт бомби çинчен калаçма тытăннăранпа вара пирĕн

хальхи чи çивӗч ыйтусене татса памалли вӑхӑтӑмӑр çитрӗ. Паянхи чӑнлӑха пирӗн куçран тӳррӗн пӑхмалла.

Сирӗн хушшӑрта, паллах, мӗнле те пулин çӗнӗ тӗн шыраканӗ те, çавнашкал тӗн йӗркине-юхӑмне хутшӑнма тӑрӑшаканӗ те тупӑнӗ. Унашкаллисене ман кӗнекем пулӑшаймӗ. Мӗн те пулин урӑххине вулӑр. Манӑн тӗллевӗм — сире пирӗн Туррӑмӑра Иисус Христоса пӗлме, Иисусӑн çӑлӑнӑç кӳрекен çулӗпе кайма пулӑшасси. Христиана манӑн чи таса ӗненӳпе тӗрек кӳрес килет, чи таса ӗненӳпе çӗкленме пулӑшас килет.

Пӗр енчен пӑхсан, эпӗ ку кӗнекене çултан çула хатӗрлесе пынӑ; тепӗр енчен пӑхсан, эпӗ ӑна васкавлӑ темиçе эрне хушшинче çырса хунӑ…

Кӗнекеме кӗнӗ шухӑшсенчен, пуплевсенчен нумайӑшӗ манӑн хамӑн мар — вӗсем манӑн çак çулсенче пур çӗртен те пухӑнса пынӑ. Вӑл е ку пуплеве ӑçтан илнине кӑтартман пулсан, пуплевӗ камӑнни-ӑçтанни халӑхра манӑçӑнине пӗлтерет, е халӑх асӗнче тахçан такам каланӑ сӑмахӑн хӗрӳлӗхӗ, ӗнетерӳлӗхӗ тӑрса юлнӑ.

„Турӑсӑр канӑçлӑх пулмӗ“ — ку кӗнекене эпӗ чӑннипех те чӗркуççи çинче тӑрса çырнӑ. Ӑна çырнӑ чухне эпӗ чӑнахах та Турӑ юнашарах тӑнине туйса ӗçлерӗм. Çак пӑтравлӑ, йывӑр вӑхӑтра ку кӗнеке сире Турӑпа пурсӑра та канӑçлӑх тупма пулӑштӑр тесе куллен кӗлтӑвӑп эпӗ.

Б. Г.

# ТУПМАЛЛИ

## 1-мӗш пайӗ: ЫЙТУСЕМ

1. Шырав . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
2. Библи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
3. Турă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
4. Çылăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 48
5. Усал . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66
6. Мӗн кӗтет пире вилӗм хыççăн? . . . . . . . . . . . . 78

## 2-мӗш пайӗ: ЫЙТУСЕНЕ ТАТСА ПАНИ

7. Христос çӗр çине мӗншӗн килнӗ? . . . . . . . . . . . . 99
8. Мӗнле тата мӗнрен тытăнмалла? . . . . . . . . . . . . 121
9. Ӳкӗнӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 131
10. Ӗненӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 140
11. Çӗнӗрен çурални . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 154
12. Шанăçлăхпа çăлăнăç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 165

## 3-мӗш пайӗ: ХРИСТИАН МАЛАШЛĂХӖ

13. Христиан тăшманӗсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 175
14. Христиан пурăнăçӗн йӗркисем . . . . . . . . . . . . . 188
15. Христиан тата ӗненекен ушкăн . . . . . . . . . . . . 200
16. Христианăн халăх хушшинчи тивӗçӗсем . . . . . 214
17. Христиан малашлăхӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 232
18. Юлашкинчен — канăçлăх! . . . . . . . . . . . . . . . 248

## Библи кӗнекисен ячӗсене кӗскетсе пани

Авалхи Сӑмах кӗнекисем

| | | |
|---|---|---|
| Пултарни | — | Моисейӗн малтанхи кӗнеки |
| Тухни | — | Моисейӗн иккӗмӗш кӗнеки |
| Хисеп | — | Моисейӗн тӑваттӑмӗш кӗнеки |
| 1 Пат. | — | Патшасен пӗрремӗш кӗнеки |
| Неем. | — | Неемия кӗнеки |
| Иов. | — | Иов кӗнеки |
| Псал. | — | Псалтирь |
| Юм. | — | Соломон юмахӗсен кӗнеки |
| Иса. | — | Исаия пророк кӗнеки |
| Иер. | — | Иеремия пророк кӗнеки |
| Иезек. | — | Иезекииль пророк кӗнеки |
| Дан. | — | Даниил пророк кӗнеки |
| Мих. | — | Михей пророк кӗнеки |
| Софон. | — | Софония пророк кӗнеки |
| Мал. | — | Малахия пророк кӗнеки |

Ҫӗнӗ Сӑмах кӗнекисем

| | | |
|---|---|---|
| Матф. | — | Матфей ҫырнӑ Евангели |
| Марк | — | Марк ҫырнӑ Евангели |
| Лук. | — | Лука ҫырнӑ Евангели |
| Иоан. | — | Иоанн ҫырнӑ Евангели |
| Иак. | — | Иаков апостол ҫырӑвӗ |
| Ап.Ӗҫ. | — | Апостолсен Ӗҫӗсем |
| 1 Пет. | — | Петр апостолӑн малтанхи ҫырӑвӗ |
| 2 Пет. | — | Петр апостолӑн иккӗмӗш ҫырӑвӗ |
| 1 Иоан. | — | Иоанн апостолӑн малтанхи ҫырӑвӗ |
| 2 Иоан. | — | Иоанн апостолӑн иккӗмӗш ҫырӑвӗ |
| Иуд. | — | Иуда апостол ҫырӑвӗ |
| Римл. | — | Рим ҫыннисем патне янӑ ҫыру |
| 1 Кор. | — | Коринф ҫыннисем патне малтан яни |
| 2 Кор. | — | Коринф ҫыннисем патне иккӗмӗш хут яни |
| Гал. | — | Галатия ҫыннисем патне яни |
| Ефес. | — | Ефес ҫыннисем патне яни |
| Фил. | — | Филиппы ҫыннисем патне яни |
| Кол. | — | Колоссы ҫыннисем патне яни |
| 1 Фесс. | — | Солунь ҫыннисем патне малтан яни |
| 2 Фесс. | — | Солунь ҫыннисем патне иккӗмӗш хут яни |
| 1 Тим. | — | Тимофей патне малтан яни |
| 2 Тим. | — | Тимофей патне иккӗмӗш хут яни |
| Тит. | — | Тит патне яни |
| Филим. | — | Филимон патне яни |
| Евр. | — | Еврейсем патне яни |
| Апок. | — | Апокалипсис |

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

# ЫЙТУСЕМ

## ПӖРРЕМӖШ СЫПӐК

# ШЫРАВ

„Енчен те Мана хӑвӑрӑн пӗтӗм чӗрӗртен шыратӑр пулсан, шырӑр вара Мана, вара тупайӑр“.

Иер. 29:13

Çуралсанах сирӗншӗн аслӑ шырав пуçланнӑ. Хӑвӑр çакна ӑнланса иличчен сирӗн пайтах çул иртӗ-и, тен. Анчах шыранӑ, шыратӑр та. Вӗçӗмсӗр. Хӑвӑрӑн нихӑçан та пулман темӗнскере шыратӑр, хӑвӑршӑн пурӑнӑçра чӑн кирлине, пуринчен те кирлӗреххине шыратӑр. Тепӗр чухне эсир çакӑн çинчен манма та тӑрӑшса пӑхнӑ. Тепӗр чухне манӑçма та тӑрӑшнӑ: паян-ыран тумалли ӗçсемсӗр пуçне, мӗн те пулин урӑххи валли вӑхӑт та, шухӑш та ан юлтӑр тенӗ. Тепӗр чухне эсир ячӗ те çук çав темӗнскере шырассинчен хӑтӑлнине те туйнӑ-и, тен. Çав шырава яланлӑхах пӑрахас темелле самантсем те пулнах сирӗн. Анчах чӗрӗрте, курӑсӑр, шырас килекен туйӑм çӗнӗрен капланса хӑпарнӑ, эсир вара шырава каллех те каллех çӗнӗрен тытӑннӑ.

Пурӑнӑçӑрта пӗччен юлнӑ самантсенче эсир, ытти хӗрарӑмсемпе арçынсем çине пӑхса, хӑвӑртан хӑвӑр: вӗсем те шыраççӗ-ши? — тесе ыйтнӑ. Хӑйсем мӗн шыранине калама та пултарайман, анчах çавӑнсӑр тунсӑхлакан, хӑйсене питӗ-питӗ кирлӗ çав темӗнскере... шыраççӗ-ши? — тенӗ. Хӑшӗ-пӗри вӗсенчен, çав „ытти“ хӗрарӑмсемпе арçынсенчен, хӑвӑртан чылай телейлӗрех пек курӑннӑ

сире. Вĕсен çĕклемĕ çăмăлрах пек туйăннă. Пĕрисем, авă, мăшăрланура, çемьеллĕ пурăнăçра çырлаху тупнăтăр. Теприсем, — мухтавĕпе пуянлăхĕ çумне татах мухтавпа пуянлăх хушма, ют çĕршывсене тухса кайнă. Виççĕмĕшĕсем килĕсенчех юлнă, килĕсенчех телей курса пурăнаççĕ. Çавсене пăхса эсир: „Ку çынсен пысăк, асаплă шырав çук. Вĕсем хăйсен çулне тупнă. Хăйсене мĕн кирлине пĕлнĕ вĕсем, илме пултарнă ăна. Эпĕ анчах ниçта та илсе çитереес çук çулпа утатăп. Хама хам ыйтусем парса асаплантаратăп, шыратăп, такăнатăп хамăн çак тĕттĕм çулăм çинче. Хуйха ӳкерет ку çул, мĕншĕн тесен унăн çул маякĕсем çук“, — тесе шухăшланă-и, тен.

Анчах эсир пĕччен мар. Пĕтĕм этемлĕх сирĕнпе пĕрле çул çинче, мĕншĕн тесен пĕтĕм этемлĕхе çав шырав çулăмĕ ярса илнĕ. Пĕтĕм этемлĕх хăй çухалса кайнин, кăмăлĕ-хастарĕ халсăррин, чунĕ пушанса юлнин, шухăшĕсем йывăррин сăлтавне шырать. Пĕтĕм этемлĕх хăйшĕн тăракана, хăй хутне кĕрекене тупасшăн, вăл чун канăçлăхĕпе лăпкăлăх йăлăнса ыйтать.

Пире: эпир пăлхануллă вăхăтра пурăнатпăр, тесе калаççĕ. Историксем: çынсем хальхин пек сехăрленӳпе шанăçсăрлăх историре темиçе хут анчах тӳссе ирттернĕ, теççĕ. Ĕнтĕ хăнăхнă пĕр йĕрке-тирпей юлмарĕ темелле, — юптарарсарах каласан, тĕрек юписене шыв юхратса кайнă, кĕперсем сăвайсăр, çурт тăррисем ишĕле-ишĕле аннă. Эпир тăнăçлă — мирлĕ — пурăнăç çинчен калаçатпăр, çав тери тĕплĕ плансем палăртатпăр, анчах хăрушсăрлăхĕ çаплах çук. Эпир хамăр çумран ишсен иртекен кашни улăм пĕрчи еннелле алă тăсатпăр, анчах, эпир ăна тытма май ӳкерсен те, вăл тахăш самантра алăран вĕçерĕнсе шыва путать, çухалать.

Мĕн тахçантанпах ĕнтĕ, ăруран ăрăва, эпир сехĕрленсе ӳкнĕ ачасем пек ыткăннă та талпăннă — вĕçĕ пи-

тӗрӗнчӗк пӗр урамран тепӗр урама чупнӑ... Кашни хутӗнчех эпир: ку тӗрӗс ҫул, вӑл хамӑр ҫитес тенӗ ҫӗре илсе ҫитерӗ, тесе йӑпаннӑ. Кашни хутӗнчех вара йӑнӑшнӑ.

Эпир суйласа илнӗ малтанхи ҫулсенчен пӗрийӗ „политика ирӗклӗхӗ“ ятлӑччӗ. „Парӑр кашнинех политика ирӗклӗхӗ — телейлӗ тӑрӗ тӗнче!“ — тесе шавлвттӑмӑр. „Ҫул кӑтартса пыракансене суйлама хамӑра ирӗк парӑр, вара пирӗн пурӑнма юрӑхлӑ пурӑнӑҫ пулӗ“, теттӗмӗр. Ҫапла эпир политика ирӗклӗхӗ илтӗмӗр, анчах тӗнчемӗр лайӑхланни пулмарӗ. Хаҫатсем кунсеренех патшалӑха ертсе пырас ӗҫ таврашӗнчисене укҫапа ҫавӑрни ҫинчен, вӑйлисен хӳттинче ӳссе пыракан йӗксӗксем ҫинчен, пусмӑрлӑх чакманни ҫинчен, влаҫрисен икӗпитлӗхӗ ҫинчен ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен хыпар ҫитерсе тӑраҫҫӗ. Политика ирӗклӗхӗ — хаклӑ та кирлӗ япала, анчах вӑл пӗр хӑй кӑна пире ырра шанса кӗтнӗ пурӑнӑҫ параймӗ.

Тепӗр питӗ шаннӑ ҫулӗ „пӗлӳ илесси“ ятлӑччӗ, ӑна нумайӑшӗ ӗненсе тӑратчӗ. Политика ирӗклӗхӗ тата пӗлӳ — ҫакӑ вӑл пур чиртен те тӳрлетӗ, тетчӗҫ вӗсем; пурсӑмӑр та вара пӗлӳ илес ҫул ҫине пуҫа ҫапса ҫурасла талпӑнса ыткӑнтӑмӑр. Вӑл пире уҫӑмлӑ, ҫутӑ, ӑслӑ ҫул пек туйӑнатчӗ, шанӑҫпа хавхаланса нумай хушӑ ун тӑрӑх утрӑмӑр. Анчах ӑҫта илсе ҫитерчӗ вӑл пире? Ӑҫтийӗ паллӑ. Эпир халӗ темӗн те пӗлекен мӗскӗнсем. Акӑ, пирӗн студентсем кӑна физика законӗсене Аристотель вӑхӑтӗнчи чӑн чаплӑ ученайсенчен лайӑхрах, нумайрах пӗлеҫҫӗ. Ҫапах та, пуҫӑмӑрсем пӗлӳпе нӑк тулнӑ пулин те, чӗремӗрсем пирӗн пушӑ.

Ытти пур ҫултан та чӑн илӗртӳлли „пурӑнӑҫӑн ҫӳлӗ шайӗ (е стандарчӗ)“ теекенни пулчӗ. Кашни-пӗри тенӗ пекех куна вара шанма юрать, вӑл хӑйӗн автоматла майӗпех мана лайӑх, савӑнӑҫлӑ пурӑнӑҫа илсе ҫитерӗ тесе шутланӑ. Ҫак ҫул чӑн тӗрӗсси пек туйӑннӑ. „Кнопкӑна пусӑн та — пурте хатӗр пулӗ“...

Сĕтеклĕн сăрласа ӳкернĕ рекламăсемпе пĕлтерӳсем, акăш-макăш капăр автомобильсем, йăлкăшса ларакан çĕнĕ йышши холодильниксемпе кĕпе çумалли машинăсем, çап-çутă çатмасем çинче ăшаланакан самăр чăхсем, сысна çурисем — акă мĕн çуммипе астарса кайрĕ пире çак çул. Ку хутĕнче хамăр тĕрĕс карт туртса кăларнăн туйăнчĕ пире. Ытти çулсем, тен, йăнăш çӳретнĕ пулĕ, ку вара кирлĕ çĕре илсе тухатех!..

Юрĕ, йĕри-тавралла çавăрăнса пăхăр халĕ. Шухăшлăр, курăр, паянхи кун — эсир шăп çак кĕнекене вуласа ларнă самантра — Америка мĕнлерех çĕршыв-ши-ха вăл? Пĕлĕр, унта политика ирĕклĕхĕ ытти нумай çĕрте тĕлленме те майĕ çук çӳлĕ шая çĕкленнĕ. Америкăра пĕлӳ илессин питĕ хӳхĕм йĕркине туса хунă, çавăн пекех, пире тата пурăнăçăн тулăх тăракан шайĕшĕн тĕнчипех мухтаççĕ. „Американсен пурăнăç йĕркийĕ“ (американский образ жизни) — çапла калама юрататпăр эпир хамăрăн пĕтĕмпех электрификациленĕ, пĕтĕмпех автоматизациленĕ, хромпа та никельпе йăлтăртатса тăракан экономикăна. Анчах телей пачĕ-и-ха вăл пире? Пачĕ-и вăл пире савăнăç, çырлаху? Хамăр шыранă пурăнăç тупсăмне пачĕ-и?

Çук, параймарĕ.

Çапла, эпир хамăрччен сахал мар ăру тĕмсĕлсе ĕмĕтленнĕ çитĕнӳсемпе мухтанатпăр, анлă тинĕссем урлă, ĕлĕкхилле темиçешер уйăх çухатмасăр, темиçе сехетрех ишсе каçайратпăр, темĕнле хăрушă чирсене парăнтаратпăр, çĕр айĕнчи, тĕнче уçлăхĕнчи кăткăс вăрттăнлăхсене пĕлсе пыратпăр. Анчах самантлăха та пулин çухататпăр-ши ăшри пушăлăх туйăмне? Хамăра темĕн çитменни çинчен манса кайма пултаратпăр-и? Май параççĕ-и хальхи тĕлĕнтермĕшсем пире çырлахса лăпланма? Эпир пурне те кирлĕ пек туса пынă, пурне те кирлĕ пек туса

пыратпӑр, пурте, пурте кирлӗ пекех пулса пырӗ теме май параҫҫӗ-и вӗсем? Эпир мӗншӗн пурӑннине ӑнлантарса пама, пирӗн мӗне вӗренсе мӗн пӗлсе ҫитмеллине кӑтартса тӑма пултараяҫҫӗ-и?

Ашри, чӗрери хӑрушӑ пушӑлӑх туйӑмӗ малалла та пымӗ-и вара? Тӗнчери кашни ҫӗнӗ открыти сире чун канӑҫлӑхӗ кӳрейрет-им? Хӑвӑрӑн пӗчченлӗхӗре, хевтесӗрлӗхе унччченхинчен сахалтарах туйма тытӑнӑйратӑр-им? Ҫынна шиклӗхӗнчен, кураймалӑхӗнчен, пӑсӑклӑхӗнчен сиплесе сыватма кирлӗ пӗр-пӗр хӑватлӑ эмел лаборатори пробиркинче пулса тӑрса тупӑнайрать-им?

Наука, ҫын хӑй шутланӑ пекех, ҫынна кирлӗ япала нумай пачӗ. Куна хирӗҫ нимӗн те калаймӑпӑр. Анчах ҫав науках пирӗн аллӑмӑра халиччен нихҫан пулман хӑрушӑран та хӑрушӑ „парне" ӳкерчӗ. Ку парне ҫӗр ҫинчи пӗтӗм пурӑнӑҫа, ҫӗр ҫинче пурӑнан пур чӗрӗ чунӑн пуласлӑхне пӗр самантра пӗтерсе пӑрахма пултарать. Вӑл пирӗн вӑранакан ӑнланулӑхӑмӑр ҫийӗн хӑрушӑ мӗлке пек кармашса ҫӗкленет. Вӑл пирӗн ачамӑрсен тӗлӗкӗсенче сехре хӑппи килтерсе алхасать. Эпир хамӑра вӑл ҫук пек тыткалама тӑрӑшатпӑр. Эпир ҫав парнене илмен пек курӑнма хӑтланатпӑр: курман, илтмен, пӗлместпӗр имӗш, пӗтӗмпе ку шӳт кӑна имӗш. Акӑ, пӗр-пӗр ир вӑранса кайӑпӑр та — водород бомбине чӑннипе никам та шутласа тупман иккенне, атом бомби те нихҫан та пулман иккенне курӑпӑр... Ҫук ҫав, почтальон тин кӳрсе панӑ хаҫат пире ҫав бомбӑсем пулни, пурри ҫинчен калать.

Акӑ мӗн пачӗ пире „пурӑнӑҫӑн ҫӳлӗ шайне" илӗртсе йыхӑрнӑ ҫул.

Ытти ҫулсем те пур, сахал мар. Акӑ, ҫак самантра та нумайӑшӗ, паллах, ҫав ҫулсемпе пырать. Кусем — мухтавпа ӑнӑҫу, киленӳпе влаҫ ҫулӗсем. Вӗсенчен нихӑшӗ те, путлӑх лачакисӗр пуҫне, ниҫта та илсе ҫитерейместь. Эпир

хамӑрӑн пӑтранчӑк шухӑшӑмӑрсен эрешмен картиӗнче чӑлханса пӗтнӗ. Питӗ ӑслӑн шыраса тупнӑ танатара ҫав тӗрлӗ ҫирӗппӗн ларатпӑр, ҫавӑнпа ӗнтӗ хамӑра вилесле асаплантаракан чир сӑлтавӗсене те курмастпӑр, унпа мӗнле кӗрешмеллине те пӗлместпӗр.

Кирек мӗнле чире хирӗҫ те эмел пур тени тӗрӗс пулсан, пирӗн ӑнаваскасах шыраса тупмалла. Цивилизаци сехечӗн йӗпписем хӑвӑрт ҫаврӑнвҫҫӗ. Енчен те ҫутталла илсе тухакан ҫул — чунпа кӑмӑл тасалӑхне таврма пултаракан ҫул — питӗрӗнсех ларман пулсан, пирӗн вӑхӑта пӗр сехет те сая яма юрамасть.

Хамӑрӑн хальхи кансӗр вӑхӑтӑмӑрта нумайӑшӗ такӑнать, хӑйсен пӗтӗм тӑрӑшӑве путлӑха тата тарӑнрах путса пыни анчах иккенне курать. Пӗр тӗслӗх илсе пӑхар акӑ. Пӗр ҫултарӑкра Америка ҫыннисем хӑйсен „пулас-килсе шӑпине каласа кӑтартнӑшӑн“ юмӑҫсене ҫӑр ҫирӗм пилӗк миллион доллар тӳленӗ! Хӑйсене асаплантаракан ыйтусем пирки мӗн те пулин илтессишӗн, тӗрӗсрех каласан, суя лӑплантару сӑмахӗ илтессишӗн, аптӑраса ӳкнӗ ҫынсем, хӑйсем пекех шикленсе ҫитнӗ ҫынсене тӳлесе, авӑ мӗн чухлӗ доллар тӑкакланӑ.

Пӗр ҫулталӑкрах тата утмӑл пин ытла американ хӑй ҫине алӑ хунӑ. Вӗсем, этем ӑсӗ-аллипе тунӑ цивилизаци джунглийӗнче аташса ҫӳриччен, пуҫа вилӗм аллине пани лайӑхрах тесе шутланӑ.

Ҫапла ӗнтӗ эсир: „Ӑҫта эпир халӗ?“ — тесе ыйтма пултаратӑр. „Ӑҫта эпир, ӑҫталла каятпӑр?“ Ирӗк парсамӑр мана хӑвӑр ӑҫтипе хӑвӑр мӗнлине каламашкӑн. Эпир шанчӑкпа ӗмӗте ҫухатнӑ ҫынсен нациийӗ. Пирӗн пуҫӑмӑрсем тӗрлӗрен пӗлӳпе тулса ларнӑ, чунӑмӑрсем вара — пуш-пушӑ. Эпир: пирӗн ҫамрӑксен хӗрӳлӗх, хавхалану, ӗҫлес, малалла талпӑнас кӑмӑл ҫук, тесе ӳпкелешетпӗр. Мана кашни кунах ҫамрӑксен ашшӗ-амӑшӗсемпе кала-

çма тивет. Вĕсем хăйсен ачисемпе мĕн пулса пынине ăнланманни çинчен калаççĕ: нимĕнле тăрăшу та çук-мĕн çав ачасен, ыйтма кăна пĕлеççĕ, хăйсемшĕн пурте хатĕр, янтă пулнине çеç юратаççĕ... Апăрша ашшĕ-амăшсем тăна илейместĕ: вĕсен нумай вĕреннĕ, тимлесех пăхса çитĕнтернĕ ачисем чăннипе шалтан-ăшран пуш-пушă. Вĕсен ĕçе савăнăç тесе йышăнма пулăшакан пысăк чун хавалĕ çук. Хавасланасах малалла талпăнма хăюлăхĕ çитмест. Мĕншĕн вĕсем çапла пуш чечекĕн ӳссе çитĕнеççĕ-ши-ха? Мĕншĕн тесен, вĕсем хăйсем ăçтан килнине те, хăйсем халĕ мĕншĕн кунтине те, ăçталла кайса пынине те пĕлмеççĕ.

Вĕсем йĕрки-йĕркипе лартса тухнă хӳхĕм автомобильсем пек: çав машинăсен пур пайĕ те пĕр кăлтăк-сăлтăксăр, питĕ тĕплĕн тимлесе тунă вĕсене, анчах бакĕсене бензин тултарман — пуш-пушă. Тулашĕнчен пăхма капăр та чаплă, шалта вара — пушăлăх, вăйсăрлăх. Çавăнпа вĕсем ниçта тапранмасăр пĕр вырăнтах лараççĕ, тутăхса-хăрса япăхаççĕ... Кичеммипе тутăхаççĕ.

Кашни çын пуçне тивĕçекен кичемлĕхпе тунсăх тĕлĕшĕнчен Америка пĕрремĕш вырăн йышăнать теççĕ. Эпир çакна аван пĕлетпĕр, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра канма, чуна йăпатма тесе темĕн те пĕр туса тултарнă. Ытти нихăш çĕршывринчен те ытларах, темĕн чухлех! Ăшран чухăн çынсем пушă вăхăта та пулин ирттерме пĕлмеççĕ. Вĕсен, хăйсене йăпатчăр, хаваслантарччăр, култарччăр, пĕр çур сехетлĕхе те пулин чун канăçлăхĕ кӳччĕр тесе, ытти çынсене укçа тӳлеме тивет. Укçа тăккаласах пĕчченлĕхпе çухату туйăмĕнчен самантлăха та пулин хăтăлма тăрăшаççĕ.

Эсир, тен, тунсăхпа кичемлĕх пит пысăк инкекех марха вăл тесе шутлатăр пулĕ. Кашни çынна, ара, тапхăр-тапхăр тунсăх пусса килет, тем мар, пулман-курман

япала мар. Юрĕ. Анчах мĕн калăр-ши эсир пĕтĕм çĕршыва, çынсен ăсне-чунне асат хуçнă пек пĕксе антаракан тунсăх пирки? Турă пултарнă япаласенчен, Турă пултарнă чунсенчен пĕртен-пĕр этеме кăна тунсăхлама, кичемленсе çӳреме пӳрнĕ. Çынсăр пуçне, пĕр чĕрĕ чун та хăйне хăй йăлăхтарса çитерме е хăй таврашĕнчи лару-тăрупа йăлăхса çитме пултараймасть. Çакă вăл хамăр çинчен шухăшланă чух питĕ астуса тămалли самант. Тĕнчене Пултаракан пĕр нимĕне те тĕллевсĕр туман. Енчен те Вăл этеме тунсăхламалла тунă-тăк, çакăн унăн хăйĕн тĕллевĕ пулнă. Тунсăх — пирĕн шалти пушăлăх мĕн тери пысăкки-пĕчĕккине пĕлме пулăшакан майсенчен пĕри. Вăл термометр пекех тĕрĕс кăтартать.

Ялан тунсăхлакан çын пушăлăхра пурăнать, ĕçĕ те унăн пушăлăхра иртет. Ăшĕнче унăн — пушă. Çутçанталăк вара пушăлăха тӳсеймест, ăна мĕнпе те пулин тултаратех. Пĕр тăхтамасăр!

Пушанса юлнă çынсен нацийĕсемпе мĕн пулса иртнине пĕлес тесе пирĕн тахçанхи сĕм аваллăхсене тавăрăнма кирлех те мар. Европăри хăш-пĕр çĕршывсен хамăра çывăхрах историне пăхсан та çитет: çутçанталăк тени, пурăнăç йĕрки çынсен чун-чĕринче пушăлăха тĕлĕнмелле хăвăрт тултарса пынă. Турă Сывлăшĕпе тăракан çыннăн чунăпе чĕринче нимĕнле „измсем“ те (атеизм, коммунизм т.ыт.те) вырăн тупма пултараймаççĕ, чухăнланса юлнă чун-чĕрепе ăс-тăна вара вĕсем пит çăмăллăн кĕрсе вырăнаçаççĕ.

Çапла, çутçанталăк пушăлăха тӳсме пултараймасть, анчах хамăрăн шалти пушăлăха мĕнпе тултарасси пирĕнтен хамăртан, хамăр кăмăлтан килет.

Акă мĕнле лару-тăрура эпир паян, шанчăкпа ĕмĕте çухатнă çынсем! Эпир хамăр чунăмăрсене наукăпа, пĕлӳпе, лайăх пурăнăç йĕркипе, тĕрлĕрен киленӳпе те

йӑпанупа тултарма пикене-пикене пӑхнӑ, анчах... пурпӗрех те эпир пушӑ.

Мӗншӗн-ха эпир ҫапла пушӑ? Мӗншӗн тесен, Пултаракан — Турӑ — пире Хӑй валли пултарнӑ. Турӑпа хутшӑнса тӑмасӑр эпир хамӑра хамӑр тупаймӑпӑр. Турӑпа хутшӑнса тӑманнисен нихӑҫан та кӑмӑл ҫырлахӑвӗ ҫук, чун канӑҫлӑхӗ ҫук, телейлӗ вырӑнӗ ҫук.

Иисус Христос пире тахҫанах каланӑ: „ҫын ҫӑкӑрпа анчах пурӑнмасть“, тенӗ (Лук. 4:4), анчах эпир ҫакна тивӗҫлипе ӑша хывма пӗлмен. Эпир хамӑрӑн ӑна-пуҫа тӗрлӗрен йышши „ҫӑкӑр“ тӗрсе кӳпӗнсе кайрӑмӑр, чирлесе ӳкрӗмӗр.

Эпир чунӑмӑрсенчи хӑрушӑ пушӑлӑха тӳссе пурӑнма хал ҫитерейместпӗр, хамӑр умра ӗмӗте татса выртакан хӑраххӑн ҫул ҫине пӑхма пултараймастпӑр. Пире чунӑмӑрсенчи курайманлӑхпа ҫӑткӑнлӑх, ҫылӑхлӑ шухӑшсем калама ҫук ывӑнтарса ҫитернӗ, анчах пирӗн вӗсенчен хӑтӑлса чунӑмӑрсене мӗн те пулин урӑххипе, лайӑхраххипе, тултарма вӑйӑмӑр ҫитмест.

Вӑхӑт пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Пирӗн алӑра, акӑ, ҫӗр ҫинче мӗн пуррине йӑлт пӗтерсе тӑкма пултаракан хӑват пур. Ҫавна пула текех ӗнтӗ эпир суя ҫулсемпе ҫухалса ҫӳреме пултараймастпӑр — юрамасть! Паллӑ мар тенӗ ҫулсене тишкӗрсе тӗпчеме те, питӗрӗнчӗк тенӗ урамсене те пырса тухма юрамасть. Ҫук пирӗншӗн текех ҫавӑн чухлӗ вӑхӑт! Пирӗн ӑру хамӑрчченхи ӑрусем влаҫпа, чарусӑрлӑхпа ашкӑннӑ чӑн ухмалха вӑхӑтсенче тума ӗмӗтленнӗ е тума хӑтланнӑ ӗҫе туса пӗтерчӗ. Ӗнтӗ пирӗн алӑра — кирек хӑш самантра та хыпса илсе пӗтӗмпе пӗтерсе пӑрахма хатӗр хӑватлӑ хӗҫ-пӑшал. Эпир этемлӗх ӑссӑрлӑхӗн чи ҫӳле ҫӗкленнӗ шайне куртӑмӑр: атом шӗкӗлченчӗ!.. Шӗкӗлченмелле марччӗ унӑн, ҫав сатаналла хӑрушӑ япалан...

Çĕр чăмăрĕ çинчи пысăк ăслă çынсем çак хăрушлăха тупассишĕн, çак хăрушлăха туса çитерессишĕн тăрăшса ĕçленине мĕн тери савăнса пăхса тăчĕç пулĕ хура ăшлă усалсем!

Шĕкĕлченнĕ, тĕшши катăлса пайланнă атом! Уйăрса-пайласа пыр та — хуçалан! Тустар та аркат хура вилĕм бомбипе, кисрет, ишсе антар, сапаласа пĕтер! Лешĕ, мăйракалли, хăйĕн ĕçне турĕ ĕнтĕ, çынсем... çыннисем вара ăна пулăшса тăрса хыпкаланчĕç. Ĕнтĕ эпир сатанан „хӳхĕм“ ĕçне курса тăратпăр, унăн Турă çулăмĕн пайланнă чĕлхисен ялкăшăвĕнчи „аслă сăнне“ курса тăратпăр... Сатана вучĕ те, Турă çулăмĕ те çӳлтен анаççĕ. Вĕсем таçта çити сарăлса кайса çутатаççĕ. Мĕне пырса перĕнеççĕ, çавна — пурне те урăхлатса хăвараççĕ. Анчах мĕнле уйрăмлăхпа урăхлатаççĕ-ха? Тамăкпа Пĕлĕт хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур, çав уйăрăмлăхпа урăхлатаççĕ.

Эпир пурне те ӳпне çавăрса лартнă, пурте пăлханса çухалса кайнă тĕнчере пурăнатпăр. Ан иккĕленĕр, çак пăлхану сатана тĕллевĕнчен килет. Библи пире калать: сатана — пысăк ултавçă, тет; сатана пире хамăра хамăр улталаса пурăнтарассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшать. Вăл пире — пурăнăç, чăннипе, япăхланса пынă хушăрах лайăх пурăнăç пулĕ тесе ĕнентерме пултарчĕ.

Чаплă акăлчан ученăйĕ Генри Битт доктор акă мĕн калать: „Тĕнчемĕр хăех малалла, пурте ырă пулса çитес еннелле кайса пырать тесе йăпанни ĕнтĕ юрăхсăр, апла йăпанма майĕ те çук. Пысăк пĕлӳлĕх, çынлăх тата „прогресс“ ерипен пурпĕрех лайăх пурăнăçа илсе çитерĕ тесе тĕтреллĕн шанса тăнине юлашки çирĕм пилĕк çул хушшинче пулса иртнĕ ĕçсем пĕтĕмпе суяна кăларчĕç. Лайăх пурăнăçа çитесси вăл пĕррех те ансат япала мар. Сатана вилмен. Влаçпа сĕм тĕттĕмлĕх вăйĕ çаплах чĕреххa, тĕнчемĕр çаплах усалпа тăрать-ха“, тет.

Пурте ăнланатпăр, пирĕн çак çĕрçуллăх пусламăшĕнчен тытăнса тĕнче тĕпрен улăшăннӑ. Куратпăр, пурăнăç чуппи хăвăртланчĕ, авалтан килсе хăнăхăва кĕнĕ чикĕсемпе йăласене вăл пĕр шелсĕррĕн, революци сывлăшĕпе, шăлса ыватать. Пирĕн пурăнăçпа шухăшлав йĕркийĕ, чĕлхе, ял-хула йăли-халамĕ, пӳртĕмĕрсемпе çуртăмăрсем калама çук урăхланса çĕнелчĕç. Пĕр вунă-вунпилĕк çул пек ĕлĕкрех кăна-ха, калăпăр, ача-пăчăшăн пристане тухса чупасси, унта якăр ярса чарăнакан пысăк пăрахутсене пăхса тăрасси чăн-чăн савăнăçчĕ. Паян вĕсем геликоптерсемпе турбинăллă самолетсем çине ним тĕлĕнмесĕр, сӳрĕккĕн кăна пăхкаласа иртеççĕ. Эпир ĕлĕкрех телеграфа чăн-чăн тĕлнтермĕш тесе шутланă, халĕ вара, тĕслĕхрен, телевидени нимĕн чухлĕ те тĕлĕнтермест. Аса илер-ха тата, нумай чире иртмен чир, çынна вĕсенчен сыватма майĕ çук тесе шутлаттăмăр. Халĕ пирĕн темĕн те пĕр тĕрлĕ, чаплă, хăватлă эмелсем пур, сиплевĕ вĕсен пысăк, çавна пулах, акă, çынсене ватлăхра хĕне янă чирсенчен чылайăшĕ ĕнтĕ сайра тĕл пулать. Çапла, сахал мар çитĕнӳ тунă эпир, куна пĕтĕм тĕнче курса тăрать. Анчах, çакăн пек пысăк прогреса пăхмасăрах, çын этем йăхĕн тĕп ыйтăане татса парайман. Эпир тем çулĕш çуртсем лартма, хăвăрт ишекен пăрахутсем тума, тем тăршшĕ кĕперсем хывма пултаратпăр, анчах эпир çаплах-ха хамăра хамăр пăхса тăма, пĕр-пĕринпе тан тăрса лăпкăн пурăнма пултараймастпăр.

Эпир искусствăпа музыкăн акăш-макăш пысăк çĕнĕ шкулĕсене уçма, çĕнĕрен те çĕнĕ витаминсем тупса туса кăларма пултаратпăр, анчах хуйхă-суйхăмăр пирĕн çавах, ĕлĕкхиех. Пĕр уйăрăмлăх çеç: çав хуйхă-суйхă татах нумайланнă, татах ӳснĕ. Хуйхă-суйхă пирĕн çине çĕнĕлле хăйнеевĕрлĕхпе килсе ӳкме, çапла пире пысăкрах та пысăкрах асаппа канăçсăрлăх кӳме пултарать. Çапах,

кăкран пăхсан, эпир ĕлĕкхи-авлхиех. Мĕнле пулнă, çапла юлнă. Этемлĕхшĕн яланах пулнă астармăш серепи те, сăнав та, сут та çавах.

Мĕншĕн тесен, этем рай пахчинче Турă ирĕкĕ вырăнне хăйĕн ирĕкне суйласа илнĕ самантранпах çынна яланах çав пĕр ыйтусемех хăшкăлтарса асаплантарнă, асаплантараççĕ те. Вĕсен, çав йывăр ыйтусен, сăлтавне Библин пĕрремĕш кĕнекинче, „Пултарни" кĕнекере, çырса кăтартнă. Вĕсем мĕнлерех усаллăх кӳнине вара Рим çыннисем патне янă çырăвăн пĕрремĕш сыпăкĕнче каланă. Вĕсенчен пире Иисус Христос Евангелийĕ тӳрлетсе сыватать.

Этемĕн несĕллĕхĕ-нĕрĕ пăсăлса пырса çылăха кĕрсе пĕтнĕ. Çакă унăн чунне курайманлăх, ăмсăну, çăткăнлăхпа кĕвĕçӳ чыхса тултарать. Унăн ӳчĕ çылăха кĕрсе пĕтнипе ылханлă, ăна мĕн ĕмĕртен вилĕм хăрушлăхĕ хăвалать. Çыннăн темĕн те пĕр шухăшласа кăларма пултаракан ăсĕ ăна, хăйсĕр пуçне, пурне те урăхлатса улăштарма май пачĕ. Çын хăй тунă пирĕн паянхи „прогреспа" тем пек мухтанать пулин те, хăй вăл чăн пуçламăшĕнче мĕнле пулнă çаплипех юлать.

Çылăх та, çын ăна тем пекех урăхлатас тенĕ пулин те, пĕр улăшăнмасăрах юлнă. Эпир çылăха урăхла ятсем пама хăтланса пăхнă: „йăнăш", „аташу", „ăнланулăх çитменлĕхĕ" тенĕ тата ытти те. Анчах çылăх — çылăхах вăл. Хамăр кăмăла намăсран хăтарма тем пек тăрăшсан та, пĕлсе тăратпăр пурпĕрех: çынсем çаплах-ха, çаплах-ха çылăхлă. Çылăхран мĕн килекенни те çавах, çавăн пекех: чир-чĕр, шанчăк сӳнĕвĕ, çитмен ĕмĕт, чун халсăрлăхĕ, юлашкинчен, — вилĕм.

Хурлăх-асап та улăшăнман. Вăл Адампа Ева хăйсен вĕлернĕ ывăлне Авеле пăхса тăрса чуна çапса хуçакан хуйхă мĕн иккенне пуçласа курнă самантран пуçланнă. Ентĕ

унтанпа мĕн паян кунчченех пырать. Асап, — туллинрех каласан, асап тӳссе хурлăх курса пурăнасси, — этемлĕхĕн пурте ăнланакан пĕтĕм тĕнче чĕлхийĕ пулса тăчĕ. Унран никам та пăрăнса юлаймасть, кашниех пĕлет, тӳсет ăна. Иова лăплантарма тăрăшнă тусĕсенчен пĕриншĕн, авă, вилĕм пурăнăç тĕллевĕ пек те туйăннă. Вăл каланă:

„Вут хĕлхемĕ тухса çӳлелле сулăннă пек, этем терĕшĕ те асап курас çине анчах çуралать", тенĕ. (Иов. 5:7).

Вилĕм те мĕнле пулнă çав халлĕнех юлнă. Çынсем унăн тулаш енне урăхларах курăнмалла тăвасшăн. „Тупăк çапакан", сăмахран акă, „ритуаллă пулăшу бюровĕ" пулса тăчĕ т.ыт.те. Эпир вилене пытарас йăла-йĕркен сивĕлĕхне çемçетме тăрăшатпăр. Анчах, пурăнан çынсем темĕн тусан та, вилĕмĕн сивĕ, хаяр чăнлăхĕ этемлĕх историйĕн тăршшĕнче нимĕн чухлĕ те улăшăнман. Ӳлĕмрен те вăл, паллах, çавах юлать.

Этемлĕхĕн чăн-чăн историйĕ пĕр-пĕринпе çыхăннă виçĕ тĕрлĕ лару-тăру майĕнчен тăрать: унăн иртнĕ пурăнăçĕ çылăхлă, паянхи пурăнăçĕ хĕррипе танах хĕн-асаппа тулнă, малашнехи пурăнăçĕнче ăна, пĕр иккĕленӳ хăвармасăр, вилĕм кĕтсе тăрать.

Библире каланă:

„Этемсене пĕрре анчах пурăнмалла тунă, унтан вара сут пулать", тенĕ. (Евр. 9:27).

Ахаль çынсемшĕн çакă ыррине шанмалли нимĕн те юлман пĕр шелсĕр хаярлăх пек туйăнать. Тура сăмахне шута хурассинчен пăрăнма тăрăшса, çынсем çĕршер тĕрлĕ философи теорийĕ, нумай тĕрлĕ тĕн шухăшласа кăларнă. Хальхи философсемпе психологсем те çаплах-ха Христос çулĕсĕр пуçне урăх темĕнле çул пуррине пĕлнĕ пек курăнма тăрăшаççĕ. Анчах этемлĕх ĕнтĕ сахал мар çула тĕрĕслесе пăхнă, вĕсенчен пĕри те ниçта та илсе çитермен.

Христос ҫӗр ҫине ӗмӗртенхи виҫӗ ыйтӑва ӑнлантарса пама килнӗ. Мӗн вӑл ҫылӑх, мӗн вӑл асап, мӗн вӑл вилӗм — ҫакӑн ҫинчен Унӑн вӗрентӗвӗ.

Иисус Христос анчах, Пӗр Вӑл ҫеҫ, ӗмӗрлӗхе, улӑшӑнусӑр. „Иисус Христос ӗнер те, паян та, ӗмӗр-ӗмӗрех Ҫав-ҫавах“ (Евр. 13:8).

Ытти пурте улӑшӑнма пултарать, анчах Христос пӗр улӑшӑнмасӑр юлать. Ҫынсен хӗвӗшӗвӗпе ҫуйкӑнӗн тӗпсӗр тарӑн тинӗсӗнче Христос лӑпкӑн та ҫирӗппӗн тӑрать. Вӑл Хӑй енне ҫавӑрӑнакана пурне те ырӑ сунса хисеплеме хатӗр, кашни ҫавӑрӑнакана хӑрушсӑрлӑхпа канӑҫлӑх парса пиллӗ. Эпир Турӑ тивлечӗн ӗмӗрӗнче пурӑнатпӑр: Турӑ Хӑйне хапӑл тӑвакансене, Хӑйӗн ятне ӗнекенсене Турӑ ачисем пулма ирӗк парать (Иоан. 1:12). Анчах тивлет ӗмӗрӗ вӗҫӗмсӗр мар. Эпир халӗ Турӑ пире нумайччен тӳссе тӑнине пула пурӑнатпӑр (2 Петр. 3:9).

## ИККЁМЁШ СЫПĂК

# БИБЛИ

„Пĕлĕтпе çĕр пĕтĕ, Ман сăмахăмсем ахаль иртмĕç“.

Матф. 24:35

Вăхăтваскать. Сехет йĕппи, çур çĕр çывăхарнине кăтăртса, хăвăрттăн чупса самантсем хисеплет. Çул вĕçне тухнă этемлĕх аптăраса тăрать. Ĕнтĕ мĕнле çул суйламалла унăн? Юлнă-и пирĕн кам та пулин ятлă-шывли? Пур-и эпир кайма пултарас çул? Пур-и çак сĕм тĕттĕмлĕхе шăтарса кĕрекен çута пайăрки? Хамăр ыйтусен тупсăмне тупмашкăн çăраççи тупма пултарăпăр-и? Пулăшасса шанма тивĕçли кам пур? Е пире, хамăр кунта ăçтан килнине, мĕншĕн кунтине, ăçталла каймаллине кăтартса-туса тăмасăр, темĕнле паллă мар вăй тытнă та пăрахса хăварнă-и?

Пĕтĕм çак ыйтăва хирĕç сăмах тавăрса каламалли пĕрре çеç: тупсăма тупмалли çăраççи пур пирĕн! Ятлă-сумлă çăлкуçĕ пур. Çав çалкуç питĕ авалхи пĕр кĕнекере. Кĕнекин ячĕ: Библи. Вăл пирĕн кунăмăра пайтах ĕмĕр витĕр тухса çитнĕ. Ăна хисепĕ те çук çын вуланă, темĕн те тĕрлĕ пичетленсе-çырăнса тухнă вăл, хăйне темĕн те пĕр тĕрлĕ тапăннине тӳссе ирттернĕ. Варварла аркату та, цивилизаци ăслăлăхĕ те пăсма пултарайман ăна. Вутпа та, мăшкăл-кулăпа та пĕтереймен. Вăл мĕн пама пулнин çиççе тăракан çутиййĕ этемлĕхĕн сахал мар пăтравтлă вăхăтĕнче пĕр улăшăнмасăр юлса пынă.

Халĕ, пĕтĕм тĕнче историйĕн çĕнĕренхи татăклă сехечĕ çывăхарса килнĕ чухне, каллех çак кĕнекене — пур иккĕленӳллĕ шухăша срсе яракан Кĕнекене — алла илсе пăхар-ха. Тăрăшса пăхар-ха Ăна пур тĕрлĕ тĕрĕслеве те тӳссе ирттерме, çыншăн ĕненӳпе вăй-хавал çăлкуçĕ пулса тăма пулăшнă сăлтава тупма.

Хăш-пĕр çынсем Библие, тĕпрен илсен, Израиль халăхĕн историйĕ тесе шутлаççĕ. Теприсем вăл чи тĕрĕс этикăна вĕрентет теççĕ. Ку вăл чăн та çаплах-ха. Анчах, ку вăл тем тери пĕлтерĕшлĕ, кирлĕ пулин те, тĕп темăн çуммисем — хушма темăсем — çеç. Турă пире Иисус Христоса çĕр çине ярса çăлнă. Библин тĕп теми — çав ĕçĕн историйĕ. Хăшĕ-хăшĕ Авалхи Сăмаха („Ветхий Завет") чаплă кăна илемлĕ литература хайлавĕ тесе йышăнать, ăна ăса-чуна çавăрса илсе вуланакан поэма е истори вырăнне хурса вулать. Çав вăхăтрах ку вăл этемлĕхе çăлнин историйĕ иккенне тавçăрса илеймест, çапла вара вĕсен чĕрине Библин чăн-чăн пĕлтерĕшĕ, Библире каланă ырă хыпар (благовестие) çитеймесĕрех юлать.

Библие Турă ирĕкĕпе çырнă, унта Туррăн пире çăлас ĕçĕн йĕркине уçса панă. Ăна Туррăн ĕмĕр-ĕмĕр улăшăнмасăр тăракан законĕсене Унăн ачисем (çынсем) лайăх ăнланса ăша хывччăр, вĕсем Унăн аслă ăслăлăхĕ кăтартнă пек пурăнма пултарччăр тесе çырнă. Библире Туррăн пысăкран та пысăк юратăвĕ çынсене пурăнăç çулĕ çинче чун лăпкăлăхĕ кӳрсе тăрасси çинчен каланă. Библи вăл — çăлăну ăçтине кăтарса тăракан çул маякĕ. Библисĕр пирĕн çут тĕнчемĕр хăрушăран та хăрушă сĕм тĕттĕмлĕх кăна пулса каймалла.

Библи вăл Турă пире мĕн пĕлтерсе калани çырăнса юлнă пĕртен-пĕр кĕнеке — çакă пĕр ултавсăр чăн иккенне Библие тимлесе вуласан çăмăллăнах курса илме пулать.

Ытти тĕнсен кĕнекисем те пур, нумай вĕсем: Магомет

Коранĕ пур, буддистсен таса кĕнекисем, зороастризмăн таса кĕнекисем, Индин веда литератури т.ыт.те. Христиансен мар çак библисенче мĕн çырăнса юлнийĕ тĕрĕс мар, суя йĕрпе аталанса пырать. Пурте вĕсем, чăн çуттăн хĕлхемĕсенченех пусланнă пек туйăнаççĕ пулин те, сĕм тĕттĕмлĕхе путса пырса вĕçленеççĕ. Библи вĕсенчен тĕпренех уйăрăлса тăрать, Библи — çынна çăлăнăç паракан, унăн йывăр ыйтăвĕсене татса пама çул кăтартакан пĕртен-пĕр кĕнеке.

Библие çырса çитерме пин те ултçĕр çул (вунултă çĕрçуллăх!) кирлĕ пулнă. Ăна çыраканĕсем вăтăртан ытла, пурте вĕсем Турă летописецĕсем пулнă. Çав çынсем, нумайăшĕ пĕр-пĕрне пачах та пĕлменскерсем, нумайăшĕ тĕрлĕрен ăру тапхăрĕнче пурăннăскерсем, хăйсем мĕн шухăшланине, мĕне шаннине мар çырса пынă, вĕсем, Святой Сывлăш пĕлтерсе тăнипе, Турă сăмахне çырнă. Çапла, вĕсене Турă кăтартса тăнă, вĕсем çыраканĕсем пулнă. Турă хавхалантарнипе вĕсем аслă, тĕрĕс чăнлăхсене курма пултарнă.

Вĕсене, çав чăнлăхсене, килес ăрусенчи çынсем те тĕрĕс курма, пĕлсе çитерме пултарччăр тесе çырнă Таса Çырăва.

Çав вунултă çĕрçуллăх тăршшĕнче тĕрлĕрен вăхăтра, тĕрлĕрен çĕршывра пурăннă çынсем тĕрлĕрен чĕлхепе Библин утмăл ултă кĕнекине çырнă. Çапла тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ чĕлхепе çырса ĕçленĕ пулин те, ку кĕнекесенче пуринче те пĕр шухăш, пĕр калу (повествование) тытăнса пырать. Турă кашни çыравça ун вăхăтĕнче, унăн тăван чĕлхипе каласа тăнă, анчах Вăл пĕлтернин тĕшшийĕ пур чухне те çавах, улăшăнми пĕр, пулнă. Кайрантарах нумай вĕреннĕ çынсем еврей, арамей, грек чĕлхисемпе çырнă авалхи çав манускриптсене пĕр çĕре пуçтарса пĕрлештернĕ, вĕсене хăйсен вăхăтĕнчи чĕлхене

куçарнӑ. Мӗн курӑннӑ-ха вара? Турӑ çынсене мӗн пама асӑнса хунисем пур çӗрте те пӗрех иккен, Унӑн çынна пӗлтернӗ ырӑ хыпарӗ те ниçта та улӑшӑнман. Эпир паян, çав ӗмӗрлӗхе çырӑннӑ сӑмахсене вуланӑ май, авалхи летописецсем çырса хӑварнӑ пурӑнӑç йӗркисем Христос çӗр çинче пурӑннӑ чухнехи çынсемшӗн мӗнле пулнӑ, пирӗн ӑрушӑн та çаплах çӗнӗ те таса, тулли пӗлтерӗшпе тӑнине куратпӑр.

Çавӑнпа та Библи тӗнчери халӑхсем хушшинче яланах чи сарӑлнӑ кӗнеке пулнинчен нимӗн тӗлӗнмелли те çук. Пӗр нихӑш кӗнеке те хӑйӗн ӑслӑлӑхӗпе, илемлӗхӗпе, историлӗхӗпе, малашнехине пӗлтерсе каланин тӗрӗслӗхӗпе унпалан танлашаймасть. Хӑшӗ-хӑшӗ Библире суя япаласем, ӗненме çук вырӑнсем, Турӑ çынсене мӗн-мӗн пама асӑнни вырӑна килменнисем пур тесе ӗнентерме пӑхать. Анчах çапла тиркешсе вӗсем чӑннипе Библи мар, хӑйсем айӑплине çеç, хӑйсем тӗрӗс маррине, кӑтартса параççӗ. Библие ӗнтӗ пӗрре мар тӗплӗн тишкерсе тӗпченӗ. Çав тӗпчевсене шута илсе, эпир акӑ мӗне çирӗплетсе калама пултаратпӑр: Библире тӗл пулакан суя пек, хире-хирӗçлӗхсем пек туйӑнакан вырӑнсем пуласкилессе Малтанах Пӗлсе Тӑракан йӑнӑшнинчен мар, Таса Çырӑва пыра-киле урӑхланса улӑшӑннӑ чӗлхесене куçарнӑ чухне йӑнӑшсемпе тӗрӗс мар тӗлсем янинчен килнӗ. Библие тӳрлетӳ кирлӗ мар, этеме тӳрлетӳ кирлӗ.

Çапах та, акӑ, нумайӑшӗнчен килӗнче тата, калӑпӑр, вӗреннӗ çынсем хушшинче Библи пирки шӳтлесерех калаçасси, ун çине Туррӑн чӗрӗ сӑмахӗ тесе мар, çӳлӗк çинче тусан пухса выртмалли кӗнеке тесе пӑхасси йӑлана кӗнӗ. Священниксем пӗр хӗрачаран: „Библире мӗн пуррине пӗлетӗн-и эсӗ?“ — тесе ыйтнӑ. Хӗрача хирӗç, пӗр тӑхтаса тӑмасӑр: пӗлетӗп, тенӗ. Унтан хӑйсен килӗнчи Библи кӗнеки хушшинче мӗн-мӗн выртнине каласа

тухнӑ:"... аппа савнийӗн сӑнӳкерчӗкӗ, аннен эмел рецепчӗ, пӗчӗк шӑллӑмӑн ҫӳҫ пайӑркийӗ, аттен юсама панӑ сехечӗн квитанцийӗ..." Авӑ мӗнле пулнӑ иккен ҫав хӗрачан Библипе ҫыхӑннӑ „пӗлӗвӗ"! Питех те нумай ҫын Библие кивӗ ҫырусемпе типсе кайнӑ ҫеҫкесем упрама меллӗ вырӑн тесе шутлама хӑнӑхнӑ, „меллӗ вырӑнӗ" вара чӑннипе Турӑ Кӗнеки иккенне, вӑл хӑйсене мӗн тери пулӑшу парасса ӑша та илмеҫҫӗ.

Пирӗн хальхи вӑхӑтра ҫынсен Библипе ҫыхӑннӑ шухӑшӗ улӑшӑнса пырать. Ку ҫеҫ мар-ха, хӑвӑрт улӑшӑнса пырать! Пурӑнӑҫ юри тунӑ япалана, пӗлтерӗшӗ, умӗсумӗ ҫук япалана пурне те сирсе ывӑтать. Ҫынна ҫын питӗ хитре сӑмах панисем, пуҫлӑхсем халӑхшӑн темӗн те пӗр тума пулнисем чӑннипе суя, йӑнӑш ҫул ҫине ӳкнисен аташӑвӗ кӑна иккенне кура-кура илетпӗр. Ултавсӑр тӑракан чӑнлӑха тупаймасӑр, йӗри-тавралла сехӗрленсе ҫавӑрӑнса пӑхӑтпӑр та каллех ҫав авалхи Кӗнекене — мӗн ӗмӗрсем тӑршшӗпе миллионшар ҫынна канӑҫлӑхпа ҫӑлӑну шанӑҫӗ кӳрсе тӑнӑ кӗнекене — алла илетпӗр.

Ҫапла, ҫынсем Библие ҫӗнӗрен „тупса уҫаҫҫӗ". Вӗсем унӑн кивӗ кӗнекисене тусантан шӑлса тасатаҫҫӗ, ҫӗннисене туянаҫҫӗ. Библире вӗсем пӗлнӗ, илтнӗ, анчах ӗнтӗ пӗтӗмпех тенӗ пек манӑҫнӑ сӑмахсене тупаҫҫӗ. Ҫав сӑмахсем, ӗнер кӑна ҫырса хунӑ пек, тулли пӗлтерӗшлӗн янӑраса илтӗнеҫҫӗ. Библире ҫынна кирлӗ пур пӗлӳ те пур. Ҫын вӗсемпе хӑйӗн чунне ҫырлахтарать, йывӑр та кӑткӑс ыйтӑвӗсене татса парать. Мӗншӗн тесен, Библи вӑл — Ҫурт Лартакан Турӑн ӗҫ палӑртӑвӗ. Вӑл, ҫав палӑрту, — план, — кӑтартса тӑнипе анчах эпир хамӑр шыракан пурӑнӑҫа тума пултарӑпӑр.

Америкӑра пирӗн пӗр питӗ пысӑк документ пур, ӑна эпир пурте хисеплетпӗр, хаклатпӑр. Ӑна ҫӗр аллӑ ҫул ӗлӗкрех ҫав тери тӑрӑшса, шухӑшласа, пӗр-пӗринпе ну-

май канашласа, тавлашса темиҫе ҫын ҫырса хатӗрленӗ. Юлашкинчен, хатӗрлесе ҫитерсен, ҫирӗплетсе йышӑнма федераллӑ вунвиҫӗ штата тӑратнӑ. Ку вӑл пирӗн Конституци. Ӑна ҫыраканӗсем ирӗклӗ ҫынсен патшалӑха тытса тӑрас ӗҫӗн документлӑ никӗсне хывнӑ, ҫакна вӗсем аван пӗлсе тӑнӑ. Вӗсем законсене пӗлекен, ӑнланакан ҫынсем анчах, хӑйсен ирӗкӗсемпе ҫӑмӑллӑхӗсене, вӗсен виҫисене пӗлекен ҫынсем анчах ирӗклӗн, никама пӑхӑнмасӑр пурӑнма пултарасса лайӑххӑн шута хурса ӗҫленӗ. Ҫынсем сут умӗнче пурте пӗр тан пулмалла, кашни уйрӑм ӗҫе закон каланипе килӗшӳллӗн пӑхса тухса ӑнланмалла.

Этемлӗх кун-ҫулӗнче пуҫласа Конституци ҫуралнин ӗҫне пӗтӗм тӗнче пысӑк интересепе сӑнаса тӑнӑ. Ҫынсем ӗнтӗ законсене пӗлсе пурӑнсан, вӗсене тытса пырсан хӑйсем чӑнахах та ирӗклӗ пулма пултарасса ӑнкарса илнӗ. Этем, юлашкинчен те, хӑйӗн вырӑнне тупнӑ. Унӑн халӗ Конституци панӑ прависем, ҫавӑн пекех, Конституци хушакан тивӗҫӗсем те пулнӑ. Ҫак йӗркене — ирӗкпе тивӗҫ йӗркине ҫынсен шайлашуллӑн тытса пыма тивнӗ, мӗншӗн тесен пӗрне мала хурса тепӗрне хакламанни пурӑнӑҫа кал-кал пыма чӑрмав анчах кӳнӗ. Кӗскен каласан, Конституцие пӑхӑнса пурӑнмасан, ӗҫӳ-пуҫу чарӑнса тӑрса япӑха кайӗ, асапланса инкек курса пӗтӗн.

Америка хӑйӗн Конституцийӗн тивлечӗпе аталанса та чечекленсе пынӑ пекех, христианство Библире кӑтартса панӑ законсемпе килӗшӳллӗн аталанса, сарӑлса пынӑ. Конституци пекех, Вӑл Хӑй витӗмӗнчи ҫынсемшӗн пуриншӗн те пӗр: пурне те, уйрӑммӑн ҫӑмӑллӑхсемпе ӑнлантарусем памасӑр, пӗр тан хута кӗрсе хӳтӗлет. Ҫавӑн пекех, Библи — пӗтӗм этемлӗхӗн Аслӑ Конституцийӗ, унӑн законӗсем пуриншӗн те пӗр сӑмахлӑ, пӗр пӗлтерӗшлӗ.

Конституци патшалӑхӑн аслӑ законӗ пулнӑ пекех, Библи те — Туррӑн аслӑ законӗ. Библире Турӑ Хӑйӗн

законĕсене вырăна килтерсе çирĕплетнĕ. Библире Турă пире ĕмĕр-ĕмĕрлĕхе пит хаклă, пысăк ырăлăхсем пама пулнă. Библире Турă этемлĕхе çăлмалли палăртăва (плана) уçса парать.

Çутçанталăкăн ытарма çук илемлĕхĕпе тĕлĕнтермĕшĕсенче эпир Турă законĕсен ĕçне куратпăр. Кам, каçхи пĕр пĕлĕт таткисĕр тӳпери çăлтарсене пăхса, Турă алли туса пултарнă хӳхĕмлĕхпе хавхаланман пулĕ! Сар хĕвеллĕ çуркунне пур чĕрĕ чунпа йывăç-курăк çĕнĕрен вăранса йăл илнине курса камăн чĕри çĕкленӳллĕн тапман пулĕ! Хамăра ытамласа тăракан илемлĕхпе пуянлăх хушшинче пурăнса, эпир Туррăмăр хăвачĕ калама çук нумай тĕрлĕ, Пултараканăмăр пурне те вĕçĕмсĕр тарăн шухăшласа хисепе илнине куратпăр. Анчах çутçанталăк пире Турă юратăвĕпе ырăлăхĕ çинчен нимĕн те хыпарламасть. Çутçанталăкра эпир хамăра çăлăнма мĕн кирлине пама пулнине тупаймăпăр.

Пирĕн чĕре тĕпĕнчи таса туйăм пире Турă пурри çинчен, ырăпа усал хушшинчи уйăрăмлăх çинчен калать. Анчах ку вăл ырă хыпарăн ян кайса сарăлнă палăрăмĕсем (ахрăмĕсем) кăна. Вĕсем Библи вĕрентĕвĕ чухлĕ ăнланмалла, уçăмлă мар. Библи страницисенче анчах эпир чăн -чăн христианство мĕнле никĕсленсе тăни çинчен уçăмлăн, пĕр йăнăшсăр каланине тупайăпăр.

Христианствăн пур доктрини те (пĕтĕм вĕрентĕвĕ) Библире йĕркеленсе çирĕпленнĕ. Чăн-чăн христиан унта мĕн пуррине нимĕне те хирĕçлемест, çавăн пекех, Турă сăмахĕ çумне хăйĕнчен те нимĕн те хушмасть. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Конституцине вăхăтран вăхăта кăштах улăштарма, тӳрлетме пултараççĕ, Библие нимĕнле тӳрлетӳ те кирлĕ мар. Эпир чăнахах Библие Святой Сывлăш пĕлтерсе тăнипе çырнине ĕненетпĕр. Петр апостол каланă пек, „Малашне мĕн пулассине нихăçан та этем ирĕ-

кĕпе каласа паман, ăна Турран таса çыннисем Святой Сывлăш пĕлтернипе каласа хунă“ (2 Петр. 1:21). Тата Павел апостол пире çапла калать: „Турă Çырăвне Турă Сывлăшĕ пĕлтернипе çырнă: вăл усăллă: вăл вĕрентет, питлет, тӳрлетет, тӳрĕ пурăнма ӳкĕтлет; вара Турă çынни, пĕтĕмпе ырра тухса, кирек мĕнле ырă ĕç тума та хатĕрленсе çитет“, тет (2 Тим. 3:16-17).

Хăйсен тĕрĕслĕх çырăвĕсене çынсем патне çитерсе тăрса, Библие çырса хатĕрлекенсем нихăçан та пурăнăç чăнлăхне хитрелетсе кăтаратма тăрăшман. Вĕсем пысăк çылăхсене те, пĕчĕк çылăхсене те пĕр тиркешмесĕр шута хунă; этем хăйĕн ӳчĕ-юнĕпе хавшак пулнине йышăнса, Библие çырнă вăхăтри çынсен пурăнăçне мăнле пур çапла çырсе кăтартнă. Чи тĕлĕнтерекенни, тата, акă мĕн: вĕсен, тахçан авал пурăннăскерсен, пурăнăçĕ, вĕсене пурăнăçра апларах е капларах пулма хистесе тăнă сăлтав-сем пире хальхи хамăрăн пурăнăçри пекех туйăнаççĕ. Библие вуланă чух ун страницисенче эпир хамăрăн ăса-шухăша, хамăрăн чĕремĕрсене, хамăрăн мăнкăмăллăхпа тĕшмĕшлĕхе, хамăрăн ăнланманлăхпа мĕскĕнлĕхе, хамăр çылăхăмăрсемпе нушамăрсене курса-туйса илетпĕр.

Чăнлăх вăхăта пăхмасть. Чăнлăх вăхăта пăхăнмасть. Пĕр çĕрçуллăхри чăнлăх тепĕр çĕрçуллăхри чăнлăхран уйăрăлса тăмасть. Вăл хăш халăх ăçтинчен та, хăш çĕр-шыв хăш çĕртинчен те килмест. Çынсен шухăшĕсем (идейисем) анчах пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăма пулта-раççĕ. Çынсен йăли-йĕрки, кăмăлĕ-хăнăхăвĕ анчах улă-шăнса пыма пултарать. Анчах аслă, мĕн пурринчен пуринчен те пысăк чăнлăх пур вăхăтшăн та пĕр, ĕмĕр-ĕмĕрлĕхе.

Пирĕн Çăлаканăмăр Иисус Христос килни Библин пĕтĕм калавĕ, çăлăну хыпарĕ пулса тăрать. Библие тĕплĕ вĕреннĕ çынсем Иисус Христос çинчен малтанах кала-

кала хунине Авалхи Сӑмахӑн мӗн пуҫламӑшӗнченех тишкӗрсе тухнӑ, мӗншӗн тесен Христос ҫинчен калакан истори — Авалхи Сӑмахпа Ҫӗнӗ Сӑмахӑн чӑн тӗп теми.

Пултарни Кӗнекинче (Бытие) Иисус Арӑм Вӑрлӑхӗ пулса курӑнать.

Тухни Кӗнекинче (Исход) — Вӑл Пасха Путекки.

Левит Кӗнекинче — Вӑл Хӑтару Парниййӗ.

Хисеп Кӗнекинче — Вӑл шыв паракан Чул Хысак.

Иккӗмӗш Законра — Вӑл Пророк.

Навин Иисусӗн Кӗнекинче — Вӑл Турӑ ҫарӗн Пуҫлӑхӗ.

Израиль Тӳрисен Кӗнекинче — Вӑл Хӑтаракан.

Руфь Кӗнекинче — Вӑл пӗлӗт ҫинчи Хӳтӗлекен.

Патшасен Кӗнекисенче (тӑваттӑшӗнче те) тата Паралипоменонра (икӗ кӗнекинче те) — Вӑл патшана лартма асӑннӑ Патша.

Неемия Кӗнекинче — Вӑл Израиль халӑхне ҫӗнӗрен пуҫратса Ҫӗклекенӗ.

Есфирь Кӗнекинче — Вӑл Хӳтӗлевҫӗ.

Иов Кӗнекинче — Вӑл манӑн Ҫӑлакан.

Соломон Юмахӗсен Кӗнекинче — Вӑл маншӑн Кӑтартса паракан.

Псалтирьте — Вӑл маншӑн Пурте тата Пӗтӗмпех.

Экклезиаст Кӗнекинче — Вӑл манӑн Савӑнӑҫ.

Пророксен кӗнекисенче — Вӑл тӗнченӗн Килекен Патши.

Евангелисенче — Вӑл пӗтнисене шыраса тупса ҫӑлма килнӗ Христос.

Апостолсен Ӗҫӗсенче — Вӑл Чӗрӗлсе Тӑнӑ Христос.

Апостолсен Ҫырӑвӗсенче — Вӑл Атте Туррӑн сылтӑм енче ларакан Христос.

Апокалипсисра — Вӑл Килекен тата Патшана ларнӑ Христос.

Ҫакӑ — ӗмӗрлӗхе янӑ ҫыру Библи. Пурӑнӑҫпа канӑ-

çăлăх, ĕмĕрлĕхпе пĕлĕт çинчен каласа пани. Библире вăрттăн шухăшсем çук. Ăна уйрăммăн ăнлантарса тăма килрĕ мар. Пурин валли те уçăмлăн, хăюллăн çырна Таса Çыру вăл. Вăл Христос çинчен, Ун чĕнĕвĕ çинчен ырă хыпар кӳрсе калать.

Пĕррехинче Иисус хăйĕн вĕрекенĕсемпе пĕрле Капернаум хули çывăхĕнче сăрт çинче ларнă. Лешсем Ăна йĕри-тавра таччăн сырса илнĕ пулнă. Петр Ун çумĕнче пĕр енче, Иоанн тепĕр енче ларнă-и, тен. Иисус Хăйне парăннă вĕренекенсене кăмăллăн та ачашшăн пăхса сăнама пултарнă: кил хуçи хăйĕн кил-йышĕ çине пăхса савăннă пек, ашшĕ хăйĕн ачисене кашнине, темле уйрăм сăлтавсене кура, темле уйрăммăн савнă пек, çакна пула вара кашни ачи ун ытамĕнче ун ăшшине темле уйрăммăн туйнă пек... Çапла юратнă-тăр Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене.

Вăл çапла тӳлеккĕн те ăслăн, савса пăхса ларнипе çав пĕчĕк ушкăн шухăша путнă пулĕ. Хăйсен Вĕрентекенĕ темĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлине каласса туйса илнĕ-и, тен, вĕсем çав самантра. Унăн çав сăмахне хăйсен лайăххăн астуса юлмаллине тĕшмĕртсе илнĕ-и, тен. Кайран ăна ыттисене каласа кăтартма, ăнлантарма, вĕрентме тивессе, Ун сăмахне тĕнчипе сарса, пĕтĕм çынна пĕлтерме кирлине чухласа-сиссе илнĕ-и, тен.

Чăнах та вара çавăнта, сăрт çинче, Иисус, христиансен пурăнăçĕ мĕнле пулмаллине ăнлантарса, этемлĕх унчен илтмен те пĕлмен вĕрентӳпе вĕрентсе каланă. Вăл каласнăçемĕн, вĕренекенсем çумне хушăнса, Ун йĕри-тавра халăх пухăнсах, пухăнсах пынă. Каласа пĕтерсен, пурте чĕререн хумханса кайса таса чĕтĕреве ӳкнĕ, „халăх Вăл вĕрентнинчен тĕлĕнсе тăнă: Вăл вĕсене кĕнекеçĕсем, фарисейсем пек вĕрентмен, влаç тытса тăракан пек вĕрентсе каланă (Матф. 7:29).

Чӑнахах та, Вӑл, Турӑран Хӑйӗнчен ирӗк илнӗскер, влаҫ тытса тӑракан пек ирӗклӗн, хӑюллӑн, хӑватлӑ каласа вӗрентнӗ. Вӑл ҫирӗплетсе панӑ кашни шухӑш закон пулнӑ. Ку законсем Туррӑн Хӑйӗн законӗсем, ҫӑлӑнма ӗмӗтленекен кашни христиан пӑхӑнса пурӑнма кирлӗ законсем, пулнӑ.

Енчен те сирӗн килӗрте Библи ҫук пулсан, пӗр тӑхтаса тӑмасӑр, халех, кайӑр та илӗр, туянӑр, Ӑна. Тӗпленсе ларсах вулама тытӑнӑр. Вуланӑ майӑн мӗншӗн ҫак пӗртен-пӗр Кӗнеке кӑна ӗмӗрсен хури-шурри витӗр тӗрӗс-тӗкел тухса пӗр айӑпсӑр упранса юлма пултарнине ӑнланса илме тӑрӑшӑр. Мӗншӗн Вӑл этемлӗхӗн пӗтӗм нуши-тертне ӑнлантарса пама пултарнине, этемлӗхе малалла кайма кирлӗ халпа ӗненӗве тӗрек кӳрсе тӑнине ӑнланса ӑша хывӑр.

Библие эсир тахҫантанпах алла тытман пулсан, унпа ӗнтӗ лайӑхрах паллашас тетӗр пулсан, сирӗншӗн Иоанн ҫырнӑ Евангелие тепӗр хут вуласа тухни усӑллӑ пулӗ. Библин чи тарӑн шухӑшлӑ кӗнекисенчен пӗрийӗ тесе хисепленнипе пӗрлех, вӑл чи уҫӑмлӑ, ӑнланма та ҫӑмӑлтарах кӗнеке. Ӑна шӑпах ӗнтӗ ҫынна ҫӑласси мӗншӗн тата мӗнле пулса иртессине кӑтартас тӗллевпе ҫырнӑ, ҫавӑнпа вӑл ҫыннӑн пӗтӗм ӗмӗчӗ-шухӑшне тивӗҫтерет.

Иоанн ҫырна Евангелие вуласа тухсан, эсир Марк ҫырнӑ, Лука ҫырнӑ, Матфей ҫырнӑ Евангелисемпе паллашма пултаратӑр. Вара Евангели вӗрентӗвӗн никӗсне хывӑннӑ пысӑк та хӑватлӑ чӑнлӑха, пӗтӗм тӗнче чӑнлӑхне, курса илейӗр, Павел апостол „Иисус Христос ӗнер те, паян та, ӗмӗр-ӗмӗрех ҫав-ҫавах“ тенин (Евр. 13:8) пӗлтерӗшне ӑнланса ӑша хывайӑр.

Евангелисенчен кашнине уйрӑммӑн вуласа пӗтерсен, Ҫӗнӗ Сӑмаха чи пуҫламӑшӗнчен вулама тытӑнӑр та Унӑн мӗнпур кӗнекине йӗркипе вуласа тухӑр. Ҫакна тусан,

эсир хӑвӑрӑн Библие вуласах тӑрас, Ӑна тата лайӑххрах, пӗтӗмпех, ӑнланса илес килнине туйса илӗр. Мӗншӗн тесен, эсир ӗнтӗ Библире хавхалану ҫӑлкуҫне, кулленхи пурӑнӑҫӑрта кирлӗ канаш паракана, мӗнпур ӑслӑлӑх пуянлӑхӗпе кирлӗлӗх тӗлне тупнӑ, ҫапла вара Библие вуласси сирӗн кулленхи ӗҫӗр-хӗлӗрӗн уйӑрӑлми пӗр пайӗ пулса тӑрӗ.

Библие пӗлни тулли те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пурӑнӑҫпа пурӑнма кирлӗ. Мӗншӗн тесен, ҫак Кӗнекери сӑмахсен сирӗн пурӑнӑҫрти пушӑ тӑран тӗлсене тултарас, тӗпсӗрлӗхсем урлӑ кӗпер хывас, шупкалса тӗссӗрленнӗ сӑрӑсене йӑлтӑртатса тӑракан хаклӑ йышши чулсене ҫавӑрас пахалӑхӗ пур. Хӑвӑра канӑҫ паман пур ыйтӑвӑн тупсӑмне те Библире шырама, Библире тупма вӗренсе ҫитӗр. Ун страницисенче эсир хӑвӑра мӗн кирлине яланах тӗрӗс халлӗн тупайӑр.

Анчах пуринчен малтан Библи сире Турӑн тупсӑмне уҫса парӗ. Философсем, ӗмӗрсем тӑршшӗнче, Малтанах Пуррипе Тӑракана (Чӑн Аслӑ Чуна пӗлессишӗн, ҫак ыйтӑва татса парассишӗн кӗрешнӗ. Кам Вӑл? Мӗн Вӑл? Ӑҫта Вӑл? Енчен те ҫавӑн пек Хӑйне Сӑпатран Ҫын (Личность) пур пулсан, Ӑна ҫак тӗнчере эпӗ те пурри шухӑшлаттарать-ши? Шухӑшлаттарать пулсан, мӗнле пӗлсе илмелле манӑн Ӑна? Мӗнле пӗлсе пырса мӗнле пӗлсе ҫитмелле?.. Турӑ ҫинчен шухӑшланипе ҫуралнӑ ҫакӑн пек тата пин-пин ыйтӑва Библи теекен Таса Кӗнекере ӑнлантарса панӑ.

ВИҪӖМӖШ СЫПӐК

# ТУРӐ

„Эсӗ Турра йӗрлесе тупасси пур-и?“
Иов 11:7

Кам вӑл Турӑ? Мӗн тӗслӗ Вӑл? Вӑл пуррине мӗнле ӗненсе тӑма пултаратпӑр эпир? Хӑҫан пулса кайнӑ Вӑл? Пирӗн Ӑна пӗлесси пур-и?

Пирӗнтен кашниех хӑйне хӑй пӗрре мар ҫакнашкал ыйтусем панӑ ӗнтӗ, мӗншӗн тесен эпир ҫут тӗнчемӗр ҫине ӑна ҫапла хӳхӗм тӑмалла пултарнинчен тӗлӗнмесӗр пӑхайӑпӑр-и, ара! Пире, кӑмӑлӑмӑр кирек епле пулсан та, кунсеренех пурӑнӑҫ тӗлӗнтермӗшӗсене, вилӗм вӑрттӑнлӑхне, ешӗрен йывӑҫ-курӑк илемлӗхне, каҫхи ҫӑлтӑрлӑ тӳпе чаплӑлӑхне, тусемпе тинӗссен мӑнаҫлӑхне курма тӳр килет. Кам туса панӑ ҫакна пӗтӗмпе? Мӗн пуррийӗ пурте харпӑр хӑй выранӗнче тӑма кам пуҫласа панӑ ҫӗр туртӑмӗн законне? Кам кӑнтӑр кунӗпе тӗттӗм каҫ пулмалла, ҫулталӑк вӑхӑчӗсем умлӑн-хыҫлӑн ылмашӑнса пымалла тунӑ?

Ҫак ыйтусемпе ытти ҫавӑн пек ыйтусене хирӗс сӑмах тавӑрса каламалли пӗрре анчах: ҫут тӗнчере мӗн пуррийӗ пурте — Аслӑ Пултаруҫӑн ӗҫӗ. Кашни тӗрлӗ сехетех (стена сехечӗ, алӑ сехечӗ т. ыт. те) ӑна шухӑшласа кӑлараканӗ палӑртса пани тӑрӑх тунӑ, ҫавӑн пекех, пирӗн тӗнчен тӗп-тӗрӗс тытӑмне те Аслӑ Шухӑшлавҫӑ-Пултаруҫӑ палӑртса хунипе пултарнӑ. Ҫав Пултаракана эпир Турӑ тетпӗр. Ку ята пӗтӗм этемлӗх пӗлсе тӑрать. Мӗн кӗҫӗнренех Вӑл пирӗн чӗремӗрсене сывлан сывлӑшпа

кĕрсе вырăнаçнă. Библи эпир калакан Турă, эпир аслăласа мухтакан Турă, „пур аван япалана та, пур чăн пысăк ырăлăха та пирĕн валли çӳлтен антарса килтерекен Турă“ (Иак. 1:17) Вăл çак тĕнчене пултарса пире унта пурăнма вырăнаçтарнă Туррăмăр тесе вĕрентет.

Анчах: „Кам Вăл?“ — тесе ыйтма пултарăр эсир. „Ăçта Вăл?“ — тейĕр. Пурсăмăр та эпир Унăн ятне пĕлетпĕр. Йывăр самантсенче Ăна асăнатпăр. Пирĕнтен нумайăшĕ кашни-пĕр куна Ун çинчен шухăшласа ирттерме тăрăшать. Теприсем Ăна, Вăл пуррине ĕненместпĕр теççĕ. Тата: „Ăнлантарса парăр мана Вăл мĕнлине, Вăл камне, вара Турра ĕненĕвĕме йышăнăп-и, тен“, — теекенсем те пур.

Енчен те çакă сире те пырса тивет пулсан, енчен эсир мĕн ĕмĕрĕр тăршшĕпех Турă çинчен илтсе пурăннă, Турă çинчен сăмах-юммах тытнă пулсан, анчах Ăна — пĕр Ăна кăна! — чăннипех ĕненсе тăма Ун çинчен кам та пулин тупăнса ăнлантарса парасса кĕтнĕ пулсан, атьăр Ун çинчен Библи мĕн чухлĕ тĕрĕс çырса кăтартма пултарнине пăхар.

Пĕтĕм этемлĕх кун-çулĕн хальхи питĕ йывăр тапхăрĕнче кашни-пĕр çын „Турă мĕнле Вăл?“ теекен ыйтăвăн тупсăмне шырама кирлĕ пек ĕнтĕ. Кашни-пĕри çапла ыйтма тивĕçлĕ пек, хуравĕ (отвечĕ) тупăнасса та шанса тăмалла пек. Кашни çын Турă пуррине, Вăл мĕн тума пултарнине пĕлме вăхăт пек ĕнтĕ...

Турра пĕлменни, çын Турра пăхăнса пурăнма килĕшменни пирĕн татса пама йывăр ыйтăвăмăрсемпе нушатертĕмĕре пушшех нумайлатса ярать. Туррăн тĕллевĕ умĕнче çын нимĕн тума пĕлмесĕр аптăраса тăни тĕнчене анăш-тăнăшлăха кӳртсе ӳкерет. Пирĕн чунăмăрсене йывăр çĕклем пусса тăрать. Çакă та хамăр Турра пĕлсе пыма, Ăна тата Унăн законĕсене пăхăнса пурăнма кăмăл

туманнинченех килет. Ҫавӑнпа та Турӑ ҫинчен мӗн пӗлме май пуррине вӗренсе ҫитме тӑрӑшар-и, тӑванӑмсем!

Камран, ӑҫта вӗренсе илесси пур эпир ҫав пӗлӗве? Чӑнлӑха пирӗнтен хӑшӗ каласа пӗлтересси пур? Пурсӑмӑр та эпир ахаль ҫынсем кӑна-иҫ-ха! Турӑ Хӑй ҫинчен каласа вӗрентме ҫӗр ҫинче кама та пулин уйӑрса илсе пысӑк вӑйӑмпа витӗм пани пур-им вара? Ҫук. Ҫакна тивӗҫнӗ Пӗртен-пӗр Ҫын икӗ пин ҫул ӗлӗкрех пурӑннӑ, эпир Ӑна хӗрес ҫине пӑталаса вӗлернӗ! Мӗнле пултарӑпӑр ӗнтӗ эпир ҫакна пӗтӗмпе пӗлсе ҫитмешкӗн?

Эпир нумай вӗреннӗ ҫынсенчен ыйтма пултаратпӑр. Вӗсем пире калӗҫ: Турӑ вӑл ҫутҫанталӑкпа пурӑнӑҫра мӗн пуррийӗн пурин сӑнланӑвӗ, мӗнпур чӗрӗ чун Турӑпа пӗрпӗтӗмлӗхре тӑрать, пурӑнӑҫ хӑй те Унӑн Турӑлла Тупсӑмӗн палӑрӑвӗ, тесе ӑнлантарӗҫ. Вӗсем: эсир Турра пӗчӗкҫеҫҫӗ шыв тумламӗнче те, мӑнаҫлӑ та чаплӑ пӗлӗт кӳминче те (небесный свод) курса илейӗр, тесе калӗҫ.

Философсенчен ыйтӑр, вӗсем сире: Турӑ вӑл Хӑй пултарнӑ ҫут тӗнче хыҫӗнче тӑракан чӑн пусламӑш, нихӑҫан улӑшӑнми хӑват, пӗтӗм тӗнчене пурӑнӑҫ кӳрсе тӑракан вӑй-хӑватӑн ҫӑлкуҫӗ, Вӑл — пуҫаламӑшӗ те, вӗҫӗ те ҫук вӑй, тесе вӗрентӗҫ. Философсем: эпир курса тӑракан пурӑнӑҫпа илемӗн мӗнпур сӑнланӑвӗ — ҫав вӑйӑн палӑрӑвӗ; вӑйӗ вара ку вӑй-хӑват (энерги) ҫӑлкуҫӗнчен пӗр вӗҫӗмсӗр тухса пӗр вӗҫӗмсӗр каялла таварӑнса тӑрать; кӗскен каласан, пӗр вӗҫӗмсӗр пӗр харӑсах тулсапушанса тӑракан куҫӑм, тейӗҫ.

Малалла ыйтӑр эсир. Эсир: Турӑ — Пуринче те пур Пурӗ те, урӑх Ун ҫинчен никам та нимӗн те пӗлме пултараймасть, тенине илтейӗр.

Турра нумай тӗрлӗ палӑртса калани пур. Кашни ҫӗршыв, кашни йӑх е халӑх, кашни кил-йыш, кашни ҫын тӗнчене тытса тӑракан Чӑн Аслӑ Чуна уҫӑмлӑн каласа

палăртма тăрăшнă. Çынсем пур тапхăрта та Пултаракана пĕлме (пĕлсе илме, пĕлсе пыма, пĕлсе çитме) тимленĕ. Вĕсем Вăл пултарнă япаласене курса тăнă, анчах Хăйне пĕлмен. Эпир тин çеç асăннă ăнлантарусенчен тĕрĕсси хăшĕ-ши ĕнтĕ? Çав теорисенчен хăшне йышăнмалла?

Кун умĕнхи сыпăкра куртăмăр эпир, Турă Хăй çинчен Библире каласа пĕлтернĕ. Библи пире Турă пĕлтернисене парать тесе ĕненетпĕр пулсан, ăс-хакăлпа чĕремĕр валли тулли çырлаху тупăпăр. Апла пирĕн тĕрĕс ăнлантару пур. Апла эпир Туррăн чăн тупсăмне пĕлессин çулĕ çинче тăнине пĕр иккĕленмесĕр шанма пултаратпăр.

Турă Хăй çинчен Библире пĕлтерет. Енчен те эпир Библие кулленхи хаçатсене вуланă пекех тимлĕн, тăтăш вуласа тăратпăр пулсан, Туррăмăр çинчен те политикăпа спорта пĕлнĕ пекех нумай пĕлме пуçлăпăр.

Кевер чул нумай виркĕслĕ. Турă çĕр çинчисене Хăй çинчен пĕлтерни те сахал мар тĕрлĕн курăнать. Вĕсене пĕтĕмпе çырса кăтартма тулли темиçе том кирлĕ пулнă пулĕччĕ. Ку пĕчĕк кĕнекере вырăн хĕсĕк пулнă пирки, вĕсенчен тăваттăшне асăнса хăварнипех çырлахăпăр. Вĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ, вĕсене пирĕн яланах асăмăрта тытни пĕррех те пăсмĕччĕ.

Пĕрремĕшĕ: Библи Турра Сывлăш тесе калать. Иисус, Хăй Сихарьти Иаков пусси патĕнче пĕр арăмпа калаçса тăнă чух, Турă мĕнлине йалт уçăмлă кăтартса панă: „Турă Вăл Сывлăш“, тенĕ (Иоан. 4:24).

Мĕн шухăшлатăр-ши эсир „сывлăш“ сăмаха каланă е илтнĕ чух? Мĕнле ўкерчĕк курăнать-ши сирĕн хăвăр хавалăрти куçăра? Çўлте, çўлте таран тĕтреллĕ пĕлĕт пек туйăнать-ши вăл сире, çав „сывлăш“? Е эсир вăл, калăпăр, ача-пăчана хăратакан мĕлке евĕрлĕ темĕнскер тесе шутлатăр-и? Е сывлăш сирĕншĕн кўлепесĕр-нимĕнсĕр

нимĕн те марри? Христос: „Турă Вăл Сывлăш“, — тенĕ чух шăпах çавăн пек шухăшпа каланă тесе шутламастăр-и?

„Сывлăш“ тени чăннипе мĕн иккенне пĕлес тесен, çав сăмахпа усă курса Христос мĕн каланине пĕлес тесен, пирĕн каллех Библие уçса пăхмалла. Вилĕмĕнчен чĕрĕлсе тăнă хыççăн Христос Хăйĕн вĕренекенĕсене çапла калать: „Мана хыпаласа пăхăр-ха: куратăр, Манăн ӳт те, шăмă та пур, сывлăшăн вĕсем çук“, — тет (Лук. 24:39). Çавăнпа эпир шанăçлăнах „сывлăш“ вăл ӳтсĕр тесе ăнланма тивĕçлĕ. Вăл пачах ӳт пек мар, çапах вăл пурăнăçлă: пурăнать, халĕ-тахачĕ пур. Пире çакна ăнкарса илме йывăр. Эпир ăна пĕтме пӳрнĕ ӳтлĕ-пӳллĕ хамăр халлĕнле — ансăр ăс-пуçпа, имшер сисĕм-туйăмпа — ăнланатпăр.

Эпир, çĕр çинчи çынсем, малтан Турă Хăй пултарнă этеме пама хатĕрленĕ тарăн та витĕр куç çутисĕр тăрса юлнăскерсем, Сывлăшăн чăн аслăлăхĕпе чаплăлăхне ăнкарса та, тавçăрса та илейместпĕр. Вăл пирĕн ăнланупа туйăмсен чиккинчен калама çук инçетре тăрать. „Сывлăш“ тенĕ сăмаха илтсенех, эпир ăна, хамăрăн пĕчĕк ăстăнăмăра кура, питĕ пĕчĕклетсе йышăнатпăр. Ку вăл çумăр хыççăн юлакан кӳлленчĕксенчен пысăкрах шыв ĕмĕрне курман çынна тинĕс мĕнне ăнлантарма айканнипе пĕрех. Мĕнле тĕшмĕртсе илейтĕр-ха унашкал çын чикĕсĕр анлă тăракан çӳл пĕлĕтĕн тĕпсĕр тарăнлăхне, ăнланса çитерме çук пурăнăçа, аркатуллă хăвата, пĕр чарăнусăр куçăма, тăвăллă тинĕс хăрушлăхĕпе лăпкă тинĕс илемлĕхне ăша ӳкересси пур-и вара? Епле ăнланайтăр пăтранчăк кӳлленчĕке çеç курма хăнăхнă çын эпир мĕн çинчен калаçнине?! Мĕнле сăмах тупса мĕнле ăнлантарса памалла ăна хăватлă тинĕсĕн чаплăлăхне? Мĕнле ĕнентерме пултарăпăр çавăн пек тĕлĕнтермĕш чăнахах та пуррине?!

„Турӑ Вӑл Сывлӑш“, тесе Иисус Христос мӗн шухӑшланине пире ӑнланса илме вышкайсӑр йывӑр. Христос вара — пӗлсе тӑнӑ! Вӑл пирӗнни пек ансӑр ӑс-тӑнлӑ пулман. Унӑн куҫӗ пурӑнӑҫӑн вараланчӑк кӳлленчӗкӗсенчен таҫта-таҫта ҫити инҫете курнӑ. Уншӑн Сывлӑшӑн вӗҫӗ-хӗррисӗр хутлӑхӗ пӗтӗмпех ӑнланмалла пулнӑ. Иисус шӑпах ӗнтӗ пире ҫавӑн хӑвачӗсене, ырӑлӑхӗпе канӑҫлӑхне кӑштах та пулин ӑнланса илме парас тесе килнӗ.

Эпир пӗлетпӗр, сывлӑш вӑл ӳтпе ҫыхӑнман темӗн. Сывлӑш, ӳт пек, хавшанмасть. Вӑл, ӳт пек, урӑхланса пымасть. Библи: Турӑ ӳтпе чикӗленсе хӗсӗнмен Сывлӑш, тесе вӗрентет. Унӑн кӳлепи ҫук: ӳтпе кӳлепе Уншӑн чӑрмав анчах пулнӑ пулӗччӗҫ. Ӑна ниепле майпа та чикӗлесе виҫеймӗн. Вӑл нимӗнпе те ҫыхӑнман. Вӑл кӳлепипе йывӑрӑшӗ пур япаласене кӑна курма пултаракан куҫа курӑнмасть. Библи пире: Вӑл, нимӗнле чикӗпе те пӳлӗнсе тӑманскер, пӗр харӑсах пур ҫӗрте те пулма пултарать, тесе вӗрентет. Вӑл пурне те курса, илтсе, пӗлсе тӑма пултарать.

Эпир ҫакна ӑнланса тӑна илме пултараймастпӑр. Хамӑрӑн майсем хӗсӗккине кура, Турра та хӗсӗк майлӑн курма пӑхатпӑр. Пире хамӑр шайран пӑхса Унӑн нимӗнле шайпа та вӗҫленес ҫук ӑсӗпе ӑслӑлӑхне курса илме пӳрмен. Эпир Туррӑн хамӑр тума пултарайман япаласене тума хӑват пуррине тунма хӑтланатпӑр. Эпир, хамӑр пур ҫӗрте те пур пулса тӑма пултарайманнине пӗлсе, Турӑ та пӗр харӑсах пур ҫӗрте те пулма пултараймасть тесе ӗнентерме тӑрӑшатпӑр. Эпир, тинӗс ҫинчен каланине илтсе тӑрса, юлашкинчен, ун хӗррине тухса кайнӑ та ҫырантан тинӗс шывне ик-виҫ сыпкӑмлӑх ӑсса илнӗ ҫынна аса илтеретпӗр. „Эхе! — тесе янӑрашать ҫав ҫын. — Юлашкинчен те, тинӗс ман алӑра! Вӑл манӑн!“ — тет. Чӑнахах та ҫапла, тинӗсӗн пӗр пӗчӗкҫеҫҫӗ пайӗ ун аллинче. Анчах

çав сехетрех çыранти ытти пайтах, пайтах çын та тинĕс шывне ывăçласа илме пултарать. Тинĕс çыранĕсене, ан тив, калăпăр, çынсем мĕльюншарăн пуçтарăна-пуçтарăна пухăнччăр, хăйсен ывçисене тинĕс шывĕпе тултарччăр, ан тив, мĕн чухлĕ илес килет, çавăн чухлĕ илччĕр ăна — тинĕс пурпĕрех малтанхиллех юлĕ: хухмĕ, чакмĕ. Уннăн хăвачĕпе аслăлăхĕ нимĕн чухлĕ те айăп курмĕ, унăн тарăнăшĕсенчи пурăнăç ĕлĕкхиллех пырĕ. Вăл, çырансенче тăрса хăй еннелле алă тăснă кашни çыннах шывĕпе тивĕçтерчĕ пулин те, пĕр нимĕн чухлĕ те халĕнчен чакса юлмарĕ. Унăн вăйĕ иксĕлми. Вăл — тинĕс!

Турă та çавах. Вăл, пĕр вăхăтрах пур çĕрте те тăрса, Христосшăн Хăйне асăнакансенĕн пур кĕллине те илтет, пĕтĕм тĕнчипе хăватсем кăтартать, çăлтăрсене хăйсен çулăнче тытса тăрать, тырă вăрлăхне шăтса калчаланма парать, çумăр çутарать... Турăшăн чикĕ çук. Унăн ăслăлăхĕшĕн чикĕ çук. Унăн хăвачĕшĕн чикĕ çук. Унăн юратăвĕпе ырăлăхĕшĕн те чикĕ çук.

Енчен те сирĕн Турра чикĕ хурса пӳлес пулсан — чарăнăр! Ан хăйăр Ăна е Вăл пултарнă япласене мĕнле те пулин пĕр-пĕр вырăнта тытса тăмашкăн е пĕр-пĕр хутлăха хĕссе кӳртмешкĕн! Ăссăрла шут тытса тинĕсе типĕтме пикенес çук-çке-ха эсир. Сирĕн уйăх çулне улăштарма е çĕре хăй тĕнĕлĕ тавралла çавăрăнмашкăн чарма вăйăр та хăюлăхăр та çитейрес çуккине пĕлетĕрçке! Пурне те пултарнă, пурин çулне те тытса пыракан Турра Хăйĕн ирĕкĕнче пӳлес тенĕ кăмăл вара çакăнтан темиçе хут пысăк ăссăрлăх.

Эпĕ тăван аннеме нумай тĕлĕшрен чунтан тав туса пурăнма тивĕçлĕ, анчах ĕмĕрлĕхе усăллă пулса юлнийĕ вара — вăл мана, вунă çулхи ачана, вĕрентсе калани. Турă Вăл Сывлăш, Вĕçĕмсĕр, Ĕмĕр-ĕмĕрлĕх, Улăшăнми Сывлăш тесе ĕненсе тăни вара çынна Туррăмăра пĕ-

чĕклтесе курас илĕртӳрен хăтарать, Туррăн виçесĕр пултараслăхĕ пирки иккĕленсе шухăшлас кăмăла сирсе ярать.

Библи Туррăн чăн сăмахĕ пирки иккĕленекенсем хăйсем мĕн тума пултарайманнине Турă пĕтĕмпех тума пултарать тесе йышăнасшăн мартан иккĕленеççĕ тесе вĕрентет. Енчен те эсир Библи Турă хавхалантарăвĕнчен килнине ĕненсех пĕтерейместĕр пулсан, Ăна тепĕр хут вуласа тухăр. Ăна хăй ĕмĕрне çумăр кӳлленчĕкĕнчен пысăкрах шыва пĕлмесĕр ирттернĕ, ĕнтĕ сасартăк вĕçĕхĕррисĕр тинĕс хĕррине пырса тухнă çын куçĕпе курса илме тăрашса пăхăр. Вара, тен, эсир Туррăн чикĕсĕр пысăк хăвачĕ мĕнлереххине туйса илейĕр. Вара тин Ăна Вăл мĕнле пур çапла ăнланма пуçлайăр-и, тен. Турă чăнахах та Христос калакан Сывлăш иккенне ĕненме тытăнсан, сирĕн текех Туррăмăрăн хăвачĕ пирки иккĕленӳллĕ ыйтусем çуралма пăрахĕç. Çапла ĕнтĕ, Турă Кам тата Мĕн иккенне ăнлансан, сирĕн пурăнăçăрта пурте хăй вырăнне ларĕ.

Иккĕмĕшĕ: Библи Турра Уйрăм Çынна курнă пек курать, çавăн пек уçса кăтартать. Библире тăршшĕпех „Турă юратать“, „Турă çапла калать“, „Турă çапла тăвать“ тенисене тĕл пулатпăр. Уйрăм çынна мĕн тивĕçли Турăшăн та çаплах тивĕçлĕн курăнать. Уйрăм çын тени — вăл харпăр чун, чĕрĕ çын (е чун); вăл туять, шухăшлать, ун кăмăлĕ пур, ун сунăмĕ пур; унăн хăйне уйрăммăн тăма пур майĕ те пур. Вăл — хăйне сăпатран çын, личность.

Кунта, çĕр çинче, эпир çынла уйрăмлăха ӳт-тирлĕ кӳлепере тытса тăратпăр. Çын вăл ӳчĕ-пĕвĕсĕрех те, шăмми-шаккисĕрех те пур тени, ӳчĕ-пĕвĕсĕр, шăммишаккисĕр тăрса юлнă çын тени пирĕн пуçа ниепле те шăнăçасшăн мар. Эпир хамăрăн çынлăх, хамăрăн чун, ĕмĕрех хальхи хамăрти ӳтĕмĕрпе тăрас çуккине пĕлетпĕр.

Пире çӗр çинче уйрӑм çын халлӗн тытса тӑнӑ чун вилӗм самантӗнче ӳтӗмӗртен тухса ӗнтӗ хӑйне пӳрнӗ çулпа каясса пӗлетпӗр. Тӗрӗс, пурне те çакна пӗлетпӗр-ха, çапах та çак чӑнлӑха хамӑр çӗр çинче чухне йышӑнма питӗ хӗн пире.

Турӑ ӳтпе çыхӑнман, анчах та Вӑл Уйрӑм Çын. Вӑл туять, шухӑшлать, юратать, хӗрхенет, каçарать.

Виççӗмӗшӗ: Библи Турӑ вӑл Сывлӑш, Хӑйне Сӑпатранскер анчах мар, Вӑл — Таса та Тӗрӗс Тӑраканӗ (Существо) тесе вӗрентет. Пултарни кӗнекинчен пуçласа Апокалипсис вӗçне çитичченех эпир Ӑна Таса (Святой) Турӑ тесе йышӑнатпӑр. Вӑл пӗтӗмпех ырӑ (совершенен). Вӑл, çылӑхлӑ çын çумӗнче тӑма, питех те таса. Çылӑхлӑ пурӑнăçа тӳсме, питех те таса. Вӑл — Таса та Ырӑлӑхлӑ Турӑ.

Турӑ тӗрӗслӗхӗпе тӳрӗлӗхӗн аслӑлӑхне чӑннипе ӑнланас пулсан, мӗн тери улӑшӑнса лайӑхланнӑ пулӗччӗ пирӗн пурӑнăç — кашни уйӑрӑм çыннӑн та, пӗтӗм халӑхӑн та! Енчен те эпир çылӑхлӑ çынна Турӑ тӳрӗлӗхӗнчен мӗнешкел тӗпсӗр çыр уйӑрса тӑнине тек ниçта чакми ӑнланма пӗлес пулсан, тӗнчемӗр урӑхла пулса тӑнӑ пулӗччӗ. Таса Çыру çутта Турӑра курать. Пӗр тӗттӗмсӗр çутӑ — Вӑл, пӗр сулхӑнсӑр, пӗр айӑпсӑр Чӑн Аслӑлӑхра Тӑраканӑмӑр.

Ку каллех ӗнтӗ çылӑхлӑ çыншӑн ӑнланма йывӑр япала. Эпир, хамӑр йӑнӑшсемпе çитменлӗхсен ӑшӗнче çӑрӑлаканскерсем, Туррӑн хуть те мӗнрен та тасарах тасалӑхне — çветтуйлӑхне — аран кӑна тӗшмӗртме пултаратпӑр, анчах пирӗн, Библие ӑнланса ырӑлӑхра пулма усӑ илес тесен, çав тасалӑха йышӑнма тивӗçмелле.

Ниепле те ырра тухса çитеймен, çылӑхлӑ çынна Пӗтӗмпех Ырӑ Турӑран уйӑрса тӑракан ахрат çырмилле тарӑн чикке Таса Çырура питӗ палӑртса каланӑ. Çакна эпир кӗлӗ чатӑрӗпе чиркӗве Таса тата Тасаран Таса уй-

рӑмсене пайланинчен те куратпӑр. Çылӑхлӑ çын Турӑ патне çывӑхарас тесе парне кӳни те, Турӑпа çынсем хушшинче çураçтарса тӑма чиркӳре Турра ĕçлесе тӑракансем кирли те çавнах кӑтартса парать. Левит кĕнекинчи законсенче те çавнах каланӑ. Израиль халӑхĕн нумай-нумай праçникĕнче те, Палестинӑра Израиль хӑйне уйрӑммӑн тӑнинче те çылӑхсене пула Турӑ патне çывӑхарма çăмӑл маррине куратпӑр. Туррӑн тасалӑхне Унӑн мĕнпур никĕсĕ кӑтартса парать.

Таса Çырура Туррӑн Аслӑ Вырӑнĕ (Престолĕ) Ун Тасалӑхĕн хӳттинче тӑни çинчен каланӑ. Туррӑн Тасалӑхне пӑхсан, çынсен таса мар чунлӑхĕ калама çук пысӑк. Çавӑнтан килет те ĕнтĕ Турӑпалан çылӑхĕсене каçарттарман çынсем хушшинчи тĕпсĕр çыр. Библи Турӑран пире хамӑрӑн йĕркесĕр ĕçсем уйӑрса янӑ тесе вĕрентет. Çавӑнпа Турӑ пирĕнтен, çылӑхлӑскерсенчен, питĕ инçетре: Сӑнне курма пултараймастпӑр, тархасласа йӑлӑннӑ чухне Вӑл пире илтмест.

Турӑ усал ĕç çине ырӑ кӑмӑлпа пӑхма пултараймасть, мĕншĕн тесен Вӑл ытла та таса. Çылӑхпа мĕнле те пулин çыхӑнма — Вӑл пĕр айӑп-кӑлтӑксӑр таса. Çынсенĕн ӑшне усал кĕрсе вырӑнаçиччен Турӑпа çын пĕр-пĕринпе хутшӑнса пурӑннӑ. Халĕ ĕнтĕ çав хутшӑну чарӑннӑ, çыннӑн Турӑпа тытса тӑнӑ пур çыхӑнӑвĕ те, Иисус урлӑ килме пултаракан çыхӑнусӑр пуçне, тахçанах татӑлнӑ. Иисус Христос урлӑ кӑна çын Турӑпа тытнӑ çыхӑнӑвĕне çĕнĕрен тӳрлетсе яма пултарĕ.

Çын хӑй вӑл çылӑхлӑ чун, çак халлĕнлĕхе улӑштарма унӑн вӑйĕ пĕчĕк, хӑйĕн çылӑхлӑ чĕлхипе мĕн йӑлӑнни те ун Турӑ хӑлхине çитмест. Турӑ, Хӑйĕн вĕçĕмсĕр юратӑвне кура, тĕпсĕр çыр урлӑ кĕпер хывма çĕр çине Хӑйĕн Ывӑлне яман пулсан, этемлĕх ĕмĕрлĕхе пĕтнĕ пулĕччĕ.

Шӑпах Туррӑн тасалӑхĕнче тупатпӑр та эпир Хрис-

тос вилĕмĕн сăлтавне. Унăн Тасалăхĕ çылăхшăн хаяррăн айăплама хистесе ыйтать. Çынсен айăпне Иисус урлă касарттарса этемлăхе çăлăнăç пани Ун юратăвĕнчен килнĕ те ĕнтĕ. Эпир пуççапакан Турă — тӳрĕ Турă, таса Турă, тĕрĕс Турă. Вăл, Хăй патне пыма çул уçăлтăр тесе, пире Пĕртен-пĕр Ывăлне ярса панă. Анчах эпир çак пулăшăва нимĕн вырăнне те хумастпăр пулсан, Вăл хунă законсене пăхăнмастпăр пулсан, пирĕн çине хамăр тивĕçнĕ асап çитсен, хамăра хĕрхенме темĕн тĕрлĕ тархасласан та, пире Турăран каçару пулмĕ.

Тăваттăмĕшĕ: Турă — Юрату. Библие вуламан нумай çын „Турă Вăл — Юрату“ тенине (1 Иоан. 4:8) ăнланма пултараймасть. Çавăн пекех, вĕсемшĕн Туррăн ытти енĕсем те ăнланмалла мар.

Эпир юрату сăмахпа усă курса хамăр мĕн каласшăн пулнине чылай чухне уçăмлăн пĕлместпĕр те. Çак сăмах пирĕн чĕлхемĕрте ытла та час-час, кирлĕ-кирлĕмаршăнах „тыткалакан“ сăмах пулса тăчĕ. Эпир халĕ ку сăмахпа çынсен хутшăнăвĕнчи чи илемли çинчен калаçнă чухне те, чи йĕрĕнчĕкли çинчен калаçнă чухне те е ытти темĕнех мар самантсенче те ним уямасăр усă куратпăр. Эпир çул çӳреме „юрататпăр“ имĕш; тутлă кукăль „юрататпăр“ имĕш; хамăрăн çĕмĕл машинăна „юрататпăр“ имĕш; хваттер пӳлĕмĕсене çыпăçтарнă шпалере „юрататпăр“ имĕш т.ыт.те. Çапла, эпир хамăрăн çывăх çыннăмăрсене те „юрататпăр“ тесе калатпăр, анчах нумайăшĕ çакна ун чăн пĕлтерĕшне тимлемесĕр, ячĕшĕн кăна калать. Пирĕн нихăшĕн те Библире: „Турă Вăл — Юрату“, тесе мĕнле шухăшпа каланине уçăмлăн, тарăннăн пĕлсе тăни çук.

Астăвăр: Турă Вăл юрату-ха, Турă пире пурне те юрататъ, тесе ан йăнăшăр. Туррăмăр Юрату пулсан, пурте лайăх, йĕркеллĕ, телейлĕ пулса пымалла, çавăнпа çынна çылăхĕсемшĕн асап та тивмĕ тесе ан шутлăр.

Туррӑн Тасалӑхӗ кирек мӗнле ҫылӑхшӑн та асап хума хушать. Анчах Турӑ Юратӑвӗ ҫылӑхлӑ ҫынна ҫӑлма йӗркине те, ҫулне те тупнӑ. Турӑ Юратӑвӗ Иисус Христоса пӑталасси патне илсе ҫитернӗ, Христоса пула эпир ҫылӑхӑмӑрсенчен тасалма, каҫару илме пултаратпӑр. Турӑ Юратӑвӗ Иисус Христоса хӗрес ҫинче хӑрушӑ асап тӳссе ирттерме янӑ.

Туррӑн аслӑ юратӑвӗ пирки ан иккӗленӗр, мӗншӗн тесен вӑл, Туррӑн Тасалӑхӗ пекех, ӗмӗрех пур, нихҫан улӑшӑнми. Мӗн тери хура ҫылӑхлӑ ан пулар эпир, Турӑ пире юрататъ! Ҫак юрату пулман пулсан, пирӗнтен нихӑшӗ те ӗмӗрлӗх чӗрӗлӗх илсе ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа кӗме май пуррине ӗмӗтленме пултарайман пулӗччӗ. Анчах — Турӑ вӑл юрату! Унӑн юратӑвӗ пирӗншӗн ӗмӗр-ӗмӗрлӗхе. „Турӑ пире юратни Христос пирӗншӗн хамӑр ҫылӑхлӑ чухне вилничен паллӑ" (Рим. 5:8).

Турӑ юратупа каҫару пама пулни этем чӗлхипе мӗн чухлӗ каласа пама май пур таранах чӑн, тивӗҫтерӳллӗ те шанчӑклӑ. Анчах сана тинӗс мӗнли ҫинчен ыттисем тем пек тӑрӑшса каласа кӑтартсан та ӑна ху куҫупа курмасӑр ӑнланса илеймӗн. Турӑ юратӑвӗ те ҫавнашкалах. Ӑна хӑвӑр чӑнласах йышӑнса чӗре варрине иличчен, Турӑпа чӑнласах килӗшӳ килтерсе ҫыхӑниччен пӗр никам та сире ун ҫинчен ӑнлантарса чунӑра витерейме.

Ку вӑл пирӗн хӗсӗк ӑс-тӑнпа ӑнланмалли япала мар. Пирӗн ӑс-тӑн Турӑ Юратӑвӗ пек аслӑлӑха хӑйӗн ытамне илеймест. Акӑ, тӗслӗхшӗн, пӗр ыйту тупсӑмне тупма пикенсе пӑхар-ха: мӗншӗн хура ӗне симӗс курӑк ҫисе шурӑ сӗт паратъ? Биологипе ытти наукӑсен вӗрентӗвӗ темӗн пек тӑрӑшса ӑнлантарсан та, ҫук, тупсӑмне тупаймастпӑр, сӗтне ҫиетпӗр — куна пӗлетпӗр... Е, калӑпӑр, акса хӑварнӑ пӗчӗкҫӗ лапчӑк вӑрӑран мӗнле майпа симӗс хупӑллӑ, хӗрлӗ ӑшлӑ пылак арбус ҫитӗннине те пирӗн ӑс-

тăнăмăр пĕтĕмпе пĕлсе тăрса ăнлантарма пултараймасть. Электричество мĕнне те пĕлместпĕр, вăл пуррине анчах, ак халĕ çак самантра пире çак кĕнекене вулама май паракан ун çути пуррине пĕлетпĕр.

Турра ĕненӳпе, Унăн Ывăлне, хамăра Çăлаканăмăр Иисус Христоса ĕненнипе, йышăнмалла. Çапла йышăнма пултарсан çеç сирĕн чĕрĕрте иккĕленӳллĕ шухăш валли вырăн юлмĕ. Вара сирĕн чĕрĕрте Турă пур-и, çук-и теекен ыйтусем çуралма пăрахĕç, мĕн пурĕ те — эсир Ăна, Туррăмăра, пĕлсе тăма тытăнайăр.

Кам та пулин манран Турра эпĕ мĕнле майпа шанăçлăн ĕненсе тăма пултарни çинчен ыйтсан, мана çип çĕлен яракан ача çинчен калакан пĕр халап аса килет.

Шăп çу варринчи питĕ селĕм çанталăк тăнă. Хĕвеллĕ. Вашлаттарса çил вĕрнĕ. Тӳпере шап-шурă пĕлĕтсем шунă. Ачан çип çĕленĕ çӳлерен те çӳлерех çĕкленсе пынă, юлашкинчен вăл, хăй те шурăскер, пĕлĕтсен шурă тĕсĕнче куçран пачах çухалнă.

— Мĕн тăватăн эсĕ? — ыйтнă ача патне пырса тăнă пĕр арçын.

— Çип çĕлен вĕçтеретĕп, — тенĕ ача.

Ав мĕнле! Анчах ăçтан пĕлетĕн вăл вĕçнине? Курмастăн вĕт-ха ху ăна...

— Тĕрĕс, — тенĕ ача, — вăл мана курăнмасть, анчах алăри çиппĕме туртса карăнтарать, çавăнпа эпĕ вăл унтине кашни самантрах туйса тăратăп, — тенĕ.

Çын сăмахне Турă Сăмахĕ вырăнне хурса ан йышăнăр. Ăна хăвăр валли хăвăр шырăр. Тупсан, сирĕн чĕрĕр çулăмланса ялкăшма пуçлĕ, вара Вăл, Турă, пуррине тулли шанăçпа ĕненсе тăма тытăнăр.

ТӐВАТТӐМӖШ СЫПӐК

# ÇЫЛӐХ

„Пурте çылӑха кӗнӗ, пурте Турӑ мухтавне çухатнӑ“.

Рим. 3:23

Енчен Турӑ ялан та тӗрӗс, юратупа тӑрать пулсан, мӗншӗн-ха çут тӗнчере усалпа хаярлӑх, асаппа хуйхӑ-суйхӑ çав тӗрлӗ нумай? Мӗнрен килет курайманлӑх? Мӗншӗн эпир хамӑр валли суя турӑсем тупса тултарнӑ? Мӗншӗн вӑрçӑ вӑрçатпӑр, мӗншӗн хамӑршӑн анчах тӑрӑшатпӑр, мӗншӗн выçлӑхланатпӑр? Мӗншӗн вара Турӑ Хӑйӗн евӗрлӗ пултарнӑ çынсемех асӑхса кайнӑ та, Туррӑн хайхи вӗсене вунӑ заповедь (Турӑ Законӗ) пама, çав заповедьсене хытӑ тытса тӑма хушмашкӑн тивнӗ? Мӗншӗн Туррӑн пире çӑлма Хӑйӗн Ывӑлне ямалла пулнӑ? Ӑçтан килнӗ çынсен, Турӑ пултарнӑскерсен, усалланса кайса пӑсӑлса çитесси?

Çакна пӗтӗмпе ӑнланас тесен, мӗншӗн пӗр халӑх тепӗр халӑха хирӗç тӑнине, çемьесем мӗншӗн аркана-аркана кайнине, мӗншӗн кашни утӑмрах тенӗ пек вӑрӑ-хурахлӑхпа пусмӑрлӑх, тӗрӗсмарлӑх, хаярлӑхпа курайманлӑх аснине пӗлес тесен, пирӗн чӑн пуçламӑша тавӑрӑнмалла. Çапла, пирӗн алла Библи тытса, Адамӑн райри историне тӗпленсе вулама тивет.

Хӑшӗ-пӗрин шучӗпе, этеме пултарнин историйӗ юмах анчах имӗш. Ун пеккисем: ку вӑл ӑнлантарма çук япалана, ача-пӑчана йӑпатнӑ пек, ансаттӑн каласа ыйтуран

пăрăнни кăна, теççĕ. Çук, пĕррех те апла мар. Библи пире чăн пуçламăшĕнчех мĕн пулса иртнине, çавăнтан вара этемлĕх мĕншĕн тăршшĕпех хăйне пĕтермелли çулпа пынине тĕп-тĕрĕс каласа кăтартать.

Турă тĕнчене пур енчен те пулса çитнĕ, пур енчен те ырă тăмалла пĕр пĕтĕм тĕнче туса пултарнă. Вăл питĕ аван пулнă, пĕтĕм тĕнче килĕшӳпе илемлĕхре тăнă. Анчах этем ăна йышăнман. Халĕ ĕнтĕ, тунсăхласа çитсе, эпир пурсăмăр та ăна шыратпăр...

Çав ырăлăхлă тĕнчене Турă ырă этеме панă. Адам пĕтĕмпех ырăпа тăракан, пĕр айăп-кăлтăксăр çын пулнă, мĕншĕн тесен Турă мĕн пултарни ырă мар пулма пултараймасть. Ырăпа тăракан этеме Турă чи пысăк, чи хаклă тивлет панă: ирĕклĕх. Суйлав ирĕклĕхĕ. Мĕн суйласа илес килет, çавна суйласа илме ирĕк панă Турă этеме. Тепĕр тĕрлĕ каласан, пурăнăç çулне суйласа илме этеме хăйне ирĕк панă.

Малтанхи çын çĕр хăвăлĕнче пурăнакан тискер кайăкла чун пулман. Адам хăйĕн ăсĕ-хакăлĕпе те, вăйĕ-халĕпе те пĕтĕмпех аталанса çитнĕ ырă шухăш-кăмăллă çын пулнă. Вăл Турăпа хутшăнса тăнă, Турăпа пĕрле çӳренĕ. Унăн, тĕнче патшине ларса, ăна Турă ирĕкĕпе йĕркелесе тăраканĕ пулмалла пулнă.

Çапла пулнă Адамăн райра чухнехи лару-тăрăвĕ: пĕтĕмпе аталанса çитнĕ ырă çын, чăн малтанхи çын, Турă вĕçĕ-хĕррисĕр ирĕклĕх панă чун, çĕр çинчи çавăн пек пĕртен-пĕр чун. Адамăн тулли ирĕклĕх пулнă, хапăл тăвас е йышăнас мар ирĕклĕх, Турă хушнисене пăхăнас е хирĕçле пырас ирĕклĕх, хăйне телейлĕ хăварас е телейсĕр тăвас ирĕклĕх. Ирĕклĕх алăра пурри анчах мар çырлаху кӳрет пирĕн пурăнăçа, çав ирĕклĕхпе хамăр мĕн тунийĕ пĕлтерĕшлĕ: илейретпĕр-и эпир хамăрпа, Турăпа канăçлăх е çук, — çакă вăл эпир ирĕклĕхĕмĕрпе мĕн тунинчен килет.

Çакăнта ыйтăвăн чăн-чăн тупсăмĕ. Çынна ирĕклĕх панă самантра ун умĕнче икĕ çул уçăлать. Умра пĕртенпĕр çул анчах пулсан, ирĕклĕх хăйĕн пĕлтерĕшне çухатать. Ирĕклĕх вăл суйлама, суйласа илме, хăвăн пурăнăç йĕркине палăртса хума ирĕк пуррине пĕлтерет.

Эпир акă, калăпăр, тӳрĕ чунлă арçынсемпе хĕрарăмсене куратпăр. Анчах тимлесерех пăхăр-ха: тен, вĕсем, хăйсем суйласа илнинчен ытларах, пурăнăçĕсенче тӳрĕ чунлă мар пулма майĕ пулманран тӳрĕ чунлă пулнă? Эпир хăйсем усал маррипе мухтанма пăхакан çынсене пĕлетпĕр. Чăннипе вара çакă вĕсен пĕррех те хăйсем тăрăшнинчен килмен, усаллăхран вĕсене хăйсен йĕри-таврашĕнчи йĕркеллĕ лару-тăру, йĕркеллĕ пурăнăç йĕрки упраса хăварнă. Енчен те ман тĕллĕн, калăпăр, халиччен нимĕнле астарупа илĕртӳ те пулман пулсан, мĕнле-ха манăн эпĕ астарупа илĕртӳ хыççăн каякан йышши мар тесе шантарма хăяс?

Турă Адама пĕр нимĕнрен те чарса тăман. Вăл ăна суйлав ирĕклĕхĕ панă, унпа усă курма та пур майне те панă. Турă пĕтĕмпе пулса çитменни нимĕн те пултарман, Адама та Вăл пĕтĕмпе пулса çитнĕ лару-тăру туса панă, — кирлĕ-тĕк, Адама сăнаса пăхма та пĕр кăлтăксăр юрăхлă пулнă вăл. Аçталла кайĕ ĕнтĕ Адам, мĕн суйласа илĕ: Турра пăхăнса пурăнĕ-и е хăйне мала хурĕ, хăйĕн ирĕкĕ.

Райра чухне Адам пĕр нимĕнле çылăхсăр пулнă, унăн айăпсăрлăхĕ пĕр пăсăксăр пулнă. Ун умĕнче пĕтĕм тĕнче сарăлса выртнă. Этемлĕхĕн çырма пуçламан историйĕ выртнă ум умĕнче. Тап-таса пергамент тĕрки пек. Çав пергамент унран историн малтанхи сыпăкне çырса парасса кĕтнĕ. Мĕнле пулĕ пуласси, мĕнле çулпа кайĕç ĕнтĕ пулас ăрусем, — çакна палăртса памалла пулнă Адамăн.

Турă Хăйĕн ĕçне туса çитернӗ. Вăл çĕр çинчи сад пах-

чи тунă. Çав пахчара этеме мĕн кирли пурте ытлăнçитлĕн пулнă. Вăл Хăй евĕрлĕ, пĕтĕмпех аталанса çитнĕ çынна пултарнă. Вăл ăна ăспа чун панă, çав ăспа усă курма, çав чунпа мĕнле пурăнас килет çапла пурăнма тулли ирĕклĕх панă. Ĕнтĕ Турă Хăйĕн ачи мĕн суйласа илессе ăслăран та ăслă Ашшĕ пулса кĕтсе тăнă.

Сăнав пулнă çакă. Тĕрĕслӳ! Çакă вăл Адам йăлтах хăй ирĕкĕпе, пĕр никам пусахламасăр суйлав тăвас самант пулнă. Тĕрĕс е суя çул суйласа илес самант, мĕншĕн тесен ун умĕнче пĕр çул кăна выртман.

Суйласа илнĕ хайхи вăл. Суйлавĕ хăй пусĕ çине мĕн килтернине пĕтĕмпе хăй çĕклемне илнĕ. Çапла вăл пĕтĕм этемлĕхе тĕслĕх панă: этемлĕх Адам çулĕпе кайнă. Çапла „...пĕрин çылăхĕ пур çынна та айăпа кӳртнĕ“ (Рим. 5:18).

Мĕншĕн тесен Адам пĕтĕм этемлĕхе пуçласа янă малтанхи çын, пĕрремĕш çăлкуçĕ, пулнă. Çĕр айĕнчен тăрна куçĕ пек тăрă шывлă çăлкуç палкаса тухнă, ăна ĕнтĕ мĕнлерех юханшыв пулса юхассине суйласа илме ирĕк панă пулнă: хĕвеллĕ те ытарма çук чечек-курăклă улăх-çаран тăрăх юхса выртас килет-и сан е хĕвелсĕр, тĕттĕм ту хушăкĕсенче ту хысакĕсене çапăнса юхакан шыв пулас килет-и — суйла!

Этемлĕх мĕн паян кунччене синкерлĕ пурăнăçпа пурăннăшăн Турра пĕррех те ӳпкелеме кирлĕ мар. Айăпĕ Адамра: ăна суйласа илме ирĕк панă пулнă, анчах вăл, Турă чăнлăхне хапăл тăвас вырăнне, астараканăн ултавлă сăмахне итлесе çылăха кĕнĕ. Мĕн çавăнтанпах ĕнтĕ этемлĕх çав малтанхи çылăха пула çухатнă ырăлăха каялла тавăрассишĕн тертленет. Унăн пĕтĕм историйĕ — çав усăсăр тертленӳ историйĕ.

— Ку вăл тĕрĕс мар-çке! — тейĕр эсир. — Мĕншĕн пирĕн паян чăн пуçламăшĕнчи малтанхи этем çылăха кĕнĕшĕн асапланмалла? Мĕншĕн вара этемлĕх унтанпа

сывалса уралайман? Мĕншĕн пирĕн ĕмĕр-ĕмĕр айăпра пурăнмалла? — тейĕр.

Хайхи леш юханшывах аса илер-ха, хĕвелсĕр, тĕттĕм çĕр хушăкĕсенче ту хысакĕсене çапăнса юхакан шыва. Мĕншĕн вăл хăйĕн пусламăшне — ăшă та илемлĕ çарана — тавăрăнаймасть? Мĕншĕн вăл, хăйĕн тискер çулĕнчен пăрăнса, каллех таса та тӳлек юхăм шыв пулса каяймасть?

Çук, апла пулмĕ çав ĕнтĕ вăл, мĕншĕн тесен апла тăваймасть. Пĕрре тунине çĕнĕрен тӳрлетсе тума унăн хăйĕн вăйĕ çук. Эхер те вăл пĕрре, чечек-курăклă çутă çырантан тухса, сивĕ, тĕттĕм çĕр хушăкĕсене анса кайнă пулсан, çут хĕвеллĕ çĕре-шыва хăй тĕллĕн çĕкленсе тавăрăнма хал çитерейместь. Пултараймасть! Çапах та тавăрăнма майĕ çук мар. Çулĕ юнашарах выртать. Анчах çав шыв унпа мĕнле усă курмаллине пĕлеймест те, пĕлмест те.

Тĕлĕнсе тăмалла ырă ĕç хуть хăçан та пулса иртме пултарать. Çав тĕлĕнмелле ĕç этемлĕх юханшывне тертпе хĕнрен каллех канăçлăхăн ăшă улăх-çаранне тавăрнă пулĕччĕ. Анчах этемлĕхĕ е курмасть çакна, е кăмăлĕ выртмасть çав енне. Манран ĕнтĕ нимĕн те пулас çук, тет вăл, çапла вара — пĕтсе çук пулма — хăйĕн çулне малалла тăсать.

Эпир кунта каланă юханшыв — вăл этемлĕхĕн Адам вăхăтĕнчен пусласа мĕн паянччен пыракан кунĕ-çулĕ, историйĕ. Кукăр-макăр юхать вăл, юплене-юплене каять, хăрушă тĕпсĕрлĕхе юхса çитсе пĕтме васкать. Эпир, кашниех тенĕ пек сехĕрленсе ӳкнĕскерсем, пулăшу ыйтса кăшкăратпăр. Пурпĕрех те, Адам пекех, суя çул суйласуйла илетпĕр. Аптăраса çитсе, Турă ятне те асăнса пăхатпăр, пурăнăçăмăр тăрлавсăрришĕн Ăна ӳпкелетпĕр. Пире Унăн ăслăлăхĕ иккĕлентерет, Ун айăплавĕсен тĕрĕслĕхĕ иккĕлентерет. Ун ырăлăхĕпе юратăвĕнче те кăлтăк тупса сĕмсĕрленетпĕр.

Пирĕн çĕршывра, акă, мĕнпур граждансен пуçлăхĕ — пуçĕ! — президент иккенне пĕлетпĕр-çке-ха эпир. Анчах эпир адам этемлĕх пуçĕ пулнине манса кайнă. Пирĕн президент пĕр-пĕр ĕçе апла мар, капла татса парать пулсан, пĕтĕм Америка халĕхĕ вăл йышăннă пек тăвать. Президент йышăнăвĕ — пĕтĕм халăх йышăнăвĕ.

Адам этем ăрăвĕн пуçĕ. Вăл астару хыççăн кайса çылăха кĕрсен, çуралса ĕлкĕреймен ăрусем унпа пĕрлех çылăха кĕнĕ. Библире питĕ уçăмлă каланă, Адам çылăхĕ-шĕн пулас ăрурисенчен кашнинченех ыйтĕç тенĕ. Библин „Пултарни“ (Бытие) кĕнекинче Адамăн çылăхне пула пирĕн çине пурин çине те ӳкнĕ синкерлĕх çинчен çырса кăтартнă, çав сăмахсен йывăр чăнлăхне пурсăмăр та питĕ лайăх пелетпĕр, тӳссе-курса тăратпăр: „... çĕр сан пирки ылханлă пулĕ, çĕртен эсĕ ĕмĕрӳ тăршшĕпех хуйхă курса тăранса пурăнăн. Вăл сана йĕплĕ кӳкен, çумкурăкĕсем ӳстерсе парĕ, эсĕ хир курăкĕпе тăранса пурăнăн. Çăкăрна тар кăларса ĕçлесе çийĕн; çĕртен пултарнăскер, ху каялла çĕре кĕричченех çапла пырĕ, мĕншĕн тесен эсĕ тăпра, каллех тăпра хушшинех таврăнăн“ (Пулт. 3:17-19). Евăна вара Турă çапла каланă: „... эсĕ йывăр çын чухне санăн хуйхуна ӳстернĕçемĕн ӳстерсе пырăп, чир-чĕр курса ача çуратăн; хăвăн упăшкуна тилмĕрсе пурăнăн, вăл сана пуç пулса тытса усрĕ“, тенĕ (Пулт. 3:16).

Тепĕр тĕрлĕ каласан, малтан аван та усăллă йывăç-курăк анчах ӳстерсе тăнă çĕр, халĕ ĕнтĕ, Адам çылăха кĕнине пула, лайăххине панипе пĕрлех усаллине те ӳстерет. Этем малтан рай пахчинче уçăлса çӳренĕ пек анчах канлĕ çӳренĕ, мĕн çиес тени пурте алă айĕнче пулнă, ăна кĕпе-тумтир те, нимĕнле хӳтлĕх те кирлĕ пулман. Ĕнтĕ çакăншăн пуриншĕн те ялан та тар кăларса ĕçлемелле. Малтан нимĕнле хуйха-суйха та пĕлмен хĕрарăм вара тĕрлĕрен чир-чĕрпе, ача çуратса, ача ӳстерсе асапланать.

Арçынни те, хĕрарăмĕ те вилет: ӳтпе те, чунпа та вилмелле айăплав хунă вĕсем çине Турă.

Çылăх этем йăхне Адам урлă кĕнĕ, мĕн çавăнтанпа этем йăхĕ çылăхран хăтăлма темĕн те тĕрлĕ пикенсе пăхса тăрăшнă. Библие вуласа эпир акă мĕн пĕлетпĕр: çылăха кĕриччен Адама Турă ырăпа усала пĕлме паракан йывăç çимĕçне ан çи, — çисен, вилетĕн тесе асăрхаттарнă-мĕн. Библи, çавăн пекех, Турă Адампа Евăна нумай ача-пăча çуратма, йыш хушса пыма, çĕр çинче этем йăхне ĕрчетсе яма хушни çинчен калать. Вĕсем вара, Адампа Ева, хăйсене мĕнле пултарнине кура Турă евĕрлĕ пулнă пулин те, анчах ĕнтĕ, пĕр çылăха кĕнĕскерсем, Турă куçĕ умĕнче ӳкнĕскерсем, хăйсен ачисене хăйсен сăнарне анчах парайса пынă. Çавăнпа Каинпа Авель те çылăх чирĕпе вилĕмле чирлĕ пулнă, вăл вĕсене ашшĕпе амăшĕнчен куçнă, хăйсем вара, хăйсен черечĕпе, çав чире хăйсен хыççăнхи ăрусем çине ярса хăварнă. Çапла пурсăмăр та эпир, çуралнă тăрăхах, çылăхлă; темĕн пек тăрăшсан та, хамăр çылăхăмăртан ниçта та тарса каяймастпăр.

Эпир Адам çухатнă ырăна каялла тавăрас тесе темĕн те туса пăхнă. Анчах айăппа çылăх йывăрлăхне пĕлӳпе те, философипе те, тĕнпе те, патшалăх йышăннă йĕркесемпе те ӳкереймен. Пире хамăрăн çылăхлă пуçпах, пĕчĕк ăспах пысăк ĕçсем тума пултарассăн туйăннă. Анчах пысăк ĕçсене çӳлтен панă çутă ăспа таса ăнланусăр тăваймăн: Турă пӳрмен. Пире ырă тĕллевсемех ĕçе хĕтĕртнĕ-ха, хăш-пĕр ĕçе-ĕмĕтĕмĕре пит хурламах та кирлĕ мар, анчах вĕсем нихăçан та вĕçне çити хăйсен тĕллевне çитеймен. Пирĕн пĕтĕм пĕлӳ, пĕтĕм тавçăрулăх, темĕн те пĕр шутласа тупма пултарни, хамăр ятшăн тесен чаплă та илĕртӳллĕ ĕмĕтсем чăннипе питĕ сахала пĕлтереççĕ. Пĕри те вĕсем, хамăр çулăн чăн пуçламăшне тавăрăнаймастпăр пулсан, нимĕн тĕшне те тăмаççĕ. Эпир çаплах-ха Адам

тунӑ йӑнӑшах туса пурӑнатпӑр: Турӑ законӗсене пӑхӑнса пурӑнас вырӑнне, ҫаплах-ха хамӑрӑн ирӗкӗмӗрпе, хамӑрӑн вӑйӑмӑрсемпе пурӑнӑҫ патши пулма питӗрленетпӗр.

Шухӑшласа тӑмасан, Турра мӗншӗн Эсӗ тӗнчене ҫылӑх влаҫӗн аллине патӑн тесе ӳпкелеме питӗ ҫӑмӑл. Анчах тӗпне-йӗрне лайӑххрах тимлесе пӑхар-ха. Турӑ, Хӑйӗн вӗҫӗмсӗр ырӑлӑхӗпе, пире хамӑрӑн йывӑрлӑхсенчен тухма ҫул кӑтартмашкӑн пирӗн патӑмӑра Хӑйӗн Ывӑлне янӑ. Ывӑлне Вӑл унччен Адама тӗрӗсленӗ пекех тӗрӗслесе пӑхма, ҫав тӗрӗслев витӗр ҫӗнтерӳпе тухма янӑ. Сатана Иисус Христоса Адама астарнӑ пекех сӑнаса пӑхнӑ. Шуйттан Иисуса, Турӑран тунас пулсан, влаҫпа чап пама пулнӑ. Аса илер-ха, Адама та вӑл Ева урлӑ ҫавнах калан ӑччӗ.

Анчах, Иисус Христос илӗртӳ хыҫҫӑн кайманни анчах мар, Вӑл ҫак сӑнава хирӗҫ мӗнле ҫирӗп тӑнине пӑхсан, уйрӑмлӑхӗ мӗн тери пысӑк кунта! Шуйттан Иисуса ҫӗр ҫинчи мӗнпур патшалӑха, вӗсен чапне кӑтартса: „...мана ӳксе пуҫҫапсан, ҫаксене пурне те Сана парӑп, тенӗ“ (Матф. 4:9). Тепӗр тӗрлӗ каласан, Иисуса сӑнаса пӑхма пикеннӗ шуйттан Ӑна Турӑ хыҫҫӑн мар, хӑй хыҫҫӑн пыма сӗннӗ. Ҫакна хирӗҫ пирӗн Ҫӑлаканӑмӑр пӗр тӑхтаса тӑмасӑр, уҫӑмлӑн ҫапла каланӑ: „...кай Ман патӑмран, шуйттан; мӗншӗн тесен: хӑвӑн Турруна пуҫҫапса тӑр, пӗр Ӑна анчах пӑхӑнса пурӑн, тесе ҫырнӑ“, — тенӗ (Матф. 4:10). Вӑл илӗртмӗш шуйттана пӗтӗмпех ҫӗнтернӗ, ҫапла пур халӑха та, этемлӗхӗн ӳлӗмрен килес ӑрӑвӗсене те Хӑйӗн ҫылӑхсӑрлӑхне кӑтартса панӑ.

Эпир вӑйсӑр, юнӑмӑр тӑрӑхах айӑплӑ, мӗншӗн тесен эпир Адам ачисем, пӗр сӑмахсӑр ун йӗрӗпе утатпӑр. Тӗрӗс, эпир Адама ятлама та, ылханма та пултаратпӑр-ха, ҫапах пурте ун евӗрлех тӑватпӑр, ун хыҫҫӑнах каятпӑр.

Пирӗн Адамшӑн пулнӑ сӑнав пек сӑнавсемсӗр пӗр кун

та иртмест. Эпир яланах, кашни утăмрах, шуйттанăн чее астарăвĕпе Туррăн чăн Сăмахĕ хушшинче тăрса хамăра кирлине хамăр ирĕккĕн суйласа илме пултаратпăр. Кашни кунах çапла. Кашни кунах пирĕн Адам çухатнă рай патнелле пĕр утăм, çур утăм та пулин, тума, ыттисене те çавăн пек утăм тумашкăн мел пама майăмăр пур.

Эпир питĕ тунсăхлатпăр. Ĕмĕт çитсе пыманни, чирчĕр, терт-асап, вилĕм пĕтсе çухалас куна кĕтсе тунсăклатпăр. Анчах çакă вăл Адам ывăлĕ-хĕрĕ çĕнĕрен çуралса тасалмасăр пулаймĕ. Пирĕн хамăр çылăха кĕрсе пурăнассине мĕнле те пулин майпа пĕтермеллех! Мĕнле майпа? Куна çак кĕнекен малалли сыпăкĕсене вуласа пĕлĕпĕр.

Мĕн ĕмĕрех этем, Турра пĕлмесĕр, влаçа туртăнни, ырра-усала суйлама ирĕк пуртан пĕр хăйшĕн çеç тăрăшса пурăнни ăна пĕтсе ларасса тăратса хăварчĕ. Çĕр пичĕ çинче халĕ нумай-нумай цивилизаци ишĕлчĕкĕсем сапаланса выртаççĕ. Вĕсем çын тĕнчере Турă пулăшăвĕсĕр мĕн те пулин ĕмĕре пыраканни тума пултарайманнине кăтартса тăраççĕ. Ишĕлӳ-аркану, инкек-синкер хăçан та пулин пĕтесси пăхса та курăнмасть, йĕрсе те манăçмасть. Кунсеренех çĕнĕ аркану, кунсеренех çĕнĕ инкек, анчах çапах та этем хăйĕн вилĕм-çĕтĕмлĕ çулĕпе пыма пăрахмасть.

Пурне те çакна Турă, Хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр ăслăлăхĕпе ырăлăхĕ тăрăх, пирĕн ăса-пуçа шăнăçми пысăк хĕрхенӳпе кĕтсе тăнă, пирĕн ăса-пуçа шăнăçми пысăк тӳсĕмлĕхпе курса тăнă. Вăл Хăйĕн ырăлăхĕ енне çавăрăнакана çăлăнупа канăçлăх парас тесе кĕтет. Турă Адам умне уçса хунă икĕ çул пирĕн умра та çаплипех выртатьха. Мĕн суйласа илес тенине суйласа илме эпир çаплахха ирĕклĕ. Çапла эпир пысăкран та пысăк тивлет, ырăлăх, ĕмĕрĕнче пурăнатпăр. Ку ĕмĕрте халĕ Турă, хамăр çылăхăмăрсемпе эпир тахçанах хаяр айăплава тивĕçлĕ пулин те, тавăрупа килме тăхтаса тăрать-ха.

Хӑй ҫылӑхлӑ пирки этемӗн телейлӗ пулма майӗ ҫук. Ҫылӑха пула вӑл хӑй тунсӑхласа кӗтекен ырӑ пурӑнӑҫа нихӑҫан та ҫитеймен. Ҫав ырӑ пурӑнӑҫ уншӑн утопи (пулма пултарайман япала) анчах пулса юлнӑ. Ҫын хӑй тӑвакан кирек мӗнле план та, кирек мӗнле цивилизаци те юлашкаинчен пурпӗрех арканса каять, ишӗлсе анать, манӑҫӑва путса пӑчланать. Мӗншӗн тесен, этемӗн кирек мӗнле ӗҫӗ те тӳрӗлӗхпе тытӑнса пуҫланӑ ӗҫ пулман. Пирӗн йӗри-тавра тусӑнса выртакан цивилизаци ишӗлчӗкӗсем вӗсем тӗнчемӗр лакса ларнӑ ҫылӑх лачаки.

Этем пӗр ӑнлава-ӗмӗрех пур сӑлтавпа тивӗҫӳ законне — маннӑ пулмалла. Питӗ ансаттӑн ӑнлантарас-тӑк, ку закон ак ҫапла калать: ырӑ сӑлтавран ырри килсе тухать, усал сӑлтавран усалли килсе тухать. Ырринчен — ырри, усаллинчен — усалли; ҫапла килет тивӗҫӳ.

Хамӑр пурӑнӑҫӑмӑра пӑхсан, эпир тивӗҫӳсене лайӑх куратпӑр, вӑл мӗнлине лайӑх пӗлетпӗр: ырриийӗ сахал. Усалли вара кашни утӑмрах. Мӗнрен, мӗнле сӑлтавран килет-ши-ха ҫакӑ? Сӑлтавӗ пысӑк. Хӑйӗн вӑйӗпе, хӑйӗн капашӗпе пурне те пусарса тӑракан сӑлтав вӑл. Анчах пирӗнтен, ҫылӑхпа суккӑрланнӑскерсенчен, тарӑна пытарӑннӑ. Этеме „прогресӑн“ хальхи философиийӗн ҫути суккӑрлатать-и, тен. Тен, эпир хамӑрӑн айван, хамӑрах шухӑшласа кӑларнӑ вӗрентӗве питӗ юрататпӑр? Ҫав теори пире этемлӗх пурте йӑлт ырӑ пулса ҫитессин ҫулӗпе аталанса пырать, ерипен пулин те, ҫапла тӗп-тӗрӗссӗн аталанать тесе йӑпатать.

Философсем нумайӑшӗ тӗнчемӗрӗн хальхи вӑхӑтри синкерӗ (трагедиийӗ) ӑнсӑртран япала анчах тесе ӗненетерӗҫҫӗ. Этемлӗх историйӗче кун пек йывӑр, шанчӑксӑр тенӗ самантсемпе тапхӑрсем сахал мар пулнӑ, анчах пурте иртсе кайса чиперех йӗркене ларнӑ теҫҫӗ. Философсем эпир халӗ тӳсекен хурлӑ лару-тӑру вӑл ҫутӑ пуласлӑх

çуралăвĕн терчĕ теме пăхаççĕ. Вĕсем тата: çынсем халлĕхе çаплах ача-пăча кăна-ха, хăйсен пурăнăç çулĕпе, ача пек, ӳксе-тăрса утаççĕ; ку гертĕ, вĕсем аталанса çитнĕ, ăслă чунсем пулса тăрĕç, тесе калĕç, калаççĕ те.

Анчах Библи, çутçанталăк çинчен вĕрентекен ăслăлăхсем (наукăсем) йышăнасшăн маррине сирсе ярса, шăпах çутçанталăк çинчен йăлт уçăмлăн калать. Библи çутçанталăк хăй Пултаракан пуррине те, çаплах тата сăнакан пуррине те кăтартса парать тет. Çын Тĕнчене Пултаракана сăнаканăн ĕçĕсемшĕн ӳпкелет. Анчах вăл, çын, акă мĕне манать: пирĕн тĕнчемĕр вăл Турă пултарнă тĕнче пек мар, пăсăлнă тĕнче. Турă аван тĕнче пултарнă, анчах çылăх тĕнчене пăснă. Турă этеме айăпсăр тăмалла пултарнă, анчах этем ăшне çылăх кĕнĕ те ăна айăплă (пăсăк, кăлтăклă) туса хăварнă. Пирĕн кирек мĕнле усал ĕçĕмĕр те тĕп çылăхран, этем йăхне пĕр кĕрсе ӳлĕмрен улăшăнмасăр юлнă çылăхран, килет. Вăл тĕрлĕрен майпа, тĕрлĕрен çулпа палăрса тухма пултарать. Чăннипе пĕр çав çылăхах, калăпăр, Африкăра пурăнакан кайăкла çынна, аллине сăнă тыттарса, пĕр айăпсăр таса чĕрчуна вĕлерттерет, çав çылăхах чипер ăслă-пуçлă летчиках та, реактивлă самолетпа вĕçтерсе, çав Африкăри ял çине бомба пăрахтарать.

Çак икĕ çынна культура аталанăвĕн çĕрçуллăхĕсем уйăрса тăраççĕ. Пĕри „прогресс“ çынни, ун аллинче этем тунă цивилизаци пуянлăхĕн вăйĕ. Иккĕмĕшĕ çаплах-ха „ансат“, тискер кайăксенни пек пурăнăç йĕркипе пурăнать. Çапах та чăннипе вĕсем иккĕшĕ пĕр-пĕринчен пит уйăрăлса тăраççĕ-и? Çав пĕр шиклĕхех, çав пĕр шанманлăхах çылăхлă ĕç тутармасть-и-ха вĕсене? Иккĕшĕн те вĕсен хăйне кăна юратас, хăйне кăна упрас кăмăл-туйăмĕ малта мар-и-ха? Ыттисен пурăнăçĕ çӳп кăна мар-и-ха вĕсемшĕн? Бомба, цивилизаци туса кăларнă „хальхи“ хĕç-

пӑшал, тахҫанн авалтан пыракан ахаль сӑнӑран шелсӗртерех-им, ахаль сӑнӑран сахалтарах ыраттарать-им вӑл? Ҫапла ӗнтӗ авалтан „айваннисем“ те, хальхи шайри „прогрессивлисем“ те пирӗн хушшӑмӑрта чуна ҫывӑх чунсене юратассинчен ытларах вӗлерме, пӗтерме тӑрӑшнӑ чухне ӑҫтан-ха ырра шанса тӑма пултарӑпӑр? Ӑҫтан-ха хамӑрӑн кӑткӑс ыйтӑвӑмӑрсене татса пама май тупайӑпӑр?

Пӗтӗм хуйхӑ-суйхӑ, мӗнпур инкек, хӗн-асаппа синкерлӗх, этемлӗх историйӗнчи пур ыратупа пур намӑс, — ҫакна пӗтӗмпе пӗр ӑнлава чӑмӑртаса калас тесен, пӗр кӗске те хивре сӑмахпа калама пулать: ҫылӑх. Эпир ӑна, кала-кала, хӑнӑхса ҫитнӗ ӗнтӗ теме те май пур. Чӑннипе вара вӑл нихӑҫан та хӑнӑхӑва кӗми, чӗрене ҫурса ыраттаракан пӗр шелсӗр сӑмах, чуна пусса антаракан йывӑр сӑмах. Хамӑр мӗнлине кӑтартакан хӑрушла тӗрӗс сӑмах.

Ҫынсем хӑйсене ҫылӑхлӑ тенине юратмаҫҫӗ. Сирӗн аҫӑр-аннӗрсемех, аслаҫӑр-асаннӗрсемех ҫылӑхлӑ пулнӑ, ҫавна пулах эсир те ҫылӑхлӑ тенине вара пушшех те йышӑнасшӑн мар. Анчах Библи акӑ мӗн калать. Вӑл:"...пур ҫын та пӗр: пурте ҫылӑха кӗнӗ, пурте Турӑ мухтавне ҫухатнӑ", тет (Римл. 3:22-23). Библи Турӑ умӗнче ҫӗр ҫинчи пур ҫын та ҫылӑхлӑ тесе вӗрентет. Ҫак хаяр чӑнлӑхпа кам та пулин килӗшмесӗр тӑнине курсан, мана пӗр истори аса килет. Акӑ вӑл. Пӗр ҫын пастор патне ҫылӑх ҫинчен калаҫса пӑхма пынӑ.

— Хисеплӗ пастор, — тенӗ вӑл, — пирӗн хамӑрӑн приходра эсир ҫылӑх ҫинчен сахалтарах, юптарсарах калаҫнине курас килет. Хӗрӗмӗрсемпе ывӑлӑмӑрсем, эсир ӑнлантарнипе ҫылӑх ҫинчен ҫапла нумай илтсе пӗлсен, тӳрленес вырӑнне тата ытларах ҫылӑха кӗме тытӑнассӑн туйӑнать пире. Мӗншӗн-ха, калӑпӑр, сирӗн, ҫылӑхсене пит шӗкӗлчемесӗр, „йӑнӑшсем“ ҫинчен, ҫынсем хушшинче „тӗрӗс мар шухӑшласси пурри“ ҫинчен вӗрентес мар?

Тархасшăн, çылăх çинчен çав тĕрлех усăмлăн ан калаçăрха, — тенĕ.

Пастор тăнă та, çӳлĕк çинчен наркăмăш ярса лартнă кĕленче савăт илсе, ăна хăйхи çав çынна кăтартнă. Савăт çинче шултра саспаллисемпе „Наркăмăш! Ĕçме юрамасть!“ тесе çырни пулнă.

— Мĕн тутарасшăн эсир мана? — ыйтнă пастор. — Çак „Наркăмăш“ тесе çырнине сӳсе пăрахса, „Шерпет“ тесе çыртарасшăн-и савăт çине? Апла ăслăрах пулĕ тетĕр-и? Анчах сиенлĕ япала çиелтен пăхма мĕн чухлĕ илĕртӳллĕрех, çавăн чухлĕ хăрушăрах вăл çыншăн. Ăнланмастăр-и вара çавна? — тенĕ.

Çылăх — куçă курăнса тăракан, чăн малтанхи çылăх, Адама Турă куçĕнчен ӳкернĕ; паян пире пурсăмăра та çынлăхран кăларакан çылăха эпир мĕн чухлĕ усăмсăртараххăн кăтартатпăр, ăна ытти сăмахсемпе улăштарса мĕн чухлĕ йăвашшăнрах ăнланма тăрăшатпăр, вăл çавăн чухлĕ пысăкрах сиен кӳрет. Çĕнĕ сăмах кирлĕ мар кунта. Кирли — хамăрăн тахçанах пур çав „çылăх“ сăмахăн пĕлтерĕшне тупасси, ăна пĕтĕм чун-чĕрепе ăнланса илесси! Хамăр пурăнакан хальхи тĕнчемĕрте пире кашни утăмрах çылăх такăнтарса, çыхлантарса пырать пулин те, çылăхăн чăн-чăн пĕлтерĕшне пĕлмен çын питех те нумай. Шăпах çакă чăрмантарать те ĕнтĕ пире чăн тĕрĕс, чăн тӳрĕ çул çине тухмашкăн. Шăпах çакă, çылăха чунтан ăнласа ăнланманни, чарса тăрать те нумай-нумай христиана Христоса ĕненсе тĕрĕс пурăнăçпа пурăнмашкăн.

Турра ĕненекенсен авалхи пĕр юрринче каланă: „Пĕлĕт çинчен калаçакан пуртех те пĕлĕт çине çĕкленеймĕ“, тенĕ. Çылăх тĕлĕшĕнчен те çавнах каламалла. Çылăх çинчен калаçсан та, нумайăшĕ чăннипе вăл мĕн иккенне ăнланса калаçмасть. Çавăнпа та пирĕн Библи çылăх çинчен мĕн каланипе паллашмалла, Библи çылăх çинчен мĕн ка-

ланине пĕлмеллех. Çылăх мĕнне Библире каланă пек ăнланмалла. Çакă кирлĕ пире. Çакна çитекенни нимĕн те çук.

Пирĕн халĕ, çылăха çăмăл ăслăн ăнланса, ăна „çынсен çитменлĕхĕсенчен пĕри“, „çынсен çемçешкелĕхĕсенчен пĕри“ тесе пурăнасси питĕ пур. Пирĕн ăна пĕр нимĕне тăман япала вырăнне хурасси те пур. Анчах Турă çылăха пысăк инкек — трагеди, синкерлĕх — тесе картать. Эпир çылăха ăнсăртран инкек, ăнсăртран пăтăрмах вырăнне хурса манма пултаратпăр. Турă вара ăна манма çук ирсĕрлĕх тесе шутлать. Этем хăйне çылăхран тӳрре кăларма пăхать, Турă ăна хăй çылăхлине ĕнентерме, çылăхĕнчен çăлма тăрăшать. Çылăх вăл вылямалли япала мар, çылăх — пысăк хăрушлăх; унран ялан та пăрăнма тăрăшмалла. Турă куçĕ умĕнче çылăх мĕне пĕлтернине пĕтĕм чун-чĕрепе ăнланса илер те манăçса япăхмасăр пĕлсе тăрар яланах.

Ричард Биль доктор çылăх мĕн иккенне пилĕк тĕрлĕ палăрăмпа ăнлантарса парать.

Пĕрремĕшĕ: Çылăх — вăл йĕркесĕр ĕç (Иоан. 3:4), Турă законне пăсни. Турă ырăпа усал хушшине чикĕ хунă. Çав чикке пăсатпăр пулсан, эпир, кĕме юраман усал çĕре кĕрсе, айăпа кĕретпĕр: закона пăхăнмасăр йĕркесĕр ĕç тăватпăр. Турă авал панă вунă заповеде (пурăнăç йĕркине) тытса тăмастпăр пулсан, Иисус Христос сăрт çинче вĕрентсе каланинчен пăрăнатпăр пулсан, эпир Турă законне пăсатпăр, çылăха кĕрсе айăпа юлатпăр.

Иаков апостол эпир пурсăмăр та айăпли çинчен калать. „Кирек кам та хăй ӳчĕ илĕртнĕ хыççăн кайса улталаннипе асап курать. Ӳт асма пуçлать те çылăха кӳртет, тунă çылăхран вилĕм пуçланать“, тет вăл (Иак. 1:14-15). Турă законĕсене пăсса пурăннăран, Унăн заповечĕсене тытса тăманран эпир пурсăмăр та çылăхлă чунсем пулса кайнă.

Иккӗмӗшӗ: Библи ҫылӑха тӳрӗмарлӑх, чун тӳрӗлӗхӗсӗр тунӑ ӗҫ (ҫавӑн пекех, чун тӳрӗлӗхӗсӗр шухӑшланӑ шухӑш) тесе ӑнлантарать. Вӑл е ку ӗҫе тума уйӑрӑммӑн чарни пурри-ҫуккине пӑхмасӑр, чун тӳрӗлӗхӗсӗр тунӑ ӗҫ — вӑл тӳрӗлӗхрен тухни, тӳрӗлӗхрен пӑрӑнни. Тӳрӗмарлӑх пирӗн кӑмӑл туртӑмӗсенчен килет. Ӑшри ҫав туйӑм-туртӑнӑва (ӑш кӗленине) эпир час-часах ҫын куҫӗнчен, Турӑран пытарма тӑрӑшатпӑр. Ҫапла „пытарӑнса“ тунӑ пирӗн ӗҫӗмӗрсем, вӗсене лару-тӑрӑва кура ирӗксӗртен тума тивет пулин те, хамӑрӑн сӑлтӑклӑ несӗллӗхӗмӗртен, пӑсӑлнӑ юнӑмӑртан (порочная природа) килеҫҫӗ.

Ӑшран килекен айӑплӑх ҫинчен ӑнлантарса, Иисус Христос ҫапла каланӑ: „...ҫыннӑн ӑшӗнчен тухаканни ҫынна ирсӗрлентерет, мӗншӗн тесен усал шухӑшсем, аскӑн тӑвасси, асасси, вӗлересси, вӑрлασси, ӗмӗтсӗрленесси, хаяр сунасси, улталасси, намӑс тӑвасси, хапсӑнасси, Турра хурласси, мӑн кӑмӑллӑ пуласси, ӑссӑрланасси ҫын ӑшӗнчен, ҫын чӗринчен тухать. Ҫав усал пурте ӑшран тухса ҫынна ирсӗрлентерет“, тенӗ (Марк. 7:21-23).

Виҫҫӗмӗшӗ: Библи ҫылӑха тӗле тухманни, умӑмӑра лартнӑ тӗллеве лекейменни, тесе ӑнлантарать. Турӑ лартнӑ тӗллев — Христос. Ҫыннӑн кунран-кун, Христос евӗрлӗ пулма тӑрӑшса, Ун пурӑнӑҫ йӗркине кӗрсе пымалла. Ҫавӑ вӑл христианшӑн ӑша пӗтӗм пурӑнӑҫ тӗллевӗ пулса вырӑнаҫмалла. Вӑл, Иисус, пирӗн патӑмӑра этем ҫакӑнта, ҫӗр ҫинче, мӗн тума, мӗне ҫитме пултарайнине кӑтартма килнӗ. Ҫапла ӗнтӗ эпир кӑтартса панӑ тӗслӗхрен пӑрӑнса пыратпӑр пулсан, тӗллеврен те пӑрӑнса каятпӑр, тӗле тухаймастпӑр.

Тӑваттӑмӗшӗ: Ҫылӑх вӑл Турӑран иртме пӑхни. Ҫын хӑй ирӗкӗпе Турӑ ирӗкӗн ӗҫне сӗмсӗрленсе кӗни. Ҫылӑх вӑл куҫа курӑнса тӑракан усал ӗҫ анчах мар, Турра юрат-

масăр пурăнни анчах мар, çылăх вăл çыннăн ирĕклĕ суйлавĕ те. Пĕтĕм кăмăл-чĕрепе Турă енне туртăнас вырăнне, хуна мала хурса, пĕтĕм кăмăл-туйăмран хуна çеç юратса, хуна çеç пĕлсе пурăнни те çылăх. Вăрă тунипе, çынна вĕлернипе тан çылăх ку! Тен, унтан та пысăкрах. Хăйне кура тиркевлĕ-чыслăскер, тен, пуринчен те аркатуллăрах çылăх. Кам хăйшĕн кăна тăрать,кам хăй çинчен кăна шухăшласа хăйне кăна пĕлет, кам хăйшĕн кăна тăрăшса хăйшĕн кăна кĕрешет, — çавă ĕçкĕпе ашкăнса пурăнакан пекех, аскăн туса пурăнакан пекех çылăхлă.

Иисус Христос каланă: „Çын пĕтĕм тĕнчене тытса тăракан пулсан та, хăй чунне сиен тусан, ăна мĕн усă пулĕ?" — тенĕ (Марк. 8:36). Çакна хальхи пурăнăç чĕлхи çине куçарса, эпир çапла каласси те вырăнлă-тăр: çын тем пысăкăш промышленность облаçĕн королĕ пулса тăнă пулсан та, ăна рак чирĕ кăшласа пырать пулсан, ăна ĕнтĕ мĕн усă? Диктатор çĕр чăмăрĕн çуррине хăй аллине тытса илчĕ пулсан та, унăн хăйне тавăрма хатĕрленекенĕсенчен кунĕн-çĕрĕн сехĕрленсе пурăнма тивет пулсан, ăна ĕнтĕ мĕн усă? Çын хăйĕн ачисене юратса-тăрăшса пăхса çитĕнтерчĕ пулсан та, ачисем кайран хайхисекре пăрахрĕç пулсан, ăна ĕнтĕ мĕн усă пулĕ? т.ыт.те.

Чăнахах-мĕн, хуна мала хуни (эгоизм) вилĕмле çылăх.

Пиллĕкмĕшĕ: çылăх вăл *ĕненӳ çукки*. Ĕненӳ çукки — çылăх, мĕншĕн тесен çакă вăл Турă чăнлăхне кӳрентерни пулать. „Турă Ывăлне ĕненекенĕн пĕлтерекенни хăй ăшĕнчех; Турра ĕненмен çын Турра ултавçă пек курать, мĕншĕн тесен вăл Турă Хăй Ывăлĕ çинчен пĕлтерсе каланине ĕненмест" (1 Иоан. 5:10).

Шăпах ĕнтĕ çыннăн ĕненӳ çукки — Турра ĕненменни — Çӳлти Патшалăх алăкне хупса тамăк хапхине уçса хурать. Шăпах ĕнтĕ ĕненӳ çукки Турă Сăмахне хирĕçлет, Христоса пире Çăлакан тесе йышăнмасть. Шăпах ĕнтĕ

ĕненӳ çукки çынсене Евангелирен сирсе ярать, Христосăн тĕлĕнмелле ĕçĕсене чăнласа ĕненме памасть.

Çылăха кĕни — айăпа кĕни. Айăп çын çине таврăру ӳкерет. Пĕр çыннăн та çылăха кĕнин таврăвĕнчен хăтăлма е çылăхран тасалма вăйĕ те, майĕ те çук. Ангелсем те, çынсем те çылăхшăн тӳлесе татма пултараймаççĕ. Çылăхлă çынна хăйне кĕтекен хăрушă шăпаран пĕр Христос анчах çăлма пултарать. Мĕншĕн тесен, „çылăх вилĕм кӳрет“ (Римл. 6:23). „Çылăха кĕрекен чун вилет“ (Иезек. 18:4). „Çын хăйĕн тăванне нимĕнпе те тӳлесе илеймĕ, Турра уншăн тӳлесе татаймĕ“ (Псал. 48:8). „Турă çилли кунĕнче вĕсене хăйсен кĕмĕлĕ те, хăйсен ылттăнĕ те çăлса хăвараймĕ“ (Софон. 1:18).

Çыннăн пĕртен-пĕр çăлăнăçĕ Голгофара („Голгофа“ вăл „Пуç касмалли вырăн“ тенине пĕлтерет). Куçăр умне кăларсамăр: икĕ енче икĕ хĕрес, вĕсем çине усал ĕçпе пурăннă икĕ хураха пăталса çакнă, варринче — тепĕр хĕрес, ун çинче йĕплĕ кӳкенрен çыхнă пуçкăшăлĕ тăхантарна Çын. Ун аллисемпе урисенчен юн сăрхăнса тăрать, чиксе шăтарнă аякĕнчен те юн тухать, куçĕ çине те тумлать юн... Ун умĕнче çынсем тăраççĕ, вĕсем унран шăл йĕрсе кулаççĕ, мăшкăласа аташаççĕ.

Кам вăл, çав Çын, çапла асап тӳсекенскер, çапла мăшкăл курса вилекенскер? Ку Вăл — Турă Ывăлĕ, тĕнче Кнеçĕ. Ăна пĕлĕт çинчен янă, Ăна çылăх лачакине путнă çак çĕр çине килме пӳрнĕ. Ун умĕнче ангелсем ӳпне ӳксе сăнĕсене пытарççĕ, васкаса хупланаççĕ... Çапах та Вăл, авă, юнланса пĕтнĕскер, хĕрес çинче çакăнса тăрать...

Мĕн илсе килнĕ Ăна çак сехре хăпартмăш вырăна? Кам çапла хăрушă асапа ӳкернĕ пире юратăва вĕрентме килнĕ Çынна? Çак хаяр ĕçе *эсиртунă, эпĕтунă:* Иисус Христоса сирĕн çылăхăрсемшĕн, ман çылăхăмсемшĕн

хӗрес ҫине пӑталанӑ. Ҫав нихӑҫан манми самантра этем йӑхӗ ҫылӑхӑн чӑн тӗттӗмлӗхне путса аннӑ, тӗпсӗрлӗхӗн чӑн тӗпне ӳкнӗ, чӑн вӗҫне ҫитнӗ. Хӗвел те тӳссе тӑрайман ҫавна, хӑйӗн ҫутӑ сӑнне пытарнӑ!

Ман Ҫӑлаканӑм чӗп-чӗр юн!
Пур ҫылӑха Хӑйне илет...
Асап тӳссе, вилсе ҫав кун,
Вӑл кӳнӗ маншӑн та тивлет.

Ҫав хӗрес ҫинче ҫылӑх хӑйӗн пӗтӗм ирсӗрлӗхне кӑтартнӑ. Анчах Христоса пӑталанӑ чышӑм этемшӗн ирӗклӗх алӑкне уҫса панӑ самант пулса тӑнӑ. Намӑсӑн, курайманлӑхӑн ҫылӑхлӑ чи ҫӳлӗ ҫӗкленӗвӗ Турӑ ырӑлӑхӗпе каҫарӑвӗн чи ҫӳлӗ ҫӗкленӗвӗпе ылмашӑннӑ. Турӑ Путекӗн хӗрес ҫинчи вилӗмӗ урлӑ Христоса ӗненекенсен пӗтӗм ҫылӑхӗ хӗрес ҫумне пӑталаннӑ. Христос вилӗмӗ пирӗн ҫӑлӑнас шанӑҫ никӗсне хывӑннӑ, пире ҫӗнтерӳ пама хурӑннӑ. Христос Хӑй пирӗн ҫылӑхсемшӗн Хӑйӗн Ӳтне йывӑҫ ҫине ҫӗкленӗ. Вӑл пирӗншӗн вилнӗ, унтан чӗрӗлсе тӑнӑ. Вӑл Турӑ этеме мӗн пама пулнин пуринӗн чӑнлӑхне кӑтартса панӑ. Енчен те эсир паян Христоса пӗтӗм чун-чӗререн ӗненсе йышӑнатӑр пулсан, эсир, ҫылӑх тӗввине салтса, ирӗклӗ ҫынсем пулса тӑрайӑр, Иисус Христос юратӑвӗ тӑрӑх сирӗн чунӑр ҫылӑхран тасалнине, вилӗмрен ҫӑлӑннине шанса-ӗненсе пурӑнайӑр.

## ПИЛЛĔКМĔШ СЫПĂК

# УСАЛ

„Пирĕн ӳтпе-юнпа (çынсемпе) вăрçмалла мар, çак ĕмĕрти тĕттĕм тĕнчене (çылăхлă çынсене) тытса тăракан пуçлăхсемпе, аслисемпе, пĕлĕт айĕнчи усал сывлăшсемпе вăрçмалла“.

Ефес. 6:12

Пурăнăçăмăрти пирĕн пĕр ĕçе те сатана хутшăнманни çук. Хуть те мĕнĕн тупсăмĕ те усалпа (шуйттанпа) пăтраннă. Мĕн ĕмĕртенхи çак тăшмана Библи çапла çырса кăтартать: „Шуйттан теекен, сатана теекен пысăк аçтаха, авалхи çĕлен, пĕтĕм тĕнчене илĕртсе пурăнакан...“ — тет (Апок. 12:9). Эпир ун аллин ĕçне кашни утăмрах куратпăр.

Калăпăр, акă, пирĕн вăхăтăмăрта, юлашкинчен те, çынсемшĕн канăçлă пурăнăç сывăхарса çитнине шанма тытăнатпăр кăна, — пăхăсăн, пирĕн хушшăмăрта пăтăрмахсем сиксе те тухаççĕ, пĕр-пĕрне шанманни, ĕненменни пуçланса каять т.ыт.те. Чылай çул хушши, пысăк тӳсĕмлĕх çитерсе, лайăххăн тунă ĕçсем йăлт харама каяççĕ. Мĕншĕн тесен, сатана этемлĕхĕн тĕттĕм, хавассăр çулĕ мĕн тĕнче пĕтичченех тăсăлса пытăр тесе тăрăшать. Вăл Адама Эдемре — райра — çĕнтернĕ, çавăн пекех, Адам йăхĕн ăрăвĕсенчи пур чуна та алла илейĕп тесе шутлать. Çакна çирĕп шанса тăрать, çавăнпа ун ĕçĕсем хытă пăркăçлă, хивре те витерӳллĕ, чее те ултавлă.

Çут тĕнчере ăслă-тăнлă пĕр çын те сатана пурри çинчен шухăша кая-кая тăмасăр пултараймасть. Вăл пурри пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Кашни кунах, кашни утăмрах унăн ирĕкне, унăн вăйăмне куратпăр. Ыйту шуйттан пурри-çукки çинчен мар, ыйту шуйттан мĕнле тата мĕншĕн пулса кайни çинчен. Акă мĕн шухăшлаттармалла пире.

Адампа Ева историйĕнчен пĕлетпĕр: шуйттан вăл Турă малтанхи этеме пултаричченех пулнă. Усал пулнă, пурăннă ĕнтĕ, унсăрăн Турă ырра-усала пĕлме паракан çимĕç кӳрекен йывăçа пултарман пулĕччĕ. Усалли пулман-тăк, унран сыхланасси те кирлĕ пулман пулĕччĕ, çавăнпа хайхи ырăпа усал мĕнне пĕлме май паракан йывăç та кирлĕ пулман пулĕччĕ. Çав йывăç пачах, нихăçан та шăтса ӳсмен пулĕччĕ.

Кунта эпир питĕ пысăк вăрттăнлăх, мĕнпур вăрттăнлăхран чи кăткăс вăрттăнлăх, чăнахах та ăнлантарма çук ыйту умĕнче тăратпăр. Мĕнле-ха Турă — Пурне те пултаракан, Пĕтĕмпех таса, Пурне те юратакан Турă — усала пултарнă е мĕнле-ха шуйттана усала пултарма чарман? Мĕншĕн Адамăн шуйттан илĕртнипе улталанмалла пулнă? Мĕншĕн Турă шуйттана малтанах, вăл Евăна çылăхлă шухăшпа астарас шутпа çĕлен ăшне кĕнĕ чухнех, вилĕм ярса пĕтермен?

Çак ыйтăвăн тупсăмне тупма Билире хăш-пĕр тĕлĕшрен систерсе калани те çук мар-ха. Анчах Библи акă мĕне питĕ уçăмлăн çирĕплетсе парать: Турă Хăйĕн аслă тĕллевне вырăна килтерсе çитериччен çынна çак йывăр ыйтăвăн тупсăмне пĕлме паман, унччен Турă шуйттана та, шуйттанăн сăтăрла ĕçĕсене те чармасть-ха, мĕншĕн тесен çав сăтăрла ĕçсем те Туррăн аслă тĕллевне вырăна кӳме май памаççĕ мар.

Адам çылăха кĕриччен, унтан та ытларах, Адам

пуличчен нумай малтан, Турӑ пултарнӑ тӗнчене уйрӑм тавралӑхсене (хутлӑхсене) пайланӑ пулмалла. Ҫавсенчен кашнинех Турӑ умӗнче яваплӑ ангел е архангел пӑхса тӑнӑ пулмалла. Павел апостол пире акӑ мӗн каласа ӑнлантарать: „Ҫӳлте мӗн пуррине те, ҫӗр ҫинче мӗн пуррине те, курӑнаканнине те, курӑнманнине те, пурне те Вӑл пултарнӑ; аслӑ вырӑнсене те, аслисене те, пуҫлӑхсене те, хӑватлисене те пурне те Вӑл пултарнӑ, пурне те Хӑйшӗн пултарнӑ“, — тет (Кол. 1:16). Библи час-часах ангелсемпе архангелсене асӑнать. Библие вуласа эпир ангелсемпе архангелсем хушшинче пӗр хунӑ йӗрке пулнине, вӗсенчен хӑшӗ-пӗри ыттисенчен хӑватлӑрах пулнине куратпӑр.

Сатана пӗлӗт ҫинчи ҫавӑн пек хӑватлӑ хуҫа, хӑйне Турӑ шанса панӑ ҫӗре тытса тӑраканскер, пулнӑ-и, тен. Люцифер, „ҫутатакан“, ятпа паллӑскер, вӑл Турра питӗ ҫывӑх тӑма кирлӗ пулнӑ. Мӑнаҫланса кайса чапшӑн ҫунма тытӑнмаллах ҫывӑх! Вара ӑна хӑй Туррӑн савнӑ тарҫийӗ пулни ҫырлахтарма пӑрахнӑ-и, унӑн хӑйӗн Турӑпа тан пулас килсе кайнӑ-и.

Ҫав самантра вара унччен, Турӑ ирӗкӗпе, илемлӗ те пур тӗлӗшрен те ҫыхӑнуллӑ тӑнӑ тӗнче ҫӗмӗрӗлсе кайнӑ, унӑн пӗр пайӗ Турра хирӗҫ тӑнӑ. Сатана, Турӑран хӑрамасса, хӑйӗн хӑватне, хӑйӗн влаҫне, ҫирӗплетме пикеннӗ. Вӑл Турӑ йӗркелевӗнчи хӑйӗн вырӑнне пӑрахнӑ та, пӗлӗтӗн аялти сийӗсене анса, хӑй Ҫӳлти Турӑпа тан тесе евит тунӑ. Турӑ ӑна тахҫан ҫак тӗнченӗн пуҫлӑхне лартнӑ. Христос вилӗмӗпе унран тасалма законлӑ никӗс хунӑ пулин те, Турӑ ӑна халлӗхе ҫав вырӑнтан кӑларман-ха. Мӗн хӑй уйӑрӑлнаранпах сатана пӗр чарӑнмасӑр Турӑпа кӗрешет. Хӑватлӑ патша пек, хӑйне пӑхӑннӑ темӗн чухлӗ ангелпа пӗрле, вӑл ҫӗр ҫинче хӑйӗн патшалӑхне туса хунӑ.

Иисус Христоспа Унӑн вӗренекенӗсем шуйттан пур-

рине лайӑх пӗлсе тӑрса ӗҫленӗ. Матфей ҫырнӑ Евангелире Иисус Христоспа шуйттан хушшинче чӑннипе пулса иртнӗ калаҫӑва илсе кӑтартнӑ (Матф. 4:1-10). Шуйттан фарисейсемшӗн те чӑнлӑх пулнӑ. Ҫав чӑнлав вӑйлӑ пулнӑран ӗнтӗ вӗсем Иисус Христоса та „... усалсене Вӑл усалсенӗн пуҫлӑхӗ веельзевул хӑвачӗпе хӑваласа кӑларать“ тесе айӑплама пӑхнӑ (Матф. 12:24). Иисус Христосӑн шуйттан (усал) пурри пирки те, вӑл ҫӗр ҫинче усӑ куракан ирӗкӗ (влаҫӗ) пирки те иккӗленӳ пулман.

Сатана хӑватне Иуда апостол янӑ ҫырура лайӑх кӑтартнӑ: „Моисей ӳчӗшӗн шуйттанпа тавлашнӑ чух Михаил Архангел та ӑна хурласа айӑплама хӑйман, „Турӑ чартӑр сана“ тесе анчах каланӑ“, — тенӗ унта (Иуд. 9).

Вӑтам ӗмӗрсенче шуйттана мӑшкӑлласа, камитле, сӑнласа кӑтартас йӑла анлӑ сарӑлнӑ пулнӑ. Ҫапла вара хальхи вӑхӑтра та шуйттан мӗнне ӑнланса ҫитреймени ҫавӑнтан нумай килет те. Шуйттанран ҫав териех сехӗрленсе тӑрас мар тесе, ҫынсем унран тӑрӑхлама, мӑшкӑллама пӑхнӑ, ун ҫинчен мӑйракаллӑ, хӳреллӗ йӗрӗнчӗк чӗрчун ҫинчен сӑмахланӑ пек калаҫма тӑрӑшнӑ, ҫавӑн пек ӑнланнӑ. Ӑна аллине сенӗк тыттарса ӳкере-ӳкере кӑтартнӑ, пичӗ-куҫӗнче айван ӑс выляса тӑнӑ. Ҫавӑн йышши ӳкерчӗксене курса, ҫавӑн евӗрлӗ юмахсене илтсе, ҫынсем хӑйсем сисмесӗрех тенӗ пек: „Кунашкал айван та кулӑшла япаларан кам хӑратӑр!“ — тесе шӑл йӗрнӗ.

Чӑннипе вара урӑхла: вӑл вичкӗн ӑслӑ, хӑватлӑ, пултаруллӑ, темӗн те пӗр шухӑшласа кӑларма ӑста сывлӑш. Эпир акӑ мӗне манатпӑр: шуйттан вӑл Туррӑн чи аслӑ, чи пултаруллӑ ангелӗ пулнӑ-и, тен? Вӑл, хӑйне Турӑ мӗн панипе Туррӑн тӗллевне мар, хӑйӗн тӗллевӗсене ҫитерсе пыма шут тытнӑскер, чи лайӑх аталанса ҫитнӗ сывлӑш пулнӑ. Ун ӗҫӗн сӑлтавӗсем хӑйне евӗр чаплӑ, тӗллевӗсем ҫивӗч ӑслӑ, ун шухӑшӗ ялан та тенӗ пек хирӗҫлеме ҫук

ӗнентерӳллӗ. Айван ӑспа сиккелесе ҫӳрекен, кулӑшла мӑйракаллӑ та кулӑшла хӳлеррӗ ниме тӑман чун мар вӑл, Туррӑн вӑйлӑ тӑшманӗ, хӑйӗн чараксӑр хӑвачӗпе аслӑ хӳхӗм княҫ. Ҫав тӗрлӗ чее те ӑслӑскер, вӑл хӑйне ҫиеле кӑларма пур майпа та усӑ курать, пур ӗҫе те хӑй майлӑ ҫаварса яма пӗлет.

Сатана ҫӑмӑллӑнах суя пророк кӑларма пултарать, — кун ҫинчен пире Библи асӑрхаттарса калать. Эпир халӗ питӗ иккӗленме юрататпӑр, пирӗн ӗненӳ ишӗлсе пӗтнӗ. Ҫак ишӗлчӗк ҫинче сатана суя патша, антихрист, кӑларса тӑратать. Хамӑрӑн Ҫӑлаканӑмӑрсӑр тӑракан тӗн туса хурать. Вӑл Христоссӑр тӑракан чиркӳ тӑвать. Вӑл хӑйне Турӑ Сӑмахӗсӗр пӑхӑнса тӑма чӗнсе илет.

Павел апостол ҫакна малтанах каласа хунӑ. Вӑл каланӑ: „... ҫӗлен Евӑна хӑйӗн чеелӗхӗпе илӗртсе улталанӑ пек, эсир те Христоса тӳрӗ кӑмӑлпа ӗненессине пӑрахса хӑвӑр ӑсӑрсене пӑсасран хӑратӑп. Кам та пулин сирӗн пата пырса сире Иисус ҫинчен эпир вӗрентнинчен ытларах вӗрентсен, е Сывлӑшӑн хӑвӑр илеймен урӑх хастарӗсене илтерсен, е хӑвӑр илтмен урӑх ырӑ хыпар пӗлтерсен, сирӗн ӑна хапӑл тусассӑн та юрӗччӗ, (анчах вӑл пулас ҫук)... Мӗншӗн тесен ҫавӑн пек суя апостолсем, чеепе ӗҫлекенсем, Христос апостолӗсем пек курӑнса ҫӳреҫҫӗ“, — тенӗ (2 Кор. 11:3-4,13).

Эпир пӗлетпӗр, антихрист килӗ, ҫынсен ӑсне-кӑмӑлне илӗртме пикенӗ. Вӑхӑчӗ ҫывӑхарать, майӗ-шывӗ хатӗр: тӗнче пӑтранса-пӑлханса тӑрать, пур ҫӗрте те сехӗрленӳ. Кашни утӑмрах тенӗ пек суя пророксен паллисем тӗл пулаҫҫӗ, нумайӑшӗ ӗмӗртенхи синкерӗн юлашки саманчӗ пуҫланнине курма пултарӗ. Ҫакӑ вӑл пирӗн кунсенчех пулас майӗ пур, мӗншӗн тесен пурӑнан пурӑнӑҫ хӑвӑртлӑхӗ ӳссех пырать, тӗрлӗрен ӗҫпулӑм васкавлӑн килекиле иртет. Тата пур ҫӗрте те акӑ мӗн куратпӑр: ҫынсем,

арçынсем, хĕрарăмсем, ăнланса е ăнланмасăрах вăл е ку енне — Турă е шуйттан енне — суйласа илеççĕ.

Ку вăл тӳрремĕх вилĕмле кĕрешӳ пулĕ. Ку кĕрешӳре каçару та, пулăшу та, нимĕнле уйрăммăн хисепе илни те пулмĕ. Этемшĕн çак кĕрешӳ тапхăрĕ рай пахчинчех пуçланнă: унта сатана этемлĕхе илĕртсе улталанă та Турăран пăрса янă, кашни çынна, шучĕ те çук нумай хирĕçӳллĕ кăмăлне кура, пĕр хăйĕн çулĕ çине кăларнă. „Пурсăмăр та эпир сурăхсем пек аташса çӳренĕ, кашни харпăр хăйĕн çулĕ çине тухса пăсăлнă; Турă вара пирĕн мĕнпур çылăхăмăра Ун çине хуна“ (Исаия 53:6). Çакă мĕн тĕнче пĕтичченех, ырăлăх хăвачĕ çĕнтерсе Чăн Патшан аслă вырăнĕ çине çĕкличченех, тăсăлса пырĕ.

Историн хальхи тапхăрĕнче икĕ хăватлă виççĕллĕ пĕрлĕх хире-хирĕç тăрать: Чăн Таса Троица (Ашшĕ, Ывăлĕ, Святой Сывлăш) тата сатанан суя виççĕллĕ пĕрлĕхĕ. Суя виççĕллĕ пĕрлĕх этемлĕхе хăйне пуççаптарса пурăнасшăн. Сатанан виççĕллĕ пĕрлĕхĕ (шуйттан, антихрист, суя пророк) мĕнлине Апокалипсисра çырса кăтартнă: „...эпĕ дракон çăварĕнчен, тискер кайăк çăварĕнчен, суя пророк çăварĕнчен тухакан шапа евĕрлĕ виçĕ таса мар сывлăш куртăм“, — тенĕ (Апок. 16:13).

Кăнтăрла та, çĕрле те — пĕр самант та! — эсир çак икĕ хăватран айккинче тăраймастăр. Кирек хăш самантра та эсир вĕсенчен хăшĕн хыççăн каяссине хăвăр ирĕклĕн татса пама пултаратăр. Шуйттан, сăнаса, илĕртсе, юнаса, йăпăлтатса, ялан та сирĕн çывăхăрта тăрать. Тепĕр енчех тата Иисус Христос та, пурне те юратакан, пурне те каçаракан, эсир Хăй енне çавăрăнса Унран пулăшу ыйтасса кĕтекен Иисус, тăрать. Вăл сире усала хирĕç тăма кирек хăçан та пысăкран та пысăк вăй пама хатĕр.

Пурăнăçра сирĕнĕн йывăр та хурлăхлă, инкеклĕ те канăçсăр самантсем пулаççĕ. Ун пек чухне эсир кăткăс

лару-тăрура хăвăра вăйсăр, пĕр пулăшусăр туятăр, ĕмĕтĕре татса шанăçа çухататăр. Шăпах çавăн пек самантсенче ĕнтĕ шуйттан сирĕн чи вăйсăр енĕрпе усă курма, сире Адам кайнă çулпа тата шалараха кӳртсе яма тăрăшать.

Çавăн пек хăрушă самантсенче эсир хăвăра Иисус Христос пăрахманнине астуса илĕр. Вăл сире хӳтĕлĕхсĕр хăварман. Хăйне илĕртсе сăнанă сехетре Вăл Хăй шуйттана çĕнтернĕ пекех, эсир те астаракана кашни кунах çĕнтерсе пыма пултаратăр. Вăл Хăй çавăн пек сăмах панă. „Турă Ывăлĕ шуйттан ĕçне çĕмĕрсе тăкма килнĕ“ (1 Иоан. 3:8).

Библиех пире çине-çинех Турă юратăвĕ çинчен калать, çине-çинех пире шуйттанран асăрханма хушать. Пирĕнпе Турă хушшинче тăракан усал ялан та çын чунне хăйĕн танатине тытса илмелли меллĕ самантa кĕтет. „Чаруллă пурăнăр, сыхă тăрăр: сире хирĕç пыракан шуйттан, ахăрса çӳрекен арăслан пек, кама та пулин хыпса çăтасшăн çӳрет“ (1 Петр. 5:8). Библи шуйттана хăйне сăпатран чун пек çырса кăтартать. Унăн аллинче шучĕ те çук демон, вĕсем çынсен пĕтĕм ĕçне-хĕлне хăйсене пăхăнтарасшăн. Пур ĕçе те „... сывлăшра хуçаланакан пуçлăх ирĕкĕпе, хирĕçекен çынсем ăшĕнче халĕ хĕтĕртсе тăракан сывлăш ирĕкĕпе туса“ (Ефес. 2:2) пыртарасшăн.

Шуйттан пурах-ши тесе пĕр самант та ан иккĕленĕр! Пур вăл, вăл — чăнлăх! Тата вăл питĕ ăслă! Шуйттан пирки мĕн чухлĕ те пулин иккĕленетĕр пулсан, хăвăр илнĕ паянхи хаçата уçса пăхăр, радио итлĕр, телевизор ярăр. Вара унăн чее те улавлă ĕçĕсене çийĕнчех курса илейĕр. Усалăн чĕрни айне лекмен пулсан, çавăн чухлĕ ăслă-тăнлă арçынсемпе хĕрарăмсемех хăйсене хăйсем çав тĕрлĕ усаллăн, хаяррăн, икĕпитлĕн тыткаланă пулĕччĕç-и!

Турӑ юратӑвӗпе ырӑлӑхне туйса тӑракан ырӑ чӗреллӗ ҫынсем ирсӗр ӗҫсем тунӑ пулӗччӗҫ-и! Хӑйсен ӑсне-пуҫне усал тӗттӗмлетсе пӑсман йӗркеллӗ ҫынсем тӗрлӗрен конференцисенче ҫынсен нуши-тертне ӑнланмасӑр пӗр усӑсӑр шавланӑ-тавлашнӑ пулӗччӗҫ-и!

Альфред Гуг сӑввине аса илсе, акӑ мӗнле калас килет: Ентӗ эпир, аттесем ӗненнӗ пек, *усала* ӗненместпӗр; ӑна мала ирттерсе, ун хыҫҫӑн алӑка хупса лартнӑ. Шуйттан чӗрнин йӗррисем ҫук текех ҫӗр ҫинче, сатана ахӑрашни те илтӗнмест пире. Анчах кам-ха ура айӗнчех шӑтӑк чавать, сехре хӑпартать? Кам хирсенче Турӑ тырри хыҫҫӑн ҫумкурӑкӗ акать? Ара, эпир ӗненнӗ тӑрӑх, усал пачах ҫук-ҫке-ха! Эппин, кам-ха ун ӗҫне туса тӑрать, ҫут тӗнчене сивӗпе сӗм тӗттӗмлӗх сарать?!

Чӑнахах та, кам хисеп парӗ-ха хамӑр йӗри-таврах курса тӑракан намӑссӑрлӑхшӑн, шелсӗрлӗхшӗн, вилӗмле усаллӑхшӑн? Усал хӑватлӑ вӑй мар пулсан, кам айӑплӑ-ха эпир кашни кунах тӳсекен асапсемшӗн? Пирӗн хальхи вӑхӑтри пысӑк пӗлӳ паракан вӗренӗвӗмӗр пирӗн ӑсӑмӑрсене пӑтраштарса янӑ, эпир Турӑ пуррине, ҫакӑнпа пӗрлех, шуйттан та пуррине ӗненме пӑрахнӑ.

Джордж Гелловэй хальхи воспитани ӗҫӗн иккӗленӳллӗ ҫитӗнӗвӗ ҫинчен калать: „Тӗнчере ӗмӗртенпех Турра хирӗҫле вӑй пур тесе вӗрентнине хальхи ӑс-тӑн йышӑнмасть“, — тет вӑл.

Ҫапла, хальхи ӑс-тӑн, ӑслӑлӑх, шуйттан пуррине хирӗҫлеме пултарать, анчах ҫакна пула усалӑн никӗсӗпе йӗрки ҫухалас ҫук.

Паллӑ проповедник, Кловис Чеппель доктор ҫапла ҫырать: „Иисус Христос, Ҫӗнӗ Сӑмахӑн Святойӗсемпе пӗрле, шуйттан теекен усал сывлӑш пуррине ӗненнӗ пулас. Хальхи кунсенче ҫак вӗрентӗве сирсе пӑрахнӑ“, — тет. Анчах ҫийӗнчех ҫапла хушса калать: „Енчен те эпир

шуйттанра тăракан усал пур тесе шутлама пултараймастпăр пулсан, усалĕ хăй пур факта ниепле те пĕтерме пултараймастпăр. Çылăх тесен вара, ку вăл — темĕн тĕрлĕ ăнлантарсан та ăнланма йывăр факт“, — тет.

Çылăх чăнах та ăнланма йывăр япала. Вăл çынсем тума тăрăшакан пĕтĕм ырăлăха хирĕç нимĕнле тытса чарма çук вăйпа тапса тухать. Вăл пирĕн çине çӳлтен ӳкекен кирек мĕнле çутта та хупласа хума хатĕр хура мĕлке пек килсе тухать. Эпир çакна пурне те куратпăр. Эпир çакна пĕтĕм чунпа-чĕрепе ăнланатпăр. Эпир çакна мĕнле калас килет çавăн пек калама пултаратпăр, анчах эпир çакă чăнахах пуррине туйса тăратпăр. Мĕншĕн тесен „…пирĕн ӳтпе-юнпа (çынсемпе) вăрçмалла мар, çак ĕмĕрти тĕттĕм тĕнчене (çылăхлă çынсене) тытса тăракан пуçлăхсемпе, аслисемпе, пĕлĕт айĕнчи усал сывлăшсемпе вăрçмалла“ (Ефес. 6:12).

Шуйттан çук теекенсем çут тĕнчере усал питĕ хăвăрт сарăлнине мĕнле ăнлантарма пĕлĕç-ши? Тӳрĕ пурăнăçлисен çулĕ çинчи шучĕ те çук чăрмавсем ăçтан, камран иккенне мĕнле ăнлантарĕç-ши? Арканупа ишĕлӳ, пĕтсе ларасси çиçĕмле хăвăртлăхпа сарăлать, çав вăхăтрах пултару ĕçĕ, юсав ĕçĕ тĕлĕнмелле вăраххăн пулса пырать. Çакна мĕнле сăлтавсем тупса ăнлантармалла?

Суя сăмах кăларса ярăр, элек сарăр — самантрах çакă чи инçетри кĕтессене те çитсе ĕлкĕрет. Анчах чăннине калăр-ха, ырă, тӳрĕ ĕç тăвăр-ха — тĕрĕс ăнланĕç-и ăна, çитес çĕре пĕр пăсăксăр çитĕ-и вăл? Темле курăнман вăйсем ăна хуплама, пытарма тăрăшса çийĕнчех хăйсен ĕçне пикенеççĕ: çутта, шанăça таптаççĕ.

Никам та хăй ирĕккĕн шуйттан ячĕпе кермен пек чиркӳсем лартмасть, никам та ун вĕрентĕвне сарма семинарисем уçмасть. Анчах ун сăмахĕсем пур çĕрте те илтĕнсе тăраççĕ, питĕ час-час тĕнче вĕсене ĕçе кӳрет. Çын

шухăш-кăмăлне пăсма тăрăшман куçа курăнми вăйсем çук пулсан, этем тени яланах мĕнпур начаррине, мĕнпур киревсĕррине, мĕнпур йĕркесĕррине итлеме хатĕррине мĕнле ăнлантарăр-ха эсир? Çав вăхăтрах çынсем тасине, ыррине илтесшĕн те, курасшăн та мар. Мĕнрен килет çакă?

Усал, тĕттĕм вăй аташтарас мар-тăк, пирĕнтен хăшĕ, тутлă улма-çырларан пăрăнса, çĕрĕк çимĕç еннелле алă тăснă пулĕччĕ? Эпир вара пурăнăçра чăннипе тăтăшах çавнашкал тăватпăр. Илемлинчен пăрăнса, ниме тăманнине шыратпăр. Ку вăл шуйттанăн ĕçĕ, çапла ĕлкĕрсе пырать вăл пур чухне те, пур çĕрте те!

Эпир кунта çĕр çинче мĕн куратпăр, çавă ырăпа усалăн куçа курăнман хутлăхсенче пыракан вăйлă кĕрешĕвĕн тĕкĕр çинчи пек курăнăвĕ анчах. Эпир хамăрăн планета вĕçĕ-хĕррисĕр тĕменĕн варрийĕ тесе шутлатпăр, çĕр çинчи ĕçсемпе пулăмсем çине ытлашшипех нумай пĕлтерĕш хуратпăр. Куçăмăра кĕретĕн курăнаканнине кăна йышăнатпăр эпир, ăна кăна хисепе хуратпăр, унран ытларах курма пире айван мăнкăмăллăхăмăр чăрмантарать. Куçа курăнман тĕнчере пулса пыракан пысăкран та пысăк кĕрещĕве эпир курма пултараймастпăр.

Авалхи ăсчахсем çакна аван пĕлнĕ. Вĕсем этем куçне курăнман, этем хăлхине илтĕнмен нумай япала пуррине ăнланнă. Хальхи çын: эпĕ радио „турăм“, эпĕ телевидени „турăм“, сасăсене те, куçа курăнмалла ӳкерчĕксене те таçта çити инçете ăсатса тăма пултаратăп, теекен шухăшпа йăпанать. Анчах чăнлăхĕ акă мĕнре: ĕлĕк этем пĕлмен радио-телехумсем тахçанах пулнă, яланах пулнă. Паян кун та тĕнче талккăшĕнче халлĕхе этем нимĕн чухлĕ те пĕлмен пысăк тĕлĕнтермĕшсем пайтах. Çав тĕлĕнтермĕшсем пурри авалхи пророксемшĕн паллă пулнă, анчах пророксем те пулин вĕсем йышлă иккенне тавçăрса илме

анчах пултарнӑ, тӗнче хутлӑхӗсенчи хӑрушӑ кӗрешӗвӗн вӑйсӑр ахрӑмне анчах сисме пултарнӑ.

Шуйттан ултавне лексе, Адам сывлӑш ҫыхӑнӑвне курас мая ҫухатнӑ. Хӑйшӗн те, пӗтӗм этемлӗхшӑн те япала халлӗн мар тӑраканнипе курас, илтес, ӑнланас пултарулӑха ҫухатнӑ. Адам хӑйне куҫа курӑнман тӗнчен тӗлӗнтермӗшӗпе чаплӑлӑхӗнчен кӑларса пӑрахнӑ. Вӑл мӗн пулассине малтанах каласа хурас, малтанах курса тӑрас вӑйне, ҫапла вара *паянхикунӑн* ӗҫне лайӑхрах ӑнланас, лайӑхрах тӑвас пултарулӑхне ҫухатнӑ. Вӑл вӗҫӗмсӗрлӗх туйӑмне, хӑй пӗтӗм тӗнчепе, пурӑнан пур чунпа пӗрлӗхлӗ тӑнин туйӑмне ҫухатнӑ. Вӑл хӑйне Турӑран уйӑрнӑ, Турӑ тӗнчинче хирӗҫле пыраканӗ пулса тӑнӑ.

Ҫавӑн хыҫҫӑн Адам, хальхилле танлаштарса каласан, калӑпӑр, телевиденин пӑсӑлнӑ аппарчӗ евӗр пулса кайнӑ: ҫав аппарат, нумай-нумай хум вырӑнне, пӗр хум анчах йышӑнать, вӑл та пулин урмӑш хум, тӗтреллӗ хум.

Телевизор экранӗ ҫинчи ӳкерчӗк чӗтӗресе тӑрать е айккинелле шуса кайнӑ пулсан, эпир ҫакӑншӑн телестанцие ӳпкелеместпӗр, мӗншӗн тесен айӑпӗ кунта аппаратра иккенне лайӑх пӗлетпӗр. Хамӑр телеантеннӑна тӗрӗс мар лартнӑшӑн та, телевизор япӑх кӑтартать тесе, пӗтем телевидение ятлама ҫук.

Анчах эпир хамӑр ҫылӑхӑмӑршӑн инкек тӳснӗшӗн е чирлесе ӳкнӗшӗн тӳрех Турра ӳпкелеме васкатпӑр. Телевизор пире ҫырлахтармасть пулсан, эпир ӑна тӳсӗмлӗн, тимлӗн юсатпӑр. Хамӑр пурӑнма пӗлмесӗр пурӑнӑҫӑмӑрта начаррине куратпӑр пулсан, никама та мар, тӳрех Турра, Унӑн тӗнчине айӑплама тытӑнатпӑр.

Ӗҫӗрте, калӑпӑр, хӑвӑр ӗмӗтленсе тӑнӑ пысӑкрах вырӑна урӑххине лартрӗҫ тейӗпӗр е хӑвӑр инкек курнӑ ҫӗрте тепӗри ӑнӑҫу турӗ тейӗпӗр — эсир, мӗн ан калӑр та, Турӑ тӗрӗсмарлӑхӗ ҫинчен шавлама пуҫлатӑр. Пирӗн

пурсӑмӑрӑн та мӗншӗн Турӑ пурӑнӑҫӑмӑрта ҫавӑн пек танмарлӑха чарманнине пӗлес килет. Анчах эпир акӑ мӗне манатпӑр: Турӑ, телевидени станцийӗн тӗп инженерӗ пекех, пирӗн патӑмӑра кирек хӑҫан та Хӑй юратӑвӗпе тӗрӗслӗхӗн пӗр пӑсӑксӑр, хайӑх ӳкерчӗкне ярса тӑрать, Ҫав ӳкерчӗке мӗнле йышӑнасси вара хамӑр мӗнлинчен килет.

Чунӑмӑрсенчи усаллӑхпа пӑсӑклӑх пире Туррӑн пӗтӗмпех ырӑ тӗнчине курма та, туйма та чӑрмантарса тӑрать. Пирӗн ҫылӑхӑмӑр пурне те тӗссӗрлетсе пӑсать, пире усал ачисем пулма мар, Туррӑн таса ачисем пулма памасть. Павел апостол пирӗншӗн пурсӑмӑршӑн та каланӑ: „Тӑвас килнӗ ырра тӑваймастӑп, тӑвас килмен усала тӑватӑп“, — тенӗ (Римл. 7:19). Павел апостол, хӑратса тӑракан тӑшмана, пӗтӗм этемлӗхе хирӗҫ хӑватлӑн тӑракана пӗлсе, ҫапла кӑшкӑрса каланӑ: „Эпӗ мӗскӗн ҫын! Ҫак вӗлерекен ӳтрен кам хӑтарӗ-ши мана? Хамӑра Ҫӑлакан Иисус Христос урлӑ тавтапуҫ Туррӑма! Ҫапла ӗнтӗ ӑсӑмпа эпӗ Турӑ йӗркине пӑхӑнса тӑратӑп, эпех ӳтӗмпе ҫылӑх йӗркине парӑнса тӑратӑп“, — тенӗ (Римл. 7:24-25).

Павел апостолшӑн пӗр-пӗрне хирӗҫ тӑракан икӗ хӑватлӑ тӑшман пурри йӑлтах паллӑ пулнӑ, вӑл хӑватлӑ этем икӗ туртӑм хушшинче ҫурӑлса тухасла турткаланса тӑнине пӗлнӗ. Ырӑ хӑвачӗ ӑспа чӗрене Турӑ енне туртать, ҫав вӑхӑтрах усал хӑвачӗ ӳте вилӗмпе аркану еннелле сӗтӗрет. Сире те ҫав икӗ хӑват тытса илнӗ: чӗрӗлӗх тата вилӗм. Турӑ ҫулне суйласа илӗр, вара эсир чӗрӗлӗх тупайӑр. Сатана ҫулне суйласа илсен, сирӗншӗн вилӗм анчах пулӗ.

УЛТТӐМӖШ СЫПӐК

# МӖН КӖТЕТ ПИРЕ ВИЛӖМ ХЫҪӐН?

„Манпа вилӗм хушшинче пӗр утӑм анчах“
1 Патш. 20:3

Каланӑ: пӗтӗм пурӑнӑҫ — вилӗме хатӗрленни, тенӗ. Псаломсем юрлакан калать: „Вилӗм курмасӑр пурӑннӑ ҫын кам пур?“, — тет (Псал. 88:49).

Пирӗн вӑхӑтӑмӑр ирӗклӗ шухӑш ӗмӗрӗ тесе хисепленет. Эпир тӗнчене, ӑна тытса тӑракан законсене пӗлӳпе, ӑслӑлӑхпа, шыраса тупнӑ ҫӗнӗлӗхсемпе, философипе, материалистла шухӑшлавпа усӑ курса урӑхлатма хыпӑнатпӑр. Эпир чи мала, престол ҫине, суя турӑсем — укҫа, мухтавпа чап, этем ӑсӗ-халӗ — лартма пӗрре мар пикенсе пӑхнӑ. Анчах, мӗн кӑна тума айкансан та, юлашкинченхи ӳкӗм ҫав-ҫавах юлать: „Этемсене пӗрре анчах вилмелле тунӑ“ (Евр. 9:27).

Вӗресе тӑракан хӗрӳ пурӑнӑҫрах та эпир кашни утӑмрах вилӗм куратпӑр: акӑ, урам варрипе васкавлӑ пулӑшу машини вашкӑртса иртрӗ, авӑ, ҫурт алӑкӗ ҫумне тупӑк хуппи кӑларса тӑратнӑ, акӑ тата, ҫывӑхри вӑрмана ҫитсе, хитре уҫланка тухӑрӑмӑр та кунта масар иккенне курса шӑпӑрт пултӑмӑр... Пурте ҫакӑ вилӗм хӑйӗн шелсӗр ҫавипе пире хуть те хӑш самантра та ҫулса пӑрахма пултарасса астутарать. Хӑҫан, хӑш кун килсе тухӗ ҫав самант, пирӗнтен пӗр нихӑшне те пулин тӗшмӗртсе илме паман, анчах пурсӑмӑр та пӗлетпӗр: вӑл кирек хӑш самантра та ҫитме пултарать.

Кун ҫинчен Джон С. Вимбиш доктор лайӑх каланӑ: „Пирӗн пурӑнӑҫӑмӑр ҫинҫе ҫипсенчен ҫакӑнса тӑрать. Кашни утӑмрах пирӗн ура айӗнче масар шӑтӑкӗ курӑнса выртать. Вилӗм — пӗтӗм ҫут тӗнче тӑшманӗ. Патшасем те ун ҫави айнех пуҫ пӗкеҫҫӗ. Пысӑк вӗреннӗ ҫынсемпе тухтӑрсем ҫак йӗлмевӗсе керменсен алӑкӗсем патӗнчен хӑваласа яма тӑрӑшаҫҫӗ, анчах сехре хӑппийӗн хуҫи усал тем тери тимлӗ хурал умӗнчен те иртет, тӳлек коридорсемпе йӑпшӑнса пырса, королӗн шанчӑклӑ пӳлӗмӗсене кӗрсе каять, патшалӑх пуҫне хӑйӗн хура юпӑнчипе витсе хуплать“.

Америкӑра кашни ҫулах хӗрӗх пин ҫын, лайӑха кӑна ӗмӗтленнӗ ҫинчех, хӑйсен автомобилӗсен ӑшне юлашки хут кӗрсе ларать. Тата вӑтӑр пинӗ, темӗн пек асӑрханullӑ пулма тӑрӑшсан та, тӗрлӗрен инкекран, тӗрлӗрен ӑнсӑртлӑхран килтех пӳкле вилӗмпе пӗтет. Мӗншӗн тесен, медицина ӑслӑлӑхӗпе „хӑрушсӑрлӑх инженерӗсем“ вилӗме хирӗҫ яланлӑх кӗрешӳре тӑраҫҫӗ пулин те, вилӗм ҫынсене пӗр чарӑнусӑр ҫулать. Ҫак кӗрешӳре вӑл, эс хуть те мӗн ан ту та, пурпӗрех ҫиеле тухать, вӑл — ялан та ҫӗнтерӳҫӗ.

Ӑслӑлӑхӑн вилӗме хирӗҫ тахҫантанпа пыракан кӗрешӗвне пула эпир халӗ ӗмӗрӗмӗре темиҫе ҫуллӑха тӑсма пултаратпӑр, анчах ҫулӑмӑр вӗҫӗнче пуурпӗрех вилӗм тӑрать-ха, ахаль ҫыннӑн ӗмӗрӗ ҫаплах-ха Библире каланӑ вӑхӑтран, 70 ҫултан, нумаях иртеймест.

Ӗлӗкхи пекех, чӗре чирӗсем питӗ нумай ҫынна вӑйпиттиллех авса антараҫҫӗ. Пайтах ҫынна рак хӑрушшӑн кӑшлать. Туберкулез, юн чирӗсем, ача-пӑчана шалкӑм ҫапни, ӳпке шыҫҫи, медицина тӑрӑшӑвне кура чылай чакрӗҫ пулин те, ҫаплах-ха хӑйсеннех ыйтаҫҫӗ. Анчахта, статистика кӑтартӑвӗсем хуть те мӗнле, хӑрушӑ е чуна лӑплантармалла, пулсан та, хамӑрӑн ҫак ҫӗрҫуллӑхӑмӑрта

этем ӗмӗрӗ вӑтамран мӗн чухлӗ вӑрӑмланнӑ е кӗскелнӗ пулсан та, ҫынна ҫын вӗлересси е ҫын хӑй ҫине алӑ хурасси мӗнле шайра пулсан та, вӑрҫӑсем сиксе тухаҫҫӗ е чарӑнаҫҫӗ пулсан та, — вилӗмӗн никам нимӗн туса ҫӗнтерейми вырӑнӗ пӗр улӑшӑнмасӑр юлать: вӑл пирӗншӗн ҫакӑ ҫӗр ҫинче юлашкинчен чӑтса ирттермелли асап.

Ача ҫуралнӑ самантранпа уншӑн вилӗме хирӗҫ кӗрешӳ пуҫланать. Амӑшӗ ача пурӑнӑҫне сыхласа хӑварассишӗн хӑйӗн темиҫе ҫулне парать. Ӗҫме-ҫиме-и, кӗпе-тум-и, ҫанталӑк сивви-ӑшши-и, килти е мирти татулӑхпа харкашу-и, чир-суран-и — вӑл, амӑшӗ, чи малтан уншӑн, юратнӑ пепкишӗн, тӑрӑшать, хыпӑнать, канӑҫ пӗлмесӗр херӗпленет. Анчах, унӑн ҫак мӗнпур пысӑк тӑрӑшӑвне пӑхмасӑр, ача ӗнтӗ, чӑннипе, вилме тытӑннӑ.

Тепӗр темӗн чухлӗ ҫул иртет те, пирӗн хавшаклӑхӑн малтанхи паллисем курӑнма пуҫлаҫҫӗ. Шӑл хӑрса тӗпренет авӑ. Куҫ ҫути те чаплах мар-мӗн, нумайӑшне ҫамрӑклах куҫлӑх кирлӗ. Пӑхӑсӑн унтан, сисмен те, пит-куҫӑмӑр пӗркеленме тытӑннӑ, курпун палӑрма пӑхасшӑн, уттӑмӑр-тӑррӑмӑр та вӑш-вашах мар. Ҫапла вӑй чакнӑҫемӗн шӑм-шак хавшаса пырать, ӑшчик чирӗсен ячӗсене пӗлме тытӑнатпӑр. Сисмесӗрех, лешӗ килсе алӑкран шаккасси ҫинчен юмахлама хӑнӑхатпӑр. Мӗн тӑвӑн, ватӑлтӑмӑр! Тӑшманӑмӑра тем тӗрлӗ улталама тӑрӑшсан та улталаймӑпӑр: вӑл, вилӗм, ҫӗнтеретех!

Мӗн тери вӑрттӑн пирӗн ҫак тӑшманӑмӑр! Пурӑнӑҫӑмӑр пекех, пӗлсе ҫитерме ҫук ӑна. Мӗншӗн тесен пурӑнӑҫа, хамӑр йӗри-тавра курса тӑракан, йывӑҫ-курӑклӑ, тӗрлӗрен чӗрчунлӑ, пайтах ҫынлӑ ҫак пурӑнӑҫа, эпир туса хума та, ӑнлантарса пама та пултараймастпӑр. Вилӗме те этем ӑсӗ-хакӑлӗпе ӑнлантарма ҫук. Пурӑнӑҫ пуррине пӗлнӗ пекех, вӑл пуррине те пӗлетпӗр пулин те, — ӑнлантарма ҫук! Ҫапах та мӗн тери юратмастпӑр эпир ун ҫин-

чен каласма, ун пĕлтерĕшне йышăнма! Çĕнĕ пурăнăç, ача, çуралсассăн, эпир — савăнатпăр; пурăнăç кайсан, этем вилсен, эпир çакна хăвăртрах манма тăрăшатпăр.

Тĕлĕнмелле мар-и-ха: тĕнчене çĕнĕ пурăнăç кӳртме темĕн чухлĕ вăй-хал хуратпăр пулсан, çав пурăнăçах çĕр пичĕ çинчен кайсан, эпир çав чăнлăхранваскасах пăрăнма тăрăшатпăр!

Халĕ çĕр чăмăрĕ çинче икĕ миллиарда яхăн çын пурăнать. Пурте вĕсем тепĕр темĕн чухлĕ вăхăтран вилсе çук пулаççĕ. Вĕсен ӳчĕсем нимĕн те туйми пулаççĕ. Анчах вĕсен чунĕсене — пурăнăçăн чи кирлĕ, чи никĕсри, чи ĕмĕрлĕх пайне! — мĕн пулĕ-ши? Çакăнта ĕнтĕ вăрттăнлăхĕ. Çын вилнĕ чухне мĕн каять? Ăçта каять çав çухалакан темĕнскер?

Темиçе çул каялла Колорадо штатĕнчи Денвер хулинче пĕр журналист вилнĕ. Ана пытарма пынисем масар çинче унăн сассине, магнитофон ленти çырса илнĕ сасса, итленĕ. Журналист çапла каласа хăварнă пулнă: „Эсир мана пытаратăр. Эпĕ Турра ĕненмен çын, нумай çул çавăн пек пурăннă. Турă çинчен вĕрентекен лĕпĕртетӳрен манăн йĕрĕнессĕм кăна килнĕ. Священниксем — сăпайлăха пĕлмен хăравçăсем. Турă кăтартакан хăватсем — вĕсем шухăшласа кăларни çеç. Енчен те хаçат репортерĕсене çынна асаплантарса вĕлернĕ çĕре янă пулсан, вĕсем çав вĕлерӳ çинчен Библири апостолсем евĕрех пăсса çырса кăтартнă пулсан, вĕсене редакцирен çийĕнчех хуса янă пулĕччĕç. Ман тăпрам çинче нимĕнле тĕн юрри те ан юрлăр. Мана тирпейлесе пытарни — кирлĕ йĕркене тытни çеç“...

Турра кураймасăр чиркӳрен кулма, Таса Çырупа Иисус Христоса хур тума пăхакан çынсем кирек хăçан та пулнă. Ĕнентерӳллĕн нимĕн те кăтартса параймасăр, вĕсем Турă сассине хуплама тăрăшса шавлаççĕ. Историрен

пӗлетпӗр: Джордж Бернар Шоу, Роберт Ингерсолл тата ытти нумай философсем, ҫавӑн пекех тата, аргументсем теекен шухӑш вылявӗпе усӑ курса, вилӗмрен хӑраса тӑрассине „пӗтерсе лартма“ тӑрӑшнӑ.

Антрополог джунглире пурӑнакансем вилӗм ҫине мӗнлерех куҫпа пӑхнине акӑ епле каласа кӑтартать. Унта „Турӑ ҫинчен вӗрентекен“ нимӗнле „лӗпӗртетӳ“ те ҫук, мӗншӗн тесен ҫынсем Иисус Христос ҫинчен пачах илтмен. Мӗнлерех вырӑнта-ха унта вилӗм? Хӑш-пӗр йӑх ҫыннисем вatӑсене джунгли варрине хӑваласа яраҫҫӗ: унта вӗсене тискер кайӑксем тытса ҫурччӑр, вӗсен вилӗмне ҫамрӑксем ан курччӑр теҫҫӗ. Хӑш-пӗр халӑхсем хушшинче вилнӗ ҫыннӑн тӑванӗсем, хӑйсем хурланнине палӑртма, ҫийӗнчи тумтирӗсене хывса пӑрахаҫҫӗ те ҫанҫурӑмӗсене шурӑ сӑрӑпа сӑрласа лартаҫҫӗ. Ҫын вилес умӗн хӗрарӑмсем сехечӗ-сехечӗпе ӳлесе йӗреҫҫӗ. Куратпӑр ӗнтӗ, Христос тӗнӗн витӗмӗ ҫук ҫӗрте ҫынсем вилӗмрен сехӗрленсе, хӑраса тӑраҫҫӗ.

Христос тӗнне чӑннипе тытса тӑракансем вилӗмрен „тармаҫҫӗ“, унран „сехӗрленмеҫҫӗ“. Иисус Христос, ҫӗр ҫине килсе, вилӗм ҫине ҫӗнӗлле пӑхма вӗрентнӗ. Этем вилӗме яланах тӑшман вырӑнне хунӑ, анчах Иисус Христос Хӑй вилӗме ҫӗнтерни, унӑн сӑннине туртса илни ҫинчен каланӑ. Иисус чӑнлӑха шута илнӗ: пурин те пурпӗрех килмесӗр тӑрас ҫук вилӗме хатӗрленме кирлине систернӗ. Ҫӑлаканӑмӑр пире каланӑ: „Ӳте вӗлерсен те, чуна вӗлерейменнисенчен ан хӑрӑр, пуринчен ытла ӳтпӗве те, чуна та тамӑкра пӗтерме пултараканран хӑрӑр“, — тенӗ (Матф. 10:28).

Библи чӑннипе икӗ вилӗм пуррине кӑтартать: пӗри — *ӳтвилӗмӗ*, тепӗри — *ӗмӗрлӗхвилӗм*. Иисус Христос пире пӗрремӗшӗнчен, *ӳтвилӗмӗнчен*, ытларах *ӗмӗрлӗхвилӗмрен* хӑрама кирлине каланӑ. Вӑл иккӗмӗш ҫав вилӗм

тамӑк иккенни ҫинчен каланӑ, тамӑк вӑл Турӑран ӗмӗрлӗх пӑрӑнса кайни... Христос ӳт вилӗмӗ, чун вилӗлӗхӗпе, ӗмӗрлӗх вилнипелен танлаштарсан, нимӗн те маррине палӑртнӑ.

Вилӗм мӗнне, вилӗм чӑнлӑхне, шыракансемшӗн ҫынсем вилес умӗн каласа хӑварнӑ сӑмахсем кирлине нумай пама пултараҫҫӗ. Вильбур Смит доктор хӑйӗн „Ҫавӑнпа чарӑн!“ ятлӑ кӗнекинче хӑш-пӗр паллӑ ҫынсен, христиан пулманскерсен, вилес умӗнхи юлашки сехечӗсене ҫырса кӑтартнӑ.

Христиансен, чунтан ӗненнипе хӑйсене Ҫӑлаканӗ Иисус Христос тесе йышӑннӑран хӑйсен ҫылӑхӗсенчен ӳкӗннисен, вилӗм сехечӗ, вӗсеннипе танлаштарсан, пачах урӑхла.

Эпӗ ҫӳренӗ колледжра нумай ҫул хушши акӑльчан чӗлхипе литературине Эффи Вилер доктор вӗрентнӗ. Вӑл хӑйӗн предмечӗсене витӗр пӗлнипе тата Турра хытӑ ӗненнипе паллӑ хӗрарӑмччӗ. 1949 ҫулхи май уйӑхӗнче вӑл колледж директорӗ Эрдман доктор тата хӑйпе пӗрле ӗҫленӗ преподавательсемпе хӑй вӗрентнӗ студентсем патне ҫыру ҫырса янӑ. Акӑ вӑл:

„Эсир ҫак ҫырӑва вулас минутшӑн эпӗ чунтан Турра тав тӑватӑп, мӗншӗн тесен Эсир, ҫуллахи каникула саланса пӗтиччен, ман ҫинчен эпӗ хам та эрне каялла ҫеҫ пӗлнӗ чӑнлӑха пӗлсе юлайччӑр тетӗп. Манӑн врач, юлашкинчен те, манӑн вӑрах вӑхӑт тӑсӑлса пынӑ чирӗмӗн чӑнчӑн диагнозне лартрӗ: операци туса хӑтӑлма ҫук рак. Енчен те вӑл христиан пулнӑ пулсан, ҫав тӗрлех хумханса ӳкмен пулӗччӗ, кун ҫинчен мана маларахах та пӗлтернӗ пулӗччӗ. Вӑл Эсир тата эпӗ мӗн пӗлсе тӑнине пӗлмест: енчен те эпир Турӑ ирӗкӗпе, Турӑ ҫывӑхӗнче пурӑнатпӑр пулсан, пурӑнӑҫа та, вилӗме те пӗр танах хапӑл тумалла. Енчен те Туррӑм мана часах Хӑй патне ҫитерме палӑрт-

нă пулсан, эпĕ çакна савăнсах тăватăп. Тархасшăн, пĕр минут та ан хурланăр маншăн. Манăн сире чĕрене çурса „сывă юлăр“ тесе калас килмест, манăн сире хаваслăн „тĕл пуличчен!“ тесе калас килет. Эпĕ сирĕнпе Турă хамăра кӳртме пулнă Патшалăхра курнăçăп, унта, тен, мана Сире алăк уçса кӳртме те ирĕк парĕç-и. Манăн чĕре Сире пурсăра та кашнине уйрăммăн юратса тăракан юратупа тулнă. Алă пуснă: Эффи Джен Вилер“.

Çак çырăва çырнă хыççăн икĕ эрнерен Вилер доктор хăйĕн Турри, хăйĕн Çăлаканĕ умне тăнă.

Библи сирĕн вилĕмсĕр чун тесе вĕрентет. Сирĕн чунăр ĕмĕрлĕх, вăл ĕмĕрех пурăнĕ. Тепĕр тĕрлĕ каласан, сирĕн чăн-чăн „эпĕ“ — сирĕн тупсăмăрăн, çынлăхăрăн, шухăшлакан, туякан, ĕмĕтленекен, шанакан пайĕ, сирĕн сăпатăр — нихăçан та вилмест. Библи вĕрентнине тăнлăр та ăнланăр: сирĕн чунăр ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ — райра е тамăкра. Енчен те эсир христиан мар пулсан, тепре — çӳлтен — çуралман пулсан, Библи вĕрентнĕ тăрăх, сирĕн чунăр Христос тамăк теекен вырăна кайĕ, унта вăл Турă сутне кĕтсе тăрĕ.

Эпĕ ăнланатăп, тамăк çинчен калаçасси кăмăллă калаçăвах мар. Ун çинчен калаçасси, ун çинчен шухăшласси çынсем хушшинче питĕ сахал сарăлнă, калаçас пулсан та час-часах тавлаштарать, хирĕçтерсе ярать. Евангелипе çыхăннă хамăн çулçӳревĕмсенче эпĕ çапах та пĕр калаçу та пулин çак ыйтупа ирттерме тăрăшатăп. Çавăн пек тавлашу каçĕсем хыççăн вулакансен çырăвĕсем йышлăн пичетлене-пичетлене тухаççĕ: хирĕç те, майлă та калаçаççĕ. Ара, унсăрăн майĕ çук: Библире тамăк çинчен, ытти япаласем çинчен каланă пекех, сахал мар каланă. Америкăн тĕрлĕ енĕнче студентсем манран час-часах çапла ыйтаççĕ: „Мĕн вăл тамăк? Вут пур-и тамăкра?“ — теççĕ. Тата ытти те, çавăн йышши ыйтусем. Маншăн,

пасторшӑн, вӗсем ҫӗнӗ ыйтусем мар, вӗсем ҫинчен эпӗ нумай шухӑшланӑ, вуланӑ. Ҫынсене нумайӑшне килӗшмест, пӑлхантарса ярать пулин те, эпӗ вӗсем ҫинчен ним шарламасӑр ирттерсе яма пултараймастӑп. Тамӑк ыйтӑвне эпӗ христианствӑн чи йывӑр чӑнлӑхӗсенчен пӗрийӗ тесе шутлатӑп.

Хӑшӗ-пӗри: хуть те мӗнле пулсан та, юлашкинчен, кирек кам та ҫӑлӑнать, мӗншӗн тесен Турӑ вӑл Юратакан Турӑ, Вӑл никама та тамӑка ямасть, тесе вӗрентет. Унашкаллисем *„ӗмӗрлӗх“*, *„ӗмӗрехтӑракан“* сӑмахсем чӑннипе „ӗмӗр-ӗмӗрлӗхе“ тенине пӗлтермеҫҫӗ тесе шутлаҫҫӗ. Анчах та эпир Турӑран ӗмӗрлӗхе пӑрӑнса кайни ҫинчен калакан сӑмахпах Пӗлӗт ҫинчи ӗмӗрлӗх ҫинчен те калатпӑр-ҫке!

Тепӗрисем тата: ҫӑлӑнма Турӑ кӑтартнӑ йӗркене йышӑнманнисене вилнӗ хыҫҫӑн тӗп тӑваҫҫӗ, вӗсем вара ҫук пуҫаҫҫӗ, тесе вӗрентме хавас. Библире вара ҫак шухӑша тӳрре кӑларса каланӑ пӗр сӑмах та ҫук. Библи акӑ мӗнле вӗрентет: эпир ҫӑлӑнма е пӗтме пултаратпӑр, анчах та пирӗн чунпа пирӗн сӑпат ӑнланулӑхлӑн (йӑлт пӗлсе тӑрса!) тата ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗҫ.

Унсӑр пуҫне: вилнӗ хыҫҫӑн та ҫӑлӑнма майӗ пур, ҫавӑн пек мая парать Турӑ, теекенсем те пур. Библире, каллех, капла шухӑшлама шак хуни те пулин ҫук. Библи пире ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен: „Акӑ халӗ майлӑ вӑхӑт, акӑ халӗ ҫӑлӑнас кун“, тесе асӑрхаттарать (2 Кор. 6:2).

Христоса, ӑнланса-пӗлсе тӑрсах, Туррӑмӑр, Хӑтараканӑмӑр тесе йышӑнман кашни ҫын тамӑк вутӗнче асапланӗ. Ҫапла вӗрентет пире Библи. Акӑ, „Ҫӗнӗ Сӑмахран“ хӑш-пӗр ырӑнсене кӑна вуласа пӑхар-ха:

„Этем Ывӑлӗ Хӑй ангелӗсене ярӗ те, вӗсем Унӑн Патшалӑхӗнчи улталакансене, йӗркесӗр ӗҫ тӑвакансене пурне те пуҫтарӗҫ, унтан вӗсене вутлӑ кӑмакана пӑрахӗҫ;

унта вара йĕрӳ те, шăл шатăртаттару та пулĕ“ (Матф. 25:41).

„Улăмне сӳнми вутпа çунтарса ярĕ“ (Матф. 3:1).

„Турра пĕлменнисене, хамăра Çăлакан Иисус Христосăн ырă хыпарне итлеменнисене Вăл ялкăшса çунакан вута пăрахса тавăрĕ; Хайĕн чаплă хăвачĕпе Çăлакан вĕсене асапланмалла, ĕмĕрлĕхе пĕтмелле тăвĕ“ (2 Фесс. 1:8-9).

„Ассăр“ тесе калакан тамăк вутне тивĕçлĕ“ (Матф. 5:22).

„Тĕнче пĕтнĕ чухне çапла пулĕ: ангелсем килĕç те усаллисене сăваплисен хушшинчен уйăрса илĕç, унтан вутлă кăмакана пăрахĕç; унта вара йĕрӳ те, шăл шатăртаттару та пулĕ“ (Матф. 13:49-50).

„Вăл Турă çилли куркинче хатĕрленĕ эрехе, Туррăн хаярлăхĕ эрехне, çараллах ĕçĕ, ăна святой ангелсем умĕнче, Путек умĕнче вутпа кӳкĕрт ăшĕнче асаплантарĕç; вĕсен асапĕн тĕтĕмĕ ĕмĕр-ĕмĕрех тухса тăрĕ. Тискер кайăкпа унăн сăнне пуççапакансем е унăн ячĕн паллине хапăл тăвакансем кунĕн-çĕрĕн канлĕх курмĕç“ (Апок. 14:10-11).

„Вилĕме те, тамăка та вутлă кӳлле пăрахрĕç. Ку — иккĕмĕш вилĕм. Кам чĕрĕлĕх кĕнеки çине çырăнман, ăна вутлă кӳлле пăрахрĕç“ (Апок. 20:14-15).

„Хăракансен, тĕрĕс маррисен, ирсĕррисемпе çын вĕлерекенсен, аскăн тăвакансемпе асамçăсен, кĕлеткесене пуççапакансемпе пур суеçĕсен вырăнĕ вутпа кӳкĕрт çунакан кӳлĕ пулĕ; ку — иккĕмĕш вилĕм“ (Апок. 21:8).

Анчах мана хирĕçлесе калакансем тупăнĕç: „Эпĕ тамăка ĕненместĕп! Эпĕ Сăрт çинче вĕрентсе каланине ĕненетĕп“, — тейĕç вĕсем.

Юрĕ, Сăрт çинче вĕрентсе каланине илсе пăхар, унта эпир ак çакăн пек каланине тупатпăр: „Сана сылтăм куçу илĕртет пулсан, ăна чавса кăларса хăвăнтан ывăтса яр:

пĕтĕм ӳт-пӳне тамăка пăрахиччен, хăрах куçу пĕтни авантарах пулĕ саншăн. Сана сылтăм аллу илĕртет пулсан, ăна ху çумăнтан касса ывăтса яр: пĕтĕм ӳт-пӳне тамăка пăрахиччен, хăрах аллу пĕтни авантарах пулĕ саншăн“ (Матф. 5:29-30).

Кунта эпир Иисус Христос тамăк çинчен йăлт уçăмлăн вĕрентсе каланине куратпăр. Чăнахах та, Иисус Христос кун çинчен калнă та, тĕслĕхсемпе те ăнлантара-ăнлантара панă, çынсене кунта, çĕр çинче, çылăха кĕрсе, икĕпитленсе пурăнни ăссăрлăх пулни çинчен пĕрре мар асăрхаттарнă.

Иккĕленмелли çук, айăплă çынсем тамăк асапне кунта çĕр çинчех те хăш-пĕр таран тӳсеççĕ. Библи калать: „Çылăхлă пурăнăçăршăн хăвăра çитес асапа тӳссе курăр“, — тет (Хис.к. 32:23). Библире тата çапла каланă: „Ӳчĕшĕн акакан хăй ӳтĕнчен çĕрме пӳрнине вырса илĕ, сывлăшшăн акакан вара сывлăшран ĕмĕрлĕх пурăнăç вырса илĕ“, — тенĕ (Гал. 6:8).

Çапах та эпир хамăр йĕри-тавра пачах та урăхла ăнланма май пуррине куратпăр: хăш-пĕр айăплă çынсемех пурăнăçра ăнтарса пыраççĕ темелле, тӳрĕ çынсенех вара хăйсен тӳрĕлĕхшĕн асапланма-тертленме тивет. Библи пире тĕрĕс сут çитĕ, кашниех хăйĕн ĕçне кура илĕ тесе вĕрентет.

Юратакан Турă этеме тамăка ярĕ-ши вара? Каланă: ярать! Анчах Вăл çакна Хăй ирĕкĕпе тумасть. Этем хăй, Туррăн çăлăнăç çулне тиркесе, тамăк асапĕн хăмăтне тăхăнать. Туррăмăр, юратнăран, хĕрхеннĕрен, çынна ӳкĕнӳпе шанăç, çăлăнăç çулне сĕнет, пĕлĕт ырăлăхне туйса илме май парать. Анчах этем, хăйĕн суккăрлăхне, ăссăрлăхне, тӳрменлĕхне пула, хăйне кăна пĕлсе çылăхлăн киленсе пурăнас килнине çĕнтерейменсĕр, Туррăн ансат çулĕнчен пăрăнать, ĕмĕрлĕх ылханлă асапсене суйласа илет.

Калăпăр, эсир чирлĕ тейĕпĕр. Тухтăр чĕнсе илетĕр те, вăл сире хăвăра сывалма кирлĕ эмелсене ĕçме хушса хăварать. Анчах эсир, тем шухăш тытатăр та, ун канашĕ çине алă сулатăр, эмелсене ĕçместĕр. Тепĕр темиçе кунтан эсир ăна каллех чĕнсе илсен, вăл сирĕн сывлăхăр малтанхинчен те ытларах япăхланнине асăрхама пултарать. Çакăншăн тухтăра айăплама пăхайăр-и вара эсир? Явапли вăл-им? Вăл сире, пулăшас тесе, мĕнле эмелсемпе усă курмаллине кăтартса хăварнăччĕ. Анчах эсир ăна йышăнмарăр!

Çавăн пекех, Турă та этем йăхĕн пур чирĕнчен те сывалмалли майсене тытса тăма хушать. Çак майсем — хамăр, кашни хăй ятĕнчен, Иисус Христоса ĕненни, Ун умĕнче панă сăмах. Кун çинчен эпир тепĕр сыпăкра тĕплĕнрех калаçăпăр. Анчах эпир эмеле хамăр ирĕкĕмĕрпе йышăнмастпăр пулсан, çакăншăн тивĕçлине те тӳсмелле; куншăн ниепле те Турра айăплама пултараймастпăр.

„Тамăка ăна мĕнле ăнланмалла, мĕнрен тăрать вăл?“ — тесе ыйтакансем пур. Грекла Библире тамăка пĕлтерекен тăватă сăмах пур. Пĕр сăмахĕ *Шеол*, „Авалхи Сăмахра“ ăна вăтăр пĕр хутчен „тамăк“ тесе куçарнă. Ку вăл çĕр минĕ (тĕпĕ), унта вилнисем тăраççĕ. Вăл „курăнми халлĕн тăракан лару-тăрăва“ пĕлтерет. *Хуйхă, ырату, ишĕлӳ* сăмахсене çак сăмахпа çыхăнтарса калаççĕ.

Иккĕмĕш сĕмахĕ *Хадес*. Унпа, грекларан куçарнăскерпе, „Çĕнĕ Сăмахра“ вунă хутчен усă курнă. Вăл „Авалхи Сăмахри“ Шеолах пĕлтерет. Унпа яланах сут çинчен, асаплану çинчен калакан сăмахсем çыхăннă.

Виççĕмĕш сăмахĕ *Тартарус*. Унпа пĕр хутчен çеç, Петр апостол янă çырура, усă курнă. Ку сăмах сут тăвас вырăна тĕрме пек, тĕттĕм тамăк сĕмлĕхĕ пек кăтартать. Чăвашла çакна çапла куçарнă: „Турă çылăха кĕнĕ ангел-

сене те хĕрхенмен: тĕттĕм тамăк çыххипе çыхса, вĕсене асаплантарма сут тăвиччен усрама панă" (2 Пет. 2:4).

Тăваттăмĕш сăмахĕ *Геенна*. Ку сăмахпа, „тамăк" тесе куçарнăскерпе, „Çĕнĕ Сăмахра" вунпĕр хутчен усă курнă. Иисус Христос Енон айлăмне, Иерусалим хӳмисем хыçĕнчи тăтăшах тасамарлăхсемпе çӳп-çап çунтаракан вырăна, çапла ят панă.

Хăшĕ-пĕри: „Библи тӳрремĕнех тамăкра вут çунса тăрать тесе вĕрентет-и?" — тесе ыйтаççĕ. Иккĕленмелли çук, Библире *вут* сăмахпа нумай хутчен ытарлă пĕлтерĕшпе усă курнă. Мĕнле пулсан та, Туррăн çунакан, анчах çунтарса яман вут пур.

Моисей, кӳкен йывăç тĕмине курсан, тĕлĕннĕ: тĕмĕ вутпа çунать-мĕн, анчах çунса каймасть... Вирĕ еврей ачине ялкăшса çунакан кăмакана пăрахнă, анчах çулăм вĕсене тĕкĕнмен, ачасен пĕр çӳç пĕрчи те пулин ĕнсе кайман.

Тепĕр енчен, Библи пирĕн чĕлхе çинчен акă мĕнле калать: „Чĕлхе те, суя сăмаха илем кӳртекенскер, вутпа пĕрех. Пирĕн чĕлхе, хăйне тамăк вучĕ хĕртсен, пĕтĕм ӳте ирсĕрлетет, пурăнан пурăнăçа çунтарса тăрать", — тет (Иак. 3:6). Анчах тӳрремĕн е ытарлăн ăнлану чăнлăхпа çыхăнман. Енчен тамăкра чăн-чăн вут çук пулсан, Турă, эппин, символла пуплевпе усă курать: пире унта çĕр çинчи вутран та хăрушăраххи пулма пултарасса систерет.

Чăннипе каласан, тамăк вăл Турăран уйăрăлнине пĕлтерет. Ку вăл иккĕмĕш вилĕм, çутăран, савăнăçран, ырăлăхран, тӳрĕлĕхрен, телейрен ăнланса-пĕлсе тăрса ĕмĕр-ĕмĕрлĕхе уйăрăлса кайни, ĕмĕрлĕх вилĕм. Библире çын вилнĕ хыççăн чун тепĕр самантранах калама çук хăрушă лару-тăрăва лекнине нумай çырса кăтартнă.

Тĕлĕнмелле, çынсем темĕне те хатĕрленеççĕ, вилĕме анчах хатĕрленмеççĕ. Эпир пурăнăç çулĕ çине тухма

хамӑра пӗлӳ илсе хатӗрлетпӗр. Эпир хамӑра коммерци ӗҫне, карьерӑна хатӗрлетпӗр. Эпир мӑшӑрланма, ватлӑхра тӳлеккӗн, канлӗн пурӑнма хатӗрленетпӗр. Вилсе каяс самантсӑр пуҫне, темӗн те пӗре хатӗрленетпӗр. Манатпӑр, пире пӗрре вилме пӳрнӗ!

Хамӑр ҫине илсе пӑхсан, кашни ҫыннах вилӗм вырӑнсӑр япала пек туйӑнать, ыттисем ҫине пӑхса шухӑшласан, вырӑнлах пек туйӑнать. Вилӗм пур ҫынна та танлаштарать. Вӑл ҫӗрме пуяна мулӗнчен хӑтарать, кӗлмӗҫе ҫӗтӗкҫурӑкӗнчен хӑтарать. Вӑл выҫ куҫа ӗмӗрлӗхе хупать, чараксӑр хӗрӳлӗхе сӳнтерсе лартать. Сирӗн ун ҫинчен пӗрре те шухӑшлас килмест пулӗ те, анчах пурин те ӑна курмах тивет. Вилӗм эсӗ камне те, миҫе ҫултине те пӑхмасть. Унран пур ҫын та хӑраса тӑрать.

Вилес умӗн Даниил Вебстер хӑй тахҫан пӗр пӗчӗкҫеҫ ял чиркӗвӗнче кӗлӗре тӑни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Пасторӗ унта юмарт кӑмӑллӑ, Турра питӗ ӗненекен старик пулнӑ-мӗн. Ҫавскер, кӗлӗ пӗтсен, кӗлӗре пулнисене пӗр чеелӗхсӗр, пӗтӗм таса кӑмӑлтан: „Тусӑмсем, эпир пӗр хутчен анчах вилме пултаратпӑр“, — тесе каланӑ. Даниил Вебстер кайран, ҫак вӗрентӗве ӑнлантарса, ҫапла каланӑ: „Тен, ҫак сӑмахсем вӑйсӑр, сивӗ сӑмахсем пек те туйӑнӗҫ, анчах вӗсем мана питӗ, нихӑҫанхинчен те ытларах пӑлхантарса янӑччӗ“, — тенӗ.

Вилӗмне кӗтсе илекен ытти ҫынсем ҫинчен пухӑшлама ҫӑмӑл, анчах хамӑрӑн та ҫав тӗлпулӑва тӳссе ирттерме тивессине астуса тӑма питӗ йывӑр. Фронта тухса каякан салтаксем стройпа пынине курсан, персе вӗлермелле тунӑ тӗрме ҫынни ҫинчен хаҫатра тупса вуланӑ самантра е вилесле чирлӗ тусӑр ҫумӗнче ларнӑ чухне эсир ҫав ҫынсене ытамласа илнӗ темле чаплӑ хурлӑха туятӑр. Вилӗм умне тӑма пурне те пӳрнӗ, анчах хӑҫан, хӑш сехетре пулӗ вӑл, ку — вӑхӑт ыйтӑвӗ, вӑхӑт вӑрттӑнлӑхӗ. Пурӑ-

ӑҫри ытти тӗлпулусем тесен, — ӗҫпе ҫыхӑннӑ тӗлпулусем-и вӗсем е урӑхла йышши тӗлпулусем-и — пурне те вӗсене, калӑпӑр, каяраха хӑварма е сирсе яма пулать. Анчах ку тӗлпулӑва вара никам та шута илмесӗр тӑма пултараймасть, ӑна никам та пӑрахӑҫлаймасть. Ку тӗлпулу пурӑнӑҫра пӗрре анчах пулать, ҫитменнине тата — пулмаллах!

Енчен те ӳт вилӗмӗ Турӑран аякра ирттернӗ пурӑнӑҫ тухӑмӗ (итогӗ) анчах пулнӑ пулсан, пирӗн ҫав териех хӑрамалли те пулман пулӗччӗ. Анчах Библи пире иккӗмӗш вилӗм, Турӑран ӗмӗр-ӗмӗрлӗхе уйӑрӑлса кайма тивесси, ҫинчен каласа асӑрхаттарать.

Пӗр каласан, ӳт вилӗмӗн ҫутӑ енӗ те пур. Библире, ҫылӑхлӑ ҫынсене тамӑк кӗтни ҫинчен каланипе пӗрлех, сӑваплӑ ҫынсене Турӑ рая кӳртме пулни ҫинчен те каланӑ. Рай ӑнланӑва эпир, тамӑк ӑнланупа танлаштарсан, чылай лайӑхрах ӑнланатпӑр. Библире рай ҫинчен те, тамӑк ҫинчен те каланӑ.

Эсир урӑх ҫурта пурӑнма куҫатӑр пулсан, эсир унта пурӑнакан ҫынсем ҫинчен мӗн май килнӗ таран нумайрах пӗлме тӑрӑшатӑр. Енчен те сирӗн урӑх хулана куҫмалла пулсан, эсир ун ҫинчен пурне те пӗлме хыпӑнатӑр: унта мӗнлерех ҫулпа кайма меллӗрех, унта мӗнлерех предприятисем пур, ҫурчӗсем унта мӗнлерех, шкулӗсем мӗнлерех, халӑхӗ мӗнлерех тата ытти те, т.ыт.те. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ, ӗмӗр-ӗмӗрлӗх тӑма мӗнле те пулин вырӑна каяс тетпӗр пулсан эпир, пирӗн ҫав вырӑн ҫинчен мӗн чухлӗ те пулин пӗлмеллех. Рай ҫинчен каланисене эпир Библире тупса вулатпӑр. Вӗсем ҫинчен пирӗн тӗрӗс шухӑшласа тӗрӗс калаҫмалла. Рай ҫинчен Турра пӗлсе калаҫатпӑр пулсан, ҫӗр унпа танлаштарсан, апӑрша вырӑн кӑна иккенне ӑнланма пуҫлатпӑр. Хамӑрӑн пӗлӗт ҫинчи пуласлӑхӑмӑр ҫинчен шухӑшласан, пирӗн ҫак ҫӗр ҫинчи йывӑр ыйту-

семпе пĕтĕм хуйхă-суйхă нимĕне тăман хĕвĕшӳ çеç. Христос тĕнне тытса пурăнаканшăн рай кунтах, çĕр çинчех, хăш-пĕр таран уçăлать. Унăн чун канăçлăхĕ пур, вăл хăйĕн таса кăмăлĕпе, Турăпа килĕшĕве кĕрсе пурăнать. Çĕр çинчи пĕтĕм пăлхаварпа канăçсăрлăх, тĕрлĕрен йывăрлăхсем хушинчех вăл савăнма пултарать. Вăл çăмăллăн утать, унăн чунĕнче хаваслăх, ун сăнĕ çуталса тăрать.

Анчах чи пысăкки, чи никĕсри — ĕмĕрлĕх пурăнăçри рай. Вăл — Христос тĕнне тытса тăраканшăн. Тахăшĕ пĕри тăхăрвунă тăватă çулхи Джон Квинс Адамсран вăл хăйне мĕнле туйни çинчен ыйтнă. „Самаях аван туятăп, — тенĕ Адамс, — анчах эпĕ пурăнакан çурт пит аванах мар çав ĕнтĕ“, — тенĕ. Анчах эпир халĕ пурăнакан çурт (пирĕн кĕлетке) чирлĕ е халсăр пулсан та, эпир, хамăр чăн-чăн христиан пулсан, хамăра вăйлăн, шанăçлăн туйма пултаратпăр. Иисус Христос рай пур тесе вĕрентнĕ.

Акă, Иоанн çырнă Евангелие уçса вулар-ха. „Манăн Аттем çуртĕнче вырăн нумай; апла пулмасан, Эпĕ сире каланă пулăттăм: Эпĕ сирĕн валли вырăн хатĕрлеме каятăп. Кайсан, сирĕн валли вырăн хатĕрлĕп те, каллех килсе, Хам ăçта, эсир те çавăнта пулăр тесе, сире Хам патăма илсе кайăп“ (Иоан. 14:2-3). Куна Иисус Христос хăйĕн апостолĕсене каланă. Рай пуррине чунтан ĕненсе тăнă Павел апостол çапла калать: „Çавăнпа эпир ӳтрен тухса Çăлакан патне вырăнаçмашкăн темĕн тĕрлĕ ĕмĕтленсе пурăнатпăр“, — тет (2 Кор. 5:8).

Чăн-чăн христианăн çак ĕмĕчĕпе танлаштарсан, Боб Ингерсолл агностик, акă, пачах урăхлине калать: „Пурăнăç вăл икĕ ĕмĕр-ĕмĕрлĕхĕн çӳлĕ ту тăррийĕсем хушшинчи ансăр чаршав. Эпир кăлăхах ăна сирсе пăхма хăтланатпăр. Эпир кăшкăратпăр, анчах пире хирĕç чĕнекенни — пĕртен-пĕр хамăр кăшкăрăвăн ахрăмĕ анчах“...

Павел апостол вара рай пирки каллех те каллех: „эпир пĕлетпĕр“, „эпир ĕненетпĕр“, „эпир тĕреклĕн шанса тăратпăр“ тесе калать. Библи тата Авраам Турă тунă, Турă илемлетсе хунă тĕреклĕ ларакан хулана кĕтсе пурăнни çинчен калать (Евр. 11:10).

Çынсем нумайăшĕ манран: „Эсир рай чăн-чăнахах пуррине ĕненетĕр-и?“ — тесе ыйтаççĕ. Ĕненетĕп. Иисус Христос каланă: „Эпĕ сирĕн валли вырăн хатĕрлеме каятăп“, — тенĕ. Библи Енох та, Илия та этем халлĕнех (чĕрĕ-ӳтлĕ халлĕнех) пĕлĕт çине çĕкленни çинчен калать. Вĕсем вĕçĕ-чикки пур уйрăм вырăна çĕкленнĕ, çав вырăн Лос-Анжелос пекех, Лондон пекех е Алжир пекех чăн.

Çынсем нумайăшĕ: „Рай ăçта вăл?“ — тесе ыйтаççĕ. Таса Çырура рай ăçтине каламан. Библире вăл илемлĕ вырăн пуласси çинчен каланă. Библире рай мĕнлине „Турă çурчĕ“, „хула“, „чи лайăх çĕршыв“, „тивлетлĕх“, „мухтавлăх“ сăмахсемпе каланă.

Тен, эсир: „Райра эпир пĕр-пĕрне палласа илме пултарăпăр-и?“ — тесе ыйтăр. Библире хамăртан малтан кайнисемпе тĕл пуласаслă самант çитесси çинчен нумай тĕлте каланă.

Хăшĕ-пĕри: „Ачасем çăлăнасса ĕненетĕр-и эсир?“ — тесе ыйтмаваскать. Лайăх ыйту, чĕререн килнĕ ыйту. Çапла, пĕчĕк ачасем çăлăнаççĕ! Библире кăтартнă тăрăх, Турă тайăн ачасене çылăхĕсемшĕн айăпламасть. Ачасен çылăхĕсене, вĕсем хăйсен тĕрĕс тата усал ĕçĕмесшĕн явап пама ăсĕсем кĕрсе çитиччен, Христос пире хăйĕн вилĕмĕпе хăтарни хуратса пырать.

Библи рай вăл пурсăмăр та эпир пĕр-пĕрне ăнланса тăмалла, çĕр çинче вĕренсе çитме çук япаласене пĕлсе тăмалла вырăн пулĕ тесе вĕрентет.

Ватăлса çитнĕ Исаак Ньютон хăйне ăслăлăхĕшĕн мухтанă пĕр çынна çапла каланă: „Эпĕ тинĕс çыранĕнчи

пĕчĕк ача, кунта чул муклашки çĕклесе çавăркаласа пăхатăп, леререхре рак хуранĕ тупатăп, анчах чăнлăхăн аслă тинĕсĕ ман умăмра таçта çитиех сарăлса выртать-ха", — тенĕ. Томас Эдисон пĕррехинче: „Эпĕ мĕн пуррин пĕр проценчĕн мĕльюнмĕш пайне те пĕлместĕп", — тесе каланă.

Туррăн нумай-нумай пĕлĕнми ĕçĕ (тайны), калăпăр, çынсен чун асапĕсем, хуйхă-суйхă, шанăçсăрлăх, инкек-синкек, çавăн пекех, Турă çынсен асапĕсене курса чĕнмесĕр тăни те, пирĕншĕн райра анчах ăнланмалла пулĕ.

Çынсем нумайăшĕ: „Райра эпир мĕн туса пурăнăпăр? Пĕр вĕçĕмсĕр унти ырăлăхпа киленсе ларăпăр-и?" — тесе ыйтаççĕ. Çук. Библи кăтартнă тăрăх, эпир райра Турра ĕçлесе тăрăпăр. Турă умĕнче, Турă валли тĕрлĕрен ĕç туса тăрăпăр. Турра аслăласа мухтăпăр. Библире каланă: „Ылханли нимĕн те пулмĕ ĕнтĕ. Турăпа Путекĕн аслă ырăнĕ ун ăшĕнче пулĕ. Унăн чурисем Ăна ĕçлесе пурăнĕç, Унăн тĕсне курса тăрĕç, Унăн ячĕ вĕсен çамки çинче пулĕ. Унта каç пулмĕ, çутатакан япала та, хĕвел çутти те кирлĕ пулмĕ вĕсене: вĕсене Патша Турă çутатса тăрать, вĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех патшара ларĕç", — тенĕ (Апок. 22:3-5). Ку вăл савăнăç, Турăшăн пыракан ĕç, Турăшăн пыракан мухтав пулĕ.

Библи вĕрентнĕ тăрăх, çын, хăйĕн ӳтĕнчен уйăрăлсан, Христос Туррăмăр умне тăрать. Вилсе кайнă самантра вăл тӳрреме́нех Христос умне тухать. Унтан вара унăн чунĕ чĕрĕлĕве, каллех хăй ӳчĕпе пĕрлешес вăхăта, кĕтме тытăнать.

Çынсем нумайăшĕ: „Мĕнле-ха вăл пĕрре пытарнă е çунтарса янă ӳт тепĕр хут чĕрĕлме пултарĕ?" — тесе ыйтаççĕ. Пысăк вĕреннĕ çынсем тахçанах ĕнтĕ ĕненте-рӳллĕн кăтартса панă: химилле майпалан пĕр тытăмра тăнă нимĕнле япала та çĕр çинчен ниçта та çухалмасть.

Малтан этемĕн ӳтне пултарнă Турă унăн химилле пур пайне те каллех пĕрлештерме пултарать, вара чĕрĕлнĕ ӳт чунпа та пĕрлĕшĕнет. Анчах пирĕн çав ӳтĕмĕр, чĕрĕлсе тăнă Христос ӳчĕ пекех, урăхланнă ӳт пулĕ. Ун чухне эпир куççуль мĕнне те, пуç е урăх мĕн те пулин ыратни мĕнне те, асаплану мĕнне те, чир-чĕрпе вилĕм мĕнне те пĕлмĕпĕр.

Çапла вăл вĕçĕ-хĕррисĕр талккăшри ĕмĕртенхи тата ĕмĕр-ĕмĕрлĕх икĕ тĕнче. Адамăн кашни ывăлĕ-хĕрĕ çав тĕнчесенчен пĕринче тăма тивĕçĕ. Аслă вăрттăнлăх хупăрласа тăрать çав тĕнчесене, анчах та Библи çак тĕнчесенчен пĕрийĕ асаппа хурлăх тĕнчи, тепĕри çутăпа мухтав тĕнчи пуласси çинчен самаях систерсе е çителĕклĕ таран тӳрремĕнех калать.

Халĕ эпир этемлĕхĕн ыйтăвĕсене пăхса тухрăмăр. Çиелтен пĕрре пăхма вĕсем питĕ кăткăс пек туйăнаççĕ, чăннипе вара вĕсем питех те ансат. Куртăмăр ĕнтĕ, çак ыйтусене пурне те пĕр сăмаха чăмăр-тама пулать, çав сăмах: „*çылăх*“. Эпир куртăмăр, çыннăн пуласлăхĕ, Турăсăр тăрсан, пĕр шанăçсăр. Анчах хамăрăн татса памалли ыйтусене тишкĕрни кăна, Турă мĕн палăртса хунине ăс-хакăлпа ăнланни кăна сахал. Енчен те çын Турăран пулăшу кĕтет пулсан, унăн паллă йĕркесене тытса пурăнмалла. Çак кĕнекен малалли сыпăкĕсенче шăпах ĕнтĕ çав йĕркесем çинчен сăмах пырĕ.

ИККЁМЁШ ПАЙЁ

# ЫЙТУСЕНЕ ТАТСА ПАНИ

## ÇИЧЧĔМĔШ СЫПĂК

# ХРИСТОС ÇĔР ÇИНЕ МĔН ТУМА КИЛНĔ?

„Эпĕ сире чăн малтан ак çакна, хама пĕлтернине, каласа патăм: Çыру çинче çырнă пек, Христос пирĕн çылăхăмăрсемшĕн вилнĕ. Çырура каланă пек, Ăна çĕре пытарнă, Вăл виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăнă“.

1 Кор. 15:3-4

Эпир куртăмăр ĕнтĕ, тĕнчемĕрти чи хăрушши, чи аркатулли вăл çылăх. Мĕнпур хуйхă-суйхă сăлтавĕ, пур усал ĕçĕн пуçламăшĕ, кашни çыннăн сехре хăппийĕ çак кĕске çеç „çылăх“ сăмахпа çыхăннă. Вăл этемлĕхĕн несĕллĕхне-юнне пăснă. Вăл этем пурăнăçĕн шалти килĕшӳлĕхне аркатнă. Вăл çынна чыссăра хăварнă. Вăл çынна шуйттан серепине кӳртсе ӳкернĕ.

Çыннăн ăсĕ-тăнĕ пăсăлни, мĕнпур чир, мĕнпур аркану, мĕнпур вăрçă — пурте çылăхран пуçланаççĕ. Çылăх вăл ăсран тайăлнин, чĕрене наркăмăш тивнин сăлтавĕ. Çылăха Библире хăрушă та вĕлерекен чирпе танлаштарнă, çав чиртен тĕплĕн сипленмелле тенĕ. Çылăх вăл таçтан йăтăнса аннă çил-тăвăлпа, ту-сăрта сирпĕнтерсе тухнă алхасуллă вутпа, ухмахсен çуртĕнчен тухса тарнă ăссăр çынпа, кама та пулин çаратма йăпшăнса утакан вăрă-хурахпа, сунара тухнă ӳхĕрекен арăсланпа пĕр евĕрлĕ. Çылăх çĕр çине пуçа касаканăн пуртти пек йăтăнса

анать. Çылăх вăл çын чунне çисе яракан чир пек. Çылăх вăл хăй çулĕ çинчен пĕтĕмпех илсе ывăтакан урнă шыв сикки.

Çылăха пула, каларĕшле, мĕнпур таса шыв этем тунă усал ĕçсемпе вараланнă, уçă çил варкăшĕ асса пуçсăрланнă, кашни кун çути тĕксĕмленнĕ, пурăнăçăн кашни саманчĕ асаппа тулнă, кашнин пурăнăç çулĕ çинче — таната, кашни çулçӳрев ултавлăхпа, сутăнчăклăхпа çыхăннă. Çылăх телее аркатать, ăса-тăна чухăнлатать, намăса мантарать, пĕтĕмпех пĕтерсе пырать, мĕнпур хуйхă куççульне пăчăртаса кăларать, вилес умĕн асаплантарать, капăр тум паратăп тесе — вилĕм кĕпи парать, ирĕклĕх паратăп тесе — чуралăх парать, шерпет паратăп тесе — ват парать, пурçăн паратăп тесе — çĕтĕк-çурăк парать.

Çылăх чирĕпе суккăрланнă çынсем ĕмĕрсем хушши чун тĕттĕмлĕхĕнче аташса çӳренĕ, тĕттĕмрен тухма хыпашласа хăйсен çулне шыранă. Чун пăлханăвĕнчен, кăмăл пăтранăвĕнчен хăтарма, шуйттан тĕрминчен илсе тухма этеме кам та пулин кирлех пулнă. Çынсем, выçă чунпа, антăхнă ăс-тăнпа, пăтраннă шухăш-кăмăлпа вăйсăрлăхра пурăннă, çав хушăрах хăйсем куçĕсене тĕттĕмеллех тĕлленĕ, кăлăхах тем итленĕ. Шуйттанĕ вара, çынсен асапĕпе инкекĕшĕн савăнса, рай пахчинче хăй çĕнтерĕвне уявланă.

Чăтлăх вăрмансенче пурăннă чи авалхи çынсенчен пуçласа вăйлă аталаннă Египет, Греци, Рим таранах пăлханнă çынсем яланах пĕр ыйту панă: „Мĕнле пурăнмалла капла? Мĕнле майпа манăн лайăхрах пулмалла? Мĕн тумалла? Хăш çулпа каймалла? Çак хăрушă чиртен мĕнле майпа хăтăлмалла-ши? Çак вирхĕнсе килекен шыв таппине мĕнле майпа чармалла-ши? Çак шăтăкран мĕнле майпа çăлăнса тухмалла-ши манăн? Çăлăнмалли çулĕ пулсан, çав çула мĕнле майпа тупмалла-ши манăн?“ тенĕ.

Эсир куртăр ĕнтĕ, Библи Турă вăл юрату тесе вĕрентет. Турă çыншăн мĕн те пулин тăвасшăн пулнă. Вăл çынна çăласшăн пулнă. Вăл çынна çылăх ылханăвĕнчен хăтарасшăн пулнă. Мĕнле майпа тума пултарнă-ха Вăл çакна? Вăл чăн малтанах этем Турă хыççăн мар, шуйттан хыççăн кайсен, чунĕпе те, ӳчĕпе те вилесси çинчен асăрхаттарса каланă. Анчах хăйĕн кăмăлне, хăйĕн ирĕкне мала хунă этем Турра итлемен. Çапла вара этемĕн вилмелли кăна юлнă, унсăрăн Турăултавçă пулса юлнă пулĕччĕ: панă сăмаха тытмасăр тăма пултарайман Вăл. Турă пулни Ăна суйма хушмасть. Унăн сăмахĕ вырăна килмеллех пулнă. Этем Турра пăхăнман пирки, ăна Турă Хăй умĕнчен хăваласа янă. Этем хăй ирĕкĕпе шуйттан çулне суйласа илнĕ. Турă этемĕн çылăхне касарма пултарайман, унсăрăн Вăл Хăй ултавçа тухнă пулĕччĕ, (ку вара пачах та май çук япала). Вăл çапла каланă: „... ырăпа усала пĕлтерекен йывăç çимĕçне ан çи: унăн çимĕçне çинĕ кун эсĕ вилмелле пулăн“, тенĕ (Пултарни 2:17).

Çĕнĕ çул тупăнмалла пулнă, мĕншĕн тесен çын пĕр шанчăксăр вилнĕ. Çыннăн çынлăхĕ пăсăлнă. Вăл Турра хирĕç тăнă. Нумайăшĕ Турă çук тенĕ, хăйсен чирĕпе асапланаканскерсем, вĕсем чунпа çав тĕрлех суккăрланнă.

Анчах та рай пахчинче чухнех Турă Вăл Хăех мĕн те пулин тăвасса систернĕ. Вăл шуйттана асăрхаттарса çынна çапла сăмах панă: „Сан хушшупа арăм хушшине, сан йăху хушшипе арăмран çуралас йăх хушшине çилĕ хурăп; арăмран çураласси санăн пуçна çĕмĕрсе тăкĕ, эсĕ ăна ури тупанĕнчен сăхăн“, тенĕ (Пултарни 3:15). Çак çăмахсенче ĕнтĕ пĕлĕт çинчен çутă пайăрки çиççе илнĕ. Çакăнта — сăмах пани. Çак сăмахсем çынна мĕне шанса тăмаллине кăтартаççĕ. Турă Тӳлесе Илекен, Хăтаракан килес кун çитĕ тесе сăмах панă. Нумай ĕмĕрсем хушши, пин-пин

çулсем хушши этемлӗх умӗнче çак шанчӑк çути çуталса тӑрать!

Анчах пӗр çакӑ кӑна-и? Этемлӗх кун-çулӗн пин çуллӑхӗсем хушшинче пӗлӗт çути çӗр çине çитни татах та пулнӑ. „Кивӗ Сӑмахра, тӑршшӗпех тенӗ пек, Турӑ çынна çӑлма пулать, анчах çыннин Хӑтаракан килессе ӗненсе тӑмалла. Çавӑнпа та Турӑ хӑйӗн халӑхне çын ун вырӑнне кам та пулин урӑххи тупӑнсан кӑна çӑлӑнма пултарать тесе вӗрентме тытӑнать. Çылӑха кӗрсе пӗтнӗ çынна хӑтарма камӑн та пулин урӑххин тӳлесе илмелле.

Шухӑшпа кӑна пӗр самантлӑха рая таврӑнар-ха. Турӑ каланӑ:"... ун çимӗçне çинӗ кун эсӗ вилмелле пулӑн" (Пултарни 2:17). Çынни çинӗ. Вилнӗ.

Калӑпӑр, Турӑ: „Адам, эсӗ йӑнӑш турӑн, ку вӑл сан хӑвӑн çулунтан кӑштах аташни пулчӗ. Эпӗ сана каçаратӑп. Урӑх нихӑçан та ун пек ан ту", тенӗ пултӑр. Çапла каланӑ пулсан, Турӑ суеçӗ пулса тӑрӗччӗ. Текех Вӑл Святой пулман пулӗччӗ. Вӑл урӑх нихӑçан та Тӗрӗс пулман пулӗччӗ. Хӑйӗн турӑлӑхне, Хӑйӗн тупсӑмне-пӗлтерӗшне кура, Унӑн панӑ сӑмаха тытмаллах пулнӑ. Виçе çинче Туррӑн тӗрӗслӗхӗ тӑнӑ. Çыннӑн чунӗпе те, ӳчӗпе те вилмеллех пулнӑ. Унӑн çылӑхлӑхӗ ӑна Турӑран уйӑрса янӑ. Çавӑнпа та çыннӑн асапланмалла, хӑйӗн çылӑхӗсемшӗн тӳлемелле пулнӑ.

Каларӑмӑр-ха ӗнтӗ, Адам этем йӑхӗн пуçӗ пулнӑ. Адам çылӑха кӗрсен, эпир пурте çылӑха кӗнӗ. Мӗншӗн тесен, „Çылӑх тӗнчене пӗр çын урлӑ кӗнӗ, çылӑхпа пӗрле вилӗм те килнӗ, вара пур этем те çылӑхлӑ пулса тӑнӑ, мӗншӗн тесен пӗри çылӑха кӗнипе пурте çылӑхлӑ пулса тӑнӑ" (Римл. 5:12).

„Мӗнле-ха вара тӳрӗ Турӑ çылӑхлӑ çынна тӳрре кӑларайтӑр?"— çакӑ чӑн çивӗч ыйту пулса тӑнӑ. Пирӗн акӑ мӗне асра тытмалла: „Тӳрре кӑларас" тени „айӑпран хӑ-

тарас“ тенине пӗлтерет. Тӳрре кӑларни вӑл ахаль каҫару кӑна мар, ун пӗлтерӗшӗ нумай пысӑкрах. Ҫылӑха, вӑл нихӑҫан та пулман пек, пӗтермелле. Ҫынна ҫӗнӗрен ҫын туса тӑратмалла, ун ҫинче пӗр кӑлтӑк, пӗр айӑп та ан юлтӑр. Урӑхла каласан, ҫынна малтанхи вырӑна, вӑл ырӑлӑхран тухса ӳкичченхи вырӑна, тавӑрмалла пулнӑ.

Суккӑрланса юлнӑ ҫынсем ҫӗр-ҫӗр ҫул хушшинче рая таврӑнас кӑмӑлпа темӗн те пикенсе пӑхнӑ, анчах та вӗсен ҫак ӗмӗчӗ нихӑҫан те ҫитмен. Нумай тӗрлӗ ҫулпа утса пӑхнӑ вӗсем, анчах пурте кӑлӑх пулнӑ. Вӗренни питӗ кирлӗ, анчах вӗренни кӑна ҫынна Турӑ патне илсе пымастьха. Суя тӗнсем вӗсем — ыратӑва туйими тӑвакан наркӑмӑшлӑ эмел евӗр, ҫын чунпа чухӑннине пытарса тӑраҫҫӗ, вӗсем нихӑҫан та тӗллеве илсе ҫитермеҫҫӗ.

Тӗнчемӗре вӑрҫӑ хӑратса тӑрать пулсан, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗ кирлӗ. Вӑл халӑхсем хушшинчи килӗшӳлӗхе йӗркелесе тӑнӑшӑн, тавлашуллӑ ыйтусене вӑрҫӑ кӑлармасӑрах татса панӑшӑн эпир ӑна ҫак ӗҫри кашни утӑмӗшӗн тав тӑватпӑр. Анчах та Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗ нумайлӑха тӑнӑҫ пурӑнӑҫ туса парас пулсан, ҫын Турра ҫапла калама пултарнӑ пулӗччӗ: „Эсӗ пире урӑх кирлӗ мар. Эпир ҫӗр ҫинче канӑҫлӑх туса хутӑмӑр, этемлӗхе тӗрӗс йӗрпе ятӑмӑр“, тейӗччӗ. Анчах кунашкал ӗмӗт-шухӑш вӑл юмӑҫ имҫамӗ кӑна, унпа тӗнче Аслӑ Тухтӑра кӗте-кӗте усӑ курма пултарӗ-и ҫеҫ... Ҫынсем малтанхи хут пӗрлешме пӑхни Вавилон башнине тунӑ чух халӑхсен чӗлхисем пӑтрашӑнса пӗтнипе пӑчланса ларнӑ — ҫавна эпир этемлӗх историйӗнчен пӗлетпӗр. Турӑсӑр пурӑнса ҫын нимӗн те тӑвайман, пур чухне те ӗҫӗ ӑнман ун, урӑхла пулма та пултарайман.

Каллех ҫав ыйтӑвах тухса тӑрать: „Ҫылӑхлӑ ҫынна тӳрре кӑларать пулсан, мӗнле-ха пурпӗрех Турӑ Хӑй те тӳрӗ, улӑшӑнмасӑр, таса юлайтӑр?“ Мӗншӗн тесен, каш-

ни çыннăн хăйĕн çылăхне хăйĕн хулпуççийĕ çинех илмелле, пĕтĕм этемлĕх пулăшусăр юлчĕ, мĕншĕн тесен кашнинех çылăх чирĕ ернĕ.

Çак ыйтăва татса пама май пур пĕртен-пĕр çул юлнă вара: камăн та пулин, айăпсăррин, Турă умĕнчи çынсен çылăхĕсене хăй çине илсе, хăй ирĕкĕпе чунĕпе те, ӳчĕпе те вилме килĕшмелле. Çак айăпсăррин хунă айăпа та, асапа та, вилĕме те хăй çине илмелле пулнă. Анчах ун пек çынна ăçта тупмалла-ха? Çĕр çинче, паллах, ун пеккине тупаймăн, мĕншĕн тесен Библире каланă: „пурте çылăха кĕнĕ, пурте Турă мухтавне çухатнă“, тенĕ (Римл. 3:23). Пĕр май çеç пулнă. Туррăн пĕртен-пĕр Ывăлĕ кăна тĕнче çылăхне Хăй çине илме пултарнă.

Библи Турра виçĕ сăпатпа уçса кăтартать. Ку вăл пире ăнласа илме паман пĕлĕнми ĕç. Библи пире виçĕ Турă пур тесе вĕрентмест. Турă пĕрре тет Вăл. Анчах та çак пĕр Турă виçĕ сăпатран тăрать: Атте Турă, Ывăл Турă тата Святой Сывлăш Турă.

Çак таса Троицăн иккĕмĕш сăпачĕ (е сăнĕ) — Ывăл Турă, Иисус Христос. Вăл Турăпа пĕр тан. Вăл Турă ывăлĕсенчен пĕриййĕ мар, анчах та Турă Ывăлĕ, пĕртен-пĕр ывăлĕ. Вăл Ĕмĕрхи Турă Ывăлĕ — таса Троицăн иккĕмĕш ипостаçĕ, ӳтленсе çуралнăскер, чĕрĕ Çăлаканăмăр.

Библи çапла вĕрентет: Иисус Христосăн пуçламăшĕ çук. Ăна нихăçан та пултарман. Ыттине пурне те: çăлтăрсене те, уйăхпа хĕвеле те, пирĕн çĕре те пултарнă.

Çапла вĕрентет Библи. Иисус Христос çуралнă куна эпир Раштавра уятпăр, анчах та Уншăн çав пуçламăшĕ пулман. Ку вăл пĕлĕнми ĕç. Турă ăçтан, мĕнле пулса кайни пекех, пирĕн ăс-тăнпа пĕлме çук ĕç. Библи пире çапла кăна каласа хăварать: „Сăмах чăн малтанах пур, Вăл Сăмах Турăра, çав Сăмах Хăй Турă“, тет (Иоан. 1:1).

Библи пире: „Вӑл курӑнми Туррӑн сӑнӗ, Вӑл пур пултарнӑ япаласенчен те малтан ҫуралнӑ. Ҫӳлте мӗн пуррине, ҫӗр ҫинче мӗн пуррине, курӑнаканнине те, курӑнманнине те, пурне те Вӑл пултарнӑ; аслӑ вырӑнтисене те, аслисене те, пуҫлӑхсене те, хӑватлисене те, пурне те Вӑл пултарнӑ, пурне те Хӑйшӗн пултарнӑ. Вӑл пуринчен малтанах пур, пурте Унпа тӑрать“, тесе вӗрентет (Кол. 1:15-17).

Вӑл пӗтӗмпех Хӑй аллинче тытса тӑрать, тет юлашки пуплев. Урӑхла каласан, Иисус Христос Хӑй хӑвачӗпе тытса тӑман пулсан, ҫут тӗнче миллиард пӗчӗк атомсем ҫине пайланса арканса кайнӑ пулӗччӗ. Каллех Библие вулар-ха: „Тата: эй, Турӑ, Эсӗ малтан ҫӗре пултарнӑ, пӗлӗт те Санӑн аллу ӗҫех. Вӗсем пӗтӗҫ. Эсӗ яланах пур: пурте тумтир пек кивелӗҫ, вӗсене Эсӗ тумтир чӗркенӗ пек чӗркӗн те, вӗсем улшӑнӗҫ. Эсӗ Ху ҫав-ҫавах, Санӑн кун-ҫулу пӗтес ҫук“ (Евр. 1:10-12).

Иисус Христос Хӑй пирки ҫапла каланӑ: „Эпӗ Альфа, Омега, пуҫламӗш те, вӗҫӗ те“, тет (Апок. 1:8). Ӑна, пӗр Ӑна кӑна, ҫынна Турӑ енне ҫавӑрма ирӗкпе хӑват панӑ. Тунӑ-и-ха Вӑл ҫакна? Ҫакна тӑвас тесен, Унӑн ҫӗр ҫине килмелле пулнӑ. Унӑн ҫын евӗрлӗ пулмалла пулнӑ. Унӑн Хӑйне кӗҫӗне хӑвармалла та виличченех пӑхӑнса пурӑнмалла пулнӑ. Унӑн ҫылӑхпа тытӑҫса ӳкмелле пулнӑ. Унӑн ҫынсен чунӗн тӑшманне, усала, тӗл пулса, ӑна ҫӗнтермелле пулнӑ. Унӑн, сӑнчӑрсене татса, тӗрмере ларакансене ирӗке кӑлармалла пулнӑ, ҫакӑншӑн унӑн пысӑк хак — Хӑй юнӗн хакне — тӳлемелле пулнӑ. Ҫынсем Ун ҫине йӗрӗнсе пӑхмалла, хӑйсем патӗнчен хӑваласа ямалла пулнӑ. Хӑйӗн Унӑн асап тӳсмелле, чир-чӗрпе асапланмалла пулнӑ. Туррӑн Ӑна манмалла тата пӑрахмалла пулнӑ, ҫынсем йӗркерен тухнӑшӑн, Унӑн суранланса пӗтмелле, ҫынсен ҫылӑхӗсемшӗн Ӑна хӗнесе пӗтер-

мелле пулнӑ. Унӑн Турӑпа этеме пӗр-пӗринпе килӗштермелле пулнӑ. Унӑн этемлӗх историйӗнче Аслӑ Килӗштерӳҫӗ пулса юлмалла пулнӑ. Унӑн, пӗтӗмлӗх вырӑнне тӑрса, ҫылӑхлисемшӗн вилмелле пулнӑ. Ҫакна пӗтӗмпех Унӑн Хӑй ирӗкӗпе тумалла пулнӑ.

Тав Турра — ҫакӑ пурте чӑнахах пулса иртнӗ! Пӗлӗт ҫинчен ҫӳлтен Вӑл пирӗн тӗттӗм те ылханлӑ, ҫылӑхпа ишӗлсе аннӑ тамӑкалла ыткӑнакан ҫӗре курса тӑнӑ. Вӑл сире те, мана та, ҫылӑх йывӑррипе пӗкӗрӗлсе аннӑскерсене, ҫылӑх сӑнчӑрӗпе ҫыхӑнса тӑлланнӑскерсене, курнӑ. Вара Вӑл пӗлӗт ҫинчи Хӑйӗн ҫурчӗсенче шухӑш тунӑ. Ангелсен ушкӑнӗсем Ӑна хисеплесе, йӑвашланса пуҫ тайнӑ. Вӑл патшасенӗн Патши, хуҫасенӗн Хуҫи, Сӑмахӗпе тӗнчесене пултараканскер, Хӑйӗн ҫуталса тӑракан ҫар урапийӗ ҫине хӑпарса ларнӑ та тӗттӗм ҫӗрле, Хӑйне ҫӑлтӑрсемпе ангелсем мухтаса юрланӑ май, пӗлӗтсем хушшинчи ахах-мерчен хапха витӗр тухнӑ. Иудея тӗлне ҫитсен, урапи ҫинчен аннӑ, Хӑйӗн йӑлтӑртатса тӑракан тумтирӗсене хывса пӑрахнӑ та этем пулса тӑнӑ!

Шухӑшласа пӑхар ӗнтӗ, калӑпӑр, ҫулпа пынӑ чухне эпӗ асӑрхамасӑр кӑткӑ тӗми ҫине пуснӑ тейӗпӗр. Мӗн тумалла? Эпӗ ҫӗрелле пӑхса кӑткӑсене ҫапла каланӑ пулӑттӑм-и: „Эпӗ сирӗн тӗмескӗре таптанӑшӑн питӗ ӳкӗнетӗп. Эпӗ сирӗн ҫуртӑра аркатрӑм. Эсир пӗтӗмпе пӑлханса ӳкрӗр. Манӑн сире хам хӑвӑра юратни ҫинчен питӗ калас килет, эпӗ сире сӑтӑр тӑвас теменччӗ. Манӑн сире халӗ питӗ пулӑшас килет“, — тенӗ пулӑттӑм-и?

Эсир мана ҫийӗнчех: „Апла тума май ҫук, апла шутлани те вырӑнсӑр: кӑткӑсем сан сӑмахна ӑнланмаҫҫӗ вӗсем“, — тесе тавӑрнӑ пулӑттӑр. Ёҫӗ шӑпах ҫакӑнта! Темиҫе минутлӑха кӑткӑ пулса вӗсен чӗлхипе хам вӗсене юратни ҫинчен калама пултарсан, мӗн тери аван пулнӑ пулӗччӗ!

Христос шăпах çакăн пек тунă. Вăл çынсене Турă çинчен пĕлтерме килнĕ. Вăл Турă пире юратни, пирĕншĕн пăшăрханни çинчен каланă, Вăлах пире Туррăн хĕрхенекен кăмăлĕ, Вăл вăрах тӳсни çинчен, Унăн ырăлăхĕ çинчен каласа панă. Вăлах пире ĕмĕрлĕх пурăнăç пама пулнă.

Унтан та ытларах: Иисус Христос вилмешкĕн ӳтленсе çуралнă. „Христос пирĕн çылăхсене илме килнĕ“ (1 Иоан. 3:5). Вăл „... нумайăшне çăласшăн Хăй чунне пама килнĕ“ (Матф. 20:28). Иисус Христос тĕнчене килнин тĕллевĕ Хăйĕн пурăнăçне çынсен çылăхĕсемшĕн парнене парасси пулнă. Вăл вилме килнĕ. Ун вилĕмĕн мĕлкийĕ Унăн çĕр çинчи пĕтĕм вăтăр виçĕ çулĕ çийĕн çакăнса тăнă.

Иисус Христос çуралнă каç шуйттан сехĕрленсе ӳкнĕ. Çуралсанах Ăна вĕлерме хыпăннă. Ирод пĕчĕк ачасене пĕтерсе тухма кăтарту парсан, унăн пĕртен-пĕр тĕллевĕ Иисуса вĕлересси пулнă.

Çĕр çинче пурăннă çулсенче Христос пĕрре те çылăха кĕмен. Çылăха кĕмен пĕртен-пĕр çын пулнă Вăл. Вăл çынсен умне тăрса: „Сирĕнтен кам Мана çылăхлă тесе айăплĕ?“ теме пултарнă (Иоан. 8:46). Тăшман Ăна ирĕнкаçăн йĕрленĕ, анчах никам та Унра çылăх тупма пултарайман. Вăл таса та пĕр сăлтăксăр пулнă.

Иисус Христос лăпкă, сăпайлă пурăнăçпа пурăннă. Ăна нимĕнле мухтав та, нимĕнле чап та кирлĕ пулман. Вăл сурăх витинче çуралнă. Вăл пĕчĕкçĕ хулара Назаретра пурăннă. Платник пулнă. Вăл Хăй тавра Хăй майлă, Хăй хыççăн кайнă пулăçсен пĕчĕк ушкăнне пухнă. Çынсем хушшинче çын пек пурăннă. Вăл Хăй ыттисенчен малта иккенне кăтартман, çын çинче нихăш енчен те палăрма тăрăшман. Вăл Хăйне çĕр çинче пурăнакансенчен пуринчен те пысăкрах хур тунă.

Анчах Вӑл ҫынсемпе питӗ витӗмлӗ калаҫнӑ. Ӑна итлекенсем: „Вӑл Ҫын калаҫнӑ пек ҫын нихӑҫан та калаҫни ҫук“, тесе тӗлӗннӗ (Иоан. 7:46). Вӑл каланӑ кашни сӑмахах, истори, ӑслӑлӑх, этика тӗлӗшӗнчен илсе пӑхсан та, тӗрӗс пулнӑ. Йӗркелӗхпе ҫын этемлӗхӗ енчен те Иисус Христос вӗрентсе каланисем уҫӑмлӑ. Унӑн моралӗ те Вӑл Хӑй пурӑннӑ вӑхӑтшӑн та таса, мӗн ӗмӗрлӗхе те кивелми.

Ҫак тивлетлӗ Ҫыннӑн сӑмахӗсем пророкла тӗрӗс, мӗн пулассине те тӗрӗс каласа пама пултарнӑ. Пире малашлӑхра мӗн кӗтсе тӑнине Вӑл нумай каланӑ. Кӗнекеҫӗсем Ӑна тӗрлӗрен пӗтӑрмах ыйтусемпе пӑтраштарма тӑрӑшнӑ, анчах нихӑҫан та аптӑратса ӳкереймен. Вӑл хирӗҫ тавӑрса каланисем уҫӑмлӑ, тӗллӗ пулнӑ. Ун сӑмахӗсенче ӑнланмалла марри, иккӗленӳлли, Ун шухӑшӗсенче тӗтрелли нимӗн те пулман. Пӗлнӗ Вӑл, ҫавӑнпа лӑпкӑ вӑйӑмлӑхпа калаҫнӑ. Ӑнланмалла калаҫнӑран халӑх ӑна савӑнса итленӗ. Унӑн сӑмахӗсем пысӑк кӑткӑс пӗлтерӗшлӗ пулнӑ пулсан та, мӗнпур халӑха ӑнланмалла пулнӑ. Вӗсем ансат та ҫутӑ пулнӑ. Ҫакӑ Унӑн тӑшманӗсене килӗшмен, вӗчӗрхентернӗ. Христос кулленхи пурӑнӑҫӑн йывӑр ыйтӑвӗсене тӗплӗн шухӑшласа татса пама пӗлнӗ, Ӑна итлесе, Ӑна ӗненсе хуть те кама та Ун хыҫҫӑн кайма йывӑр пулман.

Иисус Христос чирлӗ ҫынсене, уксах-чӑлаха, хавшанса юлнисене, суккӑрсене сыватнӑ, вилнисене чӗртсе тӑратнӑ. Вӑл ҫын ӑшӗнчен усалсене хӑвала-хӑвала кӑларнӑ. Вӑл ҫутҫанталӑкӑн тӗп вӑйӗсене итлеттернӗ. Вӑл ҫилтӑвӑла лӑплантарнӑ. Хӑй вӗрентекен ҫынсене Вӑл канӑҫлӑх, савӑнӑҫпа шанчӑк кӳрсе тӑнӑ.

Унӑн нихӑҫан та хӑраса ӳкни пулман. Вӑл нихӑҫан та пуҫа ҫухатса васкаман. Вӑл нихӑҫан та ӑссӑрла инкеке лекмен. Хӑйӗн кашни утӑмне шухӑшласа тунӑ. Хӑйне

тыткалама лайӑх пӗлнӗ. Хӑй ӗҫӗнче Вӑл канӑҫсӑрланман та, иккӗленмен те.

Пилат умӗнче те лӑпкӑ тӑрса Вӑл ҫапла каланӑ: „Сана ҫӳлтен паман пулсан, Ман тӗлӗшӗмрен санӑн нимӗн ирӗк те пулмӗччӗ“, тенӗ (Иоан. 19:11). Хӑратса ӳкернӗ ҫынсене Вӑл Хӑйне темӗн чухлӗ ангел ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе пӑхӑнса тӑни ҫинчен пӗлтернӗ.

Хӗрес патне Вӑл, Хӑй ҫинчен сакӑр ӗмӗр малтанах каласа хуни пуласса ҫирӗп ӗненсе, пӗтӗм тивӗҫпе, лӑпкӑн утса пынӑ, „Сурӑха пусма илсе пынӑ пек илсе пынӑ Ӑна, путек хӑйӗн ҫӑмне касаканӑн умӗнче шӑпӑрт выртнӑ пек, Вӑл та ҫӑвар уҫса сас туман“ (Иса. 53:7).

Вӑл Хӑйӗн чапӗпе Хӑйӗн аслӑлӑхне ӑнланса тӑрса, Хӑй тӑвас калама ҫук пысӑк ӗҫе туллин туйса тӑрса пынӑ. Вӑл ҫылӑхлӑ ҫынсене ҫӑлма килнӗ. Вӑл Турӑ ҫиллине ҫавӑрма килнӗ. Вӑл ҫынсене шуйттан суттинчен тӳлесе илме килнӗ. Вӑл шуйттана ӗмӗрлӗхе ҫӗнтерме килнӗ. Вӑл тамӑкпа масар шӑтӑкӗ умӗнче ҫиеле тухма килнӗ. Ҫакна Вӑл пӗртен-пӗр майпа анчах тума пултарнӑ. Ун умӗнче пӗр ҫул кӑна выртнӑ.

Ун вилӗмне пин ҫул каяллах пӗлсе каланӑ. Малтан эпир куртӑмӑр, рай пахчинче, ун хыҫҫӑн Иисус Христосӑн пурнӑҫӗпе вӗрентӗвӗ, вилӗмӗ ҫинчен кала-кала вӗрентесси пур ӗмӗрте пынӑ. Авраам Ун вилӗмне хӑй пуснӑ путекрен курса тӑнӑ. Израиль халӑхӗ Унӑн вилӗмне путексем пусса кӑтартса тӑнӑ. Иудейсен парне вырӑнӗ ҫинче парне юнӗ юхни — ку вӑл ҫылӑхсемшӗн хӑтарма килес Турӑ путеккин юнне пӗлтернӗ. Давид Унӑн вилӗмӗ ҫинче хӑйӗн пророкла псаломӗсенче каланӑ. Исаия пророк хӑйӗн кӗнекинче Унӑн вилӗмӗ мӗнле пулассине тӗпӗ-йӗрӗпе тенӗ пек ҫырса кӑтартнӑ.

Иисус Христос Хӑй пурӑнӑҫне пама вӑйӗ пурри ҫинчен каланӑ: „Эпӗ ырӑ кӗтӳҫӗ: ырӑ кӗтӳҫӗ сурӑхӗсемшӗн

хӑйӗн чунне парать“ (Иоан. 10:11). Тата ҫапла калать: „Пушӑ хирте Моисей ҫӗлене ҫӗкленӗ пек, Этем Ывӑлӗн те: Ӑна ӗненекенсем пӗри те ан пӗтчӗр, ӗмӗрлӗх пурнӑҫлӑ пулччӑр тесе, (хӗрес ҫумне) ҫӗкленмелле“, тенӗ (Иоан. 3:14-15). Иисус Христос ӗмӗр-ӗмӗрлӗхре туса лартнӑ хӗресе курса тӑнӑ, Хӑй вилӗмӗн кунӗ ҫывӑхарса килнине Вӑл Хӑй ҫуралаччӗнхи пур ӗмӗрте те пӗлсе тӑнӑ. Вӑл Хӗртен ҫуралсанах Унӑн ҫулӗ ҫине хӗрес мӗлки ӳкнӗ. Вӑл вилмешкӗн этем пек ӳтленсе ҫуралнӑ. Сӑпкаран тытӑнса хӗрес умне ҫитиччӗнех Унӑн пурнӑҫ тӗллевӗ вилӗм пулнӑ.

Вӑл асапланнӑ пек Унччен пӗр ҫын та асапланман: факелсем хӑрушшӑн ҫунакан Гефсимани пахчинче иртнӗ каҫ, Хӑйне сутакан Иуда пырса чуптуни, вӑрӑ-хураха тытнӑ пек тытса кайни, пуп-пуҫлӑхсем иртнерӗ сут, кӗтсе ӗнтӗркенӗ сехетсем, Рим прокураторӗн керменӗ, Ирод керменне илсе кайни, Иродӑн хаяр та усал салтакӗсен чыссӑрлӑхӗ, хӑйне священниксемпе халӑх вӗлерме ыйтса шавланӑ хушӑра Пилат хӑтарма айканнӑ хӑрушӑ сехет, хӗнеме, ҫапма тытӑнни, кӑшкӑрашу, янӑрашу, Иерусалимран Голгофӑна мӑшкӑл тӳссе ҫитни, утни, алӑсене шӑтарса ҫапакан пӑтасем, урасене шӑтарса ҫапакан пӑтасем, йӗплӗ кӳкенрен туса тӑхӑнтартнӑ пуҫкӑшӑлӗ, мӑшкӑлласа кӑшкӑрнисем: „... ҫынсене ҫӑлатчӗ, Хӑйне Хӑй ҫӑлаймасть“ (Матф. 27:42).

Хӑш-пӗр ҫынсем тӗлӗннӗ: Христос хӑвӑрт, ултӑ сехет хушшинчех, вилсе кайнӑ, ҫав вӑхӑтрах ыттисем хӗрес ҫинче икӗ е виҫӗ талӑк асапланнӑ, мӗншӗн? Голгофӑна ҫитнӗ ҫӗре Иисус йӑлт халтан кайнӑ пулнӑ. Ӑна ҫапнӑ, тапнӑ, хӗненӗ, Вӑл вӑйсӑрланса ҫитнӗ. Анчах вилессе Христос Хӑй ирӗкӗпе вилнӗ. Сывлӑшӗ хӑҫан, хӑш самантра тухассине те Вӑл тӗп-тӗрӗс суйласа илнӗ.

Ҫапла, ҫарамаслантарнӑскер, ҫакӑнса тӑнӑ Вӑл ҫӗрпе

пӗлӗт хушшинче. Пичӗ-куҫӗ юнпа пӗвеничченех хӗненӗ Ăна. Вӗсем Ăна питрен сурнӑ, Унӑн пичӗ урса кайнӑ ҫынсен сурчӑкӗ айне пулнӑ. Анчах та Вӑл ӳпкелешмен те, йӑлӑнман та, Хӑй хӑрушла асапланнине пӗтӗмпе те пӗр сӑмахпа: „ӑшӑм ҫунать“ тесе систернӗ. Юн юхнӑ. Турӑ ҫылӑхлӑ ҫынна улӑштараканӑн вилӗмне хистесе ыйтнӑ. Ҫав Улӑштараканӗ, ҫылӑхлӑ ҫынсем вырӑнне тӑраканӗ шӑпах Христос пулнӑ ӗнтӗ. Гавриил архангелпа хӗҫӗсене йӗнӗрен кӑларнӑ темӗн чухлӗ ангелсен пысӑк ҫарӗ тӗнче хӗрринче вӗҫсе ҫӳренӗ. Христос, хушса, пӗрре пӑхса илес-тӗкех, вӗсем урса кайнӑ шавлӑ халӑх ушкӑнне тӗртсе яма хатӗр пулнӑ. Ăна ҫапла кунта пӑтасем мар, юрату ҫыхӑнӑвӗ ҫынсем явнӑ мӗнпур вӗренсенчен те ҫирӗпрех тытса тӑнӑ. „Турӑ пире юратни Христос пирӗншӗн хамӑр ҫылӑхлӑ чухне вилнинчен паллӑ“ (Римл. 5:8).

Сирӗншӗн! Маншӑн! Пирӗн ҫылӑхсене Вӑл Хӑй ӳчӗпе хӗрес ҫине илнӗ. Тахӑшӗ ҫапла калани пур: „Шухӑшӑрпа Ăна хӗрес ҫинче курма тӑрӑшса пӑхӑр-ха. Пуҫне уснӑ, Турӑран аякра, хӑрушла пӗчченлӗхре, тӗнчемӗр ҫылӑхне Хӑй чӗрине илнӗскер. Халӗ куратӑр-и ӗнтӗ, тӗнче ҫылӑхне Хӑй ҫине илсе Вӑл калама ҫук пысӑк ӗҫ тунӑ. Анчах Ăна Хӑйне нимӗн те кирлӗ мар, Вӑл, хӗрес ҫинче ҫылӑхлӑ ҫынсен вырӑнне йышӑнса, вӗсенех шанчӑк валеҫсе парать. Унӑн асапӗсене эпир ӑнланма та, ыттисене ӑнлантарса пама та пултараймастпӑр. Анчах, Унӑн вӑйӗпе аслӑлӑхӗ умӗнче, Унӑн „Пулса ҫитрӗ ӗнтӗ!“ тенӗ сӑмахне илтнӗ чухне хамӑр Ăна ҫав тери юратнине, хисепленине уйрӑмах лайӑх сиссе тӑратпӑр.

Анчах та Иисус Христоса хӗнесе, пӑталаса, ҫакса асаплантарни Унӑн чӑн-чӑн асапӗ пулман. Унччен те нумай ҫын вилнӗ. Нумай ҫын асапланса вилнӗ. Иисус Христосӑн хӑрушла асапӗ вӑл Ун ӑшӗнчи сывлӑшӑн

вилӗмӗ пулнӑ. Турӑ Хӑйӗнчен пӑрӑнсан, Хӑйӗн сӑнне пытарсан, тӗпсӗр ҫылӑхӑн тӗпне ҫитнӗ Вӑл, хуйхӑн тарӑнӑшне виҫсе илнӗ. Ҫапла вара чунтан кӑшкӑрса янӑ: „Или, Или! лима самахвани?“ („Эй Турӑҫӑм, Турӑҫӑм! Мӗншӗн Эсӗ Мана пӑрахрӑн-ши?“) тенӗ. Христос ҫак сӑмахсене Хӑй пӗччен тарса юлсан, этемлӗх историйӗн аслӑ самантӗнче каланӑ. Ҫак сӑмахсенчен ҫутӑ ҫутӑлса кайнӑ, ку вӑл пирӗншӗн Христос мӗн чӑтни ҫути, кун шевлийӗ пек ҫутӑ пулнӑ. Ҫапла эпир ӑна шевле пек ҫеҫ йышӑнайратпӑр пулин те вӑл пирӗн куҫӑмӑрсене шартарса ярать. Кембелль каланӑ пек, „пӗр куҫ та ҫак ҫутта тӳсеймен“. Ҫак сӑмахсене Христос, Морган доктор ӑнӑҫлӑ уҫса панӑ пек, „этем хӑй ӑнланма пултарайманни тӗнчере питӗ нумай-ха иккенне пӗлтӗр“ тесе каланӑ.

Христос, ҫылӑх мӗнне пӗлменскер, пире ҫӑлас тесе, Турӑ пире Ун урлӑ тӳрре кӑлартӑр тесе, ҫылӑх пулса тӑнӑ. Вӑл хӗрес ҫинче ҫылӑх пулса тӑнӑ. Ӑна Турӑ пӑрахнӑ. Вӑл ҫылӑха пӗлмен, анчах айӑпа йышӑннӑ, хунӑ асапа тӳснӗ. Ҫапла пирӗн ӑнланӑва шӑнӑҫман пуянлӑх тунӑ. Айӑпшӑн хунӑ асапа тӳсни Уншӑн Хӑйӗншӗн нимӗн чухлӗ те кирлӗ мар, ҫынсен ҫылӑхӗсене хӑй ҫине илсе тунӑ пуянлӑхӗ те кирлӗ мар. Апла кам валли тунӑ-ха Вӑл ӑна?

Ҫак ӗҫ сӗм тӗттӗмлӗхӗн тарӑнӑшӗнче мӗнле пулса иртнине ҫын нихӑҫан та пӗлеймӗ. Эпӗ пӗрне анчах лайӑх пӗлетӗп: Хӑйӗн ӳчӗпе Вӑл ман ҫылӑхӑмсене хӗрес ҫине илнӗ. Вӑл эпӗ тӑрас ҫӗрте тӑнӑ. Мана пӳрнӗ тамӑк асапне Вӑл хӑйне илнӗ. Халӗ эпӗ пӗлӗт ҫине кайса хама тивӗҫлине мар, Ӑна тивӗҫлине илме пултаратӑп. Авалхи Сӑмахра каласа хунисем, пама пулнисем ӗнтӗ пурте вырӑна килнӗ. Священниксен тек ӗнтӗ ҫулталӑкра пӗрре Тасаран Таса пӳлӗме кӗмелле пулман. Вӑл Хӑйне парнене кӳнинче хунӑ чӑн-чӑн асап та, ҫылӑхлисем вырӑнне тӑни те, хута кӗни те, ҫынна Турӑпа килӗштерни те пур. „Этемсе-

не пĕрре анчах вилмелле тунă, унтан вĕсене сут пулать; çавăн пекех Христос та нумайăшин çылăхĕсене Хăй çине илмешкĕн Хăйне Хăй парнене пĕрре кӳнĕ; иккĕмĕш хут Вăл çылăхран тасатма килмĕ, Хăйне кĕтсе тăракансене çăлмашкăн килĕ“ (Евр. 9:27-28).

Халĕ, çăлăнăç никĕсне хывнă хыççăн, çылăхлин мĕн тумалла-ха? Турă Ывăлне ĕненмелле, çавăн чухне тин Вăл Турăпа канăçлăх тупĕ. „Турă тĕнчене пит юратнă: Хăйĕн Пĕртен-пĕр Ывăлне те панă: Ăна ĕненекенсем пĕри те ан пĕтчĕр, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр тенĕ“ (Иоан. 3:16).

Христоса пăталанинче эпĕ виçĕ пĕлтерĕш куратăп: пĕрремĕшĕ, этем çылăхне тĕплĕн кăтартса пани. Христоса пăталанăшăн вăл вăхăтра пурăннă çынсене ан ӳпкелĕр. Эсир те, эпĕ те айăплă куншăн. Хĕрес çумне Ăна Рим салтакĕсем пăталаман, сăлтавĕ сирĕнпе манăн çылăхсенче, тата Вăл çак вилĕме Хăй ирĕкĕпе суйласа илнĕ.

Иккĕмĕшĕ, пăталани мана Туррăн юратăвĕ пурне те ытамласа тăракан пысăк юрату иккенни çинчен калать. Эсир хĕçан та пулин Туррăмăр юратăвĕ пирки иккĕленнĕ пурсан, Голгофăри хĕрес çине нумайччен тимлĕн пăхса тăрăр — Турă юратăвне ун чухне эсир тараннăн ăнланса илме пултарайăр.

Виççĕмĕшĕ, пăталани — çăлăнăçăн пĕртен-пĕр çулĕ. Иисус каланă: „Çул та, чăнлăх та, тĕрĕслĕх те эпĕ; Ман урлă каймасан, Ман Аттем патне никам та пыраймĕ“, тенĕ (Иоан. 14:6).

Хĕрес çинче Христосăн мар, санăн пулмалла — çакна ăнланмасăр çылăхпа тамăкран çăлăнма нимĕнле май та çук. Çăлăнма урăхла май пулнă пулсан, Вăл ăна тупнă пулĕччĕ. Енчен те пурăнăçа лайăхлатни, лайăх, таса пурăнни пире хăтарас пулсан, Иисус Христосăн вилме те кирлĕ пулмастчĕ. Анчах та Унăн пирĕн вырăна йышăн-

маллах пулнӑ. Ҫынсем кун пирки калаҫма юратмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ку вӗсен мӑнаҫлӑхне пырса тивет, вӗсене мӗскӗнлетет.

Нумай ҫын ҫапла калать: „Эпӗ тӗрӗс пурӑнсан, ҫӑлӑнаймастӑп-и?“ Е „Христос хушнисене тытса тӑрсан, Вӑл вӗрентнӗ пек пурӑнсан, ҫӑлӑнаймастӑп-и?“ — тет. Ҫук, эсир Христос вӗрентнӗ пек пурӑнсан та пурпӗрех ҫылӑхлӑ ҫын пулӑттӑр. Темӗнле асӑрханса пурӑнсан та эсир пурпӗрех йӑнӑшнӑ пулӑттӑр, мӗншӗн тесен никам та хӑй пурӑнӑҫне, ҫуралнӑ кунран пуҫласа мӗн виличчен, Иисус Христос вӗрентнӗ пек пурӑнса ирттерме пултарайман. Кашниех мӗнле те пулин йӑнӑшнӑ, закона пӑснӑ, итлемен, ҫылӑха кӗнӗ. Хӑвӑр ҫылӑхӑрсемпе мӗн тунӑ пулӑттӑр эсир? Пӗртен-пӗр ҫул пур — вӗсене хӗрес айне илсе пымалла, унта каҫару тупмалла.

Нумай ҫул каялла Пиллекмӗш Карл король Антверпен купцинчен кивҫен пысӑк укҫа илнӗ. Вексель тӑрӑх тӳлеме вӑхӑт ҫитнӗ, анчах король ҫука юлнӑ та укҫана тавӑрса парайман. Купца король ячӗпе пысӑк ӗҫкӗ-ҫикӗ пухнӑ. Хӑнасем пурте пухӑнса ҫитсен, апат хушшине лариччен, купца хушнипе король умне пӗр тирӗк лартнӑ, унта ҫурта ҫутнӑ. Унтан купца векселе кӗсйинчен кӑларнӑ та ҫурта ҫулӑмӗ ҫинче ӑна кӗл пуличченех тытса тӑнӑ. Король хӑйне ырӑ тӑвакана ыталаса илнӗ, унӑн куҫӗсем савӑнӑҫ куҫҫулӗпе тулнӑ.

Турӑ умӗнче эпир пурте ҫакӑн евӗр парӑмра. Парӑма татма вӑхӑт ҫитнӗ, анчах та эпир тӳлесе татма пултараймастпӑр иккен. Икӗ пин ҫул каялла хӗрес ҫумне пӑталанӑ Христосӑн виличченхи асапӗнче Туррӑмӑр санӑнне те, ман ҫылӑхсене те пӗтернӗ, пирӗн айӑпсен юлашки йӗрӗ юлмиччененех пӗтернӗ.

Библи калать: „Закон тӑрӑх пурте тенӗ пекех юнпа тасалать, юн тӑкмасӑр каҫару пулмасть“, тет (Евр. 9:22).

Мана нумай ҫын: „Мĕнле ирсĕрлĕх! Юнлă вăрçă тĕнне ĕненетĕп тесе ĕнентерме ан та шутлăр!“ — тесе каланă. Теприсем тĕлĕнсе ҫапла калаççĕ: „Ăнланмастăп, мĕншĕн Турă юн ыйтать?“ — теççĕ. „Эпĕ ниепле те ăнланаймастăп, мĕншĕн Христос маншăн вилес тенĕ?“ — теççĕ висçĕмĕшĕсем. Пирĕн вăхăтра Христос юн юхтарнă теекен шухăша кивелнĕ, паянхи кунпа пĕр килмест теççĕ, ҫавăнпа та тĕн вĕрентĕвĕсенче ун ҫинчен каламаççĕ. Анчах та ку шухăш пур, ун ҫинчен Библире каланă. Христианствăн тĕп тымарĕ — ҫавăнта. Христианство уйрăмлăхĕ — Христос юнĕпе парне кӳни. Унсăрăн эпир ҫăлăнас ҫук. Юн вăл — Христос вилĕмĕн символĕ (палли).

Библи Христос пире Хăй юнĕпе каҫарттарчĕ тесе вĕрентет. „Хăвăр пĕлетĕр: аҫăрсенчен юлнă усăсăр пурăнăҫран сире тутăхса пĕтекен ылттăн-кĕмĕлпе хăтарман, пĕр айăпсăр, тап-таса путек пек пулнă Христосăн хаклă юнĕпе хăтарнă“ (1 Петр. 1:18-19). Шуйттан аллинчен кăна мар, Закон аллинчен те хăтарнă пире. Закон ман ҫине айăп хунăччĕ, анчах та Христос пĕтĕм хака тӳлесе татрĕ. Мĕнпур ылттăн-кĕмĕл, ҫĕр ҫинчи мĕнпур хаклă йышши чул хăтараймĕччĕ мана. Вĕсем тăвайманнине Христос вилĕмĕ турĕ. Каҫарттарни „тӳлев“ тенине пĕлтерет. Пире йӳнĕ хакпах шуйттана сутнă пулнă, анчах та Иисус Христос тӳлесе илчĕ, ҫăлăнăҫ пачĕ.

Иккĕмĕшĕ: юн пире Турăпа ҫывăхлатрĕ. „Эсир ĕлĕк аякра тăраттăрччĕ, халĕ, Христос Иисус урлă, Унăн юнĕпе ҫывăх ҫынсем пултăр“ (Ефес. 2:13). Пире Израиль халăхĕнчен сивĕтнĕ хыççăн, сăмах хурса тупа тунине мантарсан, шанчăк пĕтнĕччĕ пирĕн, тĕнчере Турăсăр юлнăччĕ, Иисус Христос пире Турăпа ҫывăхлатрĕ. „Ҫавăнпа ĕнтĕ халĕ ӳтшĕн пурăнассине пăрахса Иисус Христоспа пĕрлешсе Сывлăшпа пурăнакансенĕн нимĕн айăпĕ те ҫук“ (Римл. 8:1). Ҫылăхне каҫарттарнă ҫын пурне те

пултаракан Турӑ умне урӑх нихӑçан та сута тӑмасть. Христосуншӑн сутра пулнӑ ӗнтӗ.

Виççӗмӗшӗ: юн канӑçлӑх тӑвать. „Ашшӗ Хӑйӗн ырӑ кӑмӑлӗпе Унра пур ырӑлӑха та тулли тӑвасшӑн пулнӑ. Унӑн хӗресӗ çинчи юнӗпе, Ун урлӑ килӗшӳ кӳрсе, çӗр çинчисене те, çӳлтисене те, пурне те Хӑйпе килӗштересшӗн пулнӑ“ (Кол. 1:19-20). Çак тӗнче канӑçлӑха Иисус Христоса пӑталанӑ хӗрес умӗнче тупмасан, урӑх ниçта та тупаймӗ. Хӗрес айне пымасӑр, Христос енне ӗненӳпе çавӑрӑнмасӑр эсир Турӑпа тупнӑ канӑçлӑх мӗнне, таса кӑмӑл канӑçлӑхӗ мӗнне, ӑс-тӑн, чун-чӗре канӑçлӑхӗ мӗнне нихӑçан та пӗлеймӗр. Шӑпах çавӑнта ӗнтӗ Турӑпа тупнӑ канӑçлӑх.

Тӑваттӑмӗшӗ: юн тӳрре кӑларать. „Çавӑнпа халӗ эпир, Христос юнӗпе тӳрре тухнӑ хыççӑн çилӗрен Ун урлӑ тата çӑмӑлтарах хӑтӑлӑпӑр“ (Римл. 5:9). Çакӑ Турӑ умӗнчи çынна улӑштарать. Ку вӑл айӑппа ылханураn каçарупа манӑçу енне куçни. Çылӑхне каçарттарнӑ çын тӗрмере ларса тухнӑ, анчах грeждан прависене илеймен çын евӗрлӗ мар. Хӑй айӑпне йышӑннӑ, ӳкӗнекен çылӑхлӑ çын, Иисус Христос юнӗпе каçару тупнӑскер, хӑйӗн пур тивӗçне те илет. „Турӑ суйласа илнисене кам айӑплӗ? Вӗсене Турӑ тӳрре кӑларать. Айӑплаканни кам? Иисус Христос вилнӗ те чӗрӗлсе те тӑнӑ. Вӑл Туррӑн сылтӑм енче: Вӑл пирӗншӗн хута кӗрсе тӑрать“ (Римл. 8:33-34).

Пиллӗкмӗшӗ: юн тасатать. „Вӑл çутӑра тӑнӑ пек, эпир çутӑра çӳретпӗр пулсан, вара пӗр-пӗринпе пӗрлешнӗ пулатпӑр, Унӑн Ывӑлӗ Иисус Христос юнӗ пире вара çылӑхран та тасатса тӑрать пулать“ (1 Иоан. 1:7). Вӑл çылӑхӑн пӗр пайне кӑна мар, мӗнпур çылӑха тасатать. Эсир хӑçан та пулин суйса каланӑ сӑмах, эсир хӑçан те пулин тунӑ киревсӗр ӗç, эсир икӗпитлӗ пулни, сирӗн тӗрлӗрен усал шухӑшӑрсем — вӗсем пурте Иисус Христос вилӗмӗпе тасалнӑ.

Темиçе çул каялла Лондонра пĕр йышăнăва чаплă çынсем нумай пухăннă. Вĕсем хушшинче вăл вăхăтри паллă проповедник Малан та пулнă. Пĕр çамрăк хĕрарăм рояль каласа питĕ илемлĕ юрланă. Пурте савăнса тĕлĕннĕ. Юрă вĕçленсен, проповедник ун патне пынă та ăшă кăмăлпа, анчах хăюллăн çапла каланă: „Кĕçĕр сире итлесе эпĕ акă мĕн шухăшларăм: эсир хăвăр пултарулăхăра Христос ĕçне сарас çĕре ярсан, мĕн пек пысăк ĕç тунă пулăттăр! Пĕлетĕр-и-ха эсир, Турă умĕнче эсир канавра йăваланса выртакан ĕçкĕçĕ, хĕрлĕ хунар айĕнче тăракан аскăн хĕрарăм пекех çылăхлă. Анчах та эпĕ сире савăнсах çакна калатăп: Турă Ывăлĕн, Иисус Христосăн, юнĕ сире мĕнпур çылăхăртан тасатать,“ - тенĕ.

Çамрăк хĕрарăм, çакна илтсен, хаяррăн хирĕçленĕ. „Пикеçĕм, эпĕ сире кӳрентерес теменччĕ. Турра кĕлтăватăп, Унăн Таса Сывлăшĕ сире эп каланине ĕненме пулăштăр“, — тенĕ вара ăна хирĕç проповедник.

Йышăну вĕçленнĕ, пурте килĕсене саланнă. Çамрăк хĕрарăм та çывăрма выртнă, анчах çывăрса каяйман. Ун умĕнче проповедник сăнĕ тăнă, хăлхинче ун сăмахĕсем янăранă. Çур çĕр иртсен иккĕсенче сиксе тăнă та, алла хутпа кăранташ тытса, йĕре-йĕре Шарлотта Эллиот, ăна çапла чĕннĕ, хăйĕн чаплă сăввине çырса хунă. Хамăр сăмахпа каласан, вăл çапларах янăрать:

Эпĕ ыттисемпе танах тăратăп,
Хĕрес çинче юхнă юншăн,
Турă чĕнсе каланă сăмахшăн,
Христос, эп сан патна пыратăп.
Эпĕ те суккăр та чухăн,
Çук чĕремре ырă кăмăл.
Ĕненӳшĕн, курасшăн, каçарушăн,
Христос, эп сан патна пыратăп.

Анчах ку вĕçĕ мар-ха. Аллисенчен, урисенчен, аяккинчен юн юхтарса тăракан Христоса эпир хĕрес çинче хăвармастпăр. Хĕрес çинчен илсе ăна тупăка хунă. Масар шăтăкĕн анине пысăк чул хунă, хурал та тăратнă. Христосăн вĕренекенĕсем шăматкун кунĕпех хуйхăрса ларнă. Вĕсенчен иккĕшĕ Эммауса çул тытнă. Вĕсем пурте хăраса ӳкнĕ пулнă. Мункунăн пĕрремĕш ирĕнче, тул çутăлса килнĕ чухне, Мария Магдалинăпа Саломия Христос ӳтне ырă шăршăллă çусемпе сĕрме масар шăтăкне пынă. Шăтăк пушă иккенне курса вĕсем хытă тĕлĕннĕ. Тупăк çумĕнче Ангел тăнă, вăл çапла ыйтнă: „Кама шыратăр эсир?“ — тенĕ.“ Назаретри Иисуса шыратпăр эпир,“ — тенĕ кусем. Вĕсене вара Ангел этемлĕх нихăçан илтмен тĕлĕнмелле чаплă та савăнăçлă хыпар пĕлтернĕ: „Кунта çук Вăл. Вăл чĕрĕлсе тăчĕ!“ — тенĕ.

Туррăмăрăн пĕтĕм çăлăнăç планĕ шăпах ĕнтĕ çак чаплă та паллă ĕçре тесе шутламалла. Чĕрĕлсе тăмасăр каçарттару пулмастчĕ. Хăй чĕрĕлсе тăрасса Иисус Христос темиçе хут та каланă. Пĕррехинче вăл çапла каланă: „Иона кит ăшĕнче виçĕ кун, виçĕ çĕр тăнă пек Этем Ывăлĕ те çĕр айĕнче виçĕ кун, виçĕ çĕр выртĕ“, — тенĕ. (Матф. 12:40). Хăй каланă пекех, Вăл чĕрĕлсе тăнă!

Историре пулса иртнĕ ĕçсене палăртма ятарлă паллă законсем пур. Çав вăхăтра пуранннă паллă çынсем çырса хăварни кирлĕ. Вилнĕ Иисус Христос чĕрĕлсе тăни çинчен калакан фактсем питĕ нумай, çав вăхăтрах Юлий Цезарь пурăнни, Аслă Александр вăтăр виçĕ çулта вилни çинчен каланисем сахал. Историксенчен тĕлĕнмелле, вĕсем кăшт кăна систерсе каланă пин-пин факта ĕненме хатĕр, Çав хушăрах Иисус Христос чĕрĕлсе тăнине ĕненесшĕн мар, иккĕленсе тăраççĕ. Ку çынсен инкекĕ вĕсем ĕненесшĕн пулманнинче. Вĕсен чунĕсем суккăрланса ларнă, малтан йышăннă шухăша улăштарма пултарайманни-

пе Библире çырса кăтартнă факта, Христос чĕрĕлсе тăнине, йышăнасшăн мар.

Чĕрелсе тăни, чи малтанах, Христос Турă пулнине пĕлтерет. Христос Хăйне Турă тенĕ, чăнах та Турă пулнă Вăл, ӳтленсе çуралнă Турă.

Иккĕмĕшĕнчен: Турă Унăн пире çăлма кирлĕ пулнă хăтару ĕçне йышăннине пĕлтерет. „Иисус Христоса пирĕн çылăхăмăрсемшĕн тытса панă, Вăл пире тӳрре кăларасшăн вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă“ (Римл. 4:25).

Виççĕмĕшĕнчен: ку вăл этемлĕхе тĕрĕс сут пуррине ĕнентерет.

Тăваттăмĕшенчен: ку вăл пирĕн ӳт чĕрĕлсе тăрассине те пĕлтерет. „Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă. Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе тăма пуçласа панă“ (1 Кор. 15:20). Библи пире, христиансене çапла вĕрентет, эпир вилсен пирĕн ӳтсене пытараççĕ. Анчах та вилнисен чĕрĕлсе тăмалли аслă кун вĕсем те чĕрĕлсе тăрĕç. Çĕнтерӳ вилĕме парăнтарĕ ун чухне. Христос чĕрĕлсе тăнине пула вилĕмрен ун сăннине туртса илнĕ, вилĕм уççи Христос аллинче. Вăл каланă: „Эпĕ Малтанхи, Кайранхи, Чĕрри: Эпĕ вилнĕччĕ, акă ĕнтĕ ĕмĕр-ĕмĕрех чĕрĕ, аминь. Тамăкпа вилĕм уççисем Манра“, тенĕ (Апок. 1:17-18). Христос: „Эпĕ чĕрĕ тăратăп, эсир те чĕрĕ тăрăр“, тесе сăмах панă (Иоан. 14:19).

Пиллĕкмĕшĕнчен: ку вăл вилĕме парăнтарнине пĕлтерет. Вилĕм вăйне аркатнă, вилĕмрен хăрасси пĕтнĕ. Псалом юрлаканпа пĕрле эпир халĕ çапла калама пултаратпăр: „Вилĕм тĕттĕмĕ тăракан варпа кайсан та, усалтан хăрамăп эпĕ, мĕншĕн тесен эсĕ манпа пĕрле: Санăн туйю, Санăн патакку — çавсем лăплантараççĕ мана“ (Псал. 22:4).

Христос чĕрĕлсе тăнине пула Павел апостол хăйĕн вилĕмне пысăк савăнăçпа кĕтнĕ. Вăл каланă: „Эпĕ Хри-

стосшăн кăна пурăнатăп, вилни маншăн — ырăлăх“, тенĕ (Фил. 1:21).

Христос чĕрĕлсе тăман пулсан, малашлăха шанма та пулмастчĕ. Библи çапла шантарса калать: кĕтнĕ кун çитĕ, ун чухне эпир чĕрĕлсе тăнă Христоспа куçа-куçан тĕл пулăпăр, пирĕн ӳт Унăн ӳчĕ евĕрлĕ пулĕ.

Мана çăлакан Христоспа куçа-куçăн
Тĕл пулсан, мĕн пулĕ-ши мана?
Унччен вилсе, манăн çĕр пулмалла,
Çылăха путнă тĕнчешĕн эп вилĕп.
Çӳл тӳпере хама çăлакана тĕл пулăп.
Вăл чаплине, аслине çавăн чух эп курăп!

## САККĂРМĚШ СЫПĂК

# МĚНЛЕ ТАТА МĚНРЕН ТЫТĂНМАЛЛА?

„Чăн калатăп сире: эсир улăшăнса ача пек пулмасан, Çӳлти Патшалăха кěреймěр“.
Матф. 18:3

Халě куратпăр ěнтě, несěллěхěмěрте пирěн хамăра аялалла, выльăх шайне, туртакан закон пур, вăл пирěн ăс-тăна суккăрлатать, чуна хаярлатать, кăмăла хуçать, хамăра пулах айăпа юлатпăр эпир.

Турă таса, тěрěс. Вăл çылăха чăтма пултараймасть. Çылăх çынна Турăран уйăрать, çын çине вара Турă çилли çитет. Этем кăмăлěпе те, ăс-тăнěпе те, чунě-чěмěпе те Турра туйми, сисми пулнă, мěншěн тесен вăл Турра çухатнă ěнтě. Турă патне илсе пыракан çула тупмасăр вăл Турăпа пěрле пулаймě.

Турă патне таврăнмалли çул вăл кăмăлтан е ăс-тăнран килекен çул мар. Турă патне выртакан çула эсир хăвăр шухăшласа кăлараймăр, мěншěн тесен этем шухăш-кăмăлě Турă шухăш-кăмăлěпе пěр килмест, мěншěн тесен этем ăс-хакăлě Турра хирěçле илěнет. Турă патне выртакан çула эсир Турра пуççапса та тупаймăр, мěншěн тесен этем, кăмăлě-хавалěпе, Турă умěнче — пăлхавçă. Çав çула эсир шухăш-кăмăлăра лайăхлатса та тупаймăр, мěншěн тесен этем çылăхпа пăсăлнă çын.

Çавăнпа та пирěн умăмăра ирěксěрех ыйту тухса тă-

рать: мĕн тумалла-ха манăн? Мĕнрен тытăнмалла? Мĕн тума пуçламалла? Хăш çулĕ каялла, Турă патне илсе пырĕ-ши? Турă патне пĕр çул анчах илсе пырать — Иисус Христос каланă: „Эсир улăшăнса ача пек пулмасан, Çÿлти Патшалăха кĕреймĕр“, тенĕ (Матф. 18:3). Çапла вара Иисус Христос улăшăнма ыйтнă. Акă мĕнрен тытăнмалла! Акă мĕнле пуçăнмалла! Сирĕн улăшăнмалла, Турă енне çаврăнмалла!

Нумай çын Турă енне çаврăнассине закона пăхăнассипе пăтраштарать. Библире Моисей законне питĕ лайăх ăнлавсемпе çырса панă, унăн тĕллевĕ те паллă. Ăна тĕнче инкекĕсенчен сыватакан тĕлĕнмелле хăватлă эмел вырăнне паман. Тĕнче инкекĕсен диагнозĕ тесен тĕрĕсрех пулать; вăл пирĕн инкексен сăлтавне палăртать, анчах вĕсене сыватмасть. Библи калать: „Эпир пĕлетпĕр: закон мĕн те пулин калать пулсан, хăйне камшăн кăларнă, çавсене калать; çапла вара пур çăвар та хупăнать, Турă умĕнче пĕтĕм тĕнче айăплă пулать“, тет (Римл. 3:19). Закон этем тÿрĕ маррине тăрă шыв çине кăларнă, Библи калать: „Закон хушнине туса, ниепле çын та Турă умĕнче тÿрре тухаймĕ: закон вăл çылăха кăна палăртать“, тет (Римл. 3:20). Закон вăл пирĕн кăмăл-сипет мĕнлине кăтартакан куçкĕски. Вăл хурлать, анчах çĕнетмест. Вăл ыйтать, анчах улăштармасть. Вăл пÿрнепе тĕллесе кăтартать, анчах унăн хĕрхенÿ çук. Законра пурăнăç çук. Унра вилĕм кăна, мĕншĕн тесен закон: „Санăн вилмелле“, — тесе калать.

Нумай çын Христос Сăрт çинче каласа вĕрентнине хăйĕн тĕнĕ тесе шутлать, анчах та Сăрт çинче каласа вĕрентни тăрăх пурăнакан çын çуралман-ха. Библи калать: „Пурте çылăха кĕнĕ, пурте Турă мухтавне çухатнă“, тет (Римл. 3:23).

Хăвăра хăвăр эпĕ пĕр айăпсăр, мана улăшăнма кирлĕ

мар тесе ӗнентериччен малтан лайӑх тӗрӗслесе пӑхӑр. Хӑвӑр чӗрӗре усса пӑхӑр, тӳрӗ кӑмӑлпа тарӑннӑн тишкерӗр хӑвӑра, тӗне тытса пыма тытӑнни ыттисемшӗн лайӑх, анчах мана унран ним усси те пулас ҫук тесе ан калӑр.

Эпӗ Голливудра Турӑ ҫинчен вӗрентнӗ чухне артистсен пӗр ушкӑнӗ манпа тӗн пирки калаҫма кӑмӑл турӗ. Ман сӑмаха итленӗ хыҫҫӑн калаҫу пуҫланчӗ. Итлекенсен чи пӗрремӗш ыйтӑвӗ ҫакӑ пулчӗ: „Мӗн вӑл Турӑ енне ҫавӑрӑнни?“ терӗҫ вӗсем.

Кӑштах вӑхӑт иртсен, манӑн Вашингтонра политика деятелӗсен ушкӑнӗпе калаҫма тӳр килчӗ. Тавлашу пуҫлансан, пӗрремӗш ыйту каллех ҫакӑ пулчӗ: „Мӗн вӑл Турӑ енне ҫавӑрӑнни?“

Тӗнӗн ытти ыйтӑвӗсемпе танлаштарсан, ку ыйтӑва ӑнлантарса памалли нумайрах та-и, тен. Мӗн вӑл Турӑ енне ҫавӑрӑнни? Унта мӗн-мӗн кӗрет? Вӑл мӗнлерех пулса пырать? Кайран мӗн пулать? Мӗншӗн Ҫӳлти Патшалӑха кӗрес тесен, сирӗн улӑшӑнса ача пек пулмалла?

Пирӗн обществӑра Турӑ енне ҫавӑрӑннинчен ним тӗлӗнмелли те ҫук. Кашни лайӑх купца ҫакна аван пӗлет: тавар туянма пынӑ кашни ҫыннах унӑн хӑй сутас текен таварне кӑтартмалла. Рекламӑпа ӗҫлекен те пӗлет: унӑн тавар туянакансене шӑпах ҫак сортне, теприне мар, туянма сӗнмелле. Политика деятелӗсем те малтанхи шухӑшӗсене манса, тепӗр политика вӗрентӗвӗ еннелле ҫавӑрӑнса ӳкеҫҫӗ. Юлашки вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче мирлӗ промышленность предприятийӗсем вӑрҫӑ хатӗрӗсем кӑларма, кӑмакисене нефтьпе хутакан нумай ҫуртсем ҫӗр кӑмрӑкӗпе хутма тытӑннине те пӗлетпӗр эпир.

Улӑшӑну сӑмах мӗне пӗлтерет-ха? Ҫавӑрӑннине, шухӑш-кӑмӑла улӑштарнине, „каялла ҫавӑрӑннине“ е „каялла тавӑрӑннине“. Тӗнре вара ӑна ҫак сӑмахсемпе ӑнлан-

тарма пулать: „ӳкӗнни“, „ҫӗнелсе вӑй илни“, „хӗрхенни“, „ӗненсе хумханни“, „шанчӑк тупни“.

Ман пата, чи пӗрремӗш пухусенех, пӗр ӗҫкӗҫӗ пынӑччӗ. Вӑл мана ҫапла каларӗ: „Мистер Г., эсир тӗрӗс сӑмах пур тенине итлесе иккӗленетӗп эпӗ. Анчах та эпӗ сирӗн Христосӑра хам сӑнаса пӑхӑп. Енчен те Вӑл кӑшт та пулин эсир каланӑ пек тӑвать пулсан, эпӗ сирӗн патӑра пыратӑп та ӗмӗрлӗхех Ӑна хам пурӑнӑҫа пама хатӗрри ҫинчен пӗлтеретӗп“.

Темиҫе эрнерен вӑл мана акӑ мӗн каласа пачӗ: вӑл хӑйне хӑй ӑнланма та пӑрахнӑ иккен, ӗҫме тытӑнсан кашнинчех хӑйне такам чарнине асӑрханӑ. Христос ҫак ҫынна хӑйӗн киревсӗр хӑнӑхӑвне ҫӗнтерме пулӑшнӑ. Вӑл ҫемйине таврӑннӑ, халӗ Христосшӑн пурӑнать. Урӑхла каласан, ҫак ҫын хӑй пурӑнӑҫне тепӗр май ҫаврӑнса янӑ, вӑл хӑй ҫулне улӑштарнӑ — улӑшӑнса ача пек пулнӑ!

Улӑшӑнасси тӗрлӗрен пулать. Ку вӑл ҫыннинчен хӑйӗнчен нумай килет, унӑн хӗрӳлӗхӗнчен, чунӗнчи килӗшӳлӗхӗнчен, вӑл ӑҫта, камсемпе юнашар пурӑннинчен, пурӑнӑҫне мӗнле йӗркеленинчен килет. Пурӑнӑҫра пӗрпӗр пысӑк инкек пулса ӑна чӑтса ирттернӗ хыҫҫӑн ҫын улӑшӑнма пултарать; е малтан питӗ хаклӑ пек туйӑннӑ ҫынсем е япаласем хакне ҫухатсан, е кӑмӑл сивӗнсен, шанчӑк пӗтсен е ҫын хӑйӗн пӗтӗм пурлӑхне, е ҫывӑх ҫыннине ҫухатсан. Калӑпӑр, хӗрарӑм е арҫын хӑйсен ӗҫӗнче е обществӑлла вырӑнта услам тума теллев тытнӑ е вӗсем хӑйсен мӗнпур юратӑвне пӗр ҫынна панӑ. Пӗр самантра пурӑнӑҫ тепӗр майлӑ ҫаврӑнса ларать. Халӗ ӗнтӗ нимӗн те ҫук, пурӑнӑҫ тӗллевӗ те ҫук.

Ҫакӑн пек синкерлӗ самантсенче, вӑл хӑйӗн тӗнчери вырӑнне ҫухатнӑ чухне, е юратнӑ ҫынӗ унран ӗмӗрлӗхех уйӑрӑлса кайнӑ чухне, ҫын хӑйӗн хӑрушла пӗчченлӗхне чун-чӗрипе туйса илет. Ҫакӑн пек самантра, Таса Сыв-

лăш пулăшнипе, пурăнăçра пĕрремĕш хут унăн куçĕ уçăлать. Халь тин ăнланать вăл: вăй парса тăракан пĕртен-пĕр çăлкуç вăл — Турă, юратупа тĕрек паракан нихăçан типмен пĕртен-пĕр çăлкуç.

Тепĕр чухне улăшăнасси лайăх пурăннă çĕртенех пулать — ĕçсем ăнса пыраççĕ, пур çĕрте те Турă пулăшса пырать. Шăпах çакă, сирĕнпе Турă ырă пулни сире эсир Турă умĕнче парăмлине туйса илме пулăшать; çапла вара Турă пулăшăвĕ сире ӳкĕнӳ патне илсе пырать.

Çакăн пек самантра улăшăнни ăнсăртран тата питĕ йывăррăн пулса иртет. Куна йывăçран е чултан касса кăларнă йĕрĕхе пуççапса пурăннă суя тĕнлĕ çын Иисус Христоса ĕненме пуçланипе танлаштарма пулать.

Кашни улăшăнăвах сасартăк, чун-чĕрене чĕртсе те çунтатса, пулса иртмест, хăш-пĕр чухне çын хăйпе хăй чылай хушă тата йывăррăн хирĕçет. Нумай çын пĕчĕккĕн улăшăнса пырать, хăйĕн хуйхи-суйхине, инкекне манса, Турăра çăлăнăç пуррине туйса илет. Кун пек çын Христоса хăйне çăлăнăç паракан тесе йышăнать, малашне хăй пурăнăçне Турă хушнă пек йĕркелесе пырать.

Апла пулсан, эпир çапла калама пултаратпăр: улăшăнасси е сасартăк пулса иртет, çав вăхăтра çын Турă ырăлăхне туйса илет; е вăраххăн аталанать, çав хушăра çын çутăпа тĕттĕме, вилĕме ĕмĕрлĕх пурăнăçран уйăрса тăракан йĕр урлă ярса пусать.

Анчах пурин те шăпах кунта каланă пек пулса иртет теме те çук. Ман мăшăрăм, сăмахран, хăй хăçан, хăш кун, хăш сехетре христианка пулса тăнине аса илеймест, анчах та вăл хăй пурăнăçĕнче çавăн пек самант пулнине, хăй çав йĕр урлă каçнине шантарать. Çамрăк çынсем нумайăшĕ, хăйсем христиансен çемйисенче ӳссе çитĕннĕ пулсан та, хăйсен пурăнăçне хăçан Христоса панине калама пултараймаççĕ... Теприсем вара хăйсем Христос тĕнне тытма

пуçланине уçӑмлӑн астӑваççӗ. Çӗнӗ Сӑмахра çырса кӑтартнӑ тӗслӗхсем пурте тенӗ пекех сасартӑк тата татӑклӑ тунӑ улӑшӑнусем.

Нумай çулсем хушши улӑшӑннине тата тӗн опытне психологи енчен тӗпчемен пулнӑ; юлашки çирӗм пилӗк çул хушшинче вара психологсем улӑшӑну мӗнле пулса пынине тӗпчесех тӑраççӗ. Вӗсем каланӑ тӑрӑх, улӑшӑнни вӑл христиан тӳссе иртгерни çеç мар, ун пекки ытти тӗнсенче те пулма пултарать, унсӑр пуçне ӑна тӗнре кӑна тӗл пулакан япала теме те çук. Психолог-тӗпчевçӗсем улӑшӑну виçӗ тапхӑрпа пулса иртет теççӗ: пӗрремӗшӗ — чун пӑлханнине тата хӑй вӑйне шансах кайманнине сисни; иккӗмӗшӗ — пӗчӗккӗн аталанса пырса çул юппине çитни; виççӗмӗшӗ — хӑйне çӑмӑллӑн туйни, лӑпкӑлӑхпа савӑнӑç туйӑмӗ.

Старбек шухӑшӗпе, улӑшӑну икӗ тӗрлӗ пулать. Пӗрремӗшӗ — çын хӑй çылӑхлине аван пӗлнипе, иккӗмӗшӗ — кӑмӑл тулманнипе, таса пурӑнӑçшӑн кӗрешнипе, тӗн çинчен ытларах пӗлес тенипе.

Психологсен тӗпчевӗсене çителӗклӗ таран хак паманха. Эпир вӗсенчен пӑрӑнса иртме те, вӗсене курмасӑр тӑма та пултараймастпӑр. Вӗсем чылай япалана уçса параççӗ, анчах та психологсенчен хӑшӗ-пӗри кӑна çак улӑшӑнӑва хӑват курнӑ чухнехи пек тӳссе иртгерни тет.

Пурӑнӑçра вара библилле улӑшӑну виçӗ тапхӑртан тӑрать — вӗсенчен иккӗшӗ активлӑ, виççӗмӗшӗ — пассивлӑ. Активлӑ улӑшӑнӑва çылӑха йышӑнни, ӳкӗнни, тата шанчӑк кӗрет. Çылӑха йышӑнни вӑл улӑшӑну пуçламӑшӗ, малтанхи пурӑнӑçа çавӑрса ямалли тӗрев. Шанчӑк улӑшӑну пынине кӑтартать, ку вӑл Турӑ енне çавӑрӑнни. Виççӗмӗш, пассивлӑ, тапхӑрне вара улӑшӑнса çӗнелни, чӗрӗлсе аталанма пуçлани теме пулать.

Çӳлти Патшалӑха кӗме сирӗн улӑшӑнса çӗнелмелле, тенӗ Христос. Куна эпӗ мар, куна Иисус Христос ка-

лать! Ку вӑл этем шухӑшĕ мар, ку вӑл Туррӑмӑр шухӑшĕ! Иисус Христос каланӑ: „Эсир улӑшӑнса ача пек пулмасан, Çӳлти Патшалӑха кĕреймĕр“, тенĕ (Матф. 18:3).

Чӑн-чӑн улӑшӑну вӑл пĕтĕм ӑс-тӑна, пĕтĕм туйӑма, пĕтĕм кӑмӑла ярса илет. Пин-пин çынна ӑс-тӑн енчен Турӑ еннелле çавӑрнӑ. Вĕсем пĕтĕм Библие ĕненеççĕ. Вĕсем Христос çинчен çырнине те пĕтĕмпех ĕненеççĕ, анчах та вĕсене тĕрĕссипе улӑшӑнса çĕнелнĕ теме çук.

Иоанн çырнӑ Евангелин иккĕмĕш сыпӑкĕнче Иисус Христос вĕрентме пуçласанах Ун хыççăн кайнӑ çĕр-çĕр çын çинчен çырса кӑтартни пур. Унта каланӑ тӑрӑх, нумайӑшĕ Ана ĕненнĕ, анчах та Иисус Христос хӑйне вĕсене шанса паман, мĕншĕн тесен этем чĕрисене пĕлнĕ Вӑл. Мĕншĕн шанман-ха Вӑл çынсене? Вĕсем Ана чĕрисемпе мар, ӑс-тӑнпа ĕненнине пĕлнӑ Вӑл.

Ӑс-тӑн улшӑнӑвĕпе чуна çăлакан тулли улӑшӑну хушшинче пысӑк уйӑрӑмлӑх пур. Сирĕн шухӑшлав та тĕпрен улӑшӑнмалла, Христоса йышӑнасси те ӑнлануллӑ пулмалла.

Нумай çын хӑй чунтан тӳссе ирттернине улӑшӑнса çĕнелни вырӑнне хурать, анчах та чӑннипе ку Христоса йышӑнни мар-ха. Иисус Христос сире хӑвӑр пурӑнӑçăра тĕпренех улӑштарма хушать. Сирĕн пурӑнӑçăр çак сӑнавпа пĕр килменни вара иккĕлентерет. Эсир Христос патне пынӑ чухне сирĕн туйӑм улӑшӑнмалла, мĕншĕн тесен вĕсем юратупа тата курайманлӑхпа çыхӑннӑ: эсир çылӑха курайми пулатӑр, тĕрĕслĕхе юратма пуçлатӑр. Сирĕн кашни туйӑм тĕпрен улӑшӑнать. Христоса чун-чĕререн парӑнма тытӑнатӑр. Эсир Ана мĕнле юратнине çырса кӑтартма та пулмасть.

Анчах та эсир Христоса ӑс-тӑнпа тата туйӑмпа кӑна йышӑнатӑр пулсан, ку çителĕксĕр-ха. Вĕсемсĕр пуçне тата кӑмӑл улӑшӑнса çĕнелмелле! Христоса парӑнса Ун хыççăн пыма хӑюллӑ та татӑклӑ йышӑну кирлĕ.

Сирӗн кӑмӑлӑр, сирӗн ирӗкӗр Турӑ ирӗкӗ умӗнче пусҫне тайтӑр. Хӑвӑрӑн „эпӗ“ тенине хӗрес ҫумне пӑталаса лартмалла. Сирӗн мӗнпур тӗллевӗр те Ӑна юрама тӑрӑшни кӑна пултӑр.

Улӑшӑннӑ вӑхӑтра эсир хӗрес айӗнче тӑратӑр пулсан, Святой Сывлӑш сире хӑвӑр ҫылӑхӑра туйса илме пулӑшать. Сирӗн ӗненӗвӗре Вӑл сирӗншӗн вилнӗ Христос ҫинелле ярать, ҫавӑнпа та сирӗн хӑвӑр чӗрӗре Ӑна уҫса памаллах, ан тив, кӗтӗр Вӑл унта. Шӑпах ҫак самантра Святой Ҫывлӑш ҫӗнӗ ҫын ҫуралнин хӑватне тӑвать. Эсир хӑвӑр чӑн та ҫӗнӗ кӑмӑл-хаваллӑ чун пулса тӑратӑр. Сирӗн ӑша Турӑ кӗрет, эсир вара Турӑ пурӑнӑҫӗпе пурӑнма пуҫлатӑр. Святой Сывлӑш Иисус Христоса сирӗн чӗрӗре кӳртсе вырӑнаҫтарать.

Улӑшӑну ҫав тери ансат пулса иртет, ҫавӑнпа та пӗчӗк ача та улӑшӑнма пултарать. Ҫав хушӑрах унӑн пӗлтерӗшӗ калама ҫук пысӑк, историре Турӑ пире панӑ ҫӑлӑнӑҫ ҫулӗ ҫав тери ансат, „Ку ҫулпа пыракансем, хӑнӑхусӑррисем те, аташса каймӗҫ“ (Исаия 35:8). Ҫӳлти Патшалӑха кӗме никамшӑн та алӑк хупӑ мар, мӗншӗн тесен этемӗн ҫав ҫула ӑнланни пулман. Пуян-и, ӑслӑ-и, чухӑн-и е ӑслах мар — пурте Турӑ енне ҫавӑрӑнма пултарать.

Кӗскен каласан, ҫавӑрӑнни вӑл „улӑшӑну“. Ҫын улӑшӑнсан, вӑл малтан юратнине халӗ те юратма пултарать, анчах та мӗншӗн юратнин сӑлтавӗ улӑшӑнать. Улӑшӑннӑ ҫын халӗ ӗнтӗ малтанхи юратӑвӗн япалисене йышӑнмасан та пултарать. Вӑл малтанхи юлташӗсенчен сивӗнме пултарать, вӗсене юратманшӑн мар, ҫав ҫынсем — тивӗҫлӗ ҫынсемех, мӗншӗн тесен халӗ унӑн тӗне ӗненекен ҫынсем хушшинче, хӑйне ӑнланакан, хӑйӗн пек шухӑшлакан ҫынсем хушшинче пулас килет.

Улӑшӑннӑ ҫын малтан курайманнине юратма пуҫлать, е малтан юратнине курайми пулать. Ун чӗринче Турра йы-

шăнасси те улăшăнать. Малтан вăл Турă çине çăмăлттайла пăхнă, вĕçĕмсĕр хăраса пурăннă, Турăран шикленнĕ, Ăна курайман пулсан, халĕ вара вăл пачах урăхла, Турра юрататать, Ăна шанать, Ăна итлет, Ăна парăнать. Халĕ вăл Турра хисеплесе Унран хăрать, Ăна ялан тав тăвать, хăйĕн пурăнăçĕ Турăран килнине ăнланать, Ăна çĕнĕрен парăнма тытăнать. Улăшăнса çĕнелличчен этем ахаль çын пурăнăçĕпе пурăнать. Кун пек çын тĕллевĕ — вăхăта савăнăçлăрах ирттересси, укçа ытларах ĕçлесе илесси тата ытти çавнашкалли. Улăшăнса çĕнелнĕ хыççăн чăн малти вырăна тĕрĕслĕхпе чĕре тасалăхĕ тухать, чи кирли уншăн христиан пурăнăçĕпе пурăнни, мĕншĕн тесен Христоса юрама тăрăшни пĕртен-пĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕмĕт пулса тăрать. Урăхла каласан, уйрăм çын пурăнăçĕ тĕпрен çĕнелсе улăшăнать.

Ман куç умне пĕр çамрăк хĕр тухса тăрать, вăл Нью-Йоркра ĕçленĕ, Лос Анжелеса качча тухма килнĕччĕ. Пĕр çамрăк çынпа вăл Нью-Йоркра реклама предприятийĕнче пĕрле ĕçленĕ çĕрте паллашнă, ăна юратса пăрахнă. Каçсерен вĕсем клубсенче савăннă. Çак хĕрĕн каччи, хăйне ытлашшипех юратаканскер, ĕç картлашкипе çӳлелле хăвăртрах хăпарас тесе, çав предприятийĕн Калифорнири уйрăмне ĕçлеме куçать. Хĕрĕпе тепĕр çур çултан тĕл пулса пĕрлешме калаçса татăлаççĕ.

Лос Анжелеса килсен, хĕр хăйĕн каччи кинофильмсенче ӳкерĕнекен актрисăна юратса пăрахнине пĕлет, çамрăк çын çакăн çинчен хĕрне Нью-Йоркра чухне калаçа пама хăюлăх çитереймен.

Халĕ ака вăл ют хулара, унăн кунта пĕр паллана çын та çук, пĕтĕм ĕмĕчĕ путланнă, ăна хытă кӳрентернĕ, малашлăх пушă та тĕксĕм. Вăл тĕне тытакан çемьере ӳсмен, çавăнпа та çак инкекре кампа калаçса чуна уçмаллине, камран канаш ыйтмаллине те пĕлмен.

Палламан урамсем тăрăх утса хуйхине, хăйне мăшкăл

тунине манма тӑрӑшнӑ вӑл. Утсан-утсан, чатӑр карса тунӑ чиркӳ патне ҫитсе тухнӑ. Ҫав вӑхӑтра эпӗ шӑпах унтаччӗ. Кайран вӑл пире каласа пачӗ: кӗме те иккӗленсе тӑнӑ иккен вӑл, анчах кӗнӗ, ҫурма тӗттӗм ҫӗрте кӗлӗ тунине итлесе ларнӑ. Тепӗр каҫхине те кунта килнӗ вӑл, кайран эрнипех вӑхӑтне чиркӳре ирттернӗ. Кунта унӑн хуйхи-суйхи сирӗлнӗ, кунта вӑл Турӑ сӑмахне тимленӗ. Турӑран хӗр хӑйне ҫӑлӑнӑҫ пама ыйтнӑ.

Иисус Христоса ӗненме пуҫласа, малтан Турра хирӗҫленипе пулнӑ айӑпа каҫарттарнӑ вӑл, хӑй ҫухатнӑ юратӑвӗ аслӑ та пуян юрату патне тунӑ пӗрремӗш пусӑм кӑна пулнине лайӑх ӑнланса илнӗ вӑл халӗ. Кӳренӳ туйӑмӗ, каялла Нью-Йорка, малтанхи ӗҫне, тавӑрӑнма чарса тӑраканскер, сӗвӗрӗлнӗ, пурӑнӑҫ пӗтрӗ тесе каламан вӑл халӗ, Нью-Йорка тавӑрӑнсан, унӑн пурӑнӑҫӗн пӗлтерӗшӗ тата та пысӑкланнӑ. Халӗ вӑл хӑйӗн ӑсне, пуҫарулӑхне малтанхи пек вӗҫӗ-хӗррисӗр савӑнӑҫ шырас ҫӗре яман, халӗ вӑл Турӑшӑн ҫав тери пысӑк хастарлӑхпа ӗҫленӗ. Хӑйӗн мӗнпур шухӑш хӑвачӗпе вӑл малтан хӑйӗн чапне ӳстернӗ пулсан, халӗ ҫамрӑксене хавхалансах Библи калавӗсемпе паллаштарнӑ. Хӑй ӗҫӗнче укҫа-тенкӗ тупас енӗпе те пуҫарулләскер, вӑл кунта та Турӑ ӗҫне пулӑшма май тупнӑ. Ун чиркӗвӗнчи пуп каланӑ тӑрӑх, хӗр ӑна ҫав тери кирлӗ сӗнӳсем панӑ, вӗсене пула кӗлле ҫӳрекенсен йышӗ чылай ӳснӗ. Халӗ ӗнтӗ вӑл хӑйне пӑрахнӑ, никама та кирлӗ мар ҫын тесе калаймасть, мӗншӗн тесен хӑй чиркӗвӗнче вӗҫӗмсӗрех кама та пулин кирлӗ вӑл. Чи кирли вара пӗчченлӗх туйӑмӗ сӗвӗрӗлни, мӗншӗн тесен Иисус Христос ялан хӑйпе юнашаррине, ӑна лӑплантарма, ертсе кайма, хӳтӗлеме ялан хатӗррине пӗлет вӑл.

Ҫакӑ пӗтӗмпех вӑл улӑшӑнса ҫӗнелпине пулнӑ, вӑл хӑйне ҫав тери телейсӗр туйнӑ пушӑ та кичем ҫулран пӑрӑннӑ та хӑйне ҫӑлӑнӑҫ кӳрекен Иисус Христос енне ҫавӑрӑннӑ. Вӑл Турӑпа канӑҫлӑх тупнӑ.

## ТӐХХӐРМӖШ СЫПӐК

# Ӳ́КӖНӲ́

„Калатӑп сире: пӗлӗт ҫинче те ҫапла пулӗ: пӗр ҫылӑхлӑ ҫын ӳкӗнсен, уншӑн ҫылӑхран ӳкӗнмелле мар тӑхӑрвунӑ тӑхӑр сӑваплӑ ҫыншӑн савӑннинчен ытларах савӑнӗҫ".

Лук. 15:7

Эпир куратпӑр, Иисус Христос улӑшӑнса ҫӗнелме хушать. Улӑшӑннин виҫӗ картлашки ҫинче — ӳкӗнӳ, шанчӑк, ҫӗнелсе ҫӗкленни. Мӗн хыҫҫӑн мӗн пырасси пирки тавлашма та, виҫҫӗшӗ те пӗр вӑхӑтра пулса иртеҫҫӗ тенипе те килӗшме пулать. Пӗлсе тӑрсах пулать-и ҫакӑ е ҫук-и, анчах та улӑшӑну самантӗнче ҫак виҫӗ сыпӑкӗ те пӗр вӑхӑтрах пулаҫҫӗ.

Ӳкӗнӳ сӑмаха урӑхла эпӗ пӑрахӑҫлани тенӗ пулӑттӑм. „Мӗне пӑрахӑҫлани?" — тесе ыйтӑр эсир. Куна хирӗҫ те пӗр сӑмахпа калама пулать: „ҫылӑха". Библи вӗрентет: эпир ҫакна куртӑмӑр ӗнтӗ, ҫылӑх вӑл закона пӑсни пулать. Ҫылӑх вӑл хисепленӗ ҫын ҫуккине, Турӑ умӗнчи пур тивӗҫе те пӑрахӑҫланине пӑлтерет. Ҫылӑх вӑл усал йӑла. Рай пахчинче Адампа Ева астарни хыҫҫӑн кайса ҫылӑха кӗнӗ. Райра ҫапла ҫылӑха кӗнӗ хыҫҫӑн усал наркӑмӑшӗ пур ҫынна та аскӑнлӑхпа пӑснӑ, пурте ҫылӑха кӗнӗ, ҫылӑхсӑр халӗ пӗр ҫын та ҫук. Ҫылӑха пула пирӗнпе Турӑ хушшинчи ҫыхӑну ҫухалчӗ, пирӗн пӗр-пӗрин хушшинчи ҫыхӑнусене пӑснӑ, унсӑр пуҫне ҫын хӑйпе килӗшӳлӗхе ҫухатнӑ.

Пирӗн ҫылӑх йӑлине хирӗҫлемелле кӑна мар, мӗнпур

çылăха пăрахăç тумалла. Пирĕн тĕнчене, этем пурăнăçне, шуйттана йышăнмалла мар. Кунта нимĕнле сăлтав та, суту-илӳ те, çураçу та, иккĕленӳ те пулма пултараймасть. Христос пĕтĕмпех пăрахăçлама хушать. Çакна тумасăр эпир Турăпа канăçлăх, пĕр-пĕринпе тата хамăрпа хамăр килĕшӳлĕх тупаяс çук.

Кунта юрату принципĕ пуррине палăртмалла, енчен те эсир Иисус Христоса пĕтĕм чун-чĕрепе юратма пуçласан, сирĕн хăвăрăнах Вăл йышăнман япаласене тăвас килмĕ, Эсир енчен те Ăна ĕненме пуçласан, хăвăр пурăнăçăрти мĕнпур çылăхсене йышăнми пулатăр. Çавăнпа та ӳкĕнӳпе Турра ĕненни яланах алла-аллăн пыраççĕ. Ĕненӳсĕр чăн-чăн ӳкĕнӳ пулмасть, ӳкĕнӳсĕр çăлăнăç паракан ĕненӳ пулмасть.

„Ӳкĕнӳ" сăмах, шел пулин те, пирĕн вăхăтра чиркӳ кафедрисем çинчен илтĕнсех каймасть. Çак сăмаха халăх ăнлансах каймасть. Анчах та Иисус Христосăн „пĕрремĕн вĕрентĕвĕ çапла пулнă: „Ӳкĕнĕр, Çӳлти Патшалăх çывăхарчĕ ĕнтĕ" (Матф. 4:17). Çапла пĕлтернĕ Атте Турă Хăйĕн Ывăлĕ урлă. Иисус Христос пирĕн пата Хăйĕн чĕринче юратупа хĕрхенӳ илсе килнĕ, анчах та Вăл Тӳрех айăп тата çылăх пирки аса илтернĕ. Çынсене Вăл хăйсен айăпне йышăнса Турра ĕненменлĕхрен пăрăнма чĕнсе каланă. Çынсен малтан ӳкĕнмелле, тенĕ Вăл, кайран тин Вăл Хăй юратăвне, хĕрхенĕвне, каçарăвне çынсем çине ярĕ. Иисус Христос тĕрĕсмарлăха хӳтĕлеме килĕшмен. Вăл Хăйне хунă айăпа йышăнма, çылăхран пачах тепĕр енне çаврăнма хистесе каланă. Хăй Турă юратăвне пĕлтеричче çынсене пачах урăхла, çĕнĕлле пурăнма хистесе каланă.

Пĕррехинче Иисус Христос патне çынсем пынă та Ăна Галилея çыннисем çинчен каласа панă. Рим легионĕсем Иудейăри пăлхава пусарнă чухне Пилат вĕсенĕн

юнне хӑйсенӗн парнисемпе хутӑштарнӑ тесе каласа кӑтартнӑ. Вӗсем Ӑна Силоам пашни ҫинчен те, унта нумай ҫын пӗтни ҫинчен те каланӑ. Ҫавна хирӗҫ Иисус вӗсене каланӑ: „Ҫав Галилея ҫыннисем ҫапла асапланса вилнӗрен, вӗсем Галилейӑри ытти ҫынсенчен пуринчен те ҫылӑхлӑрах пулнӑ пулӗ тесе шухӑшлатӑр-и эсир? Калатӑп сире: ҫук; ӳкӗнмесен, пурсӑр та ҫаплах пӗтӗр" (Лука 13:2-3). Урӑхла каласан, Иисус Христос каланӑ тӑрӑх, ҫын хуть те мӗнле вилӗмпе вилсен те: вӗлернӗ-и ӑна, е вӑл инкеке лексе вилнӗ, е хӑй вилӗмӗпе вилнӗ, — вӗсем Турӑ умӗнче ӳкӗнмен пулсен, шӑпи пурин те пӗрре. Ку вӑл Турӑ юратӑвне чакармасть, анчах та ӳкӗнӳ Турӑ ырӑлӑхӗ патне ҫул уҫса парать.

Ҫӑлӑнӑҫ Турӑ ырӑлӑхӗ ҫинче никӗсленсе тӑнине пӗлетпӗр ӗнтӗ. Парнесем, йӑла-йӗркесем, ырӑ ӗҫсем нихӑҫан та пӗр чуна та хӑтарма пултарайман. Библи калать: пӗр ҫын та закон тӑрӑх Турӑ умӗнче айӑпне каҫарттараймасть, тет. Библи: „Тӳрӗ ҫын ӗненнипе чӗрӗ пулӗ", тесе вӗрентет (Римл. 1:17). Ҫӑлни, каҫарни, тӳрре кӑларни — ҫынсен ҫылӑхне каҫарттарас тесе Иисус Христос Хӑй парне пулса тӑни ҫинче никӗсленеҫҫӗ. Хӗрес ҫинчи Христос кашни уйрӑм ҫыншӑн кӳнӗ парне пултӑр тесен, ҫылӑхӗсене йышӑнса ӳкӗнмелле, Христос тӗнне йышӑнмалла.

Иона пророк, Турӑ хушнипе, Ниневия хулинче ҫынсене ӳкӗнме каласа тухнӑ. Ниневия ӳкӗннӗ.

Иезекииль пророк ӳкӗнме вӗрентсе ҫапла каланӑ: „Эй, Израиль ҫурчӗ, Эпӗ сире кашнин ҫулне кура сут тӑвӑп, тет Турӑ; ҫавӑнпа ӗнтӗ ӳкӗнӗр, усал ӗҫӗрсене пӑрахӑр, йӗркесӗрлӗх сире такӑнтарса пымалла ан пултӑр", тенӗ (Иезек. 18:30).

Шыва Кӳртекен Иоана хушнӑ аслӑ ӗҫ вӑл ӳкӗнме вӗрентесси пулнӑ, вӑл каланӑ: „Ӳкӗнӗр, Ҫӳлти Патшалӑх ҫывӑхарчӗ ӗнтӗ", тенӗ (Матф. 3:2).

Ҫӗнӗ Сӑмахра „ӳкӗнӳ“ тесе калани ҫитмӗл хут тӗл пулать. Иисус Христос каланӑ: „Ӳкӗнмесен, пурсӑр та ҫаплах пӗтӗр“, тенӗ (Лук. 13:3). Аллӑмӗш кунхи праҫник кунӗ Петр апостол халӑха ҫапла вӗрентсе каланӑ: „Ӳкӗнӗр, ҫылӑхӑрсене каҫармашкӑн эсир пурсӑр та Иисус Христос ячӗпе тӗне кӗрӗр“, тенӗ (Ап. Ӗҫ. 2:38). Павел апостол та ҫавнах вӗрентнӗ: „Турӑ умӗнче ҫылӑхран ӳкӗнмелле“, тенӗ (Ап. Ӗҫ. 20:21). Библи пире Турӑ ӳкӗнме вӗрентни ҫинчен калать: „Турӑ халӗ пур ҫӗрте те, пурне те ӳкӗнме хушать“ (Ап. Ӗҫ. 17:30). Ку вӑл хушу. Ку вӑл татӑклӑн хушу пани. Турӑ калать: „Ӳкӗнӗр е пӗтетӗр!“ тет. Эсир ӳкӗннӗ-и? Иккӗленӳ ҫук-и?

Ӳкӗнӳ сӑмахпа Христос мӗн каласшӑн пулнӑ-ха? Мӗншӗн вӑл Библире нумай хут тӗл пулать? Паянхи словарьсем ку сӑмаха ҫапла ӑнлантарса параҫҫӗ: ӳкӗнни вӑл „мӗн пирки те пулин пӑшӑрханнине“ е „мӗншӗн те пулин хӑвна ху ӳпкеленине“ пӗлтерет, теҫҫӗ. Анчах та ҫак сӑмахӑн чӑн пӗлтерӗшӗ, грексемпе еврейсен сӑмахӗ, Христос калани, пӗлтерӗшӗпе чылай анлӑрах. Ку сӑмах ҫылӑх тунӑшӑн пӑшӑрханнине кӑна пӗлтермест. Библи сӑмахӗ „ӳкӗнӳ“ „тӗпрен улӑшӑннине“, „пачах урӑх ҫулпа каяссине „пӗлтерет. Вӑйлӑ та ӗҫлеме хистекен сӑмах. Ку сӑмах ҫынра революци пулса иртнине пӗлтерет. Библи сире ҫылӑхсемшӗн ӳкӗнме хушать пулсан, пирӗн ҫылӑхран пачах тепӗр еннелле пӑрӑнса утмаллине пӗлтерет.

„Ӳкӗнӳ“ сӑмаха ӑнлантарса парас тесе, Иисус Христос аскӑн ывӑл ҫинчен юптару каласа панӑ. Кил-йыша пӑрахса ҫӗтсе ҫӳренӗ ывӑл, ӳкӗнсен, хӑйӗн ҫылӑхӗсемшӗн пӑшӑрханса пӗр вырӑнта ларман. Сыснасем хушшинче юлма пултарайман вӑл урӑх. Вӑл тӑнӑ та утнӑ! Пачах урӑх еннелле выртнӑ унӑн ҫулӗ. Вӑл хӑйӗн ашшӗне тупнӑ, ун умӗнче ӳкӗннӗ, хӑйне тивӗҫлине тивӗҫлӗ ӗҫпе илнӗ.

Ӳкӗнӳ ҫинчен каланӑ чухне хальхи христиансем ҫак

сӑмахă̆н Библири пĕлтерĕшне манаççĕ. Вĕсем шутланă тăрăх, ӳкĕнни вăл çын хăйĕн çылăхĕсем пирки шухăшланă чухне пуçа сулласа: „Ах, мĕншĕн кун пек турăм-ха!“ тени — кайран вара халиччен мĕнле пурăннă, çаплах пурăнни, имĕш.

Ӳкĕнӳ вăл „тĕпрен улăшăнни, урăх еннелле çавăрăнса çĕнĕ çулпа утасси“. Пăшăрханни вăл ӳкĕнни мар-ха. Иуда та хăйне ӳпкеленĕ, пăшăрханнă, анчах та вăл ӳкĕнмен. Шалтан кăна çĕнелни те çителĕксĕр-ха. Пурне те пултаракан Туррăмăра тивĕçтерекен асап шухăшласа кăлараймастăр эсир хăвăр ӳтĕр валли е хăвăр пуçăрта тивĕçлĕ айăп та шутласа кăлараймастăр. Пирĕн çылăхсене Иисус Христос хĕрес çинче каçарттарнă. Ăна пирĕн çылăхсемшĕн айăпланă, çавăнпа пирĕншĕн ĕнтĕ улăшăнса çĕнелесси, ӳкĕнӳ патне илсе пыракан асап çук.

Ӳкĕнӳ пирки калаçнă чухне эпĕ авал пулнă, ларса йĕмелли тенкел пирки каламастăп. Нумай çынна çапла каласа ĕнентерме тăрăшнă: ӳкĕнес тесен, вĕсен чылай хушă куççулĕпе йĕрсе çылăхĕсене каçарттармалла имĕш. Пĕр çын мана çапла каласа пачĕ: Христоса тупнă каç вăл тĕне ĕненекенсен пĕр пухăвне пынă. Алтарь умне чĕркуçленсе тăнă. Çав вăхăтра ун патне пĕр аппа пынă та ăна хулпуççинчен тĕкĕнсе çапла каланă: „Кĕреш, шăллăм! Турра тупас тесен, санăн кĕлтуса малалла кĕрешмелле!“ тенĕ. Тепĕр темиçе минутран ун патне чиркӳ çынни пынă та çапла каланă: „Шăллăм, ирĕке тух!“ тенĕ. Кайран тата тепĕр аппа пынă: „Эпĕ ӳкĕнсе, улăшăнса çĕнелнĕ каç ман пите çап-çутă пайăрка пырса çапрĕ те эпĕ ӳпне кайса ӳкрĕм“, тенĕ. Çав çын кайран манпа чунне уçса калаçрĕ. Вăл кĕрешме те, ирĕке тухма та тăрăшнă ун чухне, çав пĕлĕт çути хăйне çитессе кĕтнĕ, анчах та унăн нимĕн те тухман, кăлăхах пулнă.

Пĕр интеллигентлă христиан деятелĕ пĕррехинче мана

чунне уҫса пачĕ: вăл улăшăнса ҫĕнелнĕ чухне пастор унра кăмăл-туйăм хускаласса кĕтнĕ. Ҫакна кĕтни ăна Турă патне пыма чарнă.

Хăш-пĕр пухусенче ҫине тăрсах кăмăл-туйăма хускатаҫҫĕ, ҫакă вара чăннипех те Турра шыракан тӳрĕ кăмăллă ҫынсене питех те чăрмантарать. Эпĕ калакан ӳкĕнӳ вара, Библири чăн-чăн ӳкĕнӳ, вăл ăс-тăна та, туйăма та, кăмăла та пĕр вăхăтра ярса илет.

Чи малтанах ҫылăха йышăнни кирлĕ. Библи калать: „Мĕншĕн тесен пурте ҫылăха кĕнĕ, пурте Турă мухтавне ҫухатнă", тет (Римл. 3:23). Исаия пророк, хăйĕн ҫылăхĕсене ăнланса илсе йышăнсан, ҫапла каланă: „Эпĕ каларăм вара: хуйхă мана! Хуйхă мана! терĕм, мĕншĕн тесен эпĕ таса мар чĕлхе-ҫăварлă ҫын", — тенĕ (Исаия 6:5). Иов хăй ҫылăхлине туйса илсен: „...эпĕ хам каланă сăмаха каялла хам ҫине илетĕп, тăпрапа кĕл ҫине ларса ӳкĕнетĕп", тесе каланă (Иов. 42:6). Петр хăй ҫылăхлине пĕлсен: „Эпĕ ҫылăхлă ҫын", — тенĕ (Лук. 5:8). Павел хăй ҫылăхĕсене йышăнсан, хăйне чи ҫылăхлă ҫынсен шутне кӳртнĕ (1 Тим. 1:15).

Ҫакна ăнланма Святой Сывлăш пулăшать. Чăнах та, Святой Сывлăш чун-чĕрепе ăс-тăна ҫутатса ямасăр ӳкĕнӳ пулса иртмест. Святой Сывлăш сирĕн пата аннĕр кĕллипе, пастор вĕрентĕвĕпе, радиопа паракан христиансен передачипе, чиркӳ чанне курнипе, юратнă ҫын вилнипе анма пултарать, сире улăшăнса ҫĕнелме пулăшăть. Турра ĕненекенсен пухăвĕсенче эпĕ ҫынсене сăнатăп та, хăшĕсем хăйсен ҫылăхĕсене йышăнса чĕтреме ереҫҫĕ, анчах та ӳкĕнмеҫҫĕ. Хăвăн ҫылăхусене йышăнма пулать, ху ҫылăхлă пулнине туйма пулать, хăвăн ҫылăхусемшĕн куҫҫуль тăкма пулать, анчах ҫакăн хыҫҫăн та ҫын улăшăнса ҫĕнелмесен те пултарать.

Иккĕмĕшĕнчен, ӳкĕнӳ, улăшăнса ҫĕнелни ҫын туйăмĕ-

семпе çыхӑннӑ. Павел апостол калать: „Турӑшӑн хуйхӑрни каялла кайми ӳкӗнтерсе çӑлӑнмалла тӑвать“, тет (2 Кор. 7:10). Нумай çын нимӗнле туйӑма та йышӑнмасть, хирӗçлет. Хӑш-пӗр критиксем пысӑк туйӑмпа ӳкӗнсе çӑлӑнӑç тупнине шанмаççӗ. Суя туйӑмра пӗр хӑрушлӑх пур: вӑл çынсене тӗлӗнтерме кӑна пулӑрать, анчах кунта та чӑн-чӑн туйӑм пулма пултарать.

Британири паллӑ методист В.И. Зенгстер доктор хӑй кӗнекинче çапла çырать: „футбол вӑййине курса савӑнӑçлӑн кӑшкӑрса ларакана, анчах та хӗрес айӗнче йӗрсе тӑракан çылӑхлӑ çынна курсан, туйӑмсене кӑтартмасан та юраччӗ тесе çиленсе мӑкӑртатакана пит хисеплесех те килмест“, тет.

Пӗррехинче пӗр проповедник Турра чунтан парӑннӑ Джон Веслее кӗлӗсене ытлашши пысӑк туйӑмпа ирттернӗшӗн ӳпкелерӗ.

Виççӗмӗшӗнчен, ӳкӗнсе çӑлӑнӑç тупма çын кӑмӑлӗ, ирӗкӗ, кирлӗ.

Хамӑр кӑмӑла парӑнтарсан кӑна эпир ӳкӗнсе çӑлӑнӑç тупни чӑн-чӑн пулнине ӑнланса илетпӗр. Çылӑха пӑрахма татӑклӑ йышӑну тумалла, кунсӑр пуçне хӑвӑн çине, çылӑх çине, Турӑ çине пачах урӑхла пӑхма тытӑнмалла, хӑвӑн туйӑмсене, хӑвӑн шухӑш-кӑмӑлна, пурӑнӑç тӗллевне тӗпрен улӑштармалла. Чӑн-чӑн ӳкӗнӳпе çӑлӑнӑça пире Святой Сывлӑш кӑна пама пултарать. Пӗр хӗрача кӗлтуни аса килчӗ: „Эй, Турӑçӑм, мана лайӑх пулма пулӑшсам, анчах чӑннипех мар, кӑшт кӑна, мана хӗнемелле мар кӑна лайӑх ту...“ Святой Сывлӑш пани çак кӗлӗрен нумай-нумай пысӑк.

Америкӑра пирӗн çӗр-çӗр çын ятне чиркӳ кӗнекине çырса хунӑ. Пушӑ вӑхӑт тупӑнсан вӗсем чиркӗве çӳреççӗ, чиркӳ ӗçӗсене туса пыма укçа та хываççӗ. Кӗлӗ иртсен, пастора алӑ тытса тав тӑваççӗ, лайӑх кӗлӗ ирттернипе

саламлаççĕ. Христиансен чĕлхипе калаçма пултараççĕ. Таса Çырури нумай вырăна пăхмасăр калама пĕлеççĕ. Анчах та çак çынсене чăннипех ӳкĕнсе çăлăнăç тупнă теме çук. Вĕсем христиан тĕнне йышăннипе йышăнманнине калама та хĕн. Инкеке лексен вĕсем Турра аса илеççĕ, кĕлтăваççĕ, ахаль чухне Турă çинчен шухăшламаççĕ. Библи: „Çын Иисус Христос патне пырсан, тĕпрен улăшăнать, çав улăшăну унăн мĕнпур ĕçĕнче палăрать“, тесе вĕрентет.

Эсир, христиан пулсан, мĕнле пурăнас килет çавăн пек пурăнма пултаратăр тесе Библири пĕр пуплевре те каламан. Христос çын чĕрине кĕрет тетпĕр, унта Вăл Турă та, Вĕрентекен те пулса тăма кĕрет. Сирĕн Ăна кăна пăхăнмалла, пĕр Ăна кăна. Вăл сирĕнтен пĕтĕм пултарулăхăра ыйтать. Сирĕн пĕтĕм ĕçĕр Ун ячĕпе пулса пымалла.

Паянхи христиансенчен нумайăшĕ çĕнĕ холодильник туянассине чиркĕве çӳрессинчен пысăкрах ĕç тесе шутлать. Çĕнĕ автомобиль туянмалла е çĕнĕ вырсарни шкулне тунă çĕре укçа хывмалла пулсан, вĕсем мĕн суйласа илесси малтанах паллă. Хăйсене христиан теекен пинпин çын тулăх пурăнăç паракан укçана, япаласене Христос вĕрентĕвĕнчен çӳлерех шая хурать. Пирĕн кинона çӳреме, футболла выляма е ытти ăмăртусем валли вăхăт тупăнать, анчах та Турă валли пирĕн пĕр вăхăт та çук. Эпир çĕнĕ çурт е телевизор туянма укçа пухатпăр, анчах та чиркӳ укçи тӳлеме май тупаймастпăр.

Ку вăл шăпах ĕнтĕ суя турăсене пуççапни пулать.

Тĕпрен улăшăнса çĕнелмелле! Эпир сĕм авалхи суя тĕнлĕ халăхсем çине, суя турăсен кĕлеткисене пуççапса пурăннă çынсем çине пӳрнепе тĕллесе кăтартатпăр. Анчах вĕсемпе хамăр хушшăмăрти пĕртен-пĕр уйăрăмлăх та вăл пирĕн суя турăсен кĕлеткисене алюминипе хурçăран

туни, вĕсем çине тата термостатсемпе сивĕтекен приборсем лартса пани кăна пулĕ.

Иисус Христос çавăн пек япаласенчен çӳлерех пулма хушать. Вăл сирĕн пĕтĕм пурăнăçăра, халăх хушшинчи, кил-йышăрти, ĕçĕрти пурăнăçăра, Хăйне пама ыйтать. Сирĕн шухăшăрта, сирĕн калаçăвăрта Вăл яланах малти вырăнта пулмалла. Эсир чăнахах та ӳкĕнсе улăшăнас пулсассăн, пурăнăçăрти пур ыйтупа та Турăран канаш ыйтма пуçлăр.

Хамăр пурăнăçăмăрти пур çылăха та сирсе ямасăр, пур япалана та пăрахăçламасăр Хăйĕн Çӳлти Патшалăхне кӳртмессе асăрхаттарнă пире Христос. Çак ĕçе çурмалла анчах ан тăвăр.

„Эпĕ хăш-пĕр çылăхсене йышăнмастăп, анчах та ытти çĕрте çылăха кĕретĕп. Эпĕ хамăн пурăнăçăмăн пĕр пайне Христоса паратăп, ыттисене вара хам мĕнле пурăнас тетĕп çавăн пек пурăнатăп“, тесе ан калăр. Иисус Христос эсир хăвăрăн пĕтĕм пурăнăçăра Хăйне парасса кĕтет, çавна кĕтсе илсен, сире темиçе хут ытларах тавăрса парĕ. Çурмалла ĕçшĕн çурмалла сăвап ан кĕтĕр! Турă хăйĕн ĕçне çурмалла тумасть! Вăл эсир тĕпрен улăшăнса çĕнелессе кĕтет, эсир хăвăра пĕтĕмпех Ун аллине парасса кĕтет. Енчен те эсир, çылăхăра пăрахса, Христос еннелле çавăрăнтăр пулсан, эсир Турăпа канăçлăх тупма тепĕр утăм тăватăр.

## ВУННӐМӖШ СЫПӐК

# ЁНЕНӲ

„Хӑвӑр ёненнӗ тӑрӑх сире тивлет парса ҫӑлнӑ; ҫӑлӑнасси хӑвӑртан килмен, вӑл Турӑ панӑ ырӑлӑх: эсир хӑвӑр тӑрӑшнипе ҫӑлӑнман, ҫавӑнпа никам та ан мухтантӑр“.

Ефес. 2:8-9

Халӗ эсир, Турӑпа канӑҫлӑх тупас тесе, тепӗр утӑм тума хатӗр. Хӑвӑрӑн малтанхи пурӑнӑҫӑра пӑрахма, хӑвӑр ҫырӑхӑрсенчен пӑрӑнма хатӗр эсир. Эсир хӑвӑр пурӑнӑҫӑра тӗпрен улӑштарса ҫӗнетме йышӑнтӑр. Халӗ эсир Турӑран пӑрӑнса каймастӑр, Унӑн юратӑвӗ, Унӑн ырӑлӑхӗ, Унӑн хӳтӗлевӗ патне ҫывӑхарса пыратӑр. Эсир ҫапла шухӑш тунӑ. Ку ҫула эсир хӑвӑр суйласа илнӗ. Эсир ӳкӗнсе ҫӑлӑнӑҫ тупнӑ; эсир тӗрӗс ҫул суйласа илнӗ, ан тив, вӑл ҫӑмӑл мар пулсан та, тӗрӗс! Эсир виҫӗ пин ҫурӑ ҫул авалах Моисей суйласа илнӗ ҫул ҫине тӑнӑ. Моисей ун чухне, Египет патши пулас вырӑнне, Турӑ ирӗкне суйласа илнӗ.

Ҫакӑн пек пысӑк утӑм тунӑ чухне Моисей хӗрӗх ҫулта пулнӑ. Турӑ ырӑлӑхӗсӗр пуянлӑхпа хисеп пуличчен ҫитмен пурӑнӑҫпа йывӑрлӑхсем, ёненӳпе чӑнлӑх лайӑхрах тесе шутланӑ вӑл. Историре сахал ҫын ҫакӑн пек йывӑр утӑм тума пултарнӑ.

Моисей нумай вӗреннӗ, культурӑллӑ, хисеплӗ те паллӑ ҫын пулнӑ. Фараон хӗрӗн усрав ывӑлӗ пулнӑран, вӑл пуян пурӑнӑҫа, хисепе, чапа хӑнӑхнӑ, Египет патшине

ларма аллине кăна тăсмалла пулнă унăн, — Египет вăл вăхăтра чи вăйлă аталаннă, чи пуян çĕршыв шутланнă.

Анчах та Библи акă мĕнле калать: „Хăй ӳссе çитĕнсен, ĕненнипе Моисей хăйне фараон хĕрĕн ывăлĕ теме пăрахнă; çылăха кĕрсе вăхăтлăха киленсе пурăннинчен вăл Турă халăхĕпе пĕрле асапланса пурăнма хавасрах пулнă; Христос хурлăхне Египетри мулран пысăка хунă; вăл тавăрса парассине асра тытса тăнă. Ĕненнипе вăл, патша çиллинчен хăрамасăр, Египетран пăрахса кайнă; курăнми Турра курса тăнă пек, вăл тĕреклĕ тăнă“ (Евр. 11:24-27).

Асăрхăр-ха, вăл „пăрахнă“, „пăрахса кайнă“ — çакăнта ĕнтĕ вăл чăн-чăн ӳкĕнӳ. Унсăр пуçне тата Библире çакна вăл ĕненнипе тунă тесе каланă. Ӳкĕнӳ хыççăнхи тепĕр утăмĕ — шăпах çакă ĕнтĕ вăл: ĕненӳ. Моисей хăйĕн ĕçне чун-чĕре хĕрӳленсе кайнă самантра туман (кунашкал хĕрӳленĕве хăш-пĕр психологсем хирĕçлемеççĕ, Турра ĕненекенсен асапĕ, шухăшлавĕ кирлех теççĕ). Çав вăхăтра Моисей шанчăка çухатнă çын та пулман. Анман, вăйсăр çын та пулман вăл. Пурăнăçра хăй тăвайман çитĕнӳсемшĕн тавăрас е сӳрĕклĕхпе кичемлĕхрен тарас тесе тăман вăл Турă çулĕ çине. Çак утăма вăл мĕнле те пулин интерес е савăнăç, хаваслă пурăнăç шыраса та туман.

Ытти çынсене час-часах Турра шырама хистекен çак сăлтавсем Моисейĕн пачах та пулман.

Хăйĕн тулăх пурăнăçне пăрахма ăна никам те хистемен. Куна вăл хăй ирĕкĕпе тунă. Чăн та Моисей çемçе кăмăллă е айван çын пулман, пĕлменнинчен, хăнăхманнинчен хăраса тăракан ачамккă пулман. Чапшăн, хисепшĕн çунакан çын та пулман вăл. Малтан тĕнрен кулса, кайран унра çăлăнăç шыракансен ретне кӳртме те çук ăна. Пурте унăн тепĕр çынсем ĕмĕтленме кăна пултарнинчен ытларах пулнă. Çапах та вăл хăй шăпах вăй кĕрсе

çитнĕ çулсенче, тĕплĕн шухăшласа, пуян пурăнăçа, пысăк вырăна, хисепе пăрахать те Турра ĕненес çул çине тăрать.

Мĕнпур шанчăка çухатнă вăйсăр çынсем е хăйсене чирлĕ туякансем анчах тĕнре йăпану тупаççĕ тенине илтсен, кашнинчех эпĕ Моисее аса илетĕп.

Тĕн ыйтăвĕсем пирки манăн çĕршер те пиншер çынпа калаçма тӳр килнĕ. Нумайăшĕ Иисус Христоса Турă тесе йышăнасшăн мар. Христиан вĕрентĕвĕ ăс-тăнпа йышăнма йывăр тесе мар, христиан пурăнăçĕ çын çине хуракан яваппа тивĕç пысăкран хăраса çапла тăваççĕ вĕсем. Унашкаллисене Христосран вĕсен пысăк ăсĕ мар, вĕсен вăйсăр чĕри уйăрса ярать. Вĕсем Христоса пăхăнасшăн мар, пĕтĕмпе парăнасшăн мар.

Ĕненӳ çулĕ мĕн тума ыйтнине, мĕн тума хушнине Моисей тĕплĕн йĕрленĕ. Вăл çакна ăнланнă: Турра юратас тесен, санăн ытти çынсемшĕн мĕн хаклине пĕтĕмпех пăрахăçламалла... Вăл шухăш вĕçне тухма васкаман. Чун-чĕре хĕрӳлĕхне, е ăнсăртлăха парăнса, пуç тавра тĕплĕн шухăшласа пăхмасăр нимĕн те йышăнман. Шанăç хуни ытла та пысăккине ăнланнă вăл, татăклă утăма хăйĕн пĕтĕм пысăк ăсĕпе ăнланса çитсе тунă. Вăл мĕн суйласа илни вăхăтлăх сăнав пулман. Ĕненĕве вăл тĕрĕслесе пăхмалли ĕç вырăнне суйласа илмен. Питĕ тĕплĕн шухăшласа тунă. Çак шухăш вара унăн, шапи тем тĕрлĕ килсе тухсан та, тем тĕрлĕ йывăрлăх тӳсмелле пулсан та, нихăçан та улăшăнман. Каларĕшле, хăй хыççăн кĕперсене çунтарсах пынă: каялла чакма майĕ те, илĕртĕвĕ те ан пултăр тенĕ. Моисейĕн хĕрĕхмĕш çулĕнче килсе тухнă çак аслă йывăр самант. Моисей хăйĕн пĕтĕм пурăнăçне Турра, Турă хушнисене пăхăнса тăма, панă.

Паллă географ Гамалиэль Бредфорд вилес умĕн çапла каланă: „Çĕнĕ Сăмаха вулама хăратăп, мĕншĕн тесен манра тӳрех иккĕленӳ, пăлхану, шикленӳ туйăмĕ çура-

лать. Хам пурӑнӑҫӑмра эпӗ йӑнӑш ҫул суйласа илнӗ, Турра, Унӑн ансат та таса ҫулне сутнӑ эпӗ“! — тенӗ. Халӗ ӗнтӗ танлаштарса пӑхсамӑр, мӗн тери уйрӑмлӑх Моисей йышӑнӑвӗпе ҫак паллӑ географ йышӑнӑвӗ хушшинче!

Моисейӗн ҫакӑн йышши нимӗнле сехӗрленӳ те пулман. Христос Туррӑмӑр еннелле халех тата ӗмӗрлӗхех пӗтӗм таса чӗререн, чунтан ӗненсе ҫавӑрӑнсан, сирӗн те хӑраса тӑмалли нимӗн те пулмӗ. Турӑпа калаҫнӑ чухне: „Христианствӑпа пӗр хушӑ пурӑнса пӑхам-ха. Пултарсан, малашне те ҫаплах пурӑнӑп, пултараймасан, манӑн пурӑнӑҫӑн урӑх йӗркине тавӑрӑнма вӑхӑт пур-ха“, — тесе ан калӑр. Христос патне пытӑр пулсан, хӑвӑр хыҫри мӗнпур кӗперсене ҫунтарса ямалла, каялла тавӑрӑнас пирки шухӑш та ан пултӑр.

Нумай ӗмӗр каялла, пӗтӗм тӗнчене мӑнаҫлӑ Рим ӑмӑрткайӑкӗн мӗлки юнаса тӑнӑ вӑхӑтра, Цезарӗн харсӑр салтакӗсем Британие парӑнтарма тухса кайнӑ. Умра тӑшман карапӗсем курӑнса кайсан, англосаксонецсем, хӑйсен ҫӗршывне хӳтӗлеме, ҫыран хӗрринчи сӑртсем ҫине пиншерӗн пухӑннӑ. Рим ҫыннисем, ҫырана тухсан, чи малтан карапӗсене ҫунтарса янӑ. Ҫакӑ хӳтӗлевҫӗсене калама ҫук тӗлӗнтернӗ. Карапсем ҫунса кайсан, парӑнтарма килнисен каялла чакма ҫул пӗтнӗ. Ҫакӑн пек ҫӗнтерӳ кӑмӑлӗпе тулнӑ ҫар ҫыннисене, паллах, никам та ҫӗнтерме пултарайман! Ҫапла ӗнтӗ Темза ҫыранӗнчи пӗчӗкҫеҫҫӗ ял кайран тӗнчене тытса тӑракан хула пулса кайнинчен ним тӗлӗнмелли те ҫук.

Ҫакӑн пекех, Христос та Хӑйне пӗтӗмпех парӑнма, пӑхӑнма хушать. „Иисус ӑна каланӑ: аллине акапуҫ тытсан, каялла ҫавӑрӑнса пӑхакан кирек кам та Турӑ патшалӑхӗшӗн шанӑҫлӑ мар вӑл, тенӗ“ (Лук. 9:62).

Чун-чӗрене кисрентерекен суйлава Моисей хӑй

пуранăçĕнчи çавăранăç самантне çитсен тунă. Шухăшлама пĕлекен пуçĕпе вăл хăйĕн утăмĕпе çыхăннă мĕнпур майсене апла та, капла та виççе пăхнă. Кашни çулне вĕçне çитичченех курса тăнă. Лайăх виççе пăхсан тин хăйĕн ĕненĕвне, шанăçне Турра панă.

Малтан ун куçĕ умне çап-çутă сарлака çул тухса выртнă влаç, илем, эрех, савăнăç кĕтнĕ ăна кунта. Ку çула вăл аван пĕлнĕ. Ку çулпа вăл хĕрĕх çул утнă, çак çул вилĕмпе вĕçленессе, çак çул тамăка кăна илсе çитерессе пĕлнĕ вăл.

Унтан Моисей умне тепĕр çул тухса тăнă, ансăр çул, малтанхинчен тем чухлĕ йывăртараххи. Кунта асап, хĕсĕрлев, кӳрентерӳ, ĕмĕт татăлни... Мĕнпур йывăрлăха, сăнава, хуйха-суйха, ĕçе-хĕле курнă вăл çак çул çинче, ĕненӳпе вăл кунта çĕнтерĕве те курнă, çул вĕçĕнче, сăваплăх, ĕмĕрлĕх пуранăç кĕтнĕ.

Пуранса Моисей чухлĕ курманни, айвантараххи, паллах, пĕрремĕш çула суйласа илнĕ пулĕччĕ, пуян пуранăç ытларах илĕртет-çке-ха. Ун чухне Египет тĕнчере чи вăйлă çĕршыв шутланнă. Вăл тĕнчене тăрантаракан Нил тăрăхĕнчи чи пулăхлă çĕрсемпе хуçаланнă. Унăн çарĕсене никам та çĕнтереймен, унăн шкулĕсем, тата нумай ĕмĕрсем хушши, кăтартуллă шкулсем пулса юлнă.

Пирĕн хушăра Турра Моисей чухлĕ пама пултаракан çын питех те сахал тупăнать. Сахал çын умне çакăн пек пуян те тĕрлĕ енлĕ пуранăç тухса тăрать, çакăн пек пуранăçа хирĕçлекен те сахал. Хăй умĕнче савăклăхпа киленӳ куракан та сахал. Библире: çылăхра та киленӳ пур, тесе каланă, анчах çав киленӳ саманчĕ ытла та кĕске. Киленӳ саманчĕ иртет те хуйхă пуçланать.

Турра суйласа илсе Моисей нумай çухатнă, анчах та ун вырăнне пысăк сăвап илнĕ. Моисей вăхăтĕнче пысăк пуянлăх сайра тĕл пулнă, чăннипех çĕр çинчи пуян çынсенчен пĕри пулма питех те сахал çын кăна пултарнă.

Пирĕн вăхăтра нумай çын пуйма пултарать. 1923 çулта тĕнчери чи пуян çынсен пĕр ушкăнĕ Чикагăри пĕр отеле пуханнă. Çирĕммĕш çулсенче пуханнă çак съезд влаçпа мулăн халиччен пулман демонстрацийĕ пулса тăнă. Пĕр сĕтел хушшине çаксем пуханнă: тĕнчери чи вăйлă хурçă компанин президенчĕ, тыр-пул туянаç енĕпе ĕçлекен чи пысăк трестăн председателĕ, Нью-Йоркри биржа председателĕ, Пĕрлешӳллĕ Штатсен президент кабинечĕн членĕ, вăл Вол-стритри чи пысăк делец шутланнă, тепĕр иккĕшĕ — тĕнчери чи пысăк монополисен пуçлăхĕсем. Пĕрле илсен, вĕсен мулĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсен казначействин мулĕнчен те пысăкрах пулнă! Вĕсен çитĕнĕвĕсен историне кашни шкул ачи пĕлсе тăнă. Нумайăшĕ вĕсене тĕслĕх вырăнне хунă, вĕсем пек пуранме тăрăшнă. Вĕсем Америкăри финанспа промышленность королĕсем пулнă.

1923 çулта пур çĕрте те вĕсен пурăнăçне çырса кăтартнисем пичетленнĕ, вĕсем пурне те тĕлĕнтернĕ, тыткăнланă, шухăша вăратнă, кĕвĕçӳ çуратнă. Вĕсем ыттисене хавхалантарнă, хăйсем пек пулма хистенĕ. Анчах та 1923 çулта вĕсен пурăнăçĕсен историне çуррине кăна çырнă пулнă-ха, юлашки сыпăкĕсем малашлăхра пулнă.

Çак сакăр çын Чикагăра пĕр сĕтел хушшинче ларнă чухне, шăпах тахçан авалхи Моисей пек, пурăнăç юппинче пулнă. Вĕсем те çул тăваткăлĕнче тăнă, вĕсен умĕнче те икĕ çул пулнă. Тен, вĕсем çав ик çула асăрхаман та, асăрхас та темен пулĕ. Иккĕмĕш çулĕпе каясшăн пулман вĕсем, халĕ эпир вĕсен пурăнăçĕ мĕнле вĕçленнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Эпир Моисей пурăнăçне куç умне кăларнă пек, вĕсен пурăнăçне те курма пултаратпăр. Хăш çулĕ тĕрĕс те лайăх пулнине те пĕлетпĕр.

Чарльз Шваб, хурçă шăратакан компани президенчĕ, хăй пурăнăçĕн юлашки çулĕсенче парăмран тухайман,

чухӑнлӑхра вилнӗ. Артур Каттен, тыр-пул сутса-илес енӗпе чи пысӑк специалист, ют ҫӗршывра панкрута тухса вилнӗ. Ричард Витней, Нью-Йоркри биржа президенчӗ, патшалӑхӑн Синг-Синг тӗрминче ларса тухнӑ. Альберт Пауле, кабинет членне, каҫарнӑ та тӗрмерен вилме килне янӑ. Джесси Ливермур, Вол-стритӑн „арӑсланӗ“ пулнӑскер, Леон Фразер, Пӗтӗм тӗнчери банк президенчӗ, тата Иван Крейгер тӗнчери чи пысӑк монополи пуҫлӑхӗ — хӑйсем ҫине алӑ хунӑ!

Ҫак ҫынсен пурин те укҫа, влаҫ, пуянлӑх, хисеп пулнӑ, вӗсем нумай вӗреннӗ, интеллигентлӑ ҫынсем пулнӑ, анчах вӗсен кашниййӗннех пурнӑҫа тӗллевсӗр, тупсӑмсӑр тӑратса хӑваракан ҫитменлӗх пулнӑ. Христиан вӗрентӗвӗпе пурӑнӑҫӗшӗн кирлӗ пӗр япала ҫитмен вӗсене: вӑл — ҫынна улӑштарса ҫӗнетме, ҫӗнӗрен ҫуралма пулӑшакан пахалӑх. Вӗсем Турра ӗненме пултарайман!

Ҫак ҫынсен ӗненӳ пулман, пулсан та вӗсем ӗненӳпе пурӑнма килӗшмен. Ҫав пысӑк пуянлӑх хушшинче Христоса ӗненни те пулнӑ пулсан, вӗсен пурӑнӑҫӗ пачах урӑхла пулнӑ пулӗччӗ.

Астӑвӑр-ха, Моисей ӗненӗве пула Египетри пуянлӑха пӑрахнӑ.

Ӗненнӗрен вӑл ҫакна лайӑх ӑнланнӑ: ҫак ҫӗр ҫинчи пурӑнӑҫра вӑл хӗн-асап тӳсет пулсан та, юлашкинчен ӑна пысӑк сӑвап — ӗмӗрлӗх чӗрӗлӗх — тухать!

Каттенпа Шваб йышши ҫынсем Моисее, тен, ӑссӑр тесе шутланӑ. „Тӳпери хуркайӑкран алӑри кӑсӑя лайӑхрах“, теме пултарнӑ вӗсем. Вӗсем ҫапла та калама пултарнӑ: „Пӑх-ха, мӗн кӑна ҫук сан Египетра! Сан ӑсупа та ҫак пуянлӑхпа, влаҫпа ҫын мӗн тума пултарнине эсӗ аван пӗлетӗн вӗт. Влаҫа хӑвӑн аллуна ил те, кӗҫех вара Египет пӗтӗм тӗнчене тытса тӑма пуҫлать. Эсӗ пӗчӗк ҫӗршывсене пурне те тӗп тума пултаратӑп. Эсӗ хӑвӑнпа тупӑша-

кансенчен пуринчен те хӑтӑлма пултаратӑн, хӑвӑн мӗн тӑвас килет, ҫавна тума пултаратӑн"... Шӑпах ҫак сӑмахсене калanӑ пулӗччӗҫ вӗсем Моисее, мӗншӗн тесен вӗсем хӑйсем ҫавӑн пек шухӑшланӑ, ҫавӑн пек пурӑннӑ, пуянлӑха та ҫавӑн пек пухнӑ. Турра е Иисус Христоса ӗненетӗп теекен ҫынран вӗсем кулнӑ кӑна пулӗччӗҫ. Ӑна вӗсем: „Ӗненӳ вӑл — ниме тӑман ӗҫ", — тенӗ пулӗччӗҫ.

Библи пире ӗненӳ Турӑ патне пымалли пӗртен-пӗр уҫӑ ҫул тесе вӗрентет. „Ӗненмесӗр Турра юрама ҫук; Турӑ патне пыраканӑн Турӑ пуррине, Хӑйне шыракансене Вӑл ырӑлӑх кӑтартса тавӑрнине ӗненсе тӑмалла" (Евр. 11:6). Библи: ӗненӳпе кӑна Турра юрама пулать, урӑх нимӗнле те мар, тесе вӗрентет. „Ӗненмесӗр Турра юрама ҫук".

Пӗтӗм тӗнчере ҫынсем хӑйсене асаплантараҫҫӗ, хӑйсене сусӑрлатаҫҫӗ, пурӑнӑҫра чи кирлине пӑрахӑҫлаҫҫӗ, вӑхӑта кӗлӗре, ҫынсемшӗн ырӑ ӗҫ туса ирттереҫҫӗ — ҫапла майпа Турра юрама тӑрӑшаҫҫӗ. Ку пӗтӗмпех лайӑх пулӗ-ха. Анчах та эпир Турра юрама пултарнисенчен чи кирли вӑл — Ӑна ӗненни.

Калапӑр, эпӗ хамӑн юлташӑм патне пыратӑн та ӑна, йӑпӑлтатса, тем те пӗр каласа пӗтеретӗп, юлашкинчен вара ҫапла каласа хуратӑп: „Эпӗ сана ӗненместӗп", — тетӗп. Эпӗ малтан йӑпӑлтатса каланӑ сӑмахсем ахалех пулаҫҫӗ вара. Малтан эпӗ ӑна хӑй куҫӗнче ҫӳле ҫӗклетӗп, кайран ӑнах кӳрентеретӗп.

Турра юрамалли чи лайӑх мел вӑл — Ун сӑмахне ӗненни. Иисус Христос Хӑйне итлекенсене Хӑйне ӗненме ыйтса ҫапла каланӑ: „Ӗненӗр Мана: Эпӗ Аттем ӑшӗнче, Аттем те Ман ӑшӑмра; каланипе ӗненмесен, ӗҫӗмсенчен ӗненӗр Мана", — тенӗ (Иоан. 14:11).

Ӗненӳ ҫав тери кирлӗ тесе асӑрхаттарать Библи. „Юрать, — тейӗр эсир, ӗненӳ кирлӗ пулсан, мӗн вӑл ӗне-

нӳ? Ӗненӳ мӗн тесе шухӑшлатӑр эсир? Ӗненӗве мӗнле уйӑрса илмелле? Ӗненӳ тӗрӗс пулнине мӗнле пӗлмелле манӑн? Мӗн чухлӗ ӗненӳ кирлӗ мана?" — тейӗр.

Тӑхтӑр-ха! Пӗр харӑсах ҫакӑн чухлӗ ыйту пама юрамасть. Эпӗ ҫак ыйтусене йӗркипе ӑнлантарса пама тӑрӑшӑп.

Библи пире ҫине-ҫинех калать: ӗненӳпе анчах ҫӑлӑнӑҫ тупма пулать, тет.

„Иисус Христоса ӗнен, вара эсӗ ху та, санӑн пӗтӗм кил-йышу та ҫӑлӑнӗ" (Ап.Ӗҫ. 16:31).

„Хӑйне хапӑл тӑвакансене, Хӑйӗн ятне ӗненекенсене, Вӑл Турӑ ачисем пулма ирӗк панӑ" (Иоан. 1:12).

„Ӗненекен ҫын кирек кам та Иисус урлӑ тӳрре тухать" (Ап.Ӗҫ. 13:39).

„Ҫылӑхлӑ ҫынна тӳрре кӑларакан Турра ӗненекен ҫын ӗненнипе тӳрре тухать" (Римл. 4:5).

„Ӗнтӗ эсир ӗненнипе тӳрре тухса хамӑра Ҫӑлакан Иисус Христос урлӑ Турӑпа килӗшнӗ" (Римл. 5:1).

„Эпир иккӗленсе пӗтсе ларас ҫынсем мар, эпир чунӑмӑрсем ҫӑлӑнасса шанса тӑратпӑр" (Евр. 10:39).

„Хӑвӑр ӗненнӗ тӑрӑх сире тивлет парса ҫӑлнӑ; ҫӑлӑнасси хӑвӑртан килмен, вӑл Турӑ панӑ ырӑлӑх" (Ефес. 2:8).

Чӑн та эпир ӗненӳ тӑрӑх ҫӑлӑннӑ-ши? Ҫук, эпир ӗненнӗ тӑрӑх тивлет илсе ҫӑлӑнатпӑр. Ӗненӳ вӑл — канал, ун тӑрӑх эпир Туррӑмӑр тивлетне йышӑнатпӑр. Ӗненӳ вӑл Турӑ еннелле тӑснӑ алӑ, ҫапла эпир Ун юратӑвӗн ырӑлӑхне илетпӗр. Еврейсем патне янӑ ҫырура эпир акӑ мӗн вулатпӑр (11:1): „Ӗненни вӑл ӗмӗтленнине пур пек курни, курӑнманнине курӑнаканни пек шанса тӑни". Ӗненӳ тени „парӑнни", „хӑвна пани", „пӑхӑнни" тенине пӗлтерет. Ӗненӳ вӑл шанчӑкӑн пысӑк палли.

Эпӗ Ҫурҫӗр полюсӗнче нихӑҫан та пулман, ҫапах та вӑл пуррине эпӗ ӗненетӗп. Мӗнле майпа пӗлетӗп-ха эпӗ

вăл пуррине? Мана ун çинчен каласа панипе пĕлетĕп. Ун çинчен эпĕ учебниксенче вуланă, географи атласĕн карттисене курнă, тата эпĕ çав кĕнекесене çырнă çынсене шанатăп. Эпĕ çакна ĕненӳпе йышăнатăп.

Библи: „Çапла ĕнтĕ, ĕненесси илтнинчен, илтесси Турă сăмахĕнчен килет“, тет (Римл. 10:17). Эпир Турă çăлăнăç çинчен каланине ĕненетпĕр. Çакна эпир ыйтусемсĕрех йышăнатпăр. „Курăнми Турра курса тăнă пек, Моисей тĕреклĕ тăнă“ (Евр. 11:27).

Ку вăл пачах та эпир ăнтăлмалли расна, вăрттăн темĕнскер мар. Иисус Христос пире пурсăмăра та пĕчĕк ачасем пек пулма каланă, — ачасем хăйсен ашшĕ-амăшне мĕнле ĕненеççĕ, пирĕн те Турра çапла ĕненмелле.

Калăпăр, эпĕ çăмăл машинăпа çул тăрăх питĕ хăвăрт пыратăп-пыратăп та сăрт аркине çитсе тухатăп. Манăн, сăрт хыçĕнче те çул пуррине пĕлес тесен, машинăран тухса сăрт çине хăпарса пăхмалла-и? Çук, эпĕ ун пек тумастăп. Эпĕ ку тавраари çул-йĕре тытса тăракансене шанатăп. Эпĕ малтанхи хăвăртлăхпах малалла каятăп, халлĕхе эпĕ çулне курмастăп пулсан та, вăл пуррине ĕненетĕп. Эпĕ çакна ĕненӳпе тăватăп. Христос çăласса ĕненни те çавах!

Ӳкĕннĕ чухнехи пекех, ĕненӳ те виçĕ тĕп ăнлавран тăрать. Пĕрремĕшĕ. Турă мĕн каланине пĕлни кирлĕ. Çавăнпа та Библие вулани питех те кирлĕ ĕç. Çавăнпа та Библи çăлăнăç çинчен вĕрентнине пĕлмеллех. Эсир çылăхлă çынсем, Христос сирĕншĕн вилнĕ — хуть çакна пĕлсен те çитет. Иоанн çырнă Евангелире мĕн каланине пĕлсен те çитет (3:16): „Турă тĕнчене пит юратнă: Хăйĕн пĕртен-пĕр Ывăлне те панă: Ăна ĕненекенсем пĕри те ан пĕтчĕр, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр“, тенĕ. Нумайăшĕ сахал пĕлӳпех Турă енне çаврăннă. Паллах, çакă сирĕн пурăнăçăрта пĕчĕк мар вырăн йышăнать пулсан, сирĕн

Ун çинчен ытларах пĕлме тăрăшмалла. Çăлăнăç çинчен пĕлмелли пĕртен-пĕр çăлкуç вăл Библи!

Нумай çын çапла калать: „Эпĕ Библире нумайăшне ăнланмастăп, çавăнпа та эпĕ ăна вулама та тăрăшмастăп“, — тет. Куна ăслă теме çук. Тĕрĕс, Библире ăнланмалла мар вырăнсем нумай. Эпĕ, кĕске ăсăмпа, вĕçĕмсĕрлĕх çинчен каланине нихăçан та ăнланаймăп. Эпĕ телевиденире те нумайăшне ăнланмастăп, анчах та уншăнах хам аппарата ĕçлеттермесĕр тăмастăп. Эпĕ куна ĕненӳпе тăватăп.

Турă çын тума пултарайманнине ыйтмасть. Турра ĕненсе паллăмарлăха сикме хушмасть Вăл сире. Турра ĕненни чи лайăх ĕнентерӳ хучĕ çинче — Библи çинче — никĕсленсе тăрать. Унта çырнисене пурне те ăнланаймасан та, эсир ăна хаклама пултаратăр, мĕншĕн тесен вăл Турă калани. Пуринчен малтан акă мĕне асра тытмалла: шуйттан ĕнентернипе, çын Турă Сăмахне иккĕленсе йышăнма пуçлать. Енчен те эсир иккĕленме пуçласан, Турă Сăмахĕнче ыйту паллисем лартма пуçласан, ку вăл эсир хăрушлăх умне çитсе тăнине пĕлтерет. Сирĕн вара хăвăр çылăхлă çын пулнине пĕлсе тăмалла. Иисус Христос сирĕн çылăхăрсемшĕн вилнине, сире тӳрре кăларма чĕрĕлсе тăнине пĕлмеллех. Иисус Христос вилни, ăна пытарни, Вăл чĕрĕлсе тăни — Евангелин пĕтĕм тупсăмĕ çакăнта. Çакна пирĕн ĕненмелле, йышăнмалла, унсăрăн улăшăнса çĕнелме май çук.

Иккĕмĕшĕ, ĕненĕве туйăмсем те кĕреççĕ. Библире каланă: „Турăран хăрани — тĕп ăслăлăх“, тенĕ (Юм. 1:7). Павел апостол: „Эпир Христос пек юратакан пулса каятпăр“, тенĕ (2 Кор. 5:14). Кăмăл, юрату, хăрав — кусем пурте туйăмсем. Вĕсемсĕр пурăнăç çук. „Атьăр хамăр туйăмсене пĕтеретпĕр“, тесе нимĕнле ăслă çын та каламасть. Туйăмсен тарăнăшне пирĕн кашнин хуйхи-

суйхипе савӑнӑҫӗнчен те уйӑрса илме ҫук. Пӗр туйӑмсӑр, пӗр ӑшӑсӑр пурӑнӑҫа та куҫ умне кӑларма йывӑр. Килйышра кашниййӗ тивӗҫ туйӑмӗпе (сивӗ туйӑмпа) кӑна пурӑнакан пӗр кил те пулин пур-ши? Кам та пулин хӑйӗн пулас арӑмне „манӑн сана курнипе нимӗнле туйӑм та ҫуралмасть", тесе качча тухма ыйтни пулнӑ-ши?

Зенгстер доктор пӗррехинче ҫапла каланӑ: „Тӗн ҫине те ҫак куҫпах пӑхмалла. Эсир ыйтнипе Евангели вӗрентекенӗ сире Турӑ ырӑлӑхӗ ҫинчен, Вӑл сире каҫарни тата пиллени ҫинчен каласа пӗлтерет. Анчах та ҫакна хӑвӑр та пӗр савӑнӑҫсӑр тӑрса, пӗр савӑнӑҫсӑр каласа пама ыйтатӑр пулсан, эсир вара ҫын тума пултарайманнине ыйтатӑр", — тенӗ.

Тӗн ҫинчен шухӑшланӑ чухне туйӑмсем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ. Хӑш-пӗр ҫынсен чун-чӗринче килӗшӳлӗх тӑрать, теприсем вара хӑвӑрт хӗрӳленсе каяҫҫӗ, анчах та вӗсем те, кусем те туйӑмсӑр мар.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Черчилль Британи халӑхӗпе хавхалантармалла калаҫатчӗ, ун сӑмахӗсем ҫыхӑнуллӑ шухӑшлама пӗлнипе, ҫынсен туйӑмӗсене вӑратма пӗлнипе вӑйлӑччӗ. Астӑватӑп-ха, эпӗ ӑна пӗррехиче Глазгов хулинче Айбрукс-паркра итлерӗм. Унӑн сӑмахӗ мана шухӑша ячӗ, ҫав вӑхӑтрах эпӗ ӑна ытараймасӑр итлерӗм: манӑн сиксе тӑрса, ялав вӗлкӗштерсе ура! кӑшкӑрас килчӗ. Иисус Христоса юратсан, сирӗн туйӑмсем те ҫапла вӑранӗҫ.

Виҫҫӗмӗшӗ, ку вара чи кирли, — ҫыннӑн ирӗкӗ ӗненӗве пӑхӑнать. Ҫакна виҫӗ ҫынпа танлаштарма пулать: вӗсенчен пӗри „ӑс-хакӑл" ятлӑ, тепӗри — „туйӑм", виҫҫӗмӗшӗ вара — „ирӗк". Ӑс-тӑн калать: „Евангелие ҫыхӑнуллӑ шухӑшласа ҫырнӑ", тет. Туйӑм калать: „Эпӗ Иисус Христоса юрататӑп", тет е: „Эпӗ сутран хӑратӑп", тет. Ҫавӑн чухне ҫыннӑн кӑмӑлӗ, ҫыннӑн ирӗкӗ тӳре пулса тӑрать. Вӑл, янахне тӗревлесе тарӑн шухӑша путать, ыйтӑва тӗрӗс

татса пама тимлет. Ыйтăва яланах çыннăн ирĕкĕ улăшăнми татса парать. Ĕненӳ ăс-пуçран е туйăмран килнĕ пулсан та, çакă çын Христос енне çавăрăннине пĕлтерместха. „Ырă ĕçсĕр ĕненӳ вилĕпе пĕрех“ (Иак. 2:20).

Темиçе çул каялла эпĕ пĕр çын çинчен илтрĕм: вăл Ниагар шывсикки урлă хывнă канат тăрăх алă урапи тĕртсе каçнă. Пин-пин çын ăна кăшкăрса саламласа кĕтсе илнĕ. Урапа çине икĕ центнер тăпра тултарнă михĕ хурса, вăл канат тăрăх каялла таврăннă. Унтан вăл курма пынисенчен: „Сирĕнтен миçен эпĕ çак урапапа çынна та илсе каçасса ĕненет?“ — тесе ыйтнă. Пурте вăл çакна тума пултарасса ĕненни çинчен каланă. Пĕри, маларах тăраканни, ĕненетĕп тесе ыттисенчен хытăрах кăшкăрашнă. Хайхи акробат çав çын çине кăтартса: „Ларăр, халĕ сирĕн черет!“ — тенĕ. Çав çын мĕнлерех хăраса ӳкнине курасчĕ сирĕн! Ĕненетĕп, тенĕ çав çын, тен, вăл ĕненетĕп тесе шухăшланă та пулĕ, анчах та хăй акробат çакна тума пултарасса ĕненмен те иккен, урапа çине ларма килĕшмен вăл.

Иисус Христоспа та çаплах. Нумай çын Ăна ĕненни çинчен, Ун хыççăн кайни çинчен калать. Анчах та вĕсем хайхи урапа çине нихăçан та лармаççĕ. Вĕсем Иисус Христоса нихăçан те пĕтĕмпех парăнман та, пăхăнман та.

Нумайăшĕ çапла ыйтĕ: „Юрĕ, ĕненĕвĕ мĕн чухлĕ кирлĕ вара?“ — тейĕ. Иисус Христос „сарă пăрăç пĕрчи чухлĕ анчах пулсассăн та“ çитет тенĕ.

Тепĕрисем тата: „Ĕненӳ мĕнлерех пулмалла?“ — тесе ыйтаççĕ. Ĕçĕ кунта мĕнле те пулин уйрăм ĕненӳре мар. Чăннипе ĕненӳ пĕрре кăна пулма пултарать. Чи кирли — кама ĕненни. Мĕне ĕненетĕр эсир? Сирĕн Иисус Христоса ĕненмелле. Чиркӳри чаплă кĕлле мар, парнесем кӳнине мар, уйрăм мораль вĕрентĕвне мар, ниме те мар, Христоса анчах ĕненмелле!

Ĕненў виçĕ майпа палăрать тесе вĕрентет Библи. Вĕренӳре, эсир мĕнле ĕненнинче палăрать. Эсир Турăпа калаçнинче, Ăна пуççапнинче, чиркĕве çӳренинче палăрать. Моральте, эсир мĕнле пурăннинче, хăвăр пурăнăçăра мĕнле йĕркеленинче палăрать, вĕсем çинчен эпир малашнехи сыпăксенче калаçăпăр.

Ĕненў эсир Христоса шаннипех, Вăл сире çăлăнăç парассине пĕлнипех пĕтмест тесе вĕрентет Библи. Ĕненў малалла пырать. Вăл ӳсет. Малтанлăха вăйсăр та пулма пултарать, кайран, эсир Библи вуланă май, кĕлтунă, чиркĕве çӳренĕ, хăвăр пурăнăçăрта Турă пуррине туйса пынă май, вăл вăйланса пырать. Çылăхăрсенчен ӳкĕнсе Турра ĕненме пуçларăр пулсан, сирĕн Ăна шанмалла: Вăл сирĕн пурăнăçăра йĕркелесе пырать, тĕреклĕлентерет, хавхалантарать. Мĕнпур лару-тăрура, сăнавра, нушара эсир, Иисус Христоспа пĕрле пулса, Вăл сире пулăшасса ытларах та ытларах шанма пуçлатăр. Вара Павел апостолпа пĕрле çапла калама пултаратăр: „Эпĕ Христоспа пĕрле пăталаннă, ĕнтĕ эпĕ хам пурăнмастăп, ман ăшра Христос пурăнать. Эпĕ халĕ ӳтпе пурăнатăп пулсан, Турă Ывăлне ĕненсе пурăнатăп: Вăл мана юратса, Хăйне Хăй маншăн вилĕме панă“ (Гал. 2:20).

Хăвăрта çак çăлăнăç кӳрекен, савăнăç кӳрекен ĕненĕве туйса илсен, эсир Турăпа канăçлăх тупас çул çинче тата тепĕр утăм тăватăр.

ВУНПӖРМӖШ СЫПӐК

# ҪӖНӖРЕН ҪУРАЛНИ

„Кам ҫӳлтен ҫуралмасть, вӑл Турӑ Патшалӑхне кӗреймӗ“.

Иоан. 3:3

Енчен те эпӗ сирӗн пата именмесӗр кӗрес пулсан, сирӗнпе куҫа-куҫӑн тӑрса калаҫас пулсан, тен, эсир мана хӑвӑр чӗрӗре ҫак сӑмахсемпе уҫса панӑ пулӑттӑр: „Эпӗ именсе, аптӑраса ӳкрӗм. Эпӗ Турӑ законне хирӗҫле ӗҫсем турӑм. Эпӗ Вӑл хушнине итлемесӗр пурӑнтӑм. Эпӗ хам пӗлнӗ пек йӗрке тума хӑтлантӑм, анчах та тӑваймарӑм. Тӗрӗс мар пурӑннине пула чылай асапланма тиврӗ мана. Мӗн кӑна тумӑттӑм-ши ҫӗнӗрен ҫуралас пулсан! Каялла таврӑнса пӗтӗмпех ҫӗнӗрен пуҫлас пулсан, эпӗ пачах урӑх ҫулпа каймалла!“ — тенӗ пулӑттӑр.

Ҫак сӑмахсем сирӗншӗн ҫӗнӗ мар пулсан, ҫак шухӑшсем сирӗн пуҫӑра пыра-пыра кӗнӗ пулсан, эпӗ сире калама ҫук чаплӑ хыпар пӗлтеретӗп: эсир ҫӗнӗрен ҫуралма пултаратӑр, тенӗ Иисус Христос! Эсир, хӑвӑр ӗмӗтлененнӗ пекех, ҫӗнӗ, лайӑх никӗс илме пултаратӑр. Эсир хӑвӑрӑн ҫылӑхлӑ та хӑвӑра йӑлӑхтарса ҫитернӗ „эпӗ“рен уйӑрӑлса, пачах ҫӗнӗ ҫын, таса та канӑҫлӑхлӑ ҫын, пулса тӑма пултаратӑр.

Сирӗн иртнӗ пурӑнӑҫӑр ҫав тери таса мар пулнӑ пулсан та, паянхи пурӑнӑҫ ҫав тери савӑнӑҫсӑр пулсан та, пуласлӑх темле пит шанчӑксӑр туйӑнать пулсан та — ҫак йывӑрлӑхран тухмалли май пур. Шанчӑклӑ, ӗмӗрлӗх ҫул.

Анчах вăл пĕрре. Сирĕн суйламалли кăна юлать. Сирĕн халĕ пач урăх çул çине, малтанхи тĕллевсĕр те усăсăр çултан тĕпрен уйăрăлса тăракан çĕнĕ çул çине, тухмалла.

Эсир малтанхи пекех мĕскĕн, кăмăлсăр, хăравçă, телейсĕр, хăвăршăн хăвăр та йĕрĕнчĕк çын пулса юлма та пултаратăр, анчах халех çĕнĕрен çуралма та татăклă шухăш тума пултаратăр. Çак самантрах хăвăрăн çылăхлă пурăнăçăра пăрахса çĕнĕ, пачах çĕнĕ те тĕрĕс пурăнăç пуçлама пултаратăр. Иисус Христос сирĕнтен чăн-чăн çын тума сăмах парать, халех шухăш татăр çавăн пек çын пулма.

„Çĕнĕрен çураласси патне мĕнле майпа çитес-ха? Çĕнĕрен мĕнле çуралас ман? Мĕнле майпа пурăнăçа çĕнĕрен пуçласа ямалла?" — тейĕр эсир. Палестина çĕрĕнче Иисус Христоса Никодим шăпах çак ыйтусене панă. Çĕнĕрен çуралмалла тени вăл, çĕнĕлле пурăнма пуçлассипе, пурăнăçăн çĕнĕ страницине уçассипе е тӳрленессипе танлаштарсан, питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эпир куртăмăр ĕнтĕ. Библи вĕрентнĕ тăрăх, эсир çак тĕнчене ӳт-тирлĕ килсе çуралнă, анчах чунăрпа çылăхлă çуралнă. Библи: „Эсир, хăвăр айăпăрсем тăрăх, çылăхăрсем тăрăх вилнĕччĕ", тесе вĕрентет (Ефес. 2:1).

Библи вĕрентнĕ тăрăх, сирĕн çылăхлă та вилнĕ несĕллĕхĕрте пурăнăç аталанăвĕ çук. Çылăхлă çуралса эсир тӳрĕ пурăнăç тума пултараймастăр. Нумай çын чунпасывлăшпа çĕнĕрен çуралмасăрах ырă, таса, тӳрĕ пурăнăçпа пурăнма тăрăшать, анчах ниепле те майĕ тухмасть. Виле пурăнăç кӳме пултараймасть. Библи: „Тунă çылăхран вилĕм пуçланать", — тесе вĕрентет (Иак. 1:15). Сывлăшпа эпир пурте вилнĕ çынсем.

Сирĕн кивĕ çынлăхăр Турра пăхăнма пултараймасть. „Хăй ăсне шанакан çын Турă Сывлăшĕ пĕлтернине йышăнмасть: Турă Сывлăшĕ пĕлтернине вăл ăссăр сăмах

вырӑнне хурать, ӑна ӑнласа илме те пултараймасть, мĕншĕн тесен ун ҫинчен сывлӑш майлӑ шухӑшлама кирлĕ“ (1 Кор. 2:14). Акӑ мĕнле вĕрентет Библи. Хамӑр пурӑнӑҫа илсессĕн, эпир, чӑннипе, пĕрмай Турӑпа хирĕҫетпĕр. Эпир Турӑ законне пӑхӑнмастпӑр, пӑхӑнма та пултараймастпӑр, кун ҫинчен Рим ҫыннисем патне янӑ ҫырура (8:7) каланӑ.

Библи вĕрентнĕ тӑрӑх, пирĕн малтанхи ҫынлӑхӑмӑр витĕрех айӑпланса пĕтнĕ. Ура тупанĕнчен пуҫласа пуҫ тўпине ҫитиччченех унӑн сывӑ вырӑн ҫук; кĕсен-ҫӑпан, пӑнчӑсем, тасатман, ҫыхман, йывӑҫ ҫӑвĕ сĕрсе ҫемҫетмен пўрлĕ сурансем (Исаия 1:6). „Этемĕн чĕри пуринчен те ултавлӑрах, питĕ пӑсӑлнӑ тата вӑл“ (Иер. 17:9). Ҫак пӑсӑклӑх, ҫак пӑсӑласлӑх пĕтĕмпех ўт кĕленипе, ўтшĕн тӑрӑшнипе пулса пырать.

Библи пирĕн авалхи несĕллĕх — хӑйне юратакан несĕллĕх тесе вĕрентет. Вӑл хӑйне хӑй улӑшӑнса ҫĕнелме пултараймасть. Библи вĕрентнĕ тӑрӑх, эпир ҫўлтен ҫуралнӑ чухне хамӑр ҫинчен авалхи Адама илсе пӑрахатпӑр е хывса хуратпӑр, анчах тўрлетсе ҫĕнетместпĕр. Пирĕн „авалхи этеме“ аталанни мар, пӑталани кирлĕ. Иисус Христос каланӑ: „Эсир тирĕкĕр-чашӑкӑр тулашне тасататӑр, ӑшне вӑрласа тунипе, улталаса илнипе тултаратӑр“, тенĕ (Матф. 23:25).

Библи вĕрентнĕ тӑрӑх, эпир хамӑр ҫĕнĕрен ҫуралнине туйса илмесĕр те Ҫўлти Патшалӑха кĕрейместпĕр. Иисус Христос тата татӑклӑнрах каланӑ: „Сирĕн ҫўлтен ҫуралмалла“, тенĕ (Иоан. 3:7). Кунта уҫӑмсӑрри, ҫавӑн майлӑрах тесе калани нимĕн те ҫук. Ҫўлти Патшалӑха кĕрес текенĕн ҫўлтен ҫуралмалла.

Ҫӑлӑнӑҫ вӑл хам малтан мĕнле пулнине тўрлетни мар, вӑл ҫĕнĕ „эпĕ“, ӑна Турӑ тўрĕ пулма, чӑннипех таса тӑма пултарнӑ. Ҫĕнĕрен ҫурални вӑл хамӑрӑн этемлӑхĕмĕре е

чĕремĕре улăштарни мар. Çӳлтен çурални вăл-чăннипех те çĕнĕрен çĕкленни, пачах çĕнĕ çынлăх илни. Ку вăл иккĕмĕш хут çурални. „Сирĕн çӳлтен çуралмалла“.

Çыннăн авалхи несĕллĕхĕнче Турра юрăхли нимĕн те çук. Унта пĕр сывă вырăн та çук. Вăл, Христос хыççăн кайма, питех те начар. „Çавăнпа эсир хăвăр тăвас тенине тăваймастăр“ (Гал. 5:17). Ӳтшĕн пурăнакансем Турра юрама пултараймаççĕ. „Пĕр çăлкуçĕнченех тутлă шыв та, йӳçĕ шыв та юхса тухать-и? Эй, тăванăмсем, смоква йывăçĕ çу йывăçĕ çимĕçне пултараймасть; иçĕм çырли йывăçĕ те смоква çимĕçне тăваймасть; çавăн пекех, пĕр çăлтанах тăварлă шывпа тутлă шыв юхса выртаймасть“ (Иак. 3:11-12).

Авалхи этеме римлянсем патне янă çырура çапла çырса кăтартнă: „Вĕсен карланкисем уçă тупăк, чĕлхисемпе улталаса калаçаççĕ, тутисем çинче аспидăн вĕлерекен сĕлеки, вĕсен çăварĕнче усал сăмах каласси, хурлантарасси туллиех. Вĕсен урисем юн тăкма кайма çăмăл; вĕсем çĕмĕрсе, хирсе анчах çӳреççĕ; вĕсем канăçлăх çулне пĕлмеççĕ; вĕсен Турăран хăрасси çук“ (Римл. 3:13-18). Çавăн пек карланкăсене, чĕлхесене, çăварсене, урасене, куççене эсир мĕнле майпа тӳрлетме е çĕнетме, е улăштарма пултарайăр? Куна тума май çук. Иисус Христос çакна пĕлнĕ, çавăнпа çапла каланă: „Сирĕн çӳлтен çуралмалла“, тенĕ. Тепĕр тĕлте Библи калать: „Эфиопи çынни хăйĕн тирне, барс хăйĕн пăнчисене улăштарма пултараççĕ-и“, — тет (Иер. 13:23). Рим çыннисем патне янă çырура (7:18) çапла каланă: „Манра, ман ӳтре ырри пурăнманнине пĕлетĕп“, тенĕ. Библире тата: „Пуринпе те килĕштерсе, таса пурăнма тăрăшăр, унсăрăн никам та Турра кураймĕ“, тесе каланă (Евр. 12:14).

Çĕнĕрен çуралса пулакан пурăнăç этем хăй кăна тăрăшнипе пулаймасть. Çын чун-чĕринче Çӳлти Патшалă-

ха кӗме Турӑ ыйтакан тасалӑх ҫук. Ҫӗнӗрен ҫуралсан кӑна таса пурӑнӑҫа пуҫлама пулать. Турӑ пурӑнӑҫӗпе пурӑнас тесен, пирӗнте Турӑ тупсӑмӗ пулмалла.

Ҫӗнӗ пурӑнӑҫ илнине вак укҫапа танлаштарма пулать. Вак укҫан икӗ енӗ пур: пиччӗн енӗ тата тӳнтер енӗ. Ҫӗнӗ пурӑнӑҫ илнин те икӗ ен: Турӑ енӗ тата ҫын енӗ. Ҫын енне эпир куртӑмӑр ӗнтӗ, ун ҫинчен ӳкӗнсе Турӑ енне ҫаврӑнни ҫинчен ҫырнӑ сыпӑкра каласа патӑмӑр, хамӑрӑн мӗн тумаллине пӗлтӗмӗр. Халӗ Турӑ мӗн тунине пӑхса тухӑпӑр.

Ҫын ҫӗнӗрен ҫурални вӑл пӗтӗмпех Святой Сывлӑш ӗҫӗ. Ҫӗнӗрен ҫуралас тесе эсир хӑвӑр нимех те тӑвай-мастӑр. Библи калать: „Хӑйне хапӑл тӑвакансене, Хӑйӗн ятне ӗненекенсене, Вӑл Турӑ ачисем пулма ирӗк панӑ; вӗсем юнран та мар, ӳтрен те мар, арҫынтан та мар, Турӑ урлӑ пулнӑ“, тет (Иоан. 1:12-13). Урӑхла каласан, ӳтпе юнран ҫӗнӗрен ҫуралма ҫук; ҫакӑ ҫӗнӗрен ҫуралассине йӑхран илме ҫуккине пӗлтерет.

Христианствӑна та йӑхран илейместӗр эсир. Сирӗн аҫӑрпа аннӗр те христиансем пулма пултараҫҫӗ, анчах вӗсен ачи христиан пулмасан та пултарать.

Таса ҫырура ҫапла калани те пур: ӳт ыйтнипе ҫура-лаймастӑр эсир. Урӑхла каласан, эсир хӑвӑр ним тума та пултараймастӑр. Эсир вилӗ. Вилнӗ ҫыннӑн пурӑнӑҫӗ ҫук, ҫавӑнпа вӑл ним тума та пултараймасть.

Ҫын ирӗкӗпе те ҫуралаймастӑр эсир. Ҫын майӗсемпе тата унӑн кӑмӑлӗпе ҫӗнӗрен ҫуралма пулмасть. Хӑшӗсем ҫапла шутлаҫҫӗ: вӗсем пӗр-пӗр чиркӗве ҫӳресен, тӗн йӑли-йӗркисене туса пырсан, ҫӗнӗ ҫулта тӳрленме пулсан, хӑйсем тӗллӗнех ҫӳлтен ҫуралаҫҫӗ пулать. Ку пӗтемпех аван та, тӗрӗс те, анчах ҫакӑ ҫӗнӗрен ҫурални мар-ха.

Иисус Христос: „Сирӗн ҫӳлтен ҫуралмалла“, тенӗ. Ку вӑл пирӗншӗн камӑн та пулин мӗн те пулин тумаллине

пĕлтерет. Çын хăйне хăй çуралаймасть. Унăн вара „çуралмалла“. Çĕнĕрен çураласси пирĕн кăмăлтан пачах килмест. Урăхла каласан, çĕнĕрен çураласси — Турă ĕçĕ. Пире Турă çуратать.

Никодим хăй иккĕмĕш хут çураласса ниепле те ăнланма пултарайман. Шикленсе вăл икĕ хутчен: „Мĕнле?“ — тесе ыйтнă.

Çĕнĕрен çураласси пĕлме çук ĕç пек туйăнать пулин те, ăна чăн мар теме çук. Эпир электричество токĕ „мĕнлине“ ăнланмасан та пултаратпăр, анчах эпир вăл пирĕн çуртсене çутатнине, пире телевизор курма, радио итлеме май панине пĕлетпĕр. Сурăх хăй çинче çăм, ĕне — хăй тирĕ çинче кĕске те хытă çӳç, кайăк хăй тĕкĕсене мĕнле майпа ӳстернине пĕлместпĕр эпир, анчах та шăпах çапла пулса иртнине пĕлетпĕр. Нумай вăрттăнлăха пĕлместпĕр эпир, анчах ĕненӳпе çакна аван пĕлетпĕр: хамăр çылăхăмăрсенчен ӳкĕнсе Иисус Христоса ĕненме пуçланă самантра эпир çӳлтен çуралатпăр.

Çакă вăл Турă пурăнăçĕпе этем чунĕ пĕрлешни. Этем чĕрине Турă кĕрсен тин эпир Турă ачисем пулса тăратпăр. Турă пирĕн ăшăмăра Святой Сывлăш вĕрсе кӳртнĕ. Святой Сывлăшпа пирĕн чĕремĕрсене Иисус Христос кĕрсе вырăнаçать те, эпир ĕмĕрлĕхех Турăпа пĕрлешетпĕр. Енчен те эсир çӳлтен çуралтăр пулсан, Турă пурăннă чухне эсир те пурăнатăр, çав кунран пуçласа эсир Унпа Ун пурăнăçне пайлатăр.

Çӳлтен çуралсан, сирĕнте тĕрлĕ улăшăнусем пулса иртеççĕ. Пĕрремĕшĕ, курас тата ăнланас пултарулăх вăйланать. Турă Сăмахĕнче çапла каланă: „Çутта тĕттĕмрен çутăлса тухма хушнă Турă пирĕн чĕремĕрсене çутатрĕ, пире Иисус Христос урлă Хăйĕн мухтавне пĕлтерсе ыттисене çутатмалла турĕ“, тенĕ (2 Кор. 4:6). Тепĕр тĕлте çапла каланă: „Хăйне пĕлмешкĕн сире ăслăлăх пара-

кан, пĕлекен тăвакан Сывлăшне патăр, сирĕн чĕрĕр куçне уçтăр“, тенĕ (Ефес. 1:18). Малтан айванлăх вырăнне картса кулнă япаласене эсир ĕнтĕ ĕненӳпе йышăнатăр. Сирĕн пĕтĕм шухăш-кăмăл улăшăнать. Халĕ сирĕн шухăшăр Турă тавра аталанса пырать, сирĕн шухăшăр варринче — Турă. „Эпĕ“ тенине малти вырăнтан илсе пăрахнă.

Иккĕмĕшĕ, сирĕн чĕрĕрсенче те пысăк улăшăну пулса иртет. Библи каланă: „Сире çĕнĕ чĕре, çĕнĕ сывлăш парăп; сирĕн ӳтĕртен чул чĕрене илсе, сире этем чĕри парăп“, тенĕ (Иезек. 36:26). Турă каланă: „Вĕсен ăшне хамăн законăма хурăп, ăна вĕсен чĕрисем çине çырăп“, тенĕ (Иер. 31:33).

Сирĕн кăмăл туртăмĕсем те ĕнтĕ тĕпренех улăшăнса çĕнелĕç. Сирĕн çĕнĕ çынлăхăр ĕнтĕ Турра юрататъ, Унпа мĕн çыхăннине пурне те кăмăл курать. Халĕ ĕнтĕ эсир пурăнăçра чи аслине, чи илемлине кăна юрататăр. Киревсĕрлĕхе, тӳрĕмарлăха хапăл тумастăр. Халăх çинчи ыйтусемпе хăвăр йĕри-тавра пулса иртекен ĕçсене урăхла хак паратăр. Сирĕн чĕрĕр тертре пурăнакансене хĕрхенсе тапать.

Виççĕмĕшĕ, сирĕн кăмăлăрпа ирĕкĕр те пачах улăшăнса çĕнелет. Пур ыйтупа та халĕ эсир, сăлтавĕсем улăшăннине кура, пачах урăхла шухăш тăватăр. Библи калать: „Иисус Христоса вилĕмрен чĕртсе тăратнă канăçлăх Турри, тĕрлĕ ырă ĕçсем тутарса, Хăйĕн ирĕкне туса тăма вĕрентсе çитертĕр сире; Иисус Христос урлă Вăл сире Хăйне юрăхлă ĕçсем тутарса тăтăр“, тет (Евр. 13:20-21).

Хăвăр Турăран илекен сирĕн çак çĕнĕ çынлăхăр, несĕллĕх, Турă ирĕкне итлет, ĕнтĕ сирĕн Унăн ирĕкне анчах туса тăрас килет. Эсир пĕтĕмпех, вĕçне çитиччĕнех Ăна пăхăннă. Ку вăл сире хăвăрăн çĕнĕ вырăнăра, çĕнĕ кăмăл-туртăмăра, çĕнĕ пурăнăç йĕркине тума май парать. Сирĕн Турра мухтаса аслăлас килет. Сирĕн, чиркĕве çӳ-

ресе, тĕне тытса тăракансемпе хутшăнас килет. Эсир Библие юратса пăрахатăр. Сирĕн вăхăтăра кĕлтуса Турăпа калаçма парас килет. Сирĕн кăмăл-хавалăр улăшăнса çĕнелет. Малтанхи пурăнăçра эсир нимĕне те ĕненмен пулсан, вăл мĕнпур çылăхăн тымарĕпе никĕсĕ пулнă пулсан, Турă пирки те иккĕленнĕ пулсан, халĕ эсир мĕн тери ĕненетĕр Ăна! Ăна, Ун сăмахне пĕтĕмпе шанатăр.

Сирĕн пурăнăçăрта малтан хăвăра мăнна хуни тĕп вырăнта тăма пултарнă. Сирĕн пуçăрта хăвăра ытлашши юратнăран килекен шухăшсем çавăрăннă, эсир хăвăр аллăрта влаç пуррипе, хăвăр ĕмĕтĕрсемпе, хăвăр тĕллевĕрсемпе мăнаçланнă. Анчах та халĕ çав ĕмĕтсем улăшăннă. Тен, малтан сирĕн пурăнăçăрта курайманлăх хуçаланнă; Сирĕн шухăшăрсем ăмсанупа, çынсене юратманнипе, вĕсене курайманнипе тулса тăнă. Халĕ акă ку та улăшăннă.

Малтан эсир çăмăллăнах суйма пултарнă. Сирĕн шухăшăрсенче, сăмахăрсенче тата ĕçĕрсенче ултавпа икĕпитлĕх нумай пулнă. Халĕ пĕтĕмпех улăшăннă. Малтан эсир ӳт кĕленине туса киленнĕ. Ку та улăшăннă халĕ. Эсир çӳлтен çуралтăр. Тен, эсир шуйттан серепине пĕрре е тепре кĕрсе ӳкме те пултарăр, анчах ĕнтĕ эсир куншăн тӳрех кулянса ӳкетĕр, çылăха кĕнĕшĕн ӳкĕнме пуçлатăр, каçару ыйтатăр, мĕншĕн тесен эсир çĕнĕрен çуралса тăнă. Эсир тĕпрен улăшăнса çĕнелнĕ.

Сыснапа сурăх путекки çинчен калакан тахçанхи калав аса килчĕ. Пĕр фермер килне сысна илсе пырать. Вăл ăна çуса тасатнă, ун ури чĕрнисене сăтăрса çутатнă, духи сапнă, мăйне хитре хăйю çыхнă та хăна пӳлĕмне кӳртсе лартнă. Сысна питех те илемлĕн курăннă. Фермерпа ун патне килнĕ тусĕсем хушшинче вăл хăй вырăнĕнче пек туйăннă. Сысна çав тери таса пек курăннă. Пĕр хушă ăна пурте юратса тăнă. Анчах та алăк уçăлса кайсанах, сысна

тула чупса тухнӑ та куҫ тӗлне пулнӑ пӗрремӗш таса мар кӳлленчӗкех кӗрсе выртнӑ. Мӗншӗн апла тунӑ-ха вӑл? Мӗншӗн тесен чӗрипе вӑл сыснах пулса юлнӑ-ҫке. Ҫуса тасатнипе вӑл ҫиелтен пӑхма кӑна улӑшӑннӑ, шалтан улӑшӑнман.

Халӗ сурӑх путеккине илер. Малтан ӑна хӑна пӳлӗмне илсе кӗрӗр, унтан кил хушшине кӑларса ярӑр. Вӑл кӳлленчӗкрен, пылчӑклӑ вырӑнсенчен пӑрӑнса иртет. Мӗншӗн тесен вӑл — сурӑх путекки.

Пӗр-пӗр ҫынна, тумлантарса, чиркӗве илсе пырса малти рете тӑратсан, вӑл ҫветтуй пек курӑнӗ. Вӑл хӑйне аван пӗлекен ҫывӑх тусӗсене те тӗлӗнтерсе ярӗ. Анчах та тепӗр кунне ӑна ӗҫе ярсан, е вӑл киле юлсан, е тепӗр шӑматкун унпа клуба кайсан, хайхи ҫынна тӳрех палласа илетӗн. Вӑл хӑй мӗнле пулнӑ, ҫавӑн пекех. Мӗншӗн ҫакӑн пек-ха вӑл? Мӗншӗн тесен чунӗ-кӑмӑлӗ улӑшӑнман. Вӑл ҫӗнӗрен ҫуралса тӑман.

Ҫӗнӗрен ҫуралнӑ самантра, ҫӳлтен ҫуралнӑ чухне, хӑвӑр ҫӗнӗ ҫын пулса Турӑ панине илнӗ чухне, Турӑ сире тӳрре кӑларать. Тӳрре кӑларасси — Турӑ ӗҫӗ. Тӳрре кӑларса Турӑ усал ҫынна та, халлӗхе вӑл ҫылӑхлӑ пулсан та, ырӑ ҫын тесе пӗлтерет. Эсир нихӑҫан та ҫылӑха кӗмен пекех, Турӑ сире Хӑй умне тӑратать.

Павел апостол калать: „Турӑ суйласа илнисене кам айӑплӗ? Вӗсене Турӑ тӳрре кӑларать“, тет (Римл. 8:33). Сирӗн ҫылӑхӑрсене каҫарнӑ: „Турӑ пирӗн мӗнпур ҫылӑхӑмӑра тинӗс шывӗсем айне пӑрахрӗ“ (Мих. 7:19). „Ман пур ҫылӑха та Вӑл Хӑй ҫурӑмӗ урлӑ илсе ывӑтрӗ“ (Исаия 38:17). Ҫапла пур ҫылӑха та шӑлса ывӑтнӑ. Эсир Турӑ умӗнче парӑмлӑ тӑратӑр, анчах та сире каҫарнӑ, эсир Турӑпа килӗшӳ тунӑ. Ҫак таранччен эсир, тӗрӗссипе, Туррӑн тӑшманӗ пекех пулнӑ. Библи калать: „Ҫитменнине тата эпир, хамӑра ҫӑлакан Иисус Христос урлӑ халӗ

Турăпа килĕшсе, Унпа мухтанатпăр та“, тет (Римл. 5:11). Унтан та ытларах, сире халĕ Турă кил-йышне йышăннă, эсир халĕ Турă ачи. „Хайĕн аслă ырăлăхĕ мухтавлă пултăр тесе, Вăл пире Хăй ирĕкĕпе кăмăл туса Иисус Христос урлă Хăй валли ывăллăха илмелле туса хунă“ (Ефес. 1:5). Халĕ ĕнтĕ эсир Пĕлĕт çинчи кил-йыш çынни. Сирĕнте патша юнĕ чупать. Эсир патшасен патшин ачи. Сирĕн куçăрта çĕнĕ хĕлхем çунать, эсир халь-халь вĕçсе каяс пек утатăр, сирĕн сăнăрта кулă йăлкăшать. Эсир улăшăннине сирĕн тусăрсем те асăрхаççĕ. Эсир çӳлтен çуралнă.

Эсир çӳлтен çуралсанах тĕрлĕ улăшăнусем пулса иртеççĕ. Пĕрремĕшĕ, çылăх çине урăхларах куçпа пăхма пуçлатăр эсир. Эсир çылăха, ăна Турă курайман пек, курайми пулатăр. Эсир ун çине йĕрĕнсе те кураймасăр пăхатăр.

Техасри Хьюстон хулинче пирĕн пухусенчен пĕринче пĕр çын çӳлтен çуралма тивĕç пулчĕ. Унăн эрех лавкки пурччĕ. Тепĕр кун лавкка алăкĕ çинче пĕлтерӳ çакăнса тăрать: „Лавкка хупă“.

Пĕррехинче мана пĕр çын çинчен каласа пачĕç. Вăл чиркӳри халăха Евангелипе паллаштарнă чухне çӳлтен çуралнă. Вăл хулара эрех ĕçме юратнипе палăрса тăнă. Чĕнессе ăна „Ватă Джон“ тесе чĕннĕ. Тепĕр кунне ирхине ăна тахăшĕ тĕл пулнă та: „Ырă кун, „Ватă Джон!“ — тенĕ.

„Кампа калаçатăр эсир? Эпĕ ĕнтĕ Ватă Джон мар. Халĕ эпĕ Çĕнĕ Джон“, — тенĕ вăл.

Унăн пурăнăçĕ тĕпрен улăшăнса çĕнелнĕ.

Иккĕмĕшĕ, хăвăрăн Турра пăхăнас килнипе эсир хăвăр çӳлтен çуралнине пĕлетĕр. „Хамăр Ăна пĕлнине эпир Унăн заповечĕсене тытса тăнинчен пĕлетпĕр“ (1 Иоан. 2:3).

Виççĕмĕшĕ, эсир тĕнчерен уйăрăлса тăратăр. Библи калать: „Тĕнчене те, тĕнчере мĕн пуррине те ан юратăр, тĕнчене юратакан Атте Турра юратмасть“, тет (1 Иоан. 2:15).

Тăваттăмĕшĕ, хăвăрăн çывăх çыннăрсене эсир çĕнĕлле юратма пуçлатăр. „Эпир тăванăмăрсене юрататпăр, çавăнпа эпир вилĕмрен чĕрĕлĕхе куçнă, ăна пĕлсе тăратпăр. Тăванне юратман çын вилĕм аллинче тăрать“, тенĕ Библире (1 Иоан. 3:14).

Пиллĕкмĕшĕ, эпир ĕнтĕ текех çылăха кĕместпĕр. „Турăран çурални никам та çылăха кĕменнине эпир пĕлетпĕр“ (1 Иоан. 5:18). Çылăх тумалли ĕçсене эпир урăх хутшăнмастпăр.

Техасра пĕр çын çинчен халап çӳрет. Çав çын кашни ир хăйĕн лашине хупах алăкĕ умне кăкарса хăварнă. Пĕррехинче хупах хуçи урамалла пăхнă та лашана вырăнти чиркӳ алăкĕ умне кăкарнине курах кайнă. Лаша хуçи урампа пынине курса, вăл унран çапла ыйтнă: „Кала-ха, мĕншĕн эсĕ хăвăн лашуна паян чиркӳ алăкĕ умне кăкартăн?“ — тенĕ.

Лешĕ ун еннелле çавăрăннă та: „Ĕнер каçхи кĕлĕре эпĕ Турра ĕненме пуçларăм, халĕ вара ман лаша вырăнĕ те улăшăнчĕ“, — тенĕ.

Акă мĕн вăл çĕнĕрен çурални. Акă мĕн вăл Турра ĕненме тытăнни. Вăл эсир хăвăр вырăнăра улăштарнине пĕлтерет.

ВУНИККĔМĔШ СЫПĂК

# ШАНĂÇЛĂХПА ÇĂЛĂНĂÇ

„Çакна эпĕ сирĕн пата, Турă Ывăлĕн ятне ĕненекенскерсем патне, çырса ярса Турă Ывăлне ĕненнĕ тăрăх сирĕн ĕмĕрлĕх чĕрĕлĕх пуррине пĕлтерес терĕм".

1 Иоан. 5:13

Кашни эрнерех эпĕ питĕ нумай çыру илетĕп. Вĕсенче çынсем христиан пурăнăçĕ пирки иккĕленни, ăна ĕненсех кайманни çинчен пĕлтереççĕ. Нумай çырăвне чĕререн ĕненекен çынсемех çырнă, анчах та вĕсем Христоса ĕненнинче савăнăç курмаççĕ, шансах та каймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем христиан пурăнăçĕн тĕп тĕрĕслĕхне ăнлансах çитереймен.

Çавăнпа та çак сыпăкра эпир хамăрпа мĕн пулса иртнине пĕтĕмлетер. Эпир ӳкĕнӳ, ĕненӳ тата çӳлтен çуралнии мĕн иккенне пĕлтĕмĕр. Халĕ тепĕр ыйту тухса тăрать: çакă пĕтĕмпех манпа пулса иртнине мĕнле пĕлмелле-ха манăн? Эпĕ нумай çынпа калаçса курнă, вĕсем хăйсем ӳкĕннĕ, ĕненме пуçланă, çӳлтен çуралнă, анчах хăйсем Турă енне çавăрăннине шансах пĕтерейменççĕ.

Атьăр, хамăр мĕн вĕреннине, пĕлнине тепĕр хут пăхса тухар.

Чăн малтан çакна асра тытмалла: христиан е Турра ĕненекен пулас теекен çын хăйĕн пурăнăçне татăклăн тепĕр еннелле çавăрса ярать, анчах та хăшĕ-пĕри çакна тума чылай хушă хатĕрленет, кайран, хăй сисмесĕрех, Турра ĕненме пуçлать.

Тавлашу ан пултăр тесе, малтанах каласа хурам, ятарлă пĕлÿ илнипе христиан пулма çук. Темиçе çул каялла пĕр чаплă проповедник çапла каларĕ: „Пирĕн хамăрăн çамрăк ăрăва христианство майлă вĕрентсе ÿстермелле, хăйсем тахçан Турра ĕненменни пирки шухăшлама та ан пултарччăр вĕсем“, — терĕ. Тĕн воспитани философийĕн пысăк пайĕ çак шухăш çинче никĕсленсе тăрать те ĕнтĕ. Çавăнпа та тĕн вĕрентĕвĕнче хăшĕ-пĕрисем христиан шухăш-туймĕн тупсăмне шута та илмеççĕ.

Чаплă шухăшлавçă Стербак профессор пирĕн ĕмĕр пуçламăшĕнчех çакна асăрханă: Турă ĕçне туса пыракансен ялан тенĕ пекех хăйсем Турра мая килнĕ тапхăрта чунĕ-чĕрисенче питĕ нумай тÿссе ирттернĕ. Вăлах тата çакна та асăрханă: çав çынсем, ача чухне христиансен çемйисенче ÿсмен те е Христос тĕнĕ çинчен кăшт кăна илткеленĕ пулнă.

Ку сăмахсем — тĕн вĕрентĕвне хурлани мар, анчах çав вĕрентĕве тĕрĕс мар çулпа янине тиркени теме пулать: çын хăй çĕнĕрен çуралнă чухне чун-чĕринче мĕн тÿссе ирттернине нимĕн те çитеймĕ.

Хăй вăхăтĕнче тĕне çав тери хытă тытса пурăннă çынсенчен пĕрине, Никодима, Иисус Христос çапла каланă: „Кам çÿлтен çуралмасть, вăл Турă Патшалăхне кĕреймĕ“, тенĕ (Иоан. 3:3). Никодим Святой Сывлăшпа çĕнелсе çуралассине хăй тĕне тĕплĕн пĕлнипе улăштарма пултарайман; ку тĕлĕшрен пирĕн ăру та нимĕн чухлĕ те мала каяйман. Нĕрсĕр хурт нумай хушă пĕр улăшăнмасăр тенĕ пек хурт кипкинче выртать. Анчах та, темĕнле вăраххăн ÿссен те, пĕр-пĕр кун çав кипкерен калама та çук илемлĕ лĕпĕш вĕçсе тухать. Вăраххăн ÿснĕ кунсем пысăк пĕлтерĕшлĕ, çапах та пĕр илемсĕр хуртран илемлĕ пурăнăç çуралнă самантпа улăштарма çук ăна.

Тĕне тытса тăракансенчен нумайăшĕ хăйсем Христо-

са пĕлме тытăннă кунпа сехете тĕп-тĕрĕс палăртса парайма̧çç̧ĕ. Анчах та вĕсен ĕненĕвĕ, вĕсен пурăнăçĕ вĕсем ăнланса е ăнланмасăрах Христос хыçĕнчен кайни çинчен калать. Аса илĕç-и вĕсем е çук, анчах та вĕсен пурăнăçĕнче вилĕмпе чĕрĕлĕхе уйăрса тăракан йĕр урлă ярса пуснă кун пулнах.

Кашни çыннăнах хăй Турра ĕненни пирки иккĕленсе шухăшлани те, шанăçа çухатни те пулать пуль. Моисей Синай тăвĕ çине Турăран закон сăмахĕсене çырнă чул хăмасем илме улăхсан, вăл таврăнасса чăтăмсăр кĕтекен еврейсем ăна пĕр вăхăта çухатаççĕ. Кĕтсен-кĕтсен, иккĕленмех тытăнаççĕ: „Çак пире Египет çĕрĕнчен илсе тухакан çынна, Моисее, темĕскер пулчĕ ĕнтĕ, пĕлместпĕр“, теççĕ (Тух. 32:1). Вĕсем вара иккĕленсе, шанăçа çухатса, Турăран пăрăннă. Нумай çынна çак иккĕленӳ туйăмĕ пĕтерет те. Иккĕленĕвĕ вара тĕне тытса пурăнакан чăнсăн христиан мĕнле шухăш-туйăмпа тăнине тĕрĕс мар ăнланнинчен килет. Пĕрисем, ахăртнех, Турă майлă шухăш-туйăмăн (курăнми чун асапĕ-терчĕпе савăнăçĕн) тупсăмне ăнланмаççĕ, теприсем, тĕрĕссине пĕлеймесĕр, Таса Çырура çуккине шыраççĕ-тĕр.

Çĕнĕ Сăмахра „ĕненӳ“ ăнлава, çынна çăласси çинчен каланă май, виççĕр хут ытла асăннă. Еврейсем патне янă çырура: „Турă патне пыраканăн Турă пуррине, Хăйне шыракансене Вăл ырăлăх кăтартса тавăрнине ĕненсе тăмалла“, тесе каланă. Çав пуплеврех тата: „Ĕненмесĕр Турра юрама çук“, тенĕ (Евр. 11:6).

Пирĕн вăхăтра Христос тĕнне тытса пыракан çынсем хушшинче Турă майлă шухăш-туйăмпа тăрасси самаях кансĕр, тата вĕсен хăйсен шанăçсăрлăхĕ те пĕчĕкех мар, мĕншĕн тесен эпир икĕ ăнлава пăтраштаратпăр: ĕненӳ тата туйăм.

Ĕненӳ яланах пĕр-пĕр япалапа çыхăннă: эпир ĕненет-

пӗр пулсан, мӗне те пулин ӗненетпӗр. Ҫав „мӗне те пулине“ эпӗ факт (пулни, пурри) тесе каланӑ пулӑттӑм. Ҫавӑнпа та эпӗ сире виҫӗ сӑмах калатӑп, вӗсен яланах пӗр-пӗрин хыҫҫӑн тӑмалла, вӗсен вырӑнӗсене ылмаштарма юратмасть. Ҫав виҫӗ сӑмаха калама ирӗк парсамӑр мана, — вӗсем сире иккӗленӳрен ӗненӳпе тӑракансен пурӑнӑҫне шанас ҫул ҫине илсе тухӗҫ. Акӑ вӑл виҫӗ сӑмах: факт, ӗненӳ тата туйӑм. Ҫак сӑмахсем яланах пӗр-пӗрин хыҫҫӑн тӑмалла, ку питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Енчен те эсир ҫак сӑмахсене ылмаштарса лартсан, пӗрине манса ун вырӑнне теприне кӳртсе лартсан, сирӗн шанӑҫ пӗтме пултарать, эсир вара тӗттӗмре хыпашласа утакана, савӑнӑҫсӑр та шанчӑксӑр ҫынна аса илтерӗр, ун чухне хӑйюллӑн: „Кама ӗненнине эпӗ пӗлетӗп“, тесе калаймӑр (2 Тим. 1:12).

Эсир, пӗтӗмӗшле каласан, ҫылӑхран ҫӑлӑннӑ пулсан, эсир, Таса Ҫырура каланӑ пек, Иисус Христосӑн ырӑ хыпарне ӗненнипе ҫӑлӑннӑ. Ан тив, малтан сире ҫакӑ пӗр хӑнӑхнӑ чӑнлӑх палли евӗр ҫеҫ туйӑнтӑр, анчах та урӑхла ҫул ҫукки вӑл факт. Библи калать: „Эпӗ сире чӑн малтан ак ҫакна, хама пӗлтернине каласа патӑм. Ҫыру ҫинче ҫырнӑ пек, Христос пирӗн ҫылӑхӑмӑрсемшӗн вилнӗ, Ҫырура каланӑ пек, Ӑна ҫӗре пытарнӑ, Вӑл виҫҫӗмӗш кунне чӗрӗлсе тӑнӑ“, тет (1 Кор. 15:3-4). Библире каланӑ пек, ҫак пулнӑ факта ӗненсен, эпир ҫӑлӑнӑҫ тупатпӑр. Христос ӗҫӗ — вӑл факт, Ӑна хӗрес ҫумне пӑталани — вӑл факт, Унӑн тупӑкӗ — вӑл факт, Вӑл чӗрӗлсе тӑни — вӑл факт.

Ҫук япалана ӗненме те май ҫук. Евангели ҫынсем ӗненнипе ҫырӑннӑ. Мункун пӗрремӗш ирӗнче тупӑк пушӑ пулнӑ, анчах та темиҫе ӗненекен ҫын ҫакна ӗненнипе мар пушӑ пулнӑ вӑл. Факт ӗненӳрен яланах малта тӑрать. Ӗненме япала кирлӗ, вара тин ӑна ӗненме пулать.

Библи сире ӗненме май ҫук япалана ӗнентересшӗн

мар, вӑл сире историре пулнӑ факта, ҫав историре пулса иртнӗ пур ӗҫрен те паллӑраххине ӗнентересшӗн. Библи сире Христос ӗҫне, ҫылӑхшӑн тата ҫылӑха кӗнӗ ҫынсемшӗн тунӑ ӗҫне, ӗненме хушать, — вӑл кашни ҫыншӑн, Ӑна хӑйӗн чунне парса Ун хыҫҫӑн кайма кӑмӑл тунӑ кашни ҫыншӑн, пысӑк пӗлтерӗшлӗ, Ӗмӗрлӗх ҫӑлӑнӑҫ тупас тесе Ӑна шанни вӑл ҫав факта шанниех.

Ӗненӳ хайхи ҫак сӑмахсем хушшинче иккӗмӗш вырӑнта тӑрать. Паллах, ниме ӗненме ҫук ҫӗрте ӗненӳ ҫук. Ӗненӳ валли те объект е япала, ӗненӳ тӗллевӗ кирлӗ. Христиан ӗненӗвӗн объекчӗ вӑл — Иисус Христос. Ӗненӳ вӑл Иисус Христос ыйтнипе килӗшни кӑна мар. Ӗненӗве ҫыннӑн ирӗкӗ те кӗрет. Вӑл ҫыннӑн кӑмӑлӗнчен те килет, вӑлах ӗҫ тума хистет. Эпир чӑн-чӑнах ӗненетпӗр пулсан, эпир пурӑнатпӑр та. Ӗненӳ ӗҫсемсӗр вилӗ. Ӗненӳ ҫын пӗтӗмпех Христоса параннине, вӑл мӗн ыйтнисене пӑхӑннине пӗлтерет. Ӗнӗнӳ хӑвӑн ҫылӑхна йышӑннине, Христос енне ҫавӑрӑннине пӗлтерет. Эпир Христоса хамӑрӑн пилӗк туйӑмпа пӗлейместпӗр, анчах та эпир Ӑна хамӑрӑн улттӑмӗш туйӑмпа пӗлетпӗр, ҫав улттӑмӗш туйӑма кашни ҫыннах Турӑ панӑ, вӑл — ӗненме пултарни.

Туйӑм ҫак виҫӗ сӑмах хушшинче юлашкинчен тӑракан сӑмах. Пирӗн шухӑшӑмӑрсенче те вӑл юлашки вырӑнтах тӑтӑр. Нумай хумханупа иккӗленӳ мӗншӗн ҫуралать-ха? Мӗншӗн тесен, чӑп-чӑн ҫӑлӑнӑҫ шыракан ҫынсем Турӑ енне ҫавӑрӑниччен малтан питӗ вӑйлӑ хумханса ирттермелле тесе шутлаҫҫӗ.

Ҫӑлӑнӑҫа ҫакӑн пек шыракансем Библи пире мӗн курса, мӗн тӳссе ирттерме пама пулнине пӗлесшӗн ӗнтӗ. Эсир ырӑ хыпар илтрӗр, эсир хӑвӑр ҫылӑхлӑ ҫын пулнине, сире хӑтаракан кирлине ӑнланса илтӗр, эсир куратӑр ӗнтӗ, сирӗн пурӑнӑҫӑр вӑл — Турӑ Сывлӑшӗсӗр тӑрса юлнӑ чӗр инкек кӑна, эсир хӑвӑра улӑштарас, лайӑхлатас

тесе мĕн-мĕн кăна туса пăхмарăр пулĕ — çакă пĕтĕмпех кăлăхах пулчĕ, ăнăçсăр вĕçленчĕ. Шанчăк пĕтсе çитнине пула çăлăнăç шыраса эсир Христос еннелле çаврăнтăр. Вăл сире çăлăнăç кÿрессе шанатăр. Эсир час-часах Вăл çылăхлă çынсене чĕнсе каланине вулатăр, унта Вăл çапла каланă: „Эй, асапланакансем, хĕн-хур куракансем, пурсăр та ман патăма килĕр, Эпĕ сире лăплантарăп“, тенĕ (Матф. 11:28). Эсир Вăл сăмах панине те вуланă: „Хам патăма килекене Эпĕ хăваласа кăлармăп“ (Иоан. 6:37), тата „...ĕçесси килекен Ман патăма килтĕр те ĕçтĕр“ (Иоан. 7:37).

Хамăра мĕн тÿссе курмаллисем кĕтнине пĕлес тесе, Çĕнĕ Сăмаха эпĕ питĕ тимлесе вуларăм. Çĕнĕ Сăмахра ку тĕлĕшрен пĕр япала анчах каланă. Мĕн курса мĕн тÿсмелли, мĕн илмелли, мĕн туймалли пĕрре кăна, вăл ĕненÿ шухăш-туйăмĕпе тăрасси. Анчах та нумайăшĕ тата темĕн урăххине, тен, йывăртараххине, кĕтет, çавнашкалли кăна вĕсене чăн-чăн савăнăç кÿрес пек туйăнать пулас. Библи вара пире: „çын ĕненÿпе тÿрре тухать“, туйăмпа мар, тесе вĕрентет. Çын Христосăн хĕрес çинче тунă ĕçне шанса çăлăнать. Хăйĕн туйăмĕсене хĕрÿлентерсе яни, кĕлĕре-мĕнре каçăхса тăни çăлăнăç кÿмест ăна.

Эсир мана, тен, хирĕçлеме пăхăр: „Туйăм пирки мĕнле-ха вара? çăлăнасса ĕненнинче нимĕнле туйăм та çук-им?“ — тесе ыйтăр. Паллах, туйăмсемсĕр мар. Анчах эпир туйăмсемпе çăлăнмастпăр. Хуть те мĕнле туйăм тÿссе ирттерсен те, вĕсем çăлăнăç хыççăнхи туйăмсем, вĕсем хăйсем тĕллĕн нимĕнле çăлăнăç та памаççĕ.

Хăçан та пулин эпĕ хама, çылăхлăскере, Христос юратнине туйса илсен, эпĕ хам та Ăна юратупа тавăратăп — юрату вăл яланах туйăмпа çыхăннă. Христос юратни вăл этем юратăвĕсенчен чи çÿлерех тăракан туйăм. Ку юрату „эпĕ“ сăмахран ирĕкре тăрать. Библи:

„Юратакан хăрамасть, хытă юратни хăрассине пĕтерет“, тет (1 Иоан. 4:18). Христоса юратакансем Ăна çав тери хытă шанаççĕ, çакă вĕсене хăрас туйăмран çӳле çĕклет.

Хăйĕн вилĕмĕпе Иисус Христос вилĕме те, çылăха та пĕтĕмпех çĕнтернинине ăнланса, эпĕ хăрама пăрахатăп. Турă ачисен „...ӳтпе юн пуртан, Вăл Хăй те ӳтлĕ, юнлă пулса тăнă; вилĕм пуçлăхне, шуйттана, Хăй вилсе вăйран ярас тенĕ, вилĕмрен хăранипе ĕмĕр тăршшĕпе чура пулса пурăнакан çынсене хăтарас тенĕ“ (Евр. 2:14-15). Паллах, çакă та туйăм. Хăрани те туйăмсен шутнех кĕрет, хăюлăхпа тата шанăçпа вилĕм умĕнче хăранине çĕнтерни те туйăмпа пурăнăç ĕçĕ. Тата тепĕр хут калатăп, пире хăюлăхпа шанăç туйăмĕ çăлăнăç кӳмест, пире ĕненӳ çăлать, хăюлăхпа шанăç вара эпир Христоса ĕненме пуçланă хыççăн çуралнă туйăмсем кăна.

Хăвăн айăпна таса кăмăлпа ăнланса туйни — ку вăл чăннипех те тарăн чун асапĕ. Психологсем ăна айăпсен комплексĕ тесе калană пулĕччĕç, „ăслăн сӳтсе-явса“ çак туйăма пĕтерсе хума та пултарĕччĕç. Анчах та çав туйăм Турă законне пăснинчен килчĕ пулсан, таса кăмăлăн уçă сассине нимĕнле ăнлантару та хупласа хураймĕ. Таса мар кăмăлпа пурăнма тĕрмере ларнинчен те йывăртарах пулнăран ĕнтĕ йĕркесĕр ĕç тăвакансем нумайăшĕ хăйсем ирĕкĕн влаçсен аллине парăнаççĕ.

Библи пире Иисус Христос кăмăла тасатать тесе вĕрентет. „Пăру юнĕпе, качака юнĕпе, тата пăру кĕлне хутăштарса сирпĕтни ирсĕрленнисенĕн ӳчĕсене тасатать пулсан, пĕр айăпсăр Христосăн Святой Сывлăш хавачĕпе Хăй парнене кӳнĕ юнĕ чĕрĕ Турра, чăн Турра ĕçлесе тăмашкăн пирĕн кăмăлăмăра ирсĕрлетекен ĕçсенчен тата тĕплĕнрех тасатĕ“ (Евр. 9:13-14).

Ирсĕрленнĕ кăмăла тасатни, ӳкĕнсе асапланнинчен хăтăлни — çакă та пĕтĕмпех тивĕçлине курса тивĕçлине

тӳсни. Анчах та кӑмӑла тасатни ҫӑлӑнӑҫ памасть сире, сире Христоса ӗненни анчах ҫӑлать, тасалнӑ кӑмӑл вара эсир Турӑпа килӗшӳ тупнӑ хыҫҫӑн килет.

Савӑнӑҫ — туйӑм. Шухӑш-кӑмӑл та — туйӑм. Ыттисене юратни те туйӑм. Пӗтнисене хӗрхенни — каллех туйӑм.

Тата юлашкинчен акӑ мӗн: кам та пулин: „Эпӗ Евангелири истори факчӗсене ӗненетӗп, анчах эпӗ кунпах ҫаплах ҫӑлӑну тупман-ха“, — тесе калама пултарӗ. Ҫаплах та-и, тен: ҫӑлӑнӑҫ паракан пӗр пахалӑхпа уйӑрӑлса тӑрать: ҫӑлакан ӗненӳ вӑл пӑхӑнса тӑрас туйӑма вӑратать, ҫапла ҫӗнӗ пурӑнӑҫ кӳрет. Хӑш-пӗр ҫынсем чылай хушах ҫакӑн евӗр курӑнакан пурӑнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ, анчах Христоса чӑннипех те шанаканнисем, Вӑл хӑйсене ҫӑлнине ӗненекенсем хӑйсен пурӑнӑҫӗнче пӗтӗм ӑшран-вартан ӗненӳ майлӑ шухӑш-туйӑмпа тӑрас кӑмӑллӑ. Ҫакӑ вӑл сире пур утӑмра та Турӑ ирӗкне пӑхӑнса тӳрӗ пурӑнӑҫпа пурӑнма пулӑшакан вӑй.

Ас-тӑн ӗненӗвне е истори ӗненӗвне, вӑл сирӗнте пур пулсан, пӑрахӑҫлӑр, чун-чӗререн Унӑн ҫӑлӑнӑҫне тупас тесе пӗтӗмпех Христоса парӑнӑр, вара Турӑ Сӑмахӗ тӑрӑх эсир Турӑ ачи пулса тӑратӑр. „Хӑйне хапӑл тӑвакансене, Хӑйӗн ятне ӗненекенсене, Вӑл Турӑ ачисем пулма ирӗк панӑ“ (Иоан. 1:12).

ВИÇĔМĔШ ПАЙĔ

# ХРИСТИАН МАЛАШЛĂХĔ

ВУНВИҪЁМЁШ СЫПĂК

# ХРИСТИАН ТĂШМАНЁСЕМ

„Пирĕн ӳтпе, юнпа (ҫынсемпе) вăрҫмалла мар, ҫак ĕмĕрти тĕттĕм тĕнчене (ҫылăхлă ҫынсене) тытса тăракан пуҫлăхĕсемпе, аслисемпе, пĕлĕт айĕнчи усал сывлăшсемпе вăрҫмалла“

Ефес. 6:12

Акă ĕнтĕ эсир татăклă шухăш тунă, ҫӳлтен ҫуралнă, Турă енне ҫаврăннă, ҫылăхсене каҫарттарнă, Турă ачи пулса тăнă — малалла мĕн-ха? Элле пирĕн пĕр самантра шухăш тытса шухăш татмаллаччĕ те, ҫакăнпа ĕҫĕ пĕтĕмпех пĕтетчĕ-шим?“ Манăн ĕнтĕ урăх нимĕнле тивĕҫ те ҫук-шим вара?“ — тесе ыйтăр эсир.

Ҫапла, тин кăна эсир христиан пурăнăҫĕпе пурăнма тытăнтăр. Тин кăна ҫĕнĕ тĕнчене — чăн тĕн тĕнчине — ҫуралтăр. Сирĕн йĕри-тавра пĕтĕмпех ҫĕнĕ. Тĕн енчен илсен, эсир халĕ пĕчĕк ача евĕр. Сире ҫепĕҫлĕх, юрату, тăрăшни, ĕҫме-ҫиме кирлĕ. Сире хӳтĕлемелле. Ҫак сăлтава пула ĕнтĕ Иисус Христос чиркӳ тунă. Тăр пĕччен христиансен пурăнăҫĕпе пурăнма май ҫук. Сире пулăшу кирлĕ, сирĕн ыттисемпе хутшăнмалла.

Сирĕн тăшмансем пуррине эсир хăвăр та куртăр пулĕ. Хăрушă, хаяр тăшмансем вĕсем, тĕрлĕ майсемпе усă курса сире христиансен пурăнăҫĕнче ҫĕнтерме тăрăшаҫҫĕ. Тен, тĕн енне ҫаврăнсан темиҫе минутранах, эсир ҫав тăшмансемпе ĕҫре тĕл пулма пултарнă: вĕсем сире пĕр-

пĕр çылăх тума илĕртнĕ е сире самантлăха та пулин пусăрăнчăклăх туйăмĕ пуснă е ĕмĕт татăлнине туйнă. Христоспа пĕрле пулатăп тесе шухăш тунă хыççăн, сирĕншĕн пурте çав тери кăсăк пулса кайнине, пурте сире пăлхатса янине сисетĕр эсир. Çав вăхăтрах иккĕлену́ туйăмĕ, çĕнĕ ыйтусем çуралаççĕ, астарни хыççăн та каяс килет, ĕмĕт су́нет, йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ.

Пирĕн пурăнăçра пирĕнпе пурăнăç тăршшĕпех виçĕ тăшман кĕрешет тесе вĕрентет Библи. Сирĕн çакна пĕлмелле. Сирĕн сыхă пулмалла.

Атьăр çав тăшмансемпе çывăхрах паллашар. Атьăр вĕсен пичĕсем çинчен маскăсене илсе пăрахар та вĕсем мĕнлине, вĕсем камне, вĕсем мĕн тума пултарнине курар.

Пĕрремĕшĕ вăл — шуйттан. Эпир куртăмăр ĕнтĕ, шуйттан вăл пит мăнаçлă, вăл Турра хирĕç тăрать, Турă ачисене илĕртет. Эпир куртăмăр ĕнтĕ, ăна Христос хĕрес çинче çĕнтернĕ пулин те вăл вăйлă-ха, вăл çынсене усал ĕç тума хĕтĕртет. Библи ăна „усал“ тет (Матф. 13:19), „усал сывлăш ернĕ çын“ (Лук. 4:33), „çын вĕлерекен“, „вăлултавçă, ултав ашшĕ“ (Иоан. 8:44), „сире хирĕç пыракан шуйттан, кама та пулин çăтасшăн çу́рет“ (1Петр. 5:8), „пирĕн тăванăмăрсем çинчен хамăр Туррăмăр умĕнче кунĕн-çĕрĕн элек паракан элекçĕ“, „авалхи çĕлен“ (Ап. 12:9-10).

Эсир Христоспа пĕрле пулма йышăннă самантра усал сывлăш хăйĕн кĕрешĕвĕнче аяла юлать. Вăл урса кайнă. Çакăнтан пуçласа вăл сире илĕртме тытăнать, çылăха кĕме хистет. Анчах та ан пăлханăр. Вăл сирĕн çăлăнăçăра вăрласа тараймасть, сирĕн çĕнтерĕве, шанăçа туртса илеймест. Вăл, хăйĕн влаçĕпе усă курса, сирĕнте иккĕлену́ туйăмне çуратас тесе мĕн тумаллине пĕтĕмпех тăвать, чăнах та ĕненме пуçларăм-ши е çук-ши тесе иккĕленетĕр вара. Унпа тавлашма та пултараймастăр эсир, мĕншĕн

тесен вӑл ӗмӗрсем хушши ҫав тери пысӑк тавлашуҫӑ шутланать.

Пӗрремӗш илӗртӳпех тӗрӗслев сехечӗ пуҫланать. Астӑвӑр, хӑвӑр туйӑмӑрсем ҫине шанма ҫук, мӗншӗн тесен вӗсем вӑйлӑ ҫил ҫинчи тӗк кӑна. Унтан шуйттан сирӗн пата тепӗр енчен пырать, эсир хӑвӑра пысӑк та мӑнаҫлӑ ҫын пек тыткалама пуҫлатӑр, вӑл сире хӑвӑр вӑя шантарать, сирӗн хӑвӑра мухтаттарас килет. Тепрехинче вӑл сирӗн чӗрере курайманлӑх ҫулӑмне чӗртме пикенет. Сире вӑл ыттисем пирки япӑххине калаттарать, кӗвӗҫӳ, ӳпкев, хаярлӑх туйӑмӗсене ҫуратать. Вӑл сире ултавлама хӗтӗртет, эсир вара ҫӑмӑллӑнах икӗпитлӗ ҫын пулса тӑратӑр. Ултав пур ҫылӑхран та чи япӑххи, ҫак ҫылӑх сӑмахпа та, ӗҫпе те, шухӑшпа та пулать. Тепӗр ҫынна суйма тытнӑ тӗллев вӑл — ултав. Сире ултавҫӑ тӑвас тесе шуйттан тем тума та хатӗр. Вӑл сире те хӑйшӗн ӗҫлеттерет, ӗненекен тусӑрсене тӗрӗс ҫул ҫинчен пӑрса яма хӗтӗртет. Эсир питех те тимлӗ мар пулсан, чӑнах та шуйттан патне ӗҫе кӗретӗр. Вӑл ҫав тери вӑйлӑ, ӑслӑ, чее, ултавҫӑ тата пиҫӗ. Ӑна „ҫак ӗмӗрӗн турри“ (2 Кор. 4:4), „ҫак тӗнче пуҫлӑхӗ“ (Иоан. 12:31), „сывлӑшра пурӑнакан пуҫлӑх“ (Ефес. 2:2) тенӗ. „Ӑна мӗнле ҫӗнтермелле-ха ман? Мӗн тума пултаратӑп эпӗ? Ҫак пӑтӑрмахран тухма ҫул пур-и?“ — тесе ыйтӑр эсир.

„Эсир куракан асап этем тӳсмелӗх анчах; Турра шанмалла: Вӑл сире вӑйӑр ҫитнинчен ытла сӑнамӗ, сӑнанӑ чух чӑтса ирттермелӗх сире ҫӑмӑллӑх та парӗ“ (1 Кор. 10:13).

Ҫак пуплевре Турӑ сире тӗрӗс ҫул кӑтартма шантарать. Ҫакна асра тытӑр: сире шуйттан илӗртни эсир Турӑпа килӗшӳллӗ пурӑнманнине пӗлтермест. Чӑннипе каласан, эсир Турӑпа тӗрӗс пурӑннине пӗлтерет. Асап — ҫылӑх мар. Ҫакна та асра тытӑр: Турӑ Хӑй ачисене

нихăçан та асаплантармасть. Вăл Хăй ачисене нихăçан та иккĕлентермест. Мĕнпур иккĕленӳ, астару — шуйттанран килекен япаласем. Асра тытăр, пĕр усал çеç илĕртме пултарать, анчах сире çав илĕртӳ хыççăн илсе каяймасть. Çакна та асра тытăр: Иисус Христос усала çĕнтернĕ ĕнтĕ. Ёненекенсен пурăнăçĕнче вăл хăй вăйне çухатрĕ, ĕненекен Турра парăнса, шанса пурăнать, унăн пурăнăçĕ пĕтĕмпех Турăран килет. Библи пире шуйттана хирĕç тăма вĕрентет, вăл вара, тенĕ унтах, „сирĕнтен тарать“ (Иак. 4:7). Анчах та çакăн умĕн унта çапла каланă: „Турра парăнăр“... Енчен те эсир пĕтĕмпех, çĕр процентпех Христоса пăхăнсан, эсир „шуйттана хирĕç те тăма пултаратăр“, Библи: „вăл сирĕнтен чупсах тарать вара“, тесе шантарать. Эсир кĕлĕ тума тытăнсан, шуйттан хăраса чĕтреме пуçлать. Эсир Таса Çыру сăмахĕсемпе ăна хирĕç тăрсан, вăл парăнать.

Сирĕн иккĕмĕш тăшманăр вăл — тĕнче. Тĕнче тени çут тĕнчене, пирĕн пĕтĕм тĕнче тытăмĕ тенине пĕлтерет. Тĕнче пире нумай енчен çылăха кӳртесшĕн: япăх юлташсем, вăйă-кулă, мода, çынсен шухăш-кăмăлĕ тата тĕнче тĕллевĕсем урлă.

Эсир çĕнелсе çĕкленсен хăвăрах куратăр акă, сирĕн йăпану пачах урăх çутă та çĕнĕ планпа пулса пырать. Турра ĕненменнисенчен чылайăшĕ христиансен пурăнăçне (унта ытла та нумай чару, йĕркене пăхăнмалли, тĕрлĕрен ыйту) тесе хурлать. Ку та шуйттан ултавĕ. Христиансен пурăнăçĕ вăл чарусенче тăмасть, вăл ĕçлеме чĕнет. Христос ĕçĕпе эсир çав тери ĕçлĕ пулса тăратăр, сирĕн ахаль вăйă-кулă, савăнăç валли вăхăт та юлмасть.

Калăпăр, эпĕ питĕ лайăх çисе тăрансан, мана кам та пулин пĕр турилкке çăкăр тĕпренчĕкĕ сенет тейĕпĕр. Паллах эпĕ ăна: „Тавах, эпĕ тутă“, — тетĕп.

Христиансенчен нумайăшĕ тĕнче тенине тĕрĕс мар

ăнланать. Кунта кăштах ăнлантарса памалла. Уйрăмах çамрăксем е тин кăна тĕне çавăрăна пуçланă çынсем умне çак йывăрлăх тухса тăрать.

Томас Гриффит доктор çапла каланă: „Кулленхи пурăнăçăн пурне те паллă йăлисем хăйсене хăйсем çылăх мар, анчах та вĕсемпе тĕрĕс мар усă курсан, çынна çылăха кĕртме пултараççĕ. „Тĕрĕс мар усă курсан“ сăмах çавăрăнăшĕ хăех нумай чухне мĕн те пулин çылăх патне илсе çитерессе пĕлтерет. Савăнни — йĕркеллĕ япала, анчах та унпа тĕрĕс мар усă курни — йĕркесĕр япала. Кашни кăмăлтах чапшăн çунни пур, анчах та çакăнпа кирлĕ тĕллеве пурăнăçлама усă курмалла, тата вăл ытлашши пысăк пулмалла мар. Пирĕн кулленхи ĕçсем, кĕнеке вулани, кĕпе-тумтир, туслăх, пурăнăлăн тата ытти енĕсем — йĕркеллĕ тата çынна кирлĕ енсем, анчах та вĕсем çăмăллăнах йĕркесĕр, сиенлĕ, кирлĕ мар япаласем пулса тăма пултараççĕ. Пурăнăçра кирлĕ пулакан япаласем пирки шухăшламалла, анчах та çакă çăмăллăнах пăшăрхантаракан хуйхă-суйхă çинелле куçса кайма пултарать, Христос пире çапла вĕрентет: кулленхи пурăнăçри ĕç-хĕл пирĕн чĕрери шухăш-кăмăл вăррине ӳсме памасть. Пурăнма укçа ĕçлесе илмеллех, анчах та çакă укçана ытлашши юратни енне куçса кайма пултарать, пуянлăх илĕртни, пирĕн пурăнăçа кĕрсе, пирĕн шухăш-кăмăла сăтăр тăвать. Тĕнче вăл пирĕн пурăнăçăн пĕр пайĕпе кăна çыхăнса тăмасть, вăл уйрăм çынсен класĕпе те çыхăнман, çавăнпа та эпир хăш-пĕр çынсене „тĕнче çынни“, теприсене“ тĕнче çынни мар“, пĕрисене „тĕн çынни“, теприсене „тĕн çынни мар“ тесе калама пултаратпăр. Тĕнче вăл — шухăш-кăмăл, атмосфера, çын пурăнăçĕпе обществăна витерекен витĕм, çавна пĕр чарăнми сăнаса тăмалла.

„Тĕнчене те тĕнчере мĕн пуррине те ан юратăр“, тесе

вĕрентет Библи (1 Иоан. 2:15). Çавăн пекех Библи çапла асăрхаттарать: „Тĕнче те, унăн илĕртекен япали те пĕтет, Турă ирĕкне туса пыракан ĕмĕрех пурăнать“, тет (1 Иоан. 2:17).

Анчах та çакă паянхи пурăнăç ыйтăвĕсем умĕнче пире аптăратса ÿкерме пултарать. Нумай çамрăк ман пата килсе çапла ыйтать: „Тĕрĕс-и çакă е çук?“ е“Çылăх-и çакă е çук?“ Нумай чухне çак ыйтусене татса парас тесен, кĕлĕ вăхăтĕнче çапла кăна ыйтмалла: „Эпĕ мĕнле тусан Иисус килĕшнĕ пулăччĕ-ши?“ Е çакăн пек ыйтма пулать: „Çак ĕçе тума эпĕ Унран пил ыйтса илме пултарăп-ши?“ е „Манăн киленÿ, кану, ман кĕнекесем, юлташсем е телевизорпа кăтартакан çак передача пирки Христос мĕн шухăшланă пулĕччĕ-ши?“ Эпир çак ыйтусем пирки тавлашма пултараймастпĕр. Пирĕн яланах хамăр ĕçсемпе Христоса юрама тăрăшмалла.

Ку вăл эпир обществăра ытти çынсенчен çветтуйсем пек уйăрăлса тăмалла тенине пĕлтермест. Капла эпир тÿрех мăнкăмăлланса каятпăр, ку вара тĕнче шухăш-кăмăлĕнчен те начартарах. Пирĕн вăхăтра питĕ нумай çын хăйне христиан тет, хăй вара тĕнчепе пĕрле утать, кун пек чухне тĕне тытакан христианпа çылăхлă çын хушшинчи уйрăмлăха курма та хĕн. Кун пек пулмалла мар.

Христос тĕнне тытаканăн ыттисем хушшинче ахах-мерчен пек уйăрăлса тăмалла. Унăн ыттисенчен сывăрах пулмалла. Унăн ыттисенчен лăпкăрах, культурăллăрах, сăпайлăрах, тараватлăрах, çав хушăрах çирĕпрех пулмалла, хăйне мĕн тума юранипе юраманнине аван пĕлмелле. Вăл кулма та, савăнма та пултарать, анчах та унăн тĕнче шайне анса лармa юрамасть.

Библи калать: „ĕненсе тумалли пурте çылăх“, тет (Римл. 14:23). Çавăнтах тата: иккĕлекенекен айăплă, мĕншĕн тесен унăн вăл ĕненÿ тăрăх пулмасть, тесе кала-

нӑ. Урӑхла каласан, пирӗн хамӑр лайӑх, ҫирӗп пӗлсе тӑман япалана нихӑҫан та тумалла мар. Пӗр-пӗр ӗҫе эсир лайӑх пӗлместӗр пулсан, вӑл сире канӑҫсӑрлантарать пулсан, кун пек ӗҫе ан та пуҫӑнӑр.

Эсир ҫӗнӗрен ҫуралнӑ хыҫҫӑн сире тӗл пулакан виҫҫӗмӗш тӑшман вӑл — ӳт хыҫҫӑн кайни. Ӳт вӑл сирӗн шалти ҫынлӑхӑрӑн усал туртӑмӗ. Турӑ енне ҫаврӑннӑ хыҫҫӑн та малтанхи ӑнтӑлупа тӗмсӗлӳ сире каллех ҫавӑрса илме пултарӗҫ. Ӑҫтан тупӑнчӗҫ кусем? тесе тӗлӗнетӗр эсир. Анчах Библире каланӑ: пирӗн кивӗ несӗллӗх хӑйӗн пӑсӑклӑхӗпе ҫаплах пирӗн ӑшра пурӑнать-ха, усал астарни ҫавӑнтан килет те ӗнтӗ, урӑхла каласан, „пирӗн ӑшра сутӑнчӑк пурӑнать“, тенӗ. Ҫылӑха туртӑнни вӑл яланах пулнӑ, ҫавӑ ӗнтӗ пире куҫран ӳкерет. Анчах та ан мансамӑр, эсир кӗрешӗве тухнӑ! Халӗ сирте икӗ несӗллӗх ҫапӑҫать, кашниех хӑйӑ ҫӗнтерме тӑрӑшать.

Библире каланӑ: „Ӳт сывлӑша кирлӗ маррине тӑвасшӑн, сывлӑш ӳте кирлӗ маррине тӑвасшӑн“, тенӗ (Гал. 5:17). Ку вӑл санӑн шалти „эпӗ“ Христос пурӑнӑҫӗпе кӗрешнине пӗлтерет. Пирӗн нишлӗ несӗллӗх Туррӑмӑра кирлӗ мар. Ӑна урӑхлатма та, тӳрлетме те май ҫук. Иисус Христос пирӗншӗн вилнӗшӗн, Вӑл яланах пирӗнпе пулнӑшӑн Туррӑмӑра тав тумалла. Авалхи несӗллӗх витӗмлӗ пулаймӗ, енчен те „эсир те хӑвӑра ҫылӑх тӗлӗшӗнчен вилнӗ тесе хисеплӗр, хамӑра Ҫӑлакан Христос Иисус урлӑ Турӑшӑн чӗрӗ тесе хисеплӗр“ (Римл. 6:11). Куна вара ӗненӳпе кӑна тума пулать.

Анчах та сирӗн тӗрӗс усӑ курнипе тӗрӗс мар усӑ курнине, законлӑ е законлӑ мар пулнине уйӑрма пӗлмелле. Астару хыҫӗнче ӳт тӑвас тени пытанса тӑма пултарать, ҫавӑн пекех вӑл унта пулмасан та пултарать.

Томас доктор ҫапла каланӑ: „Ӳт ыйтни“ сӑмахӑн малтанхи пӗлтерӗшӗ „вӑйлӑ ӑнтӑлу“ пулнӑ, ку вӑл ҫылӑхлӑ

япала тенине пĕлтермесен те пултарнă, мĕншĕн тесессĕн çутçанталăкра, тĕслĕхрен, выçлăх тата шывшăн антăхни пур, ку кăмăл туртăмĕ пур чĕрĕ чунсен те пур, вĕсем пулмасăр пултараймаççĕ, апла пулсан вĕсем çылăхлă мар. Сиенĕ эпир вĕсемпе пĕлмесĕр усă курнинче. Выçлăх — ӳт ыйтни, вăл пулмасăр тăма пултарайман япала. Çăткăнлăх — „çылăхлă ӳт ыйтни“. Шывшăн антăхни — пулмасăр тăма пултарайман япала. Чаракне пĕлмесĕр ĕçни — çылăхлă ӳт ыйтни. Наянлăх та çылăхлă ӳт ыйтниех. Мăшăрланасси Турă ирĕкĕпе килĕшӳллĕ япала, вăл этемлĕх, ӳт-пӳ, шухăш-кăмăл, обществăлла çутçанталăк ыйтни. Аскăнни — çылăх, вăл Турă ирĕкне хирĕçле тунă япала, ӳт-пӳпе, ăс-тăнпа, чунпа таса пулмалла тенине хирĕçле тунă япала. Ӳт ыйтнисем татах та пур, вĕсен шалти туйăмĕ сисĕмлĕ те çылăхлă. Тĕслĕхрен, хамăрăн килĕшӳллĕ курайманлăха, тавăру туйăмне эпир ниме пăхмасăр тивĕçтересшĕн. Çавăнпе та пирĕн ӳт ыйтни таса кăмăл туртăмĕ е çылăхлă кăмăл туртăмĕ пулнине уйăрма пĕлмелле. Ӳт çылăхĕ пур çылăхсенчен те хăрушăрах, мĕншĕн тесен усал тăвас ăнтăлăва çуратать вăл. Шуйттан та, тĕнче те, пирĕн пăсăк чĕремĕр те пире çылăх тума хистеймеççĕ. Çылăха эпир хамăрпа хамăр килĕшсе, хамăр ирĕкпе тăватпăр, çавăнпа ĕнтĕ пирĕн çылăхлă несĕллĕх хăйĕн усал тума пултаракан вăйĕпе усă курма тытăнать“.

Павел апостол хăйĕн ӳтне шанмастăп тенĕ. Çапла калани те пур унăн: „Ӳтшĕн тăрăшнă çĕрте çылăха ан кĕрĕр“ (Рим. 13:14). Тепĕр çĕрте çапла калани пур: „Эпĕ ӳтĕме чаратăп, ăна хама пăхăнакан тăватăп“ (1 Кор. 9:27). Çавăнпа та пирĕн Туррăмăра парăнса, пăхăнса тăмалла, пирĕнти авалхи несĕллĕх çылăх тĕлĕшĕнчен вилнĕ тесе хисеплер хамăра.

Акă пирĕн виçĕ тăшман: шуйттан, тĕнче тата ӳт. Христиан пек пулса пирĕн вĕсене йышăнмалла мар. Кун пек

чухне сутлашни те, килĕшӳ туни те, иккĕленни те майсăр. Çĕнтерме ăнтăлакан христианшăн пĕр çул анчах пулма пултарать – çаксене пач та йышăнманни. Турră̆мăра пăхăнса тăрсан анчах эпир шуйттана хирĕç тăма пултараятпăр. Тĕнче пирки Библире каланă: „Тĕнчене çĕнтернĕ вăй – эпир ĕненни вăл“, тенĕ (1 Иоан. 5:4). Ӳт çинчен Библире каланă: „Эпĕ сире: сывлăш хушнипе пурăнăр, тетĕп; вара эсир ӳт тăвас тенине тумăр“, тенĕ (Гал. 5:16).

Çакăн майлă кĕрешӳпе астарăва чăтса ирттернисемшĕн çакă хаваслă хыпар. Тĕрлĕ астарусемпе пĕччен кĕрешмелле тесе никам та каламасть сире. Ӳт ĕçĕсене чунпа вĕлеретĕр тесе вĕрентет Библи, Рим çыннисем патне янă çырура (8:13). Аса илĕр Иисус Христос пире нихăçан та пăрахмăп, манса каймăп тенине. Асра тытăр: Иисус Христос çак çĕре пăрахса кайсан, Вăл Урăххине – Троицăн Виççĕмĕш ипостаçне – Святой Сывлăша, Лăплантаракан ятлине, кăна „Хăть хăçан та пулăшакан“ тесе ăнланмалла – „Ман заповедьсене тытса тăрăр“ (Иоан. 14:16), тенине асра тытăр. Иисус Христос каланă: „Сире тăлăха хăвармăп, сирĕн пата килĕп“, тенĕ (Иоан. 14:18).

Святой Сывлăш халĕ тĕнчере чи хăватлă вăй. Авалхи Сăмах вăхăчĕ Атте Туррăмăр вăхăчĕ пулнă, Иисус Христос çĕр çинче пулнă чухне Турă Ывăлĕн ĕмĕрĕ пулнă. Халĕ, аллăмĕш кунхи праçник вăхăтĕнчен пуçласа Святой Сывлăш Аннăранпа, эпир Святой Турă-Сывлăш ĕмĕрĕнче пурăнатпăр.

Эсир Иисус Христоса хăвăрăн Çăлаканăр тесе ăша илнĕ самантран Святой Сывлăш сирĕн чĕрĕре кĕрсе вырăнаçĕ, тенĕ Библире. Сирĕн ӳтĕр „хăвăр ăшăрта пурăнакан Святой Сывлăш çурчĕ“ (1 Кор. 6:19) пулĕ. Павел апостол асăрхаттарнă: çынра Христос Сывлăшĕ çук пулсан, вăл Унăн мар, тенĕ.

Эсир ҫапла калама пултаратӑр: „Эпӗ чӗремре нимӗн те туймастӑп. Эпӗ хамра Турӑ Сывлӑшне те туймастӑп“.

Туйӑмсене ан шанӑр. Туйӑмсем сире пулӑшаймӗҫ, Святой Сывлӑша эсир сиссе илме е сисеймесӗрех тӑрса юлма пултаратӑр. Ӑна чӑн япала тесе ӗненӳпе йышӑнӑр. Вӑл сирте малта, Христоса мухтама телейлӗ, ҫӗнтерӳллӗ, ҫутӑ пурӑнӑҫпа пурӑнатпӑр тесе калама, Христоса хӑватлӑлантарма, ҫӳле ҫӗклеме, хӑвӑрта Христоса тупма пулӑшать.

Библире ҫырнӑ: „Турӑ ирӗкне пӗлсе тӑрӑр!“, тенӗ (Ефес. 5:18). Турӑ ирӗкне пӗлсе пытӑр пулсан, эсир Сывлӑш ҫимӗҫӗсене кӑтартайӑр, ҫимӗҫӗсем ҫаксем пулӗҫ: „юратни, савӑнни, канӑҫлӑх, тӳсӗмлӗх, ырӑ кӑмӑл, хӗрхенни, Турӑ ҫине шанни, йӑваш пулни, чаруллӑ пулни“ (Гал. 5:22-23). Святой Сывлӑшпа пурӑнни хамӑр кӑмӑлтан кӑна килекен япала мар. Вӑл хушу — ӑна пӑхӑнмалла; тивӗҫ — ӑна пурӑнӑҫламалла.

Святой Сывлӑш ирӗкне пӗлсе пынине ӑҫтан пӗлетӗрха эсир? Мӗнле пурӑнмалла-ха Унпа? Сирӗн ӑшра хумхантаракан туйӑм ҫуратать-и Вӑл? Ҫук. Пур ҫылӑхсенчен те тасалса пӗтсен, Христоса ӑша илтӗр пулсан, ҫавӑн чухне кӑна эсир хӑвӑр Святой Сывлӑш ирӗкне пӗлсе пынине йышӑнма пултаратӑр. Эсир пӗтӗмпех Унӑн аллинче пулнине пӗлтерет ку. Сирӗн чӗрере урӑх нимӗн те ҫук, Вӑл кӑна. Чӑннипе каласан, пани каялла тавӑрса пани пулать — пуҫӗпех, ним юлми, пӗр сӑмахсӑр, ҫирӗппӗн, пӗр иккӗленмесӗр каялла тавӑрни: „Эй тӑванӑмсем, ҫавӑнпа ӗнтӗ, сире Туррӑн хӗрхенекен кӑмӑлне асӑнса йӑлӑнатӑп: Турӑшӑн ӑспа ӗҫлесе пурӑнас тесен, хӑвӑрӑн ӳтӗре чӗрӗ, таса, Турра юрӑхлӑ парне тума тӑрӑшӑр, ку ӗмӗре кура ан пурӑнӑр“ (Римл. 12:1).

Пӗтӗм таса чунпа Турра ӗненекен христиан анчах тӗнчене, ӳте тата шуйттана, ҫӗнтерме пултарать. Святой

Сывлăш сирĕншĕн кĕрешĕ. Пирĕн ӳтпе, юнпа (çынсемпе) вăрçмалла мар, çак ĕмĕрти тĕттĕм тĕнчене (çылăхлă çынсене) тытса тăракан пуçлăхсемпе, аслисемпе, пĕлĕт айĕнчи усал сывлăшсемпе вăрçмалла“ (Ефес. 6:12). Ку — сывлăш вăрçи. Çак висĕ тăшмана хирĕç ахаль хĕç-пăшалпа тăраймастăр. Святой Сывлăша пирĕн ăша кĕрсе хамăршăн кĕрешме май парсан анчах эпир çĕнтерме пултаратпăр. Иисус Христосран нимĕн те ан пытарăр. Сирĕн пурăнăçăрта Пуçлăх тата Вĕрентекен пулма май парăр Ăна. Вăл каланă: „Эсир Мана Вĕрентекен тетĕр, Пуçлăх тетĕр, ăна тĕрĕс калатăр: Эпĕ чăнах та Çавă“ (Иоан. 13:13).

Пĕррехинче ача хаклă савăтпа вылянă та ун ăшне аллине чиксе янă, каялла кăларайман. Ăна пулăшма ашшĕ пынă, анчах вăл та пулăшайман. Ашшĕпе амăшĕ савăта ватас патнех çитсен ашшĕ каланă: „Ывăлăм, тепре хăтланса пăх-ха. Пӳрнӳсене чăмăра ан пуçтар, тӳрĕ тыт вĕсене, акă, эпĕ кăтартнă пек ту та аллуна кăларма тăрăш“, тенĕ.

Ача ашшĕ-амăшне çапла каласа тĕлĕнтерсах янă: „Çук, атте, пӳрнесене тӳрĕ тытаймастăп эпĕ, унсăрăн манăн алăри укçа тухса ӳкет“.

Кăмăлăр пулсан, кулса илме те пултаратăр, анчах пиртен пинĕшĕ çак арçын ача пек, — эпир те ниме тăман тĕнче укçине аларан вĕçертес марччĕ тесе кăна тăрăшатпăр, çавăнпа та ирĕке тухаймастпăр. Тархаслатăп сире, — хăвăр чĕрĕрте тытакан пус укçана кăларса пăрахăр. Турра парăнăр. Пурăнăçăра йĕркелесе пыма Ăна ирĕк парăр.

Эсир Христоса пуçĕпех парăнтăр пулсан, хăвăра Ăна патăр пулсан, асра тытăр: эсир мĕн панине Турă йышĕннĕ. Кунта та ĕненӳ кирлĕ. „Хам патăма килекене Эпĕ хăваласа кăлармăп“ (Иоан. 6:37). Эсир Ун патне килтĕр, Вăл сире йышăнчĕ. Çакăн пек пуçĕпех пăхăнса

тăрсан, хăвăра Турра парса, пурăнăçра Сывлăша пĕлсе пурăнсан эсир малтанхинчен те çирĕпрех, хăюллăрах пулаятăр.

Святой Сывлăшпа пурăнакан çын Турăран анчах хăрать, урăх нимрен те хăрамасть. Ытти япаларан хăрасси пĕтет. Кун пек çын хăй Христоса мĕнле ĕненнине тĕлĕнмелле çирĕплĕхпе тата хăюллăхпа палăртать. Эсир Апостолсен Ĕçĕсем кĕнекене вулатăр пулсан, унта „хăюллă" сăмаха тупатăр, ку сăмах апостолсем пирки каланă чухне час-часах тĕл пулать.

Сирĕн хăюлăх кăна мар, Сывлăш çимĕçĕ те пулĕ. Асра тытăр: Сывлăш çимĕçĕ Сывлăшран килет. Эсир ăна хăвăр çитĕнтерме пултараймастăр. Ку вăл асамлă çимĕç, мĕншĕн тесен вăл пуласса та асамлă майпа пулнă, сирĕн ахаль пурăнăçăрта вăл палăрсах тăрĕ. Сирĕн пурăнăçăрта юрату пулĕ. Иисус Христос пире çапла вĕрентсе каланă: „Эпĕ сире çакна тума хушатăп: Эпĕ хăвăра юратнă пек, эсир пĕр-пĕрне юратăр" (Иоан. 15:12). Вара эсир хăвăрăн çывăх çыннăра ахаль юратупа мар, вăл хăш йăхран, унăн пĕлĕвне, политикăри шухăш-кăмăлне пăхмасăр Христос юратăвĕпе çĕнĕлле юратма пуçлатăр. Асап, хирĕçӳ, кĕвĕçӳ пĕтĕ, тăванла юрату кăна юлĕ.

Унтан савăнăç та пулĕ. Ĕненекен çын ыттисенчен шалти савăнăçпа палăрса тăрать. Кирек хăçан та сирĕн савăнăçлă чĕрепе çутă сăн пулĕ. Христиансем нумайăшĕ тĕксĕм сăнпа çӳреççĕ, ку пĕрре те Туррăмăра мухтавлă тума пулăшмасть. Ĕненекен çынна тĕл пулсан, Вăл чăнах та çĕнтерекен, сывлăшшăн пурăнакан, Турра парăннă христиан иккенне калама пулать.

Чăн-чăн христианăн канăçлă та çутă пулмалла, хăй таврари çынсене çутатма пултармалла. Библире каланă: „Сире Турă умĕнчи савăнăçăр пулăшса тăрĕ", тенĕ (Неем. 8:10).

Сирĕн пурăнăçăрта канăçлăх пулĕ. Павел апостол çапла каланă: „Пире пур енчен те хĕсĕрлеççĕ, çапах пире хĕсĕк мар; пирĕн вырăнта ĕмĕт те татăлмалла, çапах эпир ĕмĕтленме чарăнмастпăр; пире хăвалаççĕ, çапах Турă пире пăрахмасть; пире аяла тăваççĕ, эпир çаплах пĕтместпĕр“ (2 Кор. 4:8-9). Сывлăш çимĕçĕсене тата çаксене пăхса тухма пулать: пысăк чăтăмлăх, ырă кăмăл, ĕненў, сăпайлăх, ўт хыççăн кайманни; кам Христоса чăнах та парăннă, кам Турă Сывлăшĕпе пурăнать, çавсен пурăнăçĕнче çак çимĕçсем чечекленсе ешереççĕ.

Ку чухне çĕнтерў сирĕн пулĕ. Ун патне туртăнăр! Ку сире çўлтен çуралса килме ирĕк парать. Парăнма сирĕн пĕр сăлтав та çук. Эсир çĕкленўллĕн те илемлĕн пурăнма пултаратăр. Чи лайăххи сире валли. Пурăнăç сирĕншĕн чи аслă, чи чаплă хумхану пулĕ. Хăвăр пурăнăçăн кашни самантне туллин пурăнасчĕ тейĕр, çыврăса ирттерекен вăхăта шеллеме пуçлăр, кашни ире çĕнĕ кун килнĕшĕн хĕпĕртесе саванса кĕтсе илме пуçлăр, çав куна эсир Христосшăн пурăнма пултараятăр. Пур кун та тĕлĕнмелле, чаплă пулĕ, Турăшăн ĕçлеме пур май та пулĕ, Турăпа пĕрле ирттернĕ кашни саманчĕ пархатарлă пулĕ, эсир Иисус Христоспа ĕмĕрлĕхех хăрушсăрлăхра пулнине туллин туйса илетĕр.

ВУНТӐВАТТӐМӖШ СЫПӐК

# ХРИСТИАН ПУРӐНӐҪӖН ЙӖРКИСЕМ

„Хӑвӑршӑн ҫынна мӗн тутарасшӑн, хӑвӑр та вӗсемшӗн ҫавнах тӑвӑр“.

Лук. 6:31

Кирек мӗн тусан та: вылятӑр-и эсир, машина тытса пыратӑр-и, кукӑль пӗҫеретӗр-и — ӗҫ ӑнӑҫлӑ пултӑр тесен, пурте пӗлекен йӗркесене пӑхӑнса пымалла.

Библи вӗрентет: христиан пурӑнӑҫӗ вӗҫӗмсӗр аталанса пырать. Эсир ҫӳлтен ҫуралса сывлӑш тӗнчине ҫуралатӑр. Кил-йышри пӗчӗк ача вырӑнӗнче пулатӑр. Турӑ тӗллевӗ — сире ҫитӗнтерсе Христоса ӑша илсе сиртен ҫирӗп ӗненӳллӗ ҫын тӑвасси. Ялан ача вырӑнӗнче пулса чунчӗре тӗлӗшӗнчен аталанаймасӑр ниме тӑман этем пулса юлни Турӑпа ҫутҫанталӑк законӗсене хирӗҫле пыни пулать. Петр янӑ 2-мӗш ҫырура (3:18) Библи калать: сирӗн пӗлнӗҫемӗн пӗлсе пымалла, тет. Ку вӑл шайлашуллӑ аталанмалла, яланах ӳсмелле, пӗлӗве анлӑлатмалла, ҫӳлтен килекен аслӑ тӗрӗслӗхе шырамалла тенине пӗлтерет.

Кирлӗ пек ӳсес тесен, чун-чӗре ҫирӗплӗхӗн паллӑ йӗркисене тытса пымалла. Чи малтан сирӗн кашни кун Библи вуламалла. Сывлӑш пурӑнӑҫне те апат кирлӗ. Мӗнле апат кирлӗ-ха ӑна? Чун-чӗре апачӗ. Ӑҫтан тупмалла ӑна? Библире, Турӑ Сӑмахӗнче тупмалла ӑна.

Библи Христоса кăтартать, Вăл сирĕн выçă чунăрсемшĕн сăвапла çăкăр выраннех пулĕ, шывсăр антăхнă чĕрĕрсемшĕн чĕрĕ шыв пулĕ. Эсир хăвăра кашни кунах сывлăш апачĕпе вăй кӳртсе тăмасан, эсир часах халсăр юлăр, пурăнма пултараслăх сывлăшне çухатăр. Библире каланă: „Тин çуралнă ачасем пек таса сăмах сĕтне юратăр, вара ӳссе çитĕнсе çăлăнăр", тенĕ (1 Петр. 2:2). Библи вулăр, тишкерĕр ăна, шухăшлăр, астуса юлăр. Эсир тĕл пулакан чăрмавсен тăхăрвунпилĕк проценчĕ эсир Библине çителĕксĕр вуласа çителĕксĕр тĕпченинчен килет.

Хăвăрăн кăмăлăра лăплантарассишĕн анчах пайсене çиелтен пăхса тухни юрăхсăр. Турă Сăмахне чĕрере усрăр. Сахал пултăр, анчах тĕплĕн ăнланса илнĕ япала сирĕн чунăршăн пысăк пуянлăх пулĕ, нумай, анчах васкаса вулани нимех те параймĕ. Пурне те ăнланса илейменшĕн ан кулянăр. Малтанлăха Библири ансат выраннсене вулăр. Пĕчĕк ачана та пĕрремĕш куннех аш çитерместĕр вĕт, ăна сĕт паратăр.

Эпĕ сире малтанлăха Иоанн çырнă таса Евангелине вулама сĕнĕттĕм. Эсир вулама пуçăнсан, Святой Сывлăш вуланин пĕлтерĕшне çутатса парĕ. Вăл сире йывăр сăмахсен пĕлтерĕшне уçса парĕ, кăткăс выраннсене ăнланма пулăшĕ. Мĕн вуланине тӳрех асра тытса юлма пултараймасан та, пурне те ăнланаймасан та, пурпĕрех вулама ан пăрахăр! Вулани çеç те сирĕн ăс-тăнăрпа чĕрĕре тасатĕ. Çак ĕçе кашни кун тăвассине нимĕн те ан чăрмантартăр сире.

Иккĕмĕшĕ: кĕлĕ тарăнлăхне ăнланма вĕренĕр. Халĕ сирĕн Çӳлти Атте пур. Вăл кĕле илтет, сире хирĕç сăмах чĕнет. Иисус Христос каланă: „Эсир кĕлĕре ĕненсе кирек мĕн ыйтсан та, пурне те илĕр, тенĕ" (Матф. 21:22). Вăлах çапла та каланă: „Ман ятăмпа эсир ыйтнине Эпĕ тăвăп" (Иоан. 14:14), тенĕ. Кĕлĕ тăвакан çын чиркӳпе

Çӳлти Патшалăхшăн хаклă. Кĕлĕ вулассинчен пăрăнса темĕн тĕрлĕ ĕç шутласа ан кăларăр. Кĕлĕ вуламан христиан — вăйсăр христиан. Иисус Христос темиçешер сехет кĕлĕ вуланă. Хăш чухне ту тăррине хăпарса Атте Турăпа калаçса çĕр каçнă. Ăна та кĕлĕсем кирлĕ пулнă пулсан, пире вĕсем темиçе хут ытларах кирлĕ!

Малтанлăха кĕлĕсене яка вулаймăр. Эсир аран, хăюсăр вулатăр. Анчах пирĕн ăшра пурăнакан Святой Сывлăш сире пулăшĕ, тĕрĕс çул кăтартĕ, эсир вуланă кашни кĕлех шута илĕç. Хăш чухне „çук“, хăш чухне вара „кĕт“ тейĕç, анчах калани пулатех.

Кашни ыйтмассеренех: „Санăн ирĕкӳпе пултăр!“ — темелле. „Турă çине шан, ырă ĕç ту: çĕр çинче пурăн, чăнлăха тытса тăр“ (Псал. 36:4). Хамăр кăмăла тивĕçтериччен малтан Турăпа лăпланмалла. Турă яланах хăйĕн ачисемшĕн мĕн лайăх, çавна тăвать.

Асра тытăр: эсир кирек хăçан та, кирек ăçта та кĕлĕ вулама пултаратăр. Савăт-сапа çăватăр-и, шăтăк чаватăр-и, кантурта-и, лавккара-и ĕçлетĕр, спорт лаптăкĕнче тăратăр-и — хать ăçта та кĕлĕ вулăр, Турă илтетех!

Хăвăр валли кĕлĕ вуламалли мел йĕркелĕр. Кĕлĕ, Библе вĕреннипе пĕрлех, Христос пурăнăçне туллин те çуттăн аталанма пулăшать. Библире каланă: „Чарăнмасăр кĕлтăвăр“ (1 Фес. 5:17), тенĕ. Хăвăр вăхăтăрăн пĕр пайне кĕлле парнелĕр, вара кун тăршшĕпех хăвăр сисмесĕрех кĕлĕпе тулса çӳретĕр. Ирхине вăрансан чĕркуçленсе кĕлĕри темиçе сăмаха калани çителĕксĕр. Турăпа хутшăнма кун каçа пĕр-пĕр яланхи вăхăт суйласа илĕр.

Ку ĕçе тунă чухне шуйттан сирĕн кашни утăмах сыхласа тăрĕ. Кĕтмен çĕртен ачăр кăшкăрса яма пултарать, телефон шăнкăравлама пултарать, алăка пырса шаккама пултараççĕ — сире нумай кансĕрлĕç, апла пулин те кĕлĕ вулăр! Шанăçăра ан çухатăр: кĕлĕ вуланă вăхăт сирĕн

пурӑнӑҫӑрта чи хакли пулнине часах туйса илетӗр. Эсир ҫав вӑхӑта чӑтӑмсӑррӑн кӗтме пуҫлатӑр. Ялан, кашни кун, тӑтӑшах кӗл тумасан сирӗн пурӑнӑҫӑрта тем ҫитмен пек, тӗлсӗр-паллисӗр, усӑсӑр иртнӗн туйӑнма пуҫлать. Яланах кӗлӗ тумасан, Турӑ сире пама тӑрӑшакан шалти канӑҫлӑха нихӑҫан та тупаймӑр.

Виҫҫӗмӗшӗ: Святой Сывлӑша вӗҫӗмсӗр шанӑр. Асра тытӑр: Христос пирӗн ӑша Святой Сывлӑш урлӑ кӗрсе пурӑнать. Сирӗн ӳт халӗ Таса Троицӑн виҫҫӗмӗш ипостаҫӗ пурӑнакан ҫурт. Унран пулӑшу ан ыйтӑр, тарҫӑран пулӑшу ыйтнӑ пек. Килсе пӗтӗмпех туса пама ыйтӑр Унран. Пурӑнӑҫӑрта мӗн пуррине пӗтӗмпех Хӑйӗн аллине илме ыйтӑр Унран. Хӑвӑр вӑйсӑр, хӳтлӗхсӗр, вылянчӑклӑ, шанчӑксӑр пулни ҫинчен калӑр Ӑна. Айккине пӑрӑнса тӑрӑр та хӑвӑр пурӑнӑҫӑрти пур суйлавсемпе ыйтусене татса пама Ӑна ирӗк парӑр.

Христиан пурӑнӑҫне эсир ҫирӗп тытса пыраймасан та Вӑл сире пулӑшӗ. Сире тытса чарма Ӑна ҫӑмӑл мар, хӑвӑр та ҫапӑҫатӑр, хирӗҫ тӑратӑр пулсан. Турра парӑнса Унра лӑпкӑлӑх шырӑр. Шалти кӑткӑслӑхӑрпа йывӑрлӑха пӑрахӑр. Пуҫӗпех Ӑна шанӑр. Татса парайман ыйтӑвӑрсемшӗн пуҫӑра ан ватӑр, ан хӑрӑр — ку ӗҫе тума Ӑна ирӗк парӑр. Ыранхи куншӑн та ан хӑрӑр — Вӑл ыранхи куншӑн та Турӑ. Вӑл мӗн пулассине малтанах курса тӑрать. Пурӑнӑҫӑрта мӗн кирлишӗн ан чӑрманӑр — мӗн кирлине Вӑл сире пӗтӗмпех парӗ. Чӑн та ҫӗнтерсе пыракан христиан хуйхӑ-суйхӑран, шалти хирӗҫӳлӗхрен, йывӑрлӑхран ирӗк пулӗ. Святой Сывлӑша пӗтӗмпех шансан эсир ӳтпе чун-чӗре вӑйсӑрлӑхне туйми пулатӑр.

Тӑваттӑмӗшӗ: яланах чиркӗве ҫӳрӗр. Джон Веслей ҫапла каланӑ: „Пӗчченлӗхри тӗн ҫинчен Библи нимӗн те пӗлмест“, тенӗ. Христианство — хутшӑну тӗнӗ. Турӑ хысҫӑн пыни юратӑва, чӑнлӑха, тӗншӗн ӗҫленине пӗлтерет.

Куна вара ҫынсем хушшинче анчах кӑтартма, усӑ курма пулать. Ҫав ҫынсене эсир чиркӳре тупатӑр.

Чиркӳ вӑл Христос ҫӗр ҫинче тунӑ ӗҫ. Кунта эпир Турра пуҫҫапатпӑр, Унӑн Сӑмахне вӗренетпӗр, ытти ӗненекенсемпе хутшӑнатпӑр. Библире чиркӳ пирки ҫапла каланӑ: „таса халӑх", „Турӑ халӑхӗ", „Турӑ тунӑ ҫурт", „Турӑри таса храм", „Турӑ пурӑнмалли ҫурт", „Христос Ӳчӗ" (1 Петр. 2:9-10; Ефес. 2:21-22 т.ыт.те).

Чиркӗве ҫӳренине нимӗнпе те улӑштарма ҫук. Эсир чӑнах та Иисус Христос хыҫҫӑн пыратӑр пулсан, ниме пӗлтермен сӑлтавсене, сӑмахран: ҫанталӑк ытла сивӗ е шӑрӑх, юр е ҫумӑр ҫӑвать теме пӑрахатӑр. Кусем тивӗҫсӗр сӑлтавсем анчах. Вырсарникун ирхине килтех кӗлӗ вулатпӑр текенсем нумай. Ҫакӑн пек хӑтланакан Туррӑмӑра чун-чӗрипе парӑнса пуҫҫапмасть, Вӑл вара ӑна тивӗҫ, мӗншӗн тесен Турӑ пирӗн ӳте, пирӗн ӑс-тӑнпа чӗрене Тӑваканӗ, апла пулсан ӑс-тӑнӑмӑрпа ӳтӗмӗрӗн Туррӑмӑра пуҫҫапнӑ ҫӗре хутшӑнмаллах.

Нумайӑшӗ Турӑ ҫинчен вӗрентнине килтех радиопа итлеме пулать теҫҫӗ, ку чиркӗве кайса кӗл тунипе пӗрех теҫҫӗ. Анчах ку ҫеҫ сахал. Чиркӗве эсир кӗлӗ вуланине кӑна итлеме каймастӑр. Чиркӗве эсир ытти ӗненекенсемпе пӗрле хутшӑнса Туррӑмӑра пуҫҫапма, кӗл тума каятӑр. Чиркӗве пӑхӑнса тӑмасан телейлӗ те ӑнӑҫлӑ христиан пулаймастӑр. Чиркӳре эсир кӗлӗ вуламалли вырӑнӑра тупӑр. Турӑ ӗҫне туса пыма хӑтарнӑ сире. Телейлӗ христиан вӑл тӑрӑшуллӑ христиан.

Пилӗкӗмӗшӗ: мӗн пӗлнине каласа пӗлтерекен христиан пулӑр. Маларах каланӑ тӑватӑ йӗркене туса пыратӑр пулсан, пилӗкӗмӗшӗ хӑйне хӑйех пулса пырӗ — чашӑка пӗр чарӑнми шыв ярсан вӑл тулса тӑкӑнма пуҫлать.

Халӗ эсир патшасен Патшийӗн шанса ӗҫ хушнӑ ятарласа янӑ ҫынни пулса тӑтӑр. Хӑвӑр патшалӑхӑрӑн ялавне

хӑвӑрӑн посольство ҫурчӗ ҫийӗн ҫӳле ҫӗклемелле сирӗн. Калӑпӑр, пирӗн ятарласа янӑ ҫын ют ҫӗршывра посольство тӑрринче ҫакӑнса тӑракан ялава илтерсе пӑрахтарать, ҫак ҫӗршыв халӑхне вӑл пӗрре те килӗшмест текен сӑлтавпа. Ӑна тӳрех каялла чӗнсе илеҫҫӗ! Пӗрлештернӗ Штатсен ячӗпе калаҫма унӑн нимӗнле тивӗҫ те ҫук!

Сирӗн ялавӑр сирӗн ҫурт ҫинче, ӗҫ вырӑнӗнче, лавккара, общежитире ҫакӑнса тӑнине хирӗҫлетӗр пулсан, Христос сире шанса ӗҫ хушнине эсир тивӗҫ мар! Сирӗн хӑвӑрӑн вырӑнӑрта тӑмалла, эсир христиан пулнине пурте пӗлччӗр. Сирӗн Христос ҫинчен мӗн пӗлнине каласа пӗлтермелле.

Эпир икӗ тӗрлӗ пӗлтеретпӗр: пурӑнӑҫпа тата сӑмахпа; пӗри кӑна сахал. Турра чӗнтӗр пулсан, Турӑ сире тӗллев парать — Унӑн ырӑ кӑмӑлӗпе ҫӑласлӑхӗ, Унӑн Хӑвачӗ ҫинчен каласа пӗлтермелле. Эсир Христос ялавӗ айне тӑратӑр. Эсир Унӑн хӗҫ-пӑшалне йӑтаканӗ пулса тӑратӑр.

Иисус Христос каланӑ: „Кам Ман ҫинчен ҫынсем умӗнче каласа пӗлтерет, Эпӗ те ун ҫинчен Ҫӳлти Аттем умӗнче каласа пӗлтерӗп“ (Матф. 10:32). Святой Апостолсен ӗҫӗсенче (28:23) тӗлӗнмелле ӳкерчӗк ҫырса кӑтартнӑ: Павел апостол, хӑй тыткӑнрине пӑхмасӑрах, хӑй патне йышлӑн пыракан Рим халӑхне иртен пуҫласа каҫчен Турӑ Патшалӑхӗ ҫинчен каласа панӑ. Пирӗн пирки те кашни кунах ҫапла калама пулать: „Акӑ тырӑ акакан акма тухнӑ“ (Матф. 13:4).

Пысӑк кантурти ӗҫпе унта-кунта ямалли ҫынна кирек мӗн тума та ирӗк памаҫҫӗ. Унӑн пӗртен-пӗр тӗллев — кантурта ҫырнӑ ҫырӑва кам ячӗпе ҫырнӑ, ҫавна кайса парасси. Тен, ӑна ку ӗҫ килӗшмест. Тен, ҫырура кӑмӑллӑ мар, хуйхӑллӑ хыпар? Апла пулин те, конверта уҫса ҫырӑва улӑштарма пултараймасть вӑл. Унӑн тивӗҫӗ — хыпара илсе ҫитересси.

Пирĕн, христиансен, Турă Сăмахĕ пур. Пирĕн Аслă Хуçамăр калані пире: „Пырăр, çак хыпара вилекен тĕнчене пĕлтерĕр!“ Хăшĕсем çакна шута илмеççĕ. Хăшĕсем Турă хыпарне хăйсеннипе улăштараççĕ. Хăшĕсем хăшпĕр сăмахсене кăларса пăрахаççĕ. Хăшĕсем Турă Хăй мĕн калани çинчен шухăшламасть теççĕ. Теприсем ĕнентереççĕ: чăннипе Вăл ăна Хăй çырман, ăна Ун шухăшне тĕрĕс мар ăнланакан ахаль çынсем анчах çырнă, теççĕ.

Аса илер-ха, Павел апостол çĕршер çул каяллах христиансене Турă Сăмахне ыттисене те вĕрентме чĕннĕ. Асра тытăр: пирĕн акмалла. Хăш-пĕр вăрăсем, чăнах та, чуллă тăпра çине ÿкме пултараççĕ, теприсем çумкурăклă та хытă тăпра çине, апла пулин те пирĕн пĕрех акмалла. Тăпра пулăхлă мар курăннăшăнах акма чарăнмалла мар пирĕн.

Пирĕн алăра çурта. Апла пирĕн ăна çутатма майсем туса памалла! Тĕттĕмлĕх тĕнчинче вăл вăйсăр йăлтăркка çутă пек çеç курăнсан та, пирĕн ĕç — ăна çутатма майсем туса парасси!

Эпир трупа кăшкăртакансем. Кĕрешÿ шавĕнче пирĕн трупасен сасси илтĕнеймĕ те, апла пулин те пирĕн трупана кăшкăртмаллах, хăрушлăхрисене асăрхаттармалла.

Эпир кăвайт чĕртетпĕр. Курайманлăхпа харпăр-хăйне анчах юратакан çак сивĕ тĕнчере пирĕн пĕчĕк кăвайт пысăк пĕлтерĕшлĕ пулмасан та, пирĕн унăн çулăмне пĕтме памалла мар.

Эпир мăлатукпа çапатпăр. Çапни, тен, пирĕн аллăмăра ывăнтарать анчах, апла пулин те пирĕн çапмаллах.

Эпир алла хĕç тытатпăр. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш сулăм ахаль сулăмсем анчах пулĕç, тăшмана лектерес тени ахалех пулĕ, апла пулин те пирĕн хамăр хĕçе хăйрамалла, мĕншĕн тесен ку вăл „Сывлăш хĕçĕ“.

Выçă тĕнче валли пирĕн çăкăр пур. Тен, урăх çимĕçсе-

не кӑна çисе пурӑнакан çынсем пирӗн пурӑнӑç çӑкӑрне çиес те мар тейӗç, апла пулин те пирӗн ӑна сӗнмеллех, çын чунӗсене сӗнмелле.

Ӑш хыпнисем валли пирӗн шыв пур. Пирӗн ялан каламалла: „Ӗçес килекенсем, килӗр те ӗçӗр!“ — темелле. Пирӗн пӗр хуйхӑрмасӑр, чакмасӑр Унӑн Сӑмахне сарса çӳремелле!

Иисус Христос каланӑ: сирӗн вӑрӑсем пулӑхлӑ çӗр çине те ӳкӗç, шӑтса ӳсӗç те çимӗç парӗç, тенӗ. Сирӗн чӗрери, çӑварти çулӑм хӑш-пӗр сивӗ чӗресенче таса çулӑм чӗртӗ те вӗсене Христос патне илсе çитерӗ. Мӑлатук хытӑ чӗреллисене çапса ватӗ те вӗсене Христоса пӑхӑнтарӗ. Хӗç çылӑх сийне шӑтарӗ, мӑнкӑмӑллӑхпа харпӑрхӑйне кӑна юратнине витерӗ те чӗресенче Турӑ Сывлӑшӗ валли вырӑн тӑвӗ. Выççисем пурӑнӑç çӑкрипе тӑранӗç, ӗçес килнисем чӗрӗ шыв ӗçсе ӑш хыпнине ирттерӗç.

Чунсене тытакансем пулӑр! Çын туйма пултаракан чи хавaслӑ туйӑм — ытти çынсене Христос патне илсе çитересси. Христосра çӑлӑнӑç шырамаллине пиншер çынна ӑнлантарма пултарнӑ эпӗ. Çын аллине тӑсса „Эпӗ Христоса йышӑнатӑп!“ тенине курсан, эпӗ каллех шалти хавaслӑ хумханӑва туятӑп. Çакӑ тӗнчери пур мулран та хаклӑрах. Христос валли çын тупнине нимӗнле телейпе те, нимӗнле кӑмӑл-туйӑмпа та, нимӗнле çӗкленӳллӗ ӗçпе те танлаштарма май çук. Чунсене тытакансем пулӑр! Христос ӗçне каласа пӗлтерекенсем пулӑр!

Библире каланӑ: „Ӑсли чунсене хӑй патне пуçтарать“ (Юм. 11:30). „Ӑслӑ-тӑнлисем çӳл пӗлӗт çинчи çутӑсем пек çуталса тӑрӗç, нумайӑшне тӗрӗслӗх енне çавӑрнисем ӗмӗрӗмӗрех, яланах çӑлтӑрсем пек çуталса тӑрӗç“ (Дан. 12:3).

„Эсир çӗр тӑварӗ“ (Матф. 5:13). Тӑвар ӑш хыптарать. Сирӗн пурӑнӑçӑр ытти çынсене чӗрӗ шывшӑн ӑш хыптарать-и?

Улттӑмӗшӗ: юрату сирӗн пурӑнӑҫӑрта тӗп туртӑм пултӑр. Хӑйӑн хыҫҫӑн пынисене Иисус Христос ҫапла каланӑ: „Эсир Манӑн вӗренекенӗмсем пулнине эсир пӗр-не-пӗри мӗнле юратнинчен пӗлӗҫ“, тенӗ. Ҫакна Иоанн апостол ҫырӗплетсе каланине Библире тӗл пулатпӑр: „Эй, савнӑ тӑванӑмсем! Пӗр-пӗрне юратӑр, юрату Турӑран, юратакан кирек кам та Турӑран ҫуралнӑ, Турра пӗлет; юратман ҫын Турра пӗлмест, мӗншӗн тесен Турӑ Вӑл — юрату. Ывӑлӗ урлӑ пире чӗрӗлӗх парасшӑн Турӑ Хӑйӗн пӗртен-пӗр ҫуралнӑ Ывӑлне тӗнчене янинчен Турӑ пире юратни палӑрчӗ“ (1 Иоан. 4:7-10).

Турӑ Хӑй ачисене панӑ чи пысӑк парне вӑл — юрату. Юрату Святой Сывлӑш ҫимӗҫӗсенчен пӗрремӗш вырӑнта тӑрать.

Библире ҫапла каланӑ: Христос хыҫҫӑн пыракансен пӗр-пӗрне юратмалла, Турӑ пире юратнӑ пек, пирӗншӗн Хӑйӗн Ывӑлне хӗрес ҫинче вилме янӑ пек. Библире тата ҫапла та каланӑ: эпир Турӑ патне пырсан Вӑл пире аслӑ юрату парать, ҫав юрату пирӗн чӗремӗре Святой Сывлӑш сапалать, тенӗ. Эпир Христосӑн пулнине кӑтартса параканни вӑл эпир пӗр-пӗрине юратни. Туррӑн ҫак пӗлли ҫук ӗҫне ӑнланса илейтӗр пулсан, эсир Христоспа пурӑнмалла телейлӗ пурӑнӑҫӑн пӗр пайне утса тухнӑ!

Ҫиччӗмӗшӗ: итлекен христиан пулӑр. Пурӑнӑҫӑрта тӗл пулакан ыйтӑвӑрсене татса пама Христоса малти вырӑна кӑларӑр. Вӑл сирӗн Хуҫӑр, Вӗрентекенӗр пултӑр. Сирӗн ертӳҫӗ пулма май парӑр Ӑна.

Саккӑрмӗшӗ: сӑнанине хирӗҫ тӑма вӗренӗр. Пӗлетӗр ӗнтӗ, сӑнани куҫкӗретех. Сӑнани ҫылӑх мар. Сӑнани хыҫ-ҫӑн кайни — ҫылӑх. Турӑ сире нихӑҫан та сӑнамӗ. Анчах Вӑл сире тӗрӗслес тесе сире сӑнама май парать. Илӗртӳ — шуйттан ӗҫӗ. Ҫакна асра тыт. Сӑнанине хирӗҫ тӑрас тесен, сӑнаканнине Евангелири пуплеве вуласа памалла,

вăл вара тарĕ сирĕнтен, мĕншĕн тесен Турă Сăмахне хирĕç тăраймĕ.

Хăйне пушă хирте сăнанине Иисус Христос пĕртен-пĕр Турă Сăмахĕпе çĕнтернĕ. Вăл виçĕ хутчен çапла каланă: „Çапла çырнă“, тенĕ.

Эсир усала: „Турă çапла каланă“ тесен, усал çухалĕ. Çав вăхăтрах хăвăр ăшра пурăнакан Святой Сывлăш урлă Христоса хăвăршăн çапăçма ирĕк парăр. Пĕр пĕчĕк хĕрача çапла каланă: „Алăка шуйттан шакканине илтмессеренех эпĕ алăк патне Иисус Христоса яратăп“, тенĕ.

Кашни çыннах сăнаççĕ, анчах хăшĕсем вĕсемпе вăрахчен хутшăнаççĕ. Вĕсем хăйсене сăнанине тĕрĕсленĕ пек. Енчен те эсир шăшие шăпăрпа хăвалатăр пулсан, шăши шăпăр çине мар, хăй çăлăнса юлма пултаракан шăтăк çине пăхнине асăрхатăр. Хăвăрăн куçăрсене астаракан япала çинчен илĕр те Христос çинелле куçăрсене тĕллĕр!

Пĕррехинче эпĕ пĕр офицертан ыйтрăм: çапăçу хирĕнче паттăрлăх е хăвăнтан аслăраххине пăхăнассине суйласа илнĕ пулăттăр-и? терĕм. Вăл шутласа тăмасăрах каларĕ пăхăнассине!

Туррăмăра эсир Ăна пăхăнса тăни пуринчен ытла кирлĕ. Ăна пăхăнас тесен, сирĕн Вăл мĕн хушнине пĕлмелле. Куна пĕлме сирĕн Библие вуласа тĕпчемелле. Библи сирĕншĕн компас, йĕркелесе пыракан. Турă сире мĕн каланине итлĕр.

Тăххăрмĕшĕ: чăн-чăн христиан пулăр.

Такам пĕри çапла каланăччĕ: „хăш-пĕр христиансем шухăш-кăмăлĕпе йăлтах пĕлĕтре, çăр çинчи пурăнăç валли юрăхсăр вĕсем“, тенĕччĕ.

Чăн та, Библи çылăхран пăрăнма хушать, анчах çынран йĕрĕнмелле, пурнăçри пек мар пулмалла тесе Библире ниçта та каламан. Сирĕн çуталса тăмалла! Сирĕн

пулӑшу пама хатӗр пулмалла, ӑшӑ кӑмӑллӑ, тараватлӑ, ӳтпе те, чунпа та таса пулмалла. Чунтан ӑшшӑн калаҫнӑ пек тунинчен, сиенлӗ элекрен, аван мар сӑмахран, иккӗленӳллӗ чун йӑпатмӑшӗнчен хура ҫӗленрен хӑранӑ пек хӑрамалла. Сирӗн сӑн-питӗр кӑмӑллӑ, типтерлӗ, илӗртӳллӗ пулмалла, хӑвӑра пӗлсе тыткаламалла. Пур япалара та виҫерен тухнине пӑрахӑҫламалла. Арҫын е хӗрарӑм пулнине пӑхмасӑр сирӗн хӑвӑра сӑпайлӑ тытма тӑрӑшмалла, сирӗн пурӑнӑҫӑр ҫиелти сӑнӑр пекех Евангелипе тӳр килсе пытӑр, ҫак енӗпе ҫынсене те хӑй патнелле илӗрттӗр. Бернхаус доктор ҫапла каланӑ: „Тирпе витнӗ пуян хуплашкаллӑ Евангелие ҫынсем вулаймасан та пултараҫҫӗ, анчах вӗсем ахаль хуплашкаллӑ Евангелие вуламасӑр пурӑнаймаҫҫӗ“, тенӗ.

Вуннӑмӗшӗ: Турӑ пурӑнӑҫӑрта мӗн панипе ҫырлахӑр. Хӑвӑр мӗнле, Турӑ та сире ҫавӑн пек туса янӑ. Эсир халӗ ӑҫта, ҫавӑнта тӑратнӑ Вӑл сире. Ҫавӑнпа та эсир мӗнле, ҫавӑн пек Ӑна мухтама пултаратӑр; эсир ӑҫта, ҫавӑнтан Ӑна мухтама пултаратӑр! Хӑш-пӗр ҫынсем ялан карта леш енне пӑхаҫҫӗ, унта курӑк та симӗсрех пек туйӑнать вӗсене. Пурӑнӑҫӗнче пӗтӗмпех урӑхла пултӑрччӗ тесе ӗмӗтленсе мӗн чухлӗ вӑхӑта сая яраҫҫӗ вӗсем, мӗншӗн-ха пирӗн капла мар, апла тесе асапланаҫҫӗ, шӑп хӑйсем тӑракан тӗлте кӑна вӑйлӑрах пулнине, майсем ытларах пулнине асӑрхамаҫҫӗ те.

Павел апостол пек пулӑр, вӑл каланӑ: „Эпӗ нимӗне те пӑхмастӑп, хам чунӑма та хӗрхенместӗп“ (Ап.Ӗҫ. 20:24). Павел апостол каланӑ: чухӑнлӑхра та, пуянлӑхра та пурӑнма вӗренсе ҫитрӗм, тенӗ. Тӗрмере те чӑн-чӑн христиан пулнӑ вӑл. Сирӗн пурӑнӑҫӑр мӗнле пулни сире пусарса ан тӑтӑр. Мӗн пуррине тӗрӗс ҫулпа ҫӗнтерме вӗренӗр.

Ҫак йӗркесемпе сӗнӳсем питӗ ансат пек туйӑнма пул-

тарĕç. Апла пулин те туса пырăр вĕсене, вĕсем пулăшаççĕ. Эпĕ вĕсене пиншер çын пурăнăçĕпе тĕрĕслерĕм. Эпĕ вĕсене хамăн пурăнăçпа та тĕрĕслерĕм. Вĕсене çирĕппĕн, каялла чакмасăр тытса пырсан, вĕсем сире чун канăçлăхне, ăс-тăн канăçлăхне, телейпе савăнăç парĕç, хăвăра тивĕçтерекен пурăнăçпа мĕнле пурăнмаллин вăртăнлăхне пĕлĕр.

ВУНПИЛЛӖКӖМӖШ СЫПӐК

# ХРИСТИАН ТАТА ЁНЕНЕКЕН УШКӐН

„Ҫавӑн ҫинчех эсир те Сывлӑш пулӑшнипе Турӑ пурӑнмалли ҫурт пулса пыратӑр“.
Ефес. 2:22

Ҫын — ыттисемпе хутшӑнакан чӗрӗ чун, унӑн ҫутҫанталӑкӗ ҫакӑн пек, хӑй пекех шухӑшлакан ҫынсемпе хутшӑнса вӑл хӑйне валли хӑрушсӑрлӑх туйӑмне тупать. Этемлӗх историйӗнче пӗр этем ушкӑнӗ те, пӗр ӑру та, пӗр организаципе общество та Христос чиркӗвӗ пек хӑватлӑ, инҫе сарӑлнӑ е чылайӑшне юрӑхлӑ япала пулайман.

Чи авалхи ҫынсем хӑйсене хӳтӗлеме пӗрле пуҫтарӑннӑ, каярах вӗсем харпӑр-хӑй валли усӑ шыраса, киленӳ шыраса пӗр-пӗринпе ушкӑнсене пуҫтарӑнма пуҫланӑ. Этемлӗх аталанса пынӑ майӑн вӑрттӑн ушкӑнсем йӗркеленме пуҫлаҫҫӗ, хӑйӗн членӗсене вӗсем ыттисенчен уйӑракан „уйрӑмлӑхсем“ панӑ. Ушкӑнра ҫирӗплетнӗ тупа сӑмахӗсем, йӑла-йӗркесемпе законсем унӑн членӗсемшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ.

Ҫавӑн пекех, йӑхпа наци ушкӑнӗсем те йӗркеленнӗ, вӗсене пӗр ҫӗршывран е пӗр тӑрӑхран тухни, е пӗр ялава пӑхӑнса тӑни пӗрлештернӗ. Клубсем, студентсен ушкӑнӗсем, ложӑсем, литература ушкӑнӗсем, политика партийӗсем, ҫар организацийӗсем пурте, чи чаплӑ „пархатарлӑ клубсенчен“ пуҫласа пӗр-пӗр „эшкер“ таранах,

этеме кирлӗ, ҫак ушкӑнсенче вӑл йӑпану, хавхалану шырать, мӗншӗн тесессӗн ҫак ушкӑн членӗсем те ун пекех шухӑшлаҫҫӗ, пурӑнаҫҫӗ.

Этем Христос чиркӗвӗнче кӑна чӑн-чӑн канӑҫлӑх, хавхалану тупнӑ, мӗншӗн тесен ытти пур ушкӑнсене те ҫынсем хӑйсем шухӑшласа кӑларнӑ. Ҫак ушкӑнсем шухӑшласа кӑларнӑ чикӗпе ҫынсене хӳтӗленӗ пек тӑваҫҫӗ; чиркӳ вара чӗрӗ, вӑйлӑ организм, хӑйӗн пӗлтерӗшпе пурӑнма пултараяслӑхне шалтан илет, ҫиелтен мар.

Экклезия грек сӑмахӗ, куҫарсан чиркӳ тенине пӗлтерет вӑл, „чӗнсе илнӗ“ е ӗненекенсен ушкӑнӗ тенине пӗлтерет. Чиркӳ сӑмах каярах христианство тӗнӗпе тӳр килекен пулнӑ, анчах вӑл христианствӑчченех пулнӑ. Грек тӗнчинче вӑл ирӗклӗ хула-патшалӑх ҫыннисене пухӑва пухнине пӗлтернӗ. Пӗлтерӳҫӗ чӗннипе ҫынсем хӑйсен ӗҫӗ-хӗлӗ пирки калаҫма, йышӑнусем тума пуҫтарӑннӑ. „Чиркӳ“ сӑмах Авалхи Сӑмахра та тӗл пулать, унта ӑна Израиль халӑхӗн „пӗрлешӗвӗ“ тесе куҫарнӑ, унӑн членӗсене Турӑ суйласа илнӗ халӑх тенӗ, Святой Апостолсен ӗҫӗнче Моисей ҫинчен Стефан ҫакӑн пек калани пур: „Вӑл пушӑ хирте Синай тӑвӗ ҫинче ангелпа калаҫнӑ“ (Ап.Ӗҫ. 7:38). Ҫапла вара Христос ҫуралнӑ хыҫҫӑнхи пӗрремӗш ӗмӗрте „чиркӳ“ сӑмах грексемшӗн хӑйне хӑй ертсе пыракан, демократиллӗ ушкӑн тенине пӗлтернӗ; еврейсемшӗн вара Турӑ ҫыннисен тӗн ушкӑнӗ тенине пӗлтернӗ.

Чиркӳ сӑмаха христианство ушкӑнӗпе чи малтан Иисус Христос Хӑй пӗрлештернӗ, Петр апостол Вӑл ҫапла каланӑ: „Ҫак чул ҫине Эпӗ Хамӑн чиркӗвӗме лартӑп, ӑна тамӑк хапхи те ҫӗнтерейменӗ“ (Матф. 16:18), тенӗ.

Ҫапла майпа чиркӗве Иисус Христос Хӑй тунӑ. Вӑл аслӑ тӗп шухӑш, ун ҫинче чиркӳ ҫӗкленнӗ. Вӑл христианӑн шухӑш-кӑмӑлне тӑваканӗ, чиркӳ Ун ҫинче никӗслен-

се тăрать. „Пĕрре хунă никĕсрен пуçне урăх никĕс хума никам та пултараймасть, вăл никĕс Иисус Христос“ (1 Кор. 3:11). Иисус Христос Хăйне чиркĕве никĕслекенĕ, чиркĕве тăваканĕ тет, апла чиркӳ Унăн, Унăн кăна. Хăй чиркĕвĕн çыннисемпе пĕрле пурăнма сăмах панă Вăл. Ку организаци çеç мар, тĕнчере халиччен палăрнă ытти ушкăнсемпе танлаштарма та çук организаци вăл: Турă Хăй чиркĕвĕн çыннисемпе, ахаль çынсемпе, пĕрле пурăнать.

Çĕнĕ Сăмахра каланă тăрăх, чăннипе пĕртен-пĕр чиркӳ кăна пулин те, унта вырăнти чиркӳсемпе общинăсем темиçе те пулма пултараççĕ. Çак чиркӳсем тĕрлĕ тĕн тытса пыраççĕ, тĕрлĕ общинăсемпе ушкăнсене пайланаççĕ. Тĕрлĕрен чиркӳсене национальнăçа, мĕнле кĕл тунине кура е унăн членĕсем чуна кирлĕ ĕçе мĕнле тунине кура тĕрлĕ ушкăнсене пайлама пулать. Апла пулин те, аслă Христос Чиркĕвĕнче пайланса, уйрăлса кайни пур пулсан та, пĕрех вĕсен Пĕр Хуçа, Мухтав Юрринче каланă пек: „Христос чиркӳ никĕсĕ, Ун çинче тăрать вăл“, тесе вĕрентнĕ Çĕнĕ Сăмахра.

Иисус Христос пĕтĕм тĕнчери е тĕнче уçлăхĕн чиркĕвĕн хуçи. Чиркӳ ĕçĕ, вĕрентĕвĕ пĕтĕмпех Унран тухса пымалла, мĕншĕн тесен Вăл христиансен шухăш-кăмăлĕн çăлкуçĕ.

Пирĕн электрофикаци ĕмĕрĕнче чиркĕве телефон линийĕсемпе çăмăллăнах танлаштарма пулать, унăн та пĕр тĕп стнци, пур линисем те унта пуçтарăнаççĕ, пур çыхăну та унтан пуçланать. Чукун çул системинче те хушусем паракан, пуйăссен çулне йĕркелекен тĕп станци пур. Çарта хăйне пăхăнакан ушкăна пĕр генерал хушусем парать. Ана пăхăнса тăракансем йышлăн, вĕсем унăн хушăвне кăшт урăхлатса калама пултараççĕ, анчах генерал хушниех тĕп тĕллев пулса юлать.

Иисус Христос чиркӳ тӗлӗшпе ертӳҫӗ шутланать. Вӑл хушнипе чиркӳ пулнӑ, унӑн пӗтӗм вӑйӗ Унран килет, кашни чиркӳ ушкӑнӗн Вӑл хушнисене тӗрӗс тытса пыма тӑрӑшмалла. Генерал хӑй хушӑвӗсене тӗрӗс пурӑнӑҫланине кӗтнӗ пекех, Иисус Христос та кашни чиркӳренех ҫавна кӗтет, Хӑй вӗрентӗвӗнчен ан иртттӗрчӗҫ тет.

Чиркӗве тӗрлӗ шалти хирӗҫӳлӗхшӗн, тавлашушӑн, пӗрлӗх ҫук пек курӑннӑшӑн нумай айӑпланӑ. Ку ҫиелтен кӑна ҫапла курӑнакан япала.

Пӗр хушӑвах тӗрлӗ майлӑ каланӑ пирки пулакан тавлашуллӑ лару-тӑру ертӳҫӗн аслӑлӑхне пӗрре те пӗчӗклетмест, унӑн хушусем парас ирӗкне пӗтермест.

Тӗрлӗ тӗн вӗрентӗвӗсене пӑхса тухсан эсир ҫакна куратӑр: пӗтӗмӗшле илсен вӗсем пурте пӗрешкел. Вӗсем пӗр-пӗринчен йӑлапа уйрӑлса тӑма пултараҫҫӗ, тӗн ыйтӑвӗсем пирки тавлашма пултараҫҫӗ, апла пулин те пурте Иисус Христоса, Вӑл Турӑра сӑнарланнӑ, хӗрес ҫинче вилсе этеме ҫӑлассишӗн чӗрӗлнӗ тесе йышӑнаҫҫӗ вӗсем — ҫакӑ этемлӗхшӗн чи кирлӗ пулӑм.

Халӗ, Христоса хӑвӑра Ҫӑлакан тесе йышӑнтӑр пулсан, ӗмӗтӗрпе шанӑҫӑра Унпа ҫыхӑнтартӑр пулсан, эсир пӗтӗм тӗнчери аслӑ чиркӳ членӗ пулса тӑтӑр. Эсир ӗненӳ ҫемйин ҫынни пулса тӑтӑр. Эсир — Христос ӳчӗн пайӗ. Халӗ сирӗн Христоса пӑхӑнмалла, Ӑна пӑхӑнсан эсир Унӑн тӗслӗхӗ хыҫҫӑн кайса Турра пуҫҫапакансемпе пӗрлешетӗр. „Хӑш-хӑш ҫынсенӗн йӑлине кура пирӗн пӗр ҫӗре пуҫтарӑнма пӑрахас мар“ (Евр. 10:25).

Такам пӗри каланӑччӗ: „Христос ӳтӗнче пулни тени чӑннипе пӗр-пӗр чиркӳ ҫынни тенине пӗлтерет“, тенӗччӗ.

Кунта эпир пӗтӗм тӗнчери чиркӳ пирки мар, вырӑнти, хамӑр прихут чиркӗвӗ ҫинчен калаҫатпӑр, унта эпир ҫитменлӗхсемпе вӗҫне ҫитермен ӗҫсене нумай куратпӑр. Апла пулин те, пирӗн асра тытмалла: ҫынсем хушшинче

те пур енчен те лайăх çынсем çук, Туррăмăра мухтама тунă çуртсенче те çав çитменлĕхсем темĕн чухлех. Иисус Христос халиччен пурăннисенчен пур енчен те лайăх пĕртен-пĕр çын пулнă. Ыттисем эпир пурте — ӳкĕннĕ çылăхлă çынсем анчах, тем пекех Унăн тĕслĕхне пурăнăçлас тесессĕн те; чиркӳ те хăйĕн тата хăйĕн çыннисен çитменлĕхĕсене пур енĕпе те лайăхах маррине курмăш тăвать, куçне хупать.

Иисус Христос чиркĕве тунă чухне Хăй хыççăн пыракансем Ун патне пырĕç, шанчăклă пулĕç тесе шухăшланă. Пирĕн вăхăтра, пирĕн çĕршывра (США), официаллă майпа нимĕнле чиркӳпе те çыхăнман тесе шутланакан хĕрĕх пĕр процент халăх хушшинче эсир нумай чиркӳсемпе общинăсене курсан тĕлĕнсех каятăр. Хăвăрăн çулăра шыранă май эсир ачаранах хăнăхнă чиркĕве тупма тăрăшатăр е ӳссе çитĕннĕ çыннăн шухăшкăмăлне тивĕçтерекен чиркĕве шыратăр. Пĕр-пĕр чиркĕве суйласа илесси çăмăл ĕç мар, мĕншĕн тесен чиркӳ сире пулăшать, унтан та ытларах — ыттисене пулăшма май парать, апла пулсан, Турăшăн ытларах ăçта ĕçлеме май пуррине кĕлĕпе суйласа илмелле сирĕн.

Мĕншĕн-ха тĕрлĕ чиркӳсем нумай, енчен те вĕсем пурте пĕр Турра пуççапаççĕ пулсан, тесе кам та пулин айăплас тĕллевпе ыйтсан, манăн çапла хуравлас килет: эпир пурте пĕр этемлĕх йăхĕнчен, апла пулин те пĕрпĕринчен ӳт-пӳпе кăмăл-туйăм енчен уйăрăлса тăратпăр, кашнинех тĕрлĕ япала кирлĕ, пĕр япалапа пурне те тивĕçтерме майĕ çук.

Хăш-пĕр çынсене паллă йăласене чаплă çуртра туса ирттерсен анчах Турă патне çывăхарма çăмăлрах. Теприсене Турра тупма ахаль лару-тăру кирлĕ. Пĕрисене пĕр кĕлĕ килĕшет, теприсене — тепри. Ĕçĕ кунта мĕнле кĕлĕ тунинче мар, кĕлле чунтан, чĕререн туни кирлĕ,

çавăнпа та пирĕнтен кашниех хăйне юрахлă чиркÿ суйласа илмелле.

Яланлăха пурăнма кусна çурта эсир малтан пĕтĕмпех пăхса тухатăр, çурт пирки мĕн те пулин пĕлме тăрăшатăр. Христиансенчен нумайăшĕ малтан пĕр чиркĕве çÿрет, мĕншĕн çак чиркĕве çÿренине хăй те пĕлмест вăл, каярах, ку чиркÿ вĕсене тивĕçтерсех пĕтерейместтеççĕ те тепĕр чиркĕве çÿреме пусласçĕ, çапла вара темиçе çĕре çитеççĕ, ниçта та тымар ярайманççĕ. Çакăн пек шанчăксăрлăх Турă мухтавне те ÿстермест, хăйсене те усă памасть.

Тĕрлĕ чиркÿсен тĕрлĕ истори, тĕрлĕ йăла-йĕрке, вăл е ку япалана, пулăма ытларах палăртасси, çавăнпа та кашни христианăн хăйĕн чиркĕвне тупмалла, унта кăна вăл тĕн пĕлĕвне кирлĕ шайра ÿстерме пултарасса, хăйне мĕн кирлине май килнĕ таран тивĕçтерессе, ыттисемшĕн усăллă ĕç тума пултарасса пĕлсе тăмалла.

Пĕр-пĕр проповедникне ĕненекенсен ушкăнĕнчен те ытларах кăмăлласа ан йăнăшăр. Проповедниксемпе пасторсем улăшăнаççĕ, — чиркÿ пĕлтерĕшĕ çавах тăрса юлать, сирĕн чиркÿ патне, унти Христос патне кăмăл туртăмĕпе тÿрĕлĕх пулмалла. Чиркĕве çÿрекен çынсем Иисус Христоса юратни, Ун хыççăн кайма кăмăл туни вĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тăнине ăнланни чиркĕве çирĕп те тĕреклĕ тăвать.

Чăн христиан чиркĕве çапла кирлипе кăна каймасть, ку ăна общинăра вырăн панипе мар, вăл Турăран хăракан хисеплĕ çын ята илтессишĕн те кирлĕ мар. Чăн христиан чиркĕве чунне тасатса канăçлăх шырама та каймасть, вăл ăна парать пулин те. Чăн христиан чиркĕве илме мар, пама каять. Вăл унта ытти çынсемпе тĕл пулма каять, вăл унта Турра мухтакан хăйĕн сассине ыттисен сассипе пĕрлештерме каять вăл унта. Турă пилне ыйтса илес ĕçре кĕлĕ вăйне ÿстерме, Туррăмăр Иисус Христос урлă

ҫӑлӑнӑҫ пуласса шаннине кӑтартма каять. Вӑл унта ыттисемпе пӗрле Турӑн вӗҫсӗр юратӑвӗпе ырӑ кӑмӑлне чунтан хисепленипе Ӑна пуҫҫапма каять.

Христиансен ушкӑнӗн, „чиркӳ" е „община" ятлӑ вӑл, тӗллевӗсем ҫаксем; пӗрремӗшӗ: Турра пуҫҫапса мухтасси. Чиркӗве эпир кӗлӗ кӑна итлеме каймастпӑр. Чиркӗве эпир Турра пуҫҫапма каятпӑр. Пирӗн Ӑна шухӑшра та, чӑн пурӑнӑҫра та пуҫҫапмалла. Йӑла-йӗркесем, юрӑсем юрласси, кӗлӗсем вуласси ҫакӑ пӗтӗмпех Турра мухтани, ҫакӑ ҫыннӑн тӗп тӗллевӗ пулать. Эпир Ӑна пуҫҫапни Ӑна мухтанине пӗлтерекен чи пысӑк паллӑ. Христиан тунӑ ӗҫ, чунсем тупни, Библи вулани тата ытти пин-пин ырӑ ӗҫ туни Ӑна пуҫҫапнипе танлашма пултараймасть. Телейлӗ пурӑнас тесен, Турра чыслани кирлех. Пуринчен те ытла Турӑ пирӗнтен пуҫҫапнине, мухтанине кӗтет.

Иккӗмӗшӗ: чиркӳ ҫынсемпе хутшӑнмалли вырӑн. Ҫӗр ҫинче рая савӑнса кӗтни вӑл ӗненекенсем пӗр-пеӗринпе хутшӑнни пулмалла. Эсир чӑн христиан пулсан, ӗненекенсемпе тепре тӗл пуласса чӑтӑмсӑррӑн кӗтме пуҫлатӑр. Ӗлӗк общество пурӑнӑҫӗ пӗтӗмпех чиркӳ тавра тимленӗ. Чиркӳн Турра мухтас ӗҫне Иисус Христосӑн ертсе пымалла, эпир вара, христиансем, пӗрне-пӗри кирлӗ. Пире кӗлӗ кирлӗ, пӗрне-пӗри пулӑшни кирлӗ. Эпир пӗр-пӗриншӗн яваплӑ.

Павел апостол чиркӗве этем ӳчӗпе танлаштарать. Алӑ туташӑн яваплӑ, куҫ хӑлхапа килӗшсе ӗҫлет, ура алӑпа килӗшӳллӗн хускалать, ӳтӗн кашни пайӗ хӑйӗн ӗҫне тӑвать, ҫав вӑхӑтрах ытти пайсен ӗҫӗшӗн те яваплӑ.

Христианство — хутшӑну тӗнӗ. Христос хыҫӗнчен пыни юратӑва, тасалӑха, Турӑшӑн ӗҫленине пӗлтерет, ҫакӑ вӑл пӗр-пӗринпе хутшӑннӑ чухне пурнӑҫланать тата палӑрать. Шӑп ҫакӑн пек хутшӑну чиркӳре пулать. Пӗр-пӗринпе хутшӑнса эпир пӗр-пӗрне вӑй паратпӑр. Иисус

Христос каланӑ: „Ман ятӑмпа иккӗн е виççӗн пӗр çӗре пухӑнсассӑн, Эпӗ унта вӗсем хушшинче пулӑп, тенӗ“ (Матф. 18:20). Иисус Христос çапла вӗрентнӗ: пирӗн пӗрле пухӑнса Турра кӗл туса пуççапмалла.

Виççӗмӗшӗ: чиркӳ ӗненӗве çирӗплетме кирлӗ. Пӗрле пухӑнса кӗлтуни, мӗн пӗлнине пӗлтерни, вӗрентни, ӑс пани пирӗн ӗненӗве çирӗплетет. Чиркӗ сирте таса ӗненӗве çирӗплетӗ, „Христиан пурнӑçӗн йӗркисем“ пайра пӑхса тухнине тепӗр хут çирӗплетӗ.

Тӑваттӑмӗшӗ: чиркӳ — кӗлӗ тунӑ чухне хушша кӗрекен. Пире кӗлтума хӑтарнӑ. Христиан умӗнче пин ыйту тӑрать. Çак ыйтусене вырӑнти чиркӗпе пӗрле татса парсан аванрах пулӗччӗ. Христианство нихӑçан та чиркӳрен уйрӑм пулман. Чиркӳ вӑл Христосӑн çӗр çинчи пӗрлешӗвӗ. Çитменлӗхсене, ӑнӑçман ӗçсене, пайланса кайнисене, ниме пӑхмасӑр чиркӳ вӑл чиркӳ. Урӑх нимӗнле пӗрлешӳ те унӑн вырӑнне йышӑнаймӗ.

Пиллӗкмӗшӗ: христианство ӗçне тума чиркӳ урлӑ пулӑшмалла. Библи вуннӑмӗш пая памалли çинчен вӗрентет. Эсир ӗçлесе илнӗ таса тупӑшӑн вуннӑмӗш пайӗ Турӑ укçи. Турӑ, сирӗн ӗçе пилленине кура, вуннӑмӗш пай çумне татах хушмалла.

Парнелесси — христиансен лайӑх енӗ, вӑл пирӗн кулленхи пурӑнӑçра пулса пымалли япала. Пире яланах ырӑ кӑмӑл ертсе пымалла.

Христос каланӑ: „Илессинчен парасси телейлӗрех“, тенӗ (Ап.Ӗç. 20:35). Пани чӗрене ӑшӑтнине, чуна канӑç кӳнине пӗлнӗ Вӑл. Çак пиле Вӑл сире пӳрнӗ. Хӑвна кӑна юратасси вӑл хӑранипе пулать — христианӑн вара хӑрамалла мар. Иисус Христос аллисем яланах уçӑ — Вӑл нихӑçан та хӑйне кӑна юратман, çӑткӑнланса чышкине чӑмӑртаман.

Панине укçапа тата тӑхӑннӑ кивӗ тум ярса панипе

виçме çук. Хӑш чухне чи лайӑх парне — туслӑн килĕш-терсе пурӑнни. Ырӑ сӑмах, саламласа пуç тайни, пĕччен çынпа ирттернĕ вӑхӑт, пĕтĕмпех вӑл çӳлти Патшалӑх валли пуçтарнӑ пуян тупӑш. Хӑвӑрӑнне мĕн те пулин памасӑр та Христос валли чун тытаканĕсем пулаймастӑр эсир. Укçа кӑна мар, хӑвӑрӑн вӑхӑтӑра та, пултарулӑхӑра та — пĕтĕмпех Христоса памалла.

Вуннӑмĕш пайран ытларах панине çирĕплетнĕ йĕр-кесемпе е организациллĕ мелсемпе чармалла мар. Эсир хӑвӑр мĕн таран пама пултарнӑ, парне çав таран пулмал-ла. Тен, ку парне сире кунсерен хаçат илсе килсе паракан арçын ачана е аякри Африкӑра пурӑнакан пĕр-пĕр çынна пулĕ. Пирĕн парне эпир Турра мĕнле юратнине кӑтар-тать. Эпир Ӑна пĕчĕк парне парсах Вӑл пирĕн çине сапа-лакан Унӑн аслӑ юратӑвне илетпĕр, çапла вара Унӑн юратӑвне эпир те малалла саратпӑр.

Парасси те ӑсталӑх. Çынна пĕр стакан шывпах пуян-латма пулать е юратмасӑр панӑ укçапа чухӑнлатма пулать. Ку параканнине тĕрĕслени, мĕншĕн тесен çынна хӑв умӑнта парӑмлӑ пек туйтарас тесе парнеленинче усалли юратуран ытларах. Хӑвӑн влаçна е ху ыттисенчен çӳлерех тӑнине кӑтартас тесе тунӑ парне те пилсĕр. Парас килмесĕр панӑ е çынна тĕлĕнтерес тĕллевпе панӑ парне те пилсĕр.

Çынна хавхалантарас, савӑнтарас кӑмӑлпа пирĕн савӑнса памалла, çак парне сире мĕнле усӑ пама пулта-расси çинчен шухӑшламасӑр. Пирĕн ырӑ кӑмӑлпа памал-ла, унсӑрӑн пирĕн парне килĕшӳ мар, сиен кӑна кӳрет. Панинче чӑн-чӑн тата вӑрӑма тӑсӑлакан савӑнӑç, ку савӑ-нӑçа хӑйсене кӑна юратакансем, хыткукарсем пĕлмеççĕ те, мĕншĕн тесен кӑнттам та çӑткӑн чунлисем ӑна туймаç-çĕ те. Парне чӑн савӑнӑç, вӑл ырӑ кӑмӑла пула хĕрхенсе пани мар.

Хамăр парнене эпир чиркӳ кассине хуратпăр-и е Çăлăнăç Çарне паратпăр-и, е Хĕрлĕ Хĕресе пĕр литр юн паратпăр-и, — пурне те Иисус Христос ячĕпе тумалла. Çак ĕçсене вĕсемшĕн тунă çынсен те пĕлмелле: эсир куна Христос ячĕпе паратăр. Юлашки вăхăтра материаллă тата социаллă никĕс çинче тăракан парнесем нумайланчĕç. Христиан парни урăхла парне пулмалла. Ыркăмăллăх организацийĕсене парне панă чухне çыракан çырура çапла çырмалла: „Эпĕ куна Иисус Христос, манăн Хуçам ячĕпе паратăп“, темелле. Çак парнесене пуçтаракансемшĕн ку сирĕн ĕнентерӳ хучĕ пулĕ, унсăр пуçне тата икĕ мулкача тытатăр: укçапа пулăшу паратăр, çав вăхăтрах ырă хыпар пĕлтеретĕр.

Асăрхануллă пулăр, Туррăнне вăрлас çылăха ан кĕрĕр. Библире каланă: „Пур вуннăмĕш пая та упраса усрамалли çурта илсе килĕр, Манăн килĕмре çимĕç пултăр, хуть çапла сăнаса пăхăр Мана, тет Саваоф Турă; Эпĕ сирĕншĕн пĕлĕте уçмастăп-и, ытлăн-çитлĕнех пиллĕх ямастăп-и?“ (Мал. 3:10).

Луис Эванс доктор çапла каланă: „Евангелие ахалех панă, анчах та сиплĕ шыва яма савăт кирлĕ, савăт тума укçа кирлĕ“, тенĕ.

Пани те Турă ĕçне туниех, Ăна пуççапнипе, мухтанипе, кĕлĕ вуланипе танлашать. Христиансем хăйсене мĕн чухлĕ панă пуянлăхне кура Турра та çавăн чухлĕ парне панă пулсан, Евангели хыпарне пĕтĕм тĕнче тӳрех илтнĕ пулĕччĕ. Ырă кăмăлпа парне паракансем пулăр, Турă шантарнă: вăл сире виçĕ хут ытларах тавăрса парĕ. Хунă укçа çумне çĕр процент хушса тӳлекен банк е финанс учрежденине пĕлетĕр-и эсир? Турă каланă: хăвăр мĕн тунине çирĕплетсе кăтартăр Мана, вара Эпĕ сирĕншĕн мĕн тунине курăр, тенĕ. Мĕн чухлĕ пама пултарнă таран парăр, Турă сире пĕтĕмпех тавăрса парĕ.

Улттӑмӗшӗ: чиркӳ Евангели вӗрентĕвне сараканĕ. Чиркӳ ҫапла хушнине пăхăнать: „Тӗнче тăрăх кайăр та Евангели сарăр, ӗненекенсене тӗне кӳртӗр“. Чиркӗвӗн чи пӗрремӗш тата тӗп тӗллевӗ — вилнӗ чунсем патне Иисусăн ырă хыпарӗсене илсе ҫитересси. Паянхи тӗнче чиркӳрен пулăшу ыйтса „S.O.S.“ (инкеке лекнине радиосигналпа пӗлтерни) ярать. Тӗнче кăмăл-сипет, социаллă, экономикăлла ыйтусемпе тулса ларнă. Ҫынсем вилеҫҫӗ, усал ӗҫпе чыссăрлăх хумӗ айне путаҫҫӗ. Тӗнчене Христос кирлӗ. Чиркӳ тӗллевӗ — путакан, вилекен ҫылăхлă чунсене ҫăлăну вӗренӗ ывăтса парасси.

Иисус Христос каланă: „Хăвăр ҫине Святой Сывлăш ансассăн, эсир хăват илӗр... Ман ҫинчен каласа кăтартакансем пулăр“, тенӗ (Ап.Ӗҫ. 1:8). Святой Сывлăш пулăшнипе ытти христиансемпе пӗрле ҫынсене Христос патне илсе ҫитерӗпӗр. Ҫӗр чăмăрӗ ҫинче пурăнакан ҫынсенчен утмăл пилӗк проценчӗ Иисус Христосăн Евангели хыпарне илтмен-ха. Нушталанакан тӗнчере Евангелие сарас ӗҫе начар туса пырать пирӗн ăру. Библие пин ытла чӗлхепе ырăнти калаҫу чӗлхисене халӗ те куҫарман-ха.

Чи малтанхи чиркӳре Библи те, семинарисем те, пичет станокӗсем те, кӗнекесемпе шкулсем те, радиопа телевидени те, автомобильсемпе самолетсем те пулман, апла пулин те пӗр ăру вăхăтӗнчех Евангели ун чухнехи тӗнчере питӗ анлă сарăлнă пулнă. Евангели сарăлнин вăрттăнлăхӗ Святой Сывлăш вăйӗнче.

Хальхи вăхăтра пӗлтерес, хыпар ҫитерес мелсем лайăхлансах пынă вăхăтра, Святой Сывлăш вăйне шута хумастпăр. Эпир пурне те хамăр вăйпа тăватпăр, ҫавăнпа та пирӗн ӗҫсем ăнса пымаҫҫӗ. Миллион американец — тӗшмӗшлӗ ҫын, пӗр-пӗр кӗлеткене пуҫҫапса пурăнать. Вӗсем ирӗклӗ шухăшлав, материализм тата ҫылăхлă

киленĕç алтарĕ умĕнче пуççапаççĕ. Чиркӳ вара яланах Иисус Христос: „Пырăр!“ — тенине илтсе тăрать. Вăхăт иртет! Тĕнче хăйĕн вилĕмĕ патне вĕçет! Асран тайăлнă тĕнчешĕн пĕртен-пĕр çăлăнăç Иисус Христос Евангелийĕнче.

Сирĕн урасем Христос хыпарне сарса çӳреме пултараççĕ, апла вĕсем Ăна кирлĕ. Хăйĕн таса ĕçне Вăл сирĕн алăпа тăвасшăн. Унăн Сăмахне сирĕн чĕлхĕр калама пултарать. Çынсене Христос патне илсе пырас ĕçре пур таланăрпа, пултарулăхăрпа, пур мелсемпе те усă курăр! Чиркĕвĕн аслă тĕллевĕ çакă. Пирĕн мелсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: чиркĕве çӳрени, вĕрентни, кĕлĕ вулани, миссионерла ĕçсем, ырă хыпара промышленность предприятийĕсенче, тĕрмесенче, радиопа телевидени, кино урлă çитерни. Çынсене Христос патне илсе çитерме мĕнле мелсем пур, çавсемпе пуриные те усă курăпăр.

Çынна Христоса йышăнасси патне илсе çитерни çителĕксĕр. Пирĕн ăна чиркĕве явăçтармалла, ырăлăхра ӳссе пирĕн Иисус Христос Хуçамăра пĕлме пултартăр вăл. Çакă Евангелире вĕрентнипе тӳр килет, пĕтĕмпех чи çӳлти шайра пама ыйтать, ун хыççăн хăй те кашни уйрăм çынна чиркĕвĕн тĕрлĕ енлĕ ĕçне явăçтарас ĕçре кирлĕ чухне пулăшу е ăнлантару парĕ.

Юлашкинчен: чиркӳ пулăшнипе пирĕн ырă кăмăллăх анлăн палăрать. Эпир хамăрăн тăвансен хуралçисем пулса тăратпăр, христианла мар пĕр-пĕр çĕршыва кайсанах курса ĕненетĕр: çакă ĕнтĕ Христоса йышăннă çынсене Ăна пĕлмен суя çынсенчен уйăрса тăрать.

Юратупа ырă кăмăл халалĕ пирĕн тăна ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлтăр тесе, Иисус Христос ырă кăмăллă самарянин çинчен каласа панă. Христиан ятне тивĕçнĕ çын манăн пулăх тăрăс-тăкелех тесе тепĕр çын нушине кур-

масăр тăма пултараймасть. Хăш-пĕр Хĕвелтухăç çĕршывсенче çын нушипе асапланăвне те, тĕрĕсмарлăха та пач асăрхамаççĕ. Урамра иртен-çӳрен куçĕ умĕнчех ача выçса вилме пултарать, анчах уншăн никам та явапла маррине кура, уншăн никам та нимĕн те тумасть, вилсен унăн ӳтне пуçтарнисĕр пуçне. Çын нуши тĕлĕшĕнчен çавăн пек тимсĕр пулни христианшăн ют япала.

Выçă, çарамас, чирлĕ, хупса лартнă, пусмăрланă çынна пулăшнă чухне пирĕн Иисус Христос каланине ялан асра тытмалла: çын нушине илтменни, пусмăрланă çынпа тимсĕр пулни Ăна Хăйне те илтменниех пулать. „Чăн калатăп сире: эсир çавна Манăн çак кăçĕннисенчен пĕрне тумарăр та, вăл Мана туманни пулчĕ“ (Матф. 25:45).

Чиркӳсем йĕркеленĕ больницăсене, ача çурчĕсене, ваттисен çурчĕсене йĕри-тавра курма пулать, ку енĕпе христиансен ĕçĕ тымар тарăн янă. Чирлисене пăхни, социаллă хӳтлĕх пани пирĕншĕн чи пысăк кăмăл туртăмĕ; анчах Христос вĕрентĕвĕ çитмен хăшпĕр çĕршывсенче чирлĕ çынна обществăран уйăрнă çынсене анчах пăхма ирĕк параççĕ.

Сывлăха сыхлас ĕç начар пулса пынине курсан, чиркӳ çыннисен хăйсем кăмăлсăр пулнине палăртмалла, хăйсемшĕн е вĕсен çамăкишĕн ку хăрушă мар пулин те. Влаçпа иртĕхнине тӳрлетме, пурăнăç шайне лайăхлатма чиркӳсем пĕрлешсе хăватлă хĕç-пăшал пулма пултараççĕ. Законсене тĕрĕс тума ыйтакан компани-и е урамри таса мара лайăхрах пуçтарма чĕнекен компани-и — икĕ тĕслĕхĕнче те вĕсем этем ырăлăхĕшĕн тăрăшаççĕ, тăрăшса ĕçлесси вара чиркĕвĕн те, унта çӳрекен кашни çыннăн та пысăк тивĕçĕ. Хăйне валли мĕн пулассине ыйтмасăрах пулăшу сĕнекен ырă самарянин тĕслĕхĕ чăн-чăн христианшăн хăйĕн тăванĕсене мĕнле пулăшмаллин хак виçи пулмалла.

Ҫак сыпӑк пуҫламӑшӗнче каланӑччӗ ӗнтӗ, ҫын хутшӑнакан чӗрӗ чун, тенӗччӗ. Ҫын хӑйӗн чи лайӑх ӗҫӗсене, пысӑк паттӑрлӑхне кӑтартать, ытти ҫынсем хушшинче кӑна хӑйне-хӑй тытма вӗренет. Гимнастика тӑвакан кашни ҫынах лайӑх пӗлет: пӗччен пулнипе танлаштарсан, ушкӑнра упражненисене тӑрӑшарах тӑватӑн.

Эпир аталанса ҫитеймен ҫынсем, ҫавӑнпа та аташса кайнӑ ачасем пек. Тӗрӗс ҫултан пӑрӑнас мар тесен, пирӗн пӗр-пӗрне пулӑшмалла. Эсир каяс ҫӗрех кайма тухнӑ ҫулташ тупӑнсан сирӗншӗн вӑрӑм ҫул та кӗскелӗ; ҫӗклемпе утакан юлташсем пур пулсан, йывӑр ҫӗклем те ҫӑмӑлланӗ. Ҫакӑн пек хутшӑну чиркӳре пур. Кашни ӗненекен чун чиркӳре хӑйӗн шухӑш-кӑмӑл ҫуртне, ӗҫ тумалли центрне тупать. Пирӗн, ҫынсен, пурӑнас тесен мӗн чухлӗ ӗҫлемеллине, ыттисемпе хутшӑнса канупа хавхалану илмеллине Иисус Христос пӗлнӗ. Чиркӳ хутшӑну вырӑнӗ пулать, Иисус Христос унта ҫав хутшӑнӑва хутшӑнма пурне те сӗнет.

ВУНУЛТТӐМӖШ СЫПӐК

# ХРИСТИАНӐН ХАЛӐХ ХУШШИНЧИ ТИВӖҪӖСЕМ

„Хӑвӑршӑн ҫынна мӗн тутарасшӑн, хӑвӑр та вӗсемшӗн ҫавнах тӑвӑр“.

Лук. 6:31

Христоспа пӗрле пулма йышӑннӑранпа, Библие тӗпчеме пуҫланӑранпа эсир халӑх умӗнчи тӗрлӗрен тивӗҫсемпе тата ыйтусемпе тӗл пулма пуҫлатӑр. Эсир Турӑпа килӗшӳ тунӑ. Эсир текех Турӑпа хирӗҫӳллӗ мар. Сирӗн ҫылӑхсене каҫарнӑ. Шухӑшлама ҫӗнӗ уҫлӑх уҫӑлать, — сирӗн пурӑнӑҫӑршӑн ку ҫӗнӗ пуласлӑх. Пӗтӗм тӗнче улшӑнчӗ. Халӗ эсир ҫынсем ҫине Иисус Христос куҫӗпе пӑхма пуҫлатӑр. Малтанхи шухӑшсемпе тӗллевсем улшӑнӗҫ. Малтан сирӗнпе хуҫаланнӑ суя шухӑш ҫухалать. Хӑвӑра кӑна юратни те пӗтет.

Нумай ҫын христиан пурӑнӑҫӗпе пурӑнма килӗшмен, мӗншӗн тесен вӗсене вӑл пурӑнӑҫа лайӑх енчен мар, начар енчен кӑтартса панӑ. Вӗсем калаҫҫӗ: христиан пурӑнӑҫӗ мӗн лайӑх, мӗн усӑллӑ ҫавна сивлет, теҫҫӗ.

Чӑн христиан вара пурӑнӑҫ савӑнӑҫӗсене пӑрахӑҫлассипирки пач та шухӑшламасть. Вӑл Турра мар, хӑйне кӑна юратас кӑмӑл ҫуратакан тата нумай укҫа тӑкаклама хистекен ҫылӑхлӑ киленӗве анчах йышӑнмасть. Христоса йышӑнни, Турӑ ирӗкӗпе пурӑнма килӗшни сире чӑн савӑнӑҫ ҫӑлкуҫӗ патне — Христоспа хутшӑнасси патне —

илсе çитерĕ. Хăшĕсемшĕн ку савăнăç пек туйăнмĕ, анчах та Христоспа кунсерен хутшăнакан çын пĕлет: ку пурăнăçри пур савăнăçран та чи пысăк савăнăç. Псалом юрлакан çапла каланă: „Вĕсем Санăн çуртăнти чыспа тăранаççĕ, Эсĕ вĕсене Хăвăн тутлă ырăлăху юхакан çырмаран ĕçтеретĕн“, тенĕ (Псал. 35:9). Турă каланă: „Турă ырăлăх парать, мухтавлă тăвать; айăпсăр пурăнакансене ырлăхĕнчен хăвармасть“ (Псал. 83:12). Павел апостол та çапла каланă: „Чĕрĕ Турă çине шанччăр; савăнса пурăнмалăх Вăл пире пурне те çителĕклĕ парать“, тенĕ (1 Тим. 6:17).

Эпир Христоспа кунсерен хутшăнни пире чăн пурăнăçпа пурăнма май парать. Христиан пурăнăçĕ çынна хăйĕн законлă интересĕсемпе ĕмĕчĕсене пăрахма хистемест. Таса Çырура Христос хăть хăçан та килме пултарать тенĕ пулин те, вăл пире Христос киличчен хамăрăн ахаль ĕççемпех ĕçленсе пурăнма хушать.

Сăмахран, Ной вăхăтĕнче çынсем çининче, ĕçнинче, авланнинче нимĕн япăххи те пулман, — вĕсен çак ĕçĕсем çылăхлă япаласем пулса кайнине шута илмесен. Çавăн пекех Лот вăхăтĕнче те çынсем япала туяннинче, сутнинче, çурт тунинче нимĕн çылăхли те пулман, — çакă пĕтĕмпех çылăхлă мелсемпе пулса иртнине шута илмесен. Нойпа Лот вăхăтĕнче начарри çакă пулнă: вĕсем мĕн туни пурăнăçра пĕртен-пĕр интерес пулнă. Вĕсем хăйсен пурăнăç интересĕсемсĕр пуçне, хăйсен киленĕвĕсĕр пуçне, хăйсем пуçтарнă пуянлăхăн усăллăхĕсĕр пуçне урăх нимĕн пирки те шухăшлама пултарайман. Вĕсем çак япаласем ăшне путнă пулнă, Турă валли вĕсен вăхăт та юлман. Çакă вара Турра килĕшӳллĕ пулман, акă мĕншĕн Вăл вĕсене асап кăтартнă.

Каларăмăр ĕнтĕ, Библие çĕр çинчи пурăнăçпа кăсăклантарса хавхалантарма çырман, терĕмĕр. Кун пек кă-

сăклăх çынсен çителĕклех. Библи тĕллевĕ — çынна пурăнăç çине шухăш-кăмăл тĕнчин пысăкрах пĕлтерĕшлĕ, пысăкрах хак урлă пăхма вĕрентесси.

Библи вĕрентет: пирĕн кунсеренех хамăрăн тĕллевсене пурăнăçламалла, ăна лайăх пурăнăçлани пирĕншĕн чыс тесе йышăнмалла. Пире çĕр çине янă, апла пирĕн хамăр ĕçе тумаллах, анчах хăйне ĕненекен тесе шутлакан çыннăн ĕçлемелле кăна мар, вăл тунă ĕç чи лайăх тунă ĕç пултăрччĕ тесе тимлемелле.

Тимĕр, чул, йывăç ăсти Веселиил çинчен Библи ырăпа асăнать (Тух. 35:30). Иаковпа унăн ывăлĕсем кĕтӳçсем пулнă. Иосиф премьер-министр пулнă; Даниил патшалăх деятелĕ пулнă. Иосиф (Назаретран) тата Иисус Хăй те платниксем пулнă, Унăн вĕренекенĕсенчен хăшĕсем пулăçсем пулнă. Хыснаçă пулнă Эфиоп евнухĕ çинчен те каланă пире; пурпур сутакан Лидия çинчен те; чатăр тăвакан Павел, Прискилл, Акил çинчен те, сиплевçĕ пулнă Лука çинчен те пĕлетпĕр эпир.

Христианăн пурăнăçри хăйĕн ĕçне пăрахмалла мар, Турă ертсе пынипе хăйĕн кулленхи ĕçне пултарнă таран лайăх тума, хăйĕн ĕçне, хăйĕн пур ăнтăлăвне Турă ячĕпе тума тăрăшмалла. Çапла вара эпир куратпăр: Иисус Христос çĕр çинчи пурăнăçра пире çăмăллăх кӳме Хăйĕн пулăшăвне сĕнет.

Çавăн пекех Вăл пирĕн обществăри татса паман ыйтусене (шăп çакă пире аптратса ӳкерме пултарать) татса пама пулăшать. Пирĕн кулленхи ĕçре, эпир обществăлла ыйтусем çине мĕнле пăхнинче пирĕн пурăнăç Христоспа пулнине çак тĕнчен курмаллах.

Л. Нельсон Белл доктор христианла пĕр журналта çапла çырать: „Вырсарникун эсир чиркĕве каятăр пулсан, сире тĕл пулнă çынсем сирĕн пирки ку христиан тесе шутлаççĕ. Анчах эрнери ытти кунсенче урамра, ĕçре,

лавккара, яланах çынсемпе хутшăнакан вырăнсенче мĕнле вара? Таса Çырура каланипе килĕшӳллĕн, çылăх касарттармаллин хăйĕн вырăнĕ пулмалла. Кĕлĕ вуланă е чун ыйтнипе пухăннă пухусене яланах хутшăнни, чиркӳ ĕçне хастар хутшăнни чăн христианăн пурăнăçĕн пĕр пысăк пайĕ. Анчах пурне те паллă: ĕç укçишĕн ĕçлени, пирĕн килти ĕçсем, кулленхи вĕт-шакăр япала — пĕтĕмпех вăл пирĕн ĕненӳ чăн пулнине, эпир чăн Христоспа пурăннине тĕрĕслени. Сирĕнпе куллен тĕл пулакан çынсем мĕн кураççĕ? Эсир кашни кунах тĕл пулакан çынсем сирĕн пирки ку христиан тесе калама пултараççĕ-и? Е пирĕнпе ăнсăртран паллашнă çынсем пирĕнте эпир Христоса пĕлмен çынсенчен мĕнпе те пулин уйăрăлса тăнине курса илме пултараяççĕ-и? Иккĕленмелли çук, чи лайăх тĕрĕслев вăл — христианăн кулленхи пурăнăçĕ.

Пирĕн ĕненӳ чăн пулни тĕрлĕ мелсемпе палăрать: эпир мĕн тунипе мĕн туманнинче те, эпир мĕн каланипе каламаннинче те. Христианство çиелтен пăхсан курăнакан япала мар пулин те, çавах вăл калаçура, хăнăхура, кану вăхăтне мĕнле ирттернинче, пире мĕн килĕшнинче, пирĕн ăнтăлусенче, пирĕн пурăнăçăн кашни кунĕнче палăрмалла. Пирĕн калаçу Христоса чыс кӳрет-и? Пирĕн хăнăхусене килĕштерĕ-и Вăл? Эпир ирттерекен кану вăхăтне Вăл хутшăнма пултараять-и? Обществăлла вырăнта апат çинĕ чухне апатшăн Турра тав туса пуçа таятпăр-и эпир? Пирĕншĕн япаласен пĕлтерĕшĕ мĕнлине кура çынсем пирĕн пирки мĕн тесе шутлĕç: ку çӳлти патшалăх пирки шутлать е çĕр çумне çупçăнсах ларнă ку тейĕç? Чаплă вырăн е обществăра паллă вырăн йышăнас ăнтăлăва курмаççĕ-и пирте çынсем, ку христианăн шухăшлавне хирĕçле япала. Пирĕн хамăра хамăрăн çакăн майлă ыйтусене парсах тăмалла, вĕсем тăрăх пĕлме пулать: эпир ĕненекен христиан-и е çук?

Йăх ыйтăвне мĕнле ăнланатпăр эпир? Арçынпа хĕрарăм çыхăнăвне мĕнле куратпăр эпир? Ĕç параканпа ĕçлекен çын хушшинчи çыхăнăва мĕнле хаклатпăр эпир? Урăхла шухăшлакансене мĕнле куратпăр эпир? Пурăнăç кăларса тăратнă çак ыйтусене пирĕн сăмах тавăрса каламалла, хамăр хуравсене çынсеннипе тӳр килтерсе пурăнмалла.

Пурăннă чухне чи кирлĕ йĕрке çакă: „Хăвăршăн çынна мĕн тутарасшăн, хăвăр та вĕсемшĕн çавнах тăвăр“ (Лук. 6:31).

Чылайăшĕ „социаллă Евангелие“ тиркесе калаçаççĕ, анчах Иисус Христос çакна вĕрентнĕ: пирĕн пĕр аллипе ас-тăн ӳсĕмĕнчен тытăнмалла, тепĕр аллипе çывăх çыннăмăра таса шыв тултарнă чашăк тыттармалла. Христиансен социаллă ыйтусемпе социаллă тĕрĕсмарлăха чĕрене чи малтан илмелле. Пур ĕмĕрсенче те чиркӳ пурăнăç шайне çĕклес ĕçе хутшăннă. Ачасен ĕçĕпе усă курассине законпа чарнă. Чуралăха пĕтернĕ. Хĕрарăм халиччен историре пулман шая çĕкленчĕ тата ытти реформăсене те туса ирттернĕ Иисус Христос вĕрентĕвĕн витĕмне пула. Христианăн обществăра хăйĕн вырăнне тупмалла; тĕрĕс, тӳрĕ, чăн тесе шутланакан япаласене хӳтĕлеме паттăрлăх çитермелле унăн.

Пĕрремĕшĕ: христианăн лайăх граждан пулмалла. Библи вĕрентет: христианăн законсене пăхăнмалла, тенĕ. Çавăн пекех Библи тăван çĕршывшăн шанчăклă çын пулма вĕрентет. Тăван çĕршыва шанни, юратни хăш-пĕр тĕрĕс мар законсене сивлемелле мар тенине пĕлтермест. Библире каланă: Турă çынсене уйăрмасть, тенĕ. Турă йĕркелĕхĕ пирĕншĕн тĕслĕх пулса тămалла.

Библи, çавăн пекех, пирĕн влаçра тăракансемпе те çыхăнса ĕçлемелле тесе вĕрентет. Иисус Христосран ыйтнă: „Сана епле пек туйăнать? Пирĕн кесаре куланай пама тивĕçлĕ-и? тивĕçлĕ мар-и?“, тенĕ (Матф. 22:17.

Иисус Христос ĕмĕрлĕхе куланай тÿлемелле тунă. Законсене тытса пыма, йĕрке тума укçа кирлĕ. Куланай тÿлессинчен пăрăнакан çын пурăнăçри харампыр, тĕрĕссипе вăл вăрă. Чăн христиан налук тÿлессинчен пăрăнмасть. Иисус Христос каланă: „кесарĕнне кесаре парăр“ (Марк. 12:17). Ахаль налук тÿлекенсенчен çÿлерех пулмалла пирĕн. Анчах законсене пăхăнса пурăнни кăна çителĕксĕр. Хамăрăн çĕршывăмăршăн ĕçлеме майсем тупмалла пирĕн. Чĕнсе илсе Уншăн вилме хушсан пирĕн çакна савăнăçпа тумалла — Турă ирĕкĕпе. Хамăр ĕçе пирĕн ырă граждансем пек ăс-тăнпа тумалла.

Çавăн пекех, пирĕн çынсене юратмалла; çын пурăнăçне лайăхлатассишĕн ĕçлекен ыркăмăллăх организацийĕсене укçа парса пулăшмалла. Пирĕн тĕрлĕ обществăсене: хамăрăн чиркÿ приххутне, Хĕрлĕ Хĕресе, Çăлăну Çарне тата ытти çынсене пулăшакан лайăх пултаруллă организацисен ĕçне те хутшăнмалла. Христиансен ача çурчĕсемпе, больницăсемпе, ваттисен çурчĕсемпе, тĕрмесемпе ытти çавна майлă социаллă учрежденисемпе кăсăклансах тăмалла. Иисус Христос пире вĕрентнĕ: „Хăвна çывăх çынна хăвна ху юратнă пек юрат“, тенĕ (Матф. 22:39). Калăпăр, çĕршывра нимĕнле ыркăмăллăх организацийĕ те çук! Ун пек çĕршывра никам та пурăнас темĕ. Çывăх çынна юратма хушакан çĕршывра пурăнма кăмăл тăватпăр эпир. Пиртен кашниех пурăнăçра хăйĕн вырăнне йышăнмалла. Кам яваплă ĕçре ĕçлет, ăна хисеплемелле, пулăшмалла, унпа хутшăнса ĕçлемелле. „Пур чун та аслă пуçлăхсене пăхăнса пурăнтăр, Турă лартман пуçлăх çук; пуçлăх пулса тăракансене Турă лартнă“ (Рим. 13:1).

Иккĕмĕшĕ: христианăн „çул çÿрекене“ (1 Тим. 3:2) юратмалла. Библи вĕрентет: пирĕн çурт пуриншĕн те, унта кĕрекеншĕн те, тухаканшăн та уçă пулмалла, вĕсен унта Христос пуррине туйса тăмалла. Турă мĕн панине

ыттисемпе пайламалла, вара Турă пире те, пирĕн çурта та пиллĕ.

Виççĕмĕшĕ: пирĕн арлăх хутшăнăвĕсене христиан пек хакламалла. Библире амалăх-арлăх пурăнăçĕпе пурăнни çылăх тесе каламан, Библие ăнлантаракан хăш-пĕр çынсем çавăн пек тесе ĕнентерме тăрăшаççĕ пулин те. Библире каланă: арлăх ыйтăвне тĕрĕс мар ăнланни çылăх, тенĕ. Мĕншĕн тесен арлăх çыхăнăвĕпе çĕр çине пурăнăç килет, вăл вара чи пĕлтерĕшлĕ, чи илемлĕ, чи тивĕçтерекен туйăм пулмалла.

Анчах икĕ чун хушшинчи чи аслă, чи таса хутшăнăва этем хăйĕн пăсăклăхĕпе, аркатаслăх ăнтăлăвĕпе çак туйăма темле ирсĕрлĕх шайне антарса лартать. Юратмасан, хисеплемесен, тепĕр çынна чăн савăнăç парнелемесен, унăн туйăмĕсене пуянлатмасан, амалăх-арлăх хутшăнăвĕ выльăх хутшăнăвĕ шайне анса ларать, Библи пире çакăн пирки асăрхаттарать те ĕнтĕ!

Амалăх-арлăх ыйтăвĕсемпе уççăнах çырнă тĕнчери кĕнекесенчен пĕри Библи пулнине палăртса хăвармаллах. Унта „каламасăр хăварни“ çук, амалăх-арлăх хутшăнăвĕнчен, тĕрĕссинчен те, тĕрĕс марринчен те, кулни çук. Шахвăртса калассине, пытарассине, аванмарланассине, „ун пирки калаçма юрамасть“ тенине ăна пĕтĕмпех çын хăй шутласа кăларнă.

Çак ыйтури вăрттăн „шарламанлăха“ пĕтерес тесе хальхи вăхăтра ӳт-пӳ хутшăнăвĕ пирки ытларах калаçаççĕ, çын юратăвĕнче чун-чĕре хутшăнăвĕ пысăкрах вырăн йышăннине шута илесшĕн мар.

Уйрăлу — арçынпа хĕрарăм чун-чĕре пуянлăхĕн никĕсĕсĕр çирĕп те лайăх хутшăнусем йĕркелейменнине кăтартать. Мăшăрсен хутшăнăвĕ вăл пирĕн пурăнăçан пĕр пайĕ, хăть мĕн тусан та эпир ăна пĕтерейместпĕр, мĕншĕн тесен унсăрăн пурăнăç пĕтнĕ пулĕччĕ. Çак ыйтăва тĕрĕс

ӑнланни ҫемьене пиллĕхлĕ тăвать. Тĕрĕс мар ӑнланни вара ҫемье пурăнăҫне тамăк туса хурать. Эсир ăслă пулсан, арлăх сире пулăшса пыраканĕ пулĕ. Анчах эсир унпа йĕркесĕр усă куратăр пулсан, вăл сирĕнпе тискеррĕн хуҫаланма пуҫлĕ.

Ёненекен ҫын амалăх-арлăх хутшăнăвĕсем ҫинчен хаҫатсенче кăшкăрашнине, кинона е театра йыхăракан рекламăсенче ӳкернине курсан, унăн таса туйăмĕсене вараланă пек, кӳрентернĕ пек туять хăйне. Турă панă пурăнăҫ никĕсне урăхлатса, нĕрсĕрлетсе кăтартакан айван, намăссăр, киревсĕр ҫынсемшĕн намăсланать вăл.

Тăваттăмĕшĕ: арлăх хутшăнăвĕсене христиан пек хаклани мăшăрланăва та христиан пек хакланине пĕлтерет. Мăшăрланиччен малтан ҫĕр ҫинче те, ҫӳлте те мăшăрланăва ҫыхăнтарса тăракан чун-чĕре ҫыхăнăвĕсем пирки шутламалла. Эпир кунран кун ӳссе-ҫитĕнсе пыратпăр, малтан эпир хамăрăн атте-аннене юратма вĕренетпĕр, тус-юлташсене, унтан пĕр ҫынна, унпа эпир пурăнăҫăмăра пĕрлештеретпĕр. Ку аталану мĕнле йывăррине эпир куртăмăр ĕнтĕ, мĕншĕн тесен ҫылăхлă ҫынра курайманлăх юратуран вăйлăрах.

Чылайăшĕ хăйĕн мăшăрне ăнăҫсăр суйлать, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра вĕсем тĕнче танатинче пулнă, ӳт ăнтăлăвĕпе шуйттан сăнчăрланă вĕсене, вĕсем суйласа илнĕ качча е хĕр те вăл вăхăтра ҫылăхра пулнă. Ăс-тăн енчен аталанайман, чăн-чăн ҫирĕп юратăва пĕлмен чунсем пĕрпĕринчен уйрăлса пиншер ачана тăлăха тăратса хăварнинчен мĕн тĕлĕнмелли пур?

Мăшăрлану — таса пĕрлешӳ, мĕншĕн тесен вăл икĕ ҫынна пĕр-пĕрне ăнланма, шухăш-кăмăл туртăмне пурăнăҫа кĕртме май парать. Мăшăрлану Турра килĕшӳллĕ, мĕншĕн тесен Вăл пĕлет: арҫынна пулăшса пыракан кирлĕ, хĕрарăма вара хӳтĕлекен кирлĕ. Упăшкасемпе арăм-

сен мĕншĕн мăшăрланнинe манса каймалла мар — çакă Турă ирĕкĕ. Арăмăн юратмалла, упăшкана пур енчен те пулăшса пымалла, упăшкан вара арăмĕпе ачисене юратмалла, вĕсене хӳтĕлемелле, вĕсемшĕн тăрăшмалла, вĕсен çурчĕ Турă тĕнчин вучахĕ пултăрччĕ тесе, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнасчĕ тесе тăрăшмалла.

Турă тĕллевĕсене, Турă законĕсене пĕлсе, ăнланса мăшăрланакан çын нихăçан та уйрăлмасть мăшăрĕнчен. Çак никĕссене пĕлмесĕр, аслă тĕллевсемсĕр пĕрлешекен çамрăксем чăн телее тупаймаççĕ (ун пеккисем вара темĕн чухлех!), вĕсен чи малтан Турă упăшкипе арăмĕнчен мĕн кĕтнине ăнланса илмелле, унтат тин Унран пулăшу, Унăн хушăвĕсемпе мĕнле пурăнмаллине кăтартса пыма ыйтмалла.

Пиллĕкмĕшĕ: пирĕн ĕç ыйтăвне те христиан пек хакламалла. Библире каланă: „Кирек мĕн тусан та, çыншăн тунă пек ан тăвăр, Çăлаканшăн тунă пек, чунтан-вартан тăвăр: пĕлсе тăрăр, эсир Çăлакан Христоса ĕçлесе тăратăр; Вăл сире уншăн ырăлăх парĕ. Тĕрĕс туманни, хăй тĕрĕс маррине курса илĕ. Турă çын камне пăхмасть. Эй, хуçасем, чурăрсемшĕн мĕн кирлине, мĕн тивĕçлине туса тăрăр; астăвăр: сирĕншĕн те çӳлте Турă пур“ (Кол. 3:23-25 тата 4:1).

Ĕç паракансемпе ĕçлекенсем хушшинче яланах Христос пулнă пулсан, нимĕнле хирĕçӳсем те пулмастчĕç. Икĕ енĕ те пĕр-пĕрин прависене йышăнмасăр тавлашнисем пулмастчĕç. Ĕç паракансем ĕçлекенсемпе ырă пулатчĕç, ĕçлекенсем, ĕç укçишĕн кăна мар, Турăшăн та ĕçленине пĕлсе тăрăшса ĕçлетчĕç.

Библи хăть мĕнле тӳрĕ ĕçе те хаклать, христианăн чи шанăçлă, чи лайăх, чи тăрăшуллă ĕçчен пулмалла. Фабрикăра-и е лавккара ĕçлет-и, унăн яланах тĕрĕслĕхшĕн, чăнлăхшăн çине тăмалла, хăйне кăна усă тăвассишĕн нихăçан та мĕскĕнленмелле мар.

Ĕç паракан христианăн та çак йĕркесене пăхăнса хăйĕн патĕнче ĕçлекенсене хисеплемелле, вĕсемпе уçă кăмăллă пулмалла, çакăнта вăл ытти ĕç паракансемшĕн те тĕслĕх пулса тăрĕччĕ. Чăн христиан хăй патĕнче ĕçлекенсене инкексенчен хӳтĕлес тесе хăрушсăрлăх йĕркисене йышăнать, ĕçлеме лайăх пултăр, вĕсем çителĕклĕ пурăнăçпа пурăнччăр тесе тăрăшать. Хăй патĕнче ĕçлекенсенче вăл „ĕç вăйĕ“ анчах мар, вĕсенче чи малтан çын курать.

Ĕç паракансен те, ĕçлекенсен те çакна асра тытмалла. Ĕçе çăмăллатма мелсем тупни, пĕрне-пĕри лайăх ăнланни аслă ăс-тăн вăраннине пĕлтерет. Профессилле союзсем хăйсен еткерлĕхне чиркӳрен тата вунсаккăрмĕш ĕмĕрти аслă Аталануран илнĕ. Англи патшалăх деятелĕ Шефтесбери лорд христиан, пĕтĕм çемйи ăна хирĕç пулнине пăхмасăр, пурăнăç тăршшĕпех ĕçлекенсен ĕç йĕркисене лайăхлатас, ĕç укçине ӳстерес, ĕç кунне чакарас, ĕçлекен çынна лайăхрах пăхас тесе çине тăнă, çакăнтан пуçласа рабочи класăн социаллă ирĕклĕхĕ çуралнă.

Вунсаккăрмĕш ĕмĕрте çакăн пек ăс-тăн вăранăвĕ пулман пулсан, хальхи вăхăтра ĕç çыннисем усă куракан йĕркесем пулмĕччĕç, пулнă пулсан та вĕсем каярах пулнă пулĕччĕç. Ĕç çыннисене ертсе пыракан хăш-пĕр ертӳçĕсем тĕне, Турра, Библипе чиркĕве сивлеççĕ, вĕсен хальхи вăхăтра хăйсен мĕн пурришĕн Иисус Христосăн Евангели вăйне тав тăвасчĕ.

Ĕç çыннисен хăш-пĕр ертӳçисем мăнаçлă, мăнкăмăллă, пуян, хăйсемпе ялан кăмăллă влаçа юратакан çынсем. Промышленнăç ертӳçисенчен те чылайăшĕ çакнашкалах. Вĕсен Турă умĕнче лăпланасчĕ, ыттисен нушине ăнланма тăрăшасчĕ, хăйсем те пĕр-пĕрне пăхăнса тăнине ăнланасчĕ, чи кирлĕ хутшăнусенче тивĕçлĕ йĕркесем суйласа илсе унпа усă курма тăрăшасчĕ.

Улттӑмӗшӗ: христиан халӑхсен ыйтӑвӗ ҫине Христос куҫӗпе пӑхать, ҫакна йышӑнать: этемлӗхӗн пысӑк ыйтӑвне чиркӳ татса парайман-ха. Эпир спорт, чун йӑпатмӗш, политика, ҫар вӗренӳпе промышленнӑҫ витӗмне ытлашшипех парӑннӑ. Чиркӳн пурӑнӑҫра ертӳҫӗ пулса тӑмаллаччӗ. Федеративлӑ суд туса пыракан ӗҫсене чиркӗвӗн хӑйӗн ирӗкӗпе хӑй ҫине илмелле пулнӑ. Юлашки пӗтӗмлетӳре тӑванла юратупа хӗрес умӗнче пуҫтарӑнсан пӗртенпӗр тӗрӗс йышӑнӑва тупатпӑрах.

Пур йӑх халӑхӗ те Христоспа Унӑн хӗресӗ патне мӗн чухлӗ патнерех ҫывӑхарайраҫҫӗ, ҫавӑн чухлӗ вӗсем пӗрпӗринпе ҫывӑхарах пулӗҫ.

Библире каланӑ: Христос тӗнӗ ҫынна уйӑрмасть — эллин-и эсӗ, иудей-и, хӗрарӑм-и, арҫын-и, культурӑллӑ е тискер ҫын-и, пуян-и е чухӑн-и. Библи калать: эпир пурте пӗр Христосӑн, тет. Хӗрес умӗнче пурте пӗр тан. Иисус Христос пирӗн ӑнланаслӑха ӳстерсен, эпир текех ҫыннӑн ӳт тӗсне, йӑхне, тӗрлӗ лару-тӑрусене асӑрхами пулатпӑр, хамӑр пекех ӑнтӑлакан, хӑракан, нушаланакан, шанакан ҫынсене курма пуҫлатпӑр. Ҫавӑн чухне эпир ҫынсене Хуҫамӑр куҫӗпе курма пуҫлатпӑр.

Ҫиччӗмӗшӗ: экономика ыйтӑвӗсенче те христиан пек пулмалла. Этем пурӑнӑҫӗ унӑн пуянлӑхӗнчен килмест, тенӗ Иисус Христос. Укҫа — лайӑх чура, анчах начар хуҫа. Мулӑн вырӑнӗ чӗрере мар, укҫа енчӗкӗнче е банкра. Пуянлӑхӑн пурӑнӑҫра хӑйӗн вырӑнӗ, вӑйӗ пулма пултарать, анчах ӑна аслӑ вырӑна лартса патшалӑхпа скипетра алла илме памалла мар. Сӑхӑлӑх укҫана этемлӗхрен ҫӳле хурать. Хӑйне парӑннӑ ҫынна вӑл йӑлт ҫавӑрса илет, ӑна хӑйӗн чури туса хурать. Вӑл чӗрене усаллантарать, пархатарлӑ тӗллевсене вӗлерет, этем пурӑнӑҫӗн чӑн пуянлӑхне аркатать.

Сӑхӑлӑхран сыхланӑр! Унран сыхланас тесен, пирӗн тимлӗ пулмалла, кӗлӗ вуламалла, хамӑра хамӑрӑн асӑр-

хаса тӑмалла, ирӗке ямалла мар. Пуранӑҫ вӑл долларпа цент та мар, ҫуртпа ҫӗр те мар, укҫа ӗҫлесе илни те мар, финанс тӗлӗшӗнчен ӑнса пыни те мар. Сӑхӑлӑх этеме хӑйӗн пуянлӑхӗн чури туса хума хӑяймӗ.

Икӗ пӗртӑван юлнӑ пурлӑха мӗнле пайласси ҫинчен Иисус Христосран ыйтсан, Вӑл вӗсене асӑрхаттарса пӗр халап каланӑ. Пӗр питӗ пуян ҫӗр хуҫи пураннӑ-мӗн, хӑйӗн мулне татах ӳстерес тесе шухӑшланӑ, пуянлӑх, ҫителӗклӗ пуранӑҫ, чыс-хисеп уншӑн чи хакли пулнӑ. Вӑл пултарулла, типтерлӗ, ӗҫчен, ӗҫре асӑрханулла, тӗрӗс, пур ӗҫре те йӗркене пӑхӑнса пыракан ҫын пулнӑ пулмалла, анчах вӑл ыттисем пекех чапшӑн ҫунакан, хӑйне кӑна юратакан ҫын пулнӑ.

Пуранӑҫ ҫителӗклӗхне вӑл хӑйӗн уй-хирӗпе, тулли кӗлечӗсемпе висӗ, мухтанине итлесе чунне йӑпатнӑ. Пуранӑҫӗнче уншӑн унӑн пуянлӑхӗ анчах пулнӑ, хӑй ҫинчен анчах шухӑшланӑ, Турӑ ҫинчен, пуранӑҫ шанчӑксӑрлӑхӗ ҫинчен пач та шутламан.

Анчах юлашки сӑмаха Турӑ каланӑ, ҫӗр хуҫи сарӑмсӑр вилсе выртать те темиҫе ҫуллӑха палӑртса хунӑ ӗҫсем пуранӑҫланаймасӑрах юлаҫҫӗ. Тӑрӑшса пухнӑ пуянлӑхӗ унӑн сивӗнсе пыракан аллинчен шуса тухса ӳкнӗ, ӑна ыттисем пайласа сапаласа пӗтернӗ, хӑй ҫав вӑхӑтра Турӑ умне пушӑ алӑпа пырса тӑнӑ.

Христианӑн пуринчен те ытларах ҫакна ӑнланмалла: ҫак пуранӑҫа эпир пушӑ алӑпа килетпӗр, пушӑ алӑпах каятпӑр. Пуранӑҫра эпир пуянлӑхпа та, хамӑрпа та хуҫа мар. Пуринпе те Турӑ хуҫаланать, эпир вара Вӑл панӑ пуянлӑхпа кӗске вӑхӑтлӑха усӑ куратпӑр анчах. Хамӑр тавра мӗн куратпӑр, мӗне хамӑрӑн пуянлӑх тесе шутлатпӑр, ӑна эпир пӗтӗмпех Турӑран илнӗ, ҫакна манса кайсан эпир ҫӑткӑн та сӑхӑ пулса тӑратпӑр.

Пӗр-пӗр япалана туянас тенӗ чухне, ҫынна хамӑр

майлă çавăрас тенĕ чухне, çын япали çине хамăрăн тăвасчĕ çакна тесе ăмсанса пăхнă чухне, çаксене пĕрне те вилсен хамăрпа пĕрле илме çуккине манса каятпăр, лере сут умне тăрсан явап тытмаллине те манса каятпăр.

Ку çĕр çинчи пуянлăх хăех çылăх тенине пĕлтермест — кун пирки Библире те нимĕн те каламан. Турă панă хамăр талантăмăра, пултарулăхăмăра, пурăнăçри ырăнăмăра лайăх, усăллă ĕç тунă çĕре парасса кĕтет Вăл пирĕнтен, тенĕ Библире. Арлăх-амалăх ыйтăвĕнчи пекех, укçа тăвас, влаç илес ĕçсем те тĕрĕс, анчах çылăхлă. Христиансенчен чылайăшĕ çакна тĕрĕс мар ăнланнă пирки çылăхлă та чуна пĕтерекен мăнкăмăллăха кĕрсе ӳкнĕ, ятарласа чухăнлăхра пурăннине хăйсемшĕн пысăк чыс тесе шутланă, ачисем нушаланса пурăннă вăхăтра: „Пĕтĕмпех Турă аллинче“, — тесе ним тумасăр алă усса ларнă.

Иисус Христос талант çинчен тĕлĕнмелле хайлав каласа панă: унта пĕр пуян çын тарçисене хăй çук вăхăтра усă курма тесе укçа валеçсе панă. Хуçа таврăнсан çакă паллă пулнă: хăш-пĕр тарçăсем укçапа пĕлсе усă курнă, çавна пула вĕсен укçа шучĕ те ӳснĕ, хуçи вĕсене тĕрĕс шухăшланăшăн, тимлĕ пулнăшăн мухтанă; наян та айван тарçă вара нимĕнех те шухăшласа тупайман, вăл хăй укçине пытарса хума кăна ăс çитерейнĕ,уншăн хуçа ăна ятланă.

Турă законĕсемпе килĕшӳллĕн вăй çитернĕ таран укçа ĕçлесе илĕр, ăна Турă хушнă пек тăккалăр. Вуннăмĕш пайне Хуçамăра паррăр, ку тĕрĕс те сçваплă япала, тенĕ Библире. Пурлăхăр пирки мĕнле те пулин иккĕленӳ çуралчĕ пулсан, Библие илĕр те Христос укçа ĕçлесе илесси пирки мĕн каланине вулăр, мулпа мĕнле усă курасси пирки, ăна мĕнле пайласси пирки каланине вулăр. Ун пек чухне хăвăртан ыйтăр: „Çак лару-тăрура Иисус Христос мĕн тунă пулĕччĕ?“ — çавна тĕпе хурса пурăнăр та.

Саккӑрмӗшӗ: христианӑн хӑйӗн таврашри ҫынсен нушине туймалла. Сирӗн ҫӗршыври хуласен чухӑш кӗтесӗсем сирӗншӗн йывӑр ҫӗклем пулса тӑрӗҫ. Сирӗнпе юнашарах пурӑнакан пиншер чухӑн ҫын пурӑнӑҫӗ сирӗншӗн пӗрремӗш ӗҫ пулса тӑрӗ. Вӗсен нушине ҫӑмӑллатас тӗллевпе эсир организацисемпе ушкӑнсен ӗҫне хутшӑнатӑр. Чылайӑшӗ хӑйсен пӗтӗм вӑхӑтне пысӑк предприятисенче ирттереҫҫӗ, кӳршӗрех нуша куракансене пулӑшма вӗсен нимӗн те тӑрса юлмасть.

Ахаль халӑх Христоса хаваспах итленӗ, тет Библи. Ӑҫта пырсан та чирлисене сипленӗ Вӑл, хуйхӑракансене йӑпатнӑ, хавхалантарнӑ Вӑл. Христианӑн асаплӑ ҫынсен шӑпине ҫӑмӑллатма больницӑсен, приютсен, ваттисен ҫурчӗсен, ытти ыркӑмӑллӑх организацийӗсен шутне ӳстерес тесе тӑрӑшмалла. Тӑван ҫӗршывӑн пуянлӑхне тӗнчери ытти нушаланакан ҫӗршывсемпе пайлас ӗҫе те хутшӑнмалла христианӑн. Нуша куракансене пулӑшакан ҫынсемпе-и е пӗтӗм тӗнчери халӑхсемпе-и, пуринпе те унӑн хутшӑмалла.

Халӑхран пирӗн уйрӑлмалла, тесе Библире каламан. Вӑл тепӗр майлӑ вӗрентет. Мӗскӗнсене пулӑшас тӗллевпе ӗҫлекенсемпе пӗрлешмелле пирӗн. Врачсен, больница таврашӗнче ӗҫлекенсен, медсестрасен, ҫын асапне ҫӑмӑллатма пулӑшакан ыркӑмӑллӑх организицийӗсенче ӗҫлекенсен тата ытти ҫавнашкан ҫынсен ӗҫӗсем Турра килӗшӳллӗ.

Америкӑри хӑш-пӗр паллӑ ыркӑмӑллӑхпа социаллӑ пӗрлешӳсен е клубсен девизӗсем ҫапларах: „Хамӑршӑн ӗҫлеместпӗр“, „Эпир тӑватпӑр“, „Ирӗклӗхпе пӗлӳ — пирӗн наци хӑрушсӑрлӑхӗ“, „Ҫывӑх ҫыннусене юрат“. Ҫак идейӑсене пурне те христианство ҫуратнӑ. Суя тӗнсен пӗрин те ҫакӑн пек учрежденисем ҫук. Пурте вӗсем — христианствӑн хушма ҫимӗҫӗсем, вӗсен хӑш-пӗр членӗ-

сем христиансем мар пулин те. Социаллă пулăшу ĕçне Христос Сывлăшĕ пулăшса тăрать. Сăмахран, сĕм авал нимĕнле больницăсем те пулман.

Чан-Кай-Шек арăмĕ каланă: „Конфуций тĕнĕ несĕлсене чунтан хисеплеме вĕрентет, анчах ваттисене валли пĕр çурт та туман вĕсем“, — тенĕ. Паллă ĕнтĕ, кашни христиан çак девизпа килĕшӳллĕн пурăнмалла. Эпир çакна чăнласах та тунă пулсан, эпир пурăнакан тĕнче чи лайăх тĕнче пулнă пулĕччĕ. Иисус Христос девизĕ çапла пулнă: „Юрату тата ĕç“ — Христоса юратни, Христосшăн ĕçлени; çывăх çынна юратни, çывăх çыншăн ĕçлени. Иисус Христос тата çапла та каланă: „Мана юрататăр пулсан, Ман заповедьсене тытса тăрăр“, тенĕ (Иоан. 14:15). Тепĕр майлă каласан: „Мана юрататăр пулсан, Мана итлĕр! Маншăн ĕçлĕр!“ Иисус Христос эпир Ана мĕнле юратнине эпир Уншăн мĕн тунине кура тĕрĕслеме пултарать. Ĕçлемесĕр юратма пулмасть.

Тăххăрмĕшĕ: христианăн тăван христиансен умĕнче хăйне майлă тивĕçĕ пур. Пирĕн тăван — христиансем — урăхла категори. Пирĕн вĕсене урăхла, ăс-тăн юратăвĕпе юратмалла. „Эпир тăванăмăрсене юрататпăр, çавăнпа эпир вилĕмрен чĕрĕлĕхе куçнă, ăна пĕлсе тăратпăр, тăванне юратман çын вилĕм аллинче тăрать“ (1 Илан. 3:14).

Пирĕн хамăрăн тăшмансене те юратмалла. Хамăра хӳтерекенсене те, „тĕрĕс мар хурлакансене те“ пирĕн юратмалла.

Анчах пирĕн юратăвăн чи çӳлĕ шайĕ эпир ытти христиансене мĕнле юратнинче палăрать. Иисус Христос каланă: „Эпĕ сире çакна тума хушатăп: Эпĕ хăвăра юратнă пек, эсир пĕр-пĕрне юратăр“, тенĕ (Иоан. 15:12).

Пĕр-пĕрне пулăшса пыма хушнă пире: „Пĕр-пĕрне юратса пулăшса тăрăр“ (Гал. 5:13).

Ĕненекен çынсен хутшăнăвĕ пĕр-пĕриншĕн тĕслĕх

пулмалла, тесе вӗрентет Библи. Павел апостол каланӑ: „Вӗрентме те, пуранӑҫ йӗркине те, юратма та, Турӑшӑн пурӑнма та, ӗненме те, таса пулма та ӗненекенсем санран курса вӗрентмелле пултӑр“, тенӗ (1 Тим. 4:12).

Ку вӑл сӗнӳ мар, хушу! Ку вӑл канаш мар, тивӗҫ. Пирӗн тӗслӑх кӑтартакан христиансем пулмалла.

Библи, ҫавӑн пекех, пире пӗрне-пӗри каҫарма вӗрентет. „Пӗр-пӗриншӗн ырӑ пулӑр, пӗр-пӗрне хӗрхенӗр, пӗр-пӗрне каҫарӑр, Турӑ та сире Иисус Христос урлӑ каҫарнӑ“ (Ефес. 4:32). Иисус Христос каланӑ: „Эсир ҫын айӑпне каҫармасан, Ҫӳлти Аҫӑр та сирӗн ҫылӑхӑрсене каҫармӗ“, тенӗ (Матф. 6:15). Вӑл каланӑ: „Кама та пулин ҫиленнӗ пулсан, кӗлӗре тӑнӑ чух, эсир ӑна каҫарӑр, вара Ҫӳлти Аҫӑр та сирӗн ҫылӑхӑрсене каҫарӗ“ (Марк. 11:25).

Пирӗн, христиансен, пӗрне-пӗри ятламалла мар, тӑванӑмӑрӑн ҫулӗ ҫине чӑрмав кӑларса тӑратмалла мар, тенӗ.

Библи калать: пирӗн пӗрне-пӗри пӑхӑнмалла, тет; пӗр-пӗринпе йӑваш пулмалла, тет. Пирӗн теприне „хамӑртан ҫӳллӗ“ тесе йышӑнмалла. Пирӗн ыттисене мала хумалла, хамӑра хыҫа хӑвармалла.

Христиан пек пулса пирӗн ытти ҫынсен йывӑрлӑхне те хамӑр ҫине илмелле. Ҫын хӑй кӑна ҫӗклеме тивӗҫ ҫӗклемсем пур, ун пек чухне ӑна никам та пулӑшаймасть. Сӑмахран, Турӑ Сӑмахне пӑхӑнса пурӑннӑ чухнехи таса пурӑнӑҫ йывӑрлӑхӗ, ачасене ӳстернӗ чухнехи, хӑвӑрӑн упӑшкӑра е арӑмӑра телейлӗ тунӑ чухнехи йывӑрлӑхсем. Ҫак тӗслӗхсенче пуринче те ҫыннӑн хӑйӗн йывӑрлӑхӗсене хӑйӗнех чӑтмалла. Анчах пирӗн туссем пире пулӑшма пултаракан йывӑрлӑхсем те пур, сӑмахран, хуйхӑ, инкек, тӗрӗслев, пӗчченлӗх, ҫемьери ӗҫсем, халӑх умӗнчи яваплӑх. Пирӗн хамӑрӑн йывӑрлӑхсене йывӑра илмелле мар. Эпир вӗсене пурне те Хуҫамӑр ҫине тиеме пултаратпӑр.

Унран вӑй пар, çирĕплĕх кӳр пире, тесе кӑна ыйтмалла. Хамӑр тӑванӑмӑра унӑн çĕклемне çĕклеме пулӑшасси пирĕн тивĕç.

Библире каланӑ: пирĕн, ĕненекенсен, пĕр-пĕринпе уçӑ кӑмӑллӑ пулмалла, тенĕ. Турӑ калать: пирĕн, христиансен, тивĕç — тӑлӑх арӑмсемпе тӑлӑх ачасене, чухӑнсене пулӑшасси, тет. Библи вĕрентет: Святойсемшĕн укçа ан хĕрхенĕр... çынна тараватпулӑр... çул çӳрекенсене йышӑнӑр... святойсен урисене çӑвӑр... ютран килнисене ан манӑр. Иисус Христос каланӑ: çак пĕчĕк çынсемшĕн эпир мĕн туни Уншӑн туниех пулать, „парасси илессинчен кӑмӑллӑрах“, тенĕ. „Ирĕклĕрен паракана Турӑ юратать“ (2 Кор. 9:7). Çаксем пĕтĕмпех — пирĕн, христиансен, пĕр-пĕрин умĕнчи обществăлла тивĕçсем шутланаççĕ.

Тата христианӑн ырӑ кӑмӑллӑ пулмалла, урӑхларах каласан, унӑн пурне те юратмалла, çемçе кӑмӑллӑ пулмалла, ку вара чи пысӑк паттӑрлӑхсенчен пĕри. Эпир яланах хамӑра тĕрĕс, çынсене тĕрĕс мар тесе шутлатпӑр. „Мĕн тума юранипе“ „мĕн тума юраманнине“ хамӑр ӑнланнӑ пек мар, Таса Çырура ӑнлантарнӑ пек туса пырсан кӑна тĕрĕс пулать. Чиркӳре тĕрлĕрен ушкӑнсем нумай пулни, вĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçни çакна палӑртать: çынсем ниме пĕлтермен ыйтусем тавра пĕрлешсе пĕчĕк ушкӑнсене пайланма юратаççĕ, çав ушкӑнсем хӑйсем çеç пур ыйтӑва та хурав пама пултаратпӑр тесе шутлаççĕ.

Гарри Айронсайд çапла каланӑччĕ: „Суя шухӑшӑра çирĕп ĕненӳпе пӑтраштарасран сыхланӑр“, тенĕччĕ.

Паллах, пӑсӑк япалана, усала, тĕрĕс марлӑха пирĕн сивлемелле, анчах та усала сивлетпĕр тесе эпир час-часах çылӑха кĕнĕ çынсене те каçарма пĕлместпĕр.

Телевиденипе пĕр паллӑ тĕн çынни çапла калани питĕ тĕлĕнтернĕччĕ мана: „Христос шанчӑксӑр çынсемпе, Хӑйне ӑша илмен çынсемпе калаçман та пулĕччĕ“, — терĕ вӑл.

Иисус Христос никампа та хутшӑнма хӑраманнине пӗлмеллех ӗнтӗ ҫакӑ ҫыннӑн! Кӗнекеҫӗсемпе фарисейсем Иисус Христоса Вӑл пур ҫынсемпе те: мытарьпе те, вӑрӑпа та, ӑсчахпа та, ҫӑмӑлттай хӗрарӑмпа та, пуянпа та, чухӑнпа та калаҫнӑшӑн, Хӑйӗн шухӑшӗсене вӗсене пӗлтернӗшӗн айӑпласа калаҫнӑ. Вӑл тӗл пулса калаҫакан хӑш-пӗр ҫынсенчен Унӑн вӗренекенӗсем те пӑрӑннӑ, апла пулин те Иисус Христос чухӑн ҫынсене, пурӑнӑҫӗпе тавлашакан суккӑрланнӑ ҫынсене пурпӗрех хӗрхеннӗ.

Иисус Христосӑн пурне те ӑнланса илме пултаракан ӑс-тӑн пулнӑ, тӗнче ун пеккине урӑх курман-ха. Унӑн шалти ӗненӗвӗ пысӑк, ҫирӗп, пӗр иккӗленӳсӗр пулнӑ, ҫавӑнпа та Вӑл, Хӑй нимпе те сымарланмассине ҫирӗп шанса, тӗрлӗ ҫынсемпе пӗр хӑрамасӑрах хутшӑнма пултарнӑ. Сехре хӑппине пула эпир урӑх ҫын каланине тимлеместпӗр, пирӗн шухӑшӑмӑра ыттисем шанмассинчен шикленетпӗр. Иисус Христосӑн ун пек хӑрасси пулман, Вӑл ун пек вак-тӗвекленмен. Унӑн хӑйне валли хӳтлӗх шырамалла пулман. Вӑл ырӑ тунипе ҫураҫу уйрӑмлӑхне аван пӗлнӗ, эпир те ҫакна Унран вӗренейсен, пирӗншӗн те питӗ лайӑх пулнӑ пулӗччӗ. Вӑл пире чи аслӑ, чи лайӑх чӑнлӑха каланӑ, Хӑйӗн вӗренекенӗсемпе сывпуллашнӑ чухне Вӑл каланӑ: „Кайӑр та ҫавӑн пекех тӑвӑр“, — тенӗ.

Ку христианӑн халӑх умӗнчи тӗллевӗсенчен пӗр пӗчӗк тӗслӗхӗ анчах. Вӑл тӗнчерен уйрӑлса пӗччен пурӑнӑҫпа пурӑнаймасть. Христиан — общество членӗ. Ҫавӑнпа та Христос вӗрентӗвӗ пирӗн хамӑра ҫывӑх ҫынсемпе мӗнле пулмаллине кӑтартать.

Библие вӗренӗр, вулӑр ӑна, — унта каланӑ пек пурӑнӑр. Ҫакӑн чухне анчах эсир Христоса парӑнни ҫӗнетсе улӑштаракан вӑй пулнине пӑлханакан ытти тӗнчене кӑтартма пултараятӑр.

ВУНҪИЧЧӖМӖШ СЫПӐК

# ХРИСТИАН МАЛАШЛӐХӖ

„Эпӗ сирӗн валли вырӑн хатӗрлеме каятӑп. Кайсан, сирӗн валли вырӑн хатӗрлӗп те, каллех килсе: Хам ӑҫта, эсир те ҫавӑнта пулӑр тесе, сире Хам пата илсе кайӑп“.

Иоан. 14:2-3

Халӗ эпир кӑткӑс лару-тӑрура пурӑннипе пӗтӗм тӗнче килӗшет. Чылайӑшӗ: нушасем ӳссех пыраҫҫӗ, теҫҫӗ. Хӑшӗсем калаҫҫӗ: халӑхсем вилӗм патнелле туртӑнаҫҫӗ, теҫҫӗ. Ытларахӑшӗ вара эпир халӗ тӗнче аталанӑвӗн юлашки тапхӑрӗнче пурӑнатпӑр тесе шутлаҫҫӗ.

Анлӑ сарӑлнӑ кӗнекесенчен чылайӑшӗ мӗн пуласси пирки ҫырнӑ кӗнекесем. Хаҫатпа журналсен малтанхи страницисенчех „Армагеддон“ ҫинчен, тӗнче пӗтессипе тӗнче аталанӑвӗн вилӗмӗ ҫинчен ҫыраҫҫӗ. Пӗр президент хӑйӗн сӑмахӗнче ҫапла каланӑччӗ: „Наука пире хамӑра хамӑр аркатма май туса пачӗ“. Виллиям Фогт хӑйӗн „Чӗрӗ юлмалли ҫул“ ятлӑ кӗнекинче ҫапла ҫырать: „Пилӗк материкре те тупнӑ стена ҫинчи ҫырусем Сут кунӗ ҫывхарса килнине пӗлтереҫҫӗ“, — тет. Ричард К. Ульман доктор ҫапла ҫырнӑ: „Эпир татӑклӑ суйлав ӗмӗрӗнче пурӑнатпӑр — ырра е усала, чӑнлӑха е суяна, пурӑнӑҫа е вилӗме суйламалла, кун пек вӑхӑт халиччен пулман-ха. Енчен те эпир суйлавра йӑнӑшрӑмӑр пулсан, эпир этемлӗхӗн юлашки ӑрӑвӗ пулӑпӑр“, — тенӗ.

Сорокин профессор каланӑ: „Эпир этемлӗх историй-

ӗн кризисӗ вӑхӑтӗнче пуранатпӑр. Вӑрҫӑ, выҫлӑх, мур чирӗпе революци ҫеҫ мар, ытти нумай нушасем те тӗнчене кисретеҫҫӗ. Пӗтӗмпех хӑйӗн хакне ҫухатрӗ. Пур йӗрке те пӑсӑлчӗ. Этемлӗх хӑйӗн пархатарлӑ тивӗҫне манса кайрӗ. Пур ҫӗрте те кризис хуҫаланать, культурӑпа обществӑна та ярса илет вӑл. Ҫак кризис искусствӑпа наукӑра та, философипе тӗнре те, йӑла-йӗркесемпе законсенче те палӑрать. Вӑл социаллӑ, экономикӑллӑ тата политикӑлла организацисен пурӑнӑҫне, вӗсен ӗҫӗ-хӗлне те пырса тивет. Ҫакӑн пек нушасем хыҫҫӑн пирӗн ҫине тата та пысӑкрах асапсем ӳкессе кӗтмелли ҫеҫ юлать".

Атомпа водород бомбисем ҫинчен ҫырнӑ литературӑна — Невадӑпа Бикинире ирттернӗ опытсем ҫинчен, хальхи вӑхӑтра этемлӗхе мӗнле кризис кӗтнине ӑнлантарма тӑрӑшакан кӗнекесемпе статьясене вуласан, наука Библин калас мелӗсемпе мӗнле усӑ курма вӗренсе ҫитнинчен тӗлӗнетпӗр. Вильбур Смит доктор калать: „Платон, Сенека, Аристотель тата ытти чи аслӑ философсенчен пӗри те пуласси ҫинчен каламан", — тет. Библи пӗртен-пӗр эсхатологилле кӗнеке шутланать. Пултарнинчен пуҫласа Иоанн ҫырнӑ таса Евангели тараах этемлӗх историйӗнчи питӗ йывӑр вӑхӑта кӗтни ҫинчен ҫырать Библи. Юлашки ҫулсенче чиркӳре ӗҫлекенсем мӗн пуласси ҫинчен хӗрсех калаҫакансемшӗн шикленнине палӑртатчӗҫ, халӗ вара чиркӳ хӑй те этемлӗх историйӗнче пулса иртмелли ӗҫсем ҫинчен Таса Ҫырура ҫырнӑ сӑмахсем ҫине ҫӗнӗлле пӑхма пуҫларӗ.

Тӗнчери Чиркӗсен Совечӗ 1954 ҫулта Ивенстонра ирттернӗ пухӑвӗнче ҫакӑн пек тема суйласа илнӗ: „Христос — тӗнче шанӑҫӗ". Мӗн пуласси ҫинчен Турӑ пӗлтернине чиркӗвӗн тӗплӗн пӗлсе тӑмалла пултӑр тесе пӗтӗм тӗнчери Совет Библие тӗпчесе вӗренме комитетсем йӗркеленӗ.

Пирĕн вăхăтра Библие пĕлмен арçынсемпе хĕрарăмсене чи йывăр самантра суя пророксем спиритизм, хиромакти урлă, „юмăç яракансем“, ытти тĕшмĕшле япаласем улталама пултараççĕ. Пуласси çинчен мĕн те пулин пĕлесчĕ тесе хăраса ӳкнĕ çынсем кунсерен пиншер доллар тăккалаççĕ. Вĕсен акă çапла тумалла — кĕнеке лавккине каймалла та хаклах мар тăракан Библи туянса вуламалла, унта вĕсем пуласлăхăн вăрттăнлăхĕсене тупĕç.

Америкăра паллă Мэри Бекер Эддин „Наукăпа сывлăх“ ятлă кĕнекинче пуласси пирки нимĕн те çук. Çавăн пекех эсир Корана пĕр сăмах сиктерми вуласа тухма пултаратăр, апла пулин те этемлĕх пуласлăхĕ пирки эсир унта пĕр сăмах та тупаймăр. Пĕртен-пĕр Библи кăна пуласлăхăн вăрттăнлăхне çутатса кăтартать.

Çак вăрттăнлăха хупласа тăракан чаршав çĕкленет те пуласси курăнать: эпир пĕлекен тĕнчен пĕтмелле, ун умĕн вара çĕр çине иккĕмĕш хут Иисус Христос килмелле, тесе пĕлтерет Библи. Вăл Христос патшасен Патши, хуçасен Хуçи пулса аслă вырăна ларасси çинчен калать.

Ку питĕ тавлашуллă, час-часах тĕрĕс мар ăнланакан тема пулнине эпĕ лайăх ăнланатăп. Маларах хăçан Килессине калакансем час-часах тĕл пулатчĕç, юлашкинчен çак чăнлăх уçăмсăрланса çитрĕ.

„Пурăнăçри тĕн“ журналта „Христиансен шанчăкĕ тата унăн паянхи пĕлтерĕшĕ“ ятлă статья пичетленсе тухнăччĕ. Статья теми: „пуласси“ — ун пирки хальхи вăхăтра пурăнакан виçĕ шухăшлавçă калаçать: пĕрремĕшĕ — Арнольд Тойнби доктор, паллă акăлчан историкĕ; иккĕмĕшĕ — Амос Н. Валдер доктор, тĕн догмачĕсем çинчен вĕрентекен, Чикаго университечĕн преподавателĕ; виççĕмĕшĕ — К. С. Люис доктор, паллă акăлчан ученăйĕ, Оксфорд университечĕн профессорĕ.

Тойнби технологи улшăнăвĕсене пула тĕнче икĕ пая пайланнă, вăл пур çынсене те пĕр-пĕринпе кӳршĕллĕ туса хунă, анчах вĕсене чăтăмлăх, юрату, пĕр-пĕрне ăнланассине памасăрах хăварнă, тет. Тойнби шухăшĕпе, христиансен шанчăкĕ „Левиафанпа“, çын хăйне хăй асла хунипе, материлле япалана, ушкăнран нимпе те палăрманнине мала хунипе кĕрешмелле.

Çын христианла шанчăкне историре тупайĕ-ши, тесе иккĕленет Вальдер доктор. Тасални çынран мар, ăс-тăн çăлкуçĕнчен пулса иртмелле, тет вăл. Синкер сиксе тухсан та тасату çулăмĕпе Турă тĕллевĕсем тĕнчере вырăна килмеллех, мĕн пулнине çыннăн ăнланса илмелле. Хăйĕн ăс-тăнĕпе çын хăçан та пулин çĕр çинче Турă Патшалăхĕ туса хуратех.

Люис доктор сăмахĕнче кăна эпир хамăр шухăшлавра Библи никĕсĕ çине таянма пултарни палăрчĕ. Вăл уççăнах калать: „Иисус Христос Турă пулнине, пĕлтернин чăнлăхне ĕненсе тăнă вăхăтрах эпир Иисус Христос килессине сивлеме е ăна пĕчĕклетсе кăтартма пултарнине нимĕнпе те ăнлантарма çук“, — тет.

Иисус Христос çĕр çине килессине çынсем мĕншĕн ĕненменнине виçĕ тĕслĕхпе сăлтавлать Люис доктор: пĕрремĕш, Иисус Христос иккĕмĕш хут килесси суя вĕрентӳ, тет ĕненекен христиансенчен чылайăшĕ, мĕншĕн тесен чиркӳ каланă пулин те, христианствăн малтанхи ĕмĕрĕсенче çак ĕç пулса иртмен. Чăн та, малтанхи христиансем Турă килессине хăйсем пурăннă вăхăтра кĕтнĕ, анчах та Библире каланисем иккĕмĕш хут киличченех пулса иртмелле. Ик — кĕмĕшĕ, эволюци теорийĕ чылай çынна Христос иккĕмĕш хут килессине ĕненме чăрмантарать, тет Люис доктор. Этем аталансах пырать тетпĕр пулсан, Христос килсе çылăхпа вилĕме пĕтерет тесе шантарнине ĕненейместпĕр эпир. Виççĕмĕшĕ, иккĕ-

мӗш хут килни миллион ҫынсен палӑртса хунисене, шухӑш-ӗмӗчӗсене пӑсать, тет Люис доктор. Вӗсем хӑйсен пурӑнӑҫне никама явӑҫтармасӑр, ӗҫсе, ҫисе, савӑнӑҫлӑ ирттересшӗн.

Ҫынсем Ной ӗмӗрӗнче ҫӗре шыв илессине ӗненменнин, кулнин сӑлтавӗ ҫакӑ пулнӑ, — пуласлӑх планӗсене пурӑнӑҫа кӗме нимӗн те ан чӑрмантартӑр тесе шутланӑ вӗсем. Юлашки вӑхӑтра ҫынсем хӑйсен чун туртӑмӗсене сивлемесӗр йӗкӗлтешсе кулӗҫ те ҫапла калӗҫ: „Вӑл килме пулни ӑҫта ӗнтӗ? Тӗнче пуҫланнӑранпах, аттемӗрсем виле пуҫланӑранпах, пурте ҫаплипех тӑрать, тейӗҫ“ (2 Петр. 3:4).

Ҫӗр ҫинчен кайнӑ чухне Христос Хӑй хӑҫан килессине каласа хӑварнӑ пулсан, Турӑ панӑ шанчӑкпа асӑрхаттару пӗтӗмпех ҫухалатчӗ. Вӑл хӑҫан килессине пӗлмен пирки ӗнтӗ пирӗн хамӑрӑн таса ҫуртӑмӑра яланах йӗркере тытмалла.

Тӗн вӗрентӗвне саракан Д.Л. Муди час-часах ҫапла каланӑ: „Турӑ эпӗ проповедь вулама пуҫличчен маларах ҫитмӗ-и тесе шутласа илмесӗр эпӗ нихӑҫан та хамӑн проповеде пуҫламастӑп“, — тенӗ.

Англири паллӑ чиркӳ деятелӗ Кемпбелл Морган доктор каланӑ: „Ирхине эпӗ хамӑн ӗҫе пуҫӑннӑ чухне Турӑ килсе пуҫланӑ ӗҫӗме чарса Хӑйӗн ӗҫне тума тытӑнмӗ-и тесе шутлатӑп. Эпӗ вилӗм кӗтместӗп. Эпӗ Ӑна кӗтетӗп“.

Христианӑн хӑйӗн пурӑнӑҫне ҫапла ирттермелле те, — Иисус Христос килессе яланах кӗтмелле! Кашни куна Сут умӗнхи юлашки кун пулнӑн пурӑнайсан, мӗнле улшӑнӗччӗ пирӗн пурӑнӑҫ!

Анчах та эпир кун пек шухӑшлама юратмастпӑр. Пирӗн тӗплӗн шутласа тунӑ пуласлӑх плансене Турӑ ангелӗсем килсе трупа сассипе татасси пирки шухӑшлама юратмастпӑр эпир. Эпир вак-тӗвек ӗҫсем айне путнӑ

пирки вĕсем пĕтесси пирки шухăшлама та пултараймастпăр! Пиртен чылайăшĕ çапла калама пултарать: „Юрĕ, халлĕхе тĕнче пĕтмен-ха, тен, вăл пĕтиччен тепĕр пин çул иртĕ, апла пулсан мĕн шухăшламалли ун пирки!“

Ку çапла та-и, тен! Анчах тепĕр енчен пăхсан, тепĕр майлă та пулма пултарать. Эпĕ тĕнче хăçан пĕтессине калаймăп. Чылайăшĕ çакă куна палăртса Христос ĕçне сиен кăна кӳнĕ. Фанатиксемпе тĕнри тăрлавсăр çынсем хăйсен ултавĕпе Турă иккĕмĕш хут килессин чăнлăхне христиансен ĕненĕвĕнчен кулмалли сăлтав туса хучĕç.

Суя пророксем пĕрре кăна мар халăха пăлхатнине тĕн историне тĕпченĕ çынсем лайăх пĕлеççĕ. 1843 çулта Вильям Миллер: мартăн 21-мĕшĕнче çĕрле тĕнче пĕтет, тенĕ. Шăп çур çĕр тĕлĕнче трупа сасси илтĕнсе кайĕ. Çĕрпе пĕлĕт тумтир пек пуçтарăнса выртĕ, вара Иисус Христос çĕр çине иккĕмĕш хут килĕ, тенĕ вăл. Библие мар, Вильям Миллера ĕненсе лартнисем пуçтарăнса çĕрĕпех Христос килессе кĕтнĕ, анчах ирхине нимĕн те кĕтсе илеймесĕрех татăлнă ĕмĕчĕсемшĕн намăсланса килĕсене саланнă.

Иисус Христос çакăн çинчен пĕрре кăна мар асăрхаттарнине аса илнĕ пулсан, вĕсем çак намăса курас та çукчĕ. „Çавăнпа ĕнтĕ сыхă тăрăр, мĕншĕн тесен çурт хуçи хăçан килессине пĕлместĕр: те каçпа, те çур çĕрте, те автан авăтнă вăхăтра, те ирхине килет; вăл сасартăк килсе, эсир çывăрнă тĕле ан пултăр. Сире каланине пуриншĕн те калатăп: сыхă тăрăр, тенĕ“ (Марк. 13:35-37).

Суя пĕлтерӳсем пекех, ăнлантарма çук вăйсем çĕр çинчи пурăнăçа сасартăках пĕтерсе лартма пултарассине те шута илменни, иккĕмĕш хут çĕр çине килни тени çынсемшĕн кулăшла пек туйăннă.

Çынсем хăйсене хăйсем хăрушсăрлăхра тесе лăплантарнин тепĕр сăлтав та пур. Ку вăл „прогресс“ çинчен

калакан суя вӗрентў! Ҫак вӗрентўпе килӗшўллӗ, ҫын тата унӑн ӗҫӗ майӑпен пулин те, шав малаллах шӑвать, пӗтӗмпех ҫыннӑн хӑйӗн вӑйӗнчен, ӑстӑнӗнчен кӑна килет иккен. Ҫак теорие ӗненекен ҫынсем Христос иккӗмӗш хут килессине ӗненетпӗр теҫҫӗ, анчах ҫын тасалса хӑй вӑйӗпе анчах ҫўле ҫӗкленме пултарать теҫҫӗ. Вӑрҫӑсенчен нимӗнле усӑ та ҫуккине, хапсӑнчӑк пулни, хӑв ҫинчен анчах шухӑшлани ӑссӑрла япала иккенне, тӗшмӗшпе чӑтӑмсӑрлӑхӑн уссӑрлӑхне ӑнланса илнӗ кун вӑл тӑван сыхлавҫи иккенне тата паллӑ йӗркесемпе килӗшўллӗ пурӑнмаллине уҫҫӑн курӗ.

Ку юмах „тытса чарма ҫук аталану теорийӗ“ юмахӗ анчах, унран ытла мар — ҫын шухӑшпа пулса иртекен япалара теме шаннинче тытӑнса тӑрать, чӑн пулма пултарасси пирки шухӑшламасть те. Ҫавӑн пек ҫынсем хальхи медицина пире хамӑрӑн мӑн асаттесенчен ытларах пурӑнма майсем туса пачӗ теҫҫӗ, анчах вилӗм халӗ те пирӗн пурӑнӑҫ вӗҫӗ пулнине шута илмеҫҫӗ. Эпир пурӑнӑҫа темиҫе ҫуллӑха тӑсма кӑна пултаратпӑр.

Вӗсем куҫса ҫўремелли, ҫыхӑнмалли мелсен аталанӑвӗ ҫинчен калаҫнӑ чухне эпир ҫак ҫӗнтерўсене хамӑрӑн ҫывӑх ҫынсене вӗлерме, аркатма усӑ курнине аса илесшӗн мар, ҫак ҫӗнтерўсемпе эпир Евангелипе христианство ӗненӗвне аталантарма усӑ курман вӗт.

Пирӗн шкулсемпе вӗренў заведенийӗсем нумай пулнипе мухтаннӑ чухне ҫак шкулсем вӗренекенсене Турӑ патне илсе ҫитерме мар, тата та аякка пӑрса кайни ҫинчен шарламаҫҫӗ вӗсем.

Ҫак ҫынсем атом вӑрттӑнлӑхне тупнӑ гениллӗ ӑс-тӑнсене мухтаҫҫӗ, эпир ҫав вӑхӑтра: ҫак пысӑк пӗлтерӗшлӗ япаласем малашне пире тата мӗн кӑтартӗҫ-ши? — тесе ыйтатпӑр сехре хӑпартса.

Акӑ мӗнле этемлӗх „прогресӗн“ чи ҫўлти пусӑмӗ. Акӑ

мĕнле чылайăшĕ лайăхрах та лăпкăрах пурăнăçпа пурăнас теекен ĕненĕвĕн çĕнтерĕвĕсем. „Прогресс“ вĕсене лайăххи патне илсе çитерĕ тесе ĕненеççĕ ĕнтĕ вĕсем, анчах вăл малалла çеç мар, каялла та илсе кайма пултарать!

Апла пулсан, тепĕр енĕ мĕн калать-ха? Христос çĕр çине килетех, пирĕн çак чаплă вăхăта кĕтсе илме яланах хатĕр пулмалли çинчен мĕнле шанчăклă ĕнентерӳсем пурха пирĕн?

Пирĕн ĕнентерӳ вăл Библи, Таса Çырура вара Иисус Христос иккĕмĕш хут килет тени уйрăмах хисеплĕ вырăнта. Библие тĕпчекенсенчен чылайăшĕ çакна палăртнă: çакăн пирки кашни вăтăр сăвăранах каланă, Иисус Христос пĕрремĕш хут килни çинчен каланисенче кашнинчех Вăл иккĕмĕш хут килесси çинчен сакăр хутчен каланă! Пурĕ виççĕр вунсакăр кăтарту. Авалхи Сăмахра кун пирки пур пророксем те каланă, Çĕнĕ Сăмахра — çырусем (1 тата 2 Фесс.), сыпăксем (Матф. 24; Марк 13; Лук. 21) пур.

Библире пур çĕрте те Христос çĕр çине килесси çинчен каланă. Акă, сăмахран, Исаия (66:15) пророк кĕнекинче каланă: „Акă Туррăмăр Хăйĕн хаяр çиллине тăкма, ялкăшса çунакан çулăмĕпе хăратса чарма вутра килĕ, Унăн ураписем çавраçил пек хăвăрт пулĕç“.

Иеримия пророк кĕнекинче каланă: Турă килсен, Иерусалим Туррăн аслă вырăнĕ пулĕ, пур халăх та Турă ячĕпе Иерусалима пуçтарăнĕ тенĕ, çапла май чи аслă конференци пулса иртĕ, вăл хăйĕн пĕлтерĕшĕпе халиччен Парижра, Вашингтонра тата Лондонра пулнă конференцисенчен те иртĕ!

Иезекииль пророк Иерусалим тепĕр хут çĕкленĕ, чиркĕве тепĕр хут тăвĕç, çĕршыв чечекленсе аталанĕ, тенĕ.

Даниил пророк хăйĕн тĕлĕкĕсенче çĕр çине Иисус Сут тăвакан пек, Хуçа пек пулса килнине курнă.

Осия пророк Турӑ ҫӗр ҫине киличчен маларах Израиль халӑхӗ Ана хӑйӗн Хуҫи тата патши тесе йышӑнӗ, тенӗ.

Иоиль пророк юлашки кун ҫӗр ҫинчи ҫар пӗлӗт ҫинчи ҫарпа ҫапӑҫма хатӗрленсе тӑрасси ҫинчен каланӑ.

Амос пророк Иерусалимри Давидӑн пулас аслӑ вырӑнне ҫырса кӑтартать.

Авдий пророк Турӑ патшалӑхӗ чӗрӗлсе тӑрасси ҫинчен асӑрхаттарать.

Михей пророк пур вӑрҫӑ та пӗтӗ, хӗҫсенчен сухапуҫ туптаса тӑвӗҫ, тенӗ.

Наум пророк: „Унӑн умӗнче тусем чӗтреҫҫӗ, Унӑн умӗнче ҫӗр чӗтрет, Вӑл ҫулӑмлӑн ҫунса тӑнине кам чӑтайӗ?“

Аввакум пророк Турӑ ҫӗнӗ Патшалӑхне Хӑйӗн виҫипе виҫнӗ чухне Унӑн умӗнче тусем чӗтренине пӗлтерет.

Софония пророк ҫӗнӗ юрӑ хывать: „Савӑн, Сион хӗрӗ! Чаплӑ хӗпӗрте Израиль! Хаваслан та савӑн пӗтӗм чӗререн, Иерусалим хӗрӗ! Санӑн тӑшманна хӑваласа ячӗ! Туррӑмӑр, Израиль патшийӗ, санӑн ҫумӑнта!“

Аггей пророк пысӑк аркату хыҫҫӑн Турра юрӑхли ҫеҫ юласси ҫинчен калать.

Захария пророк Турӑ Елеон тӑвӗ ҫине урипе пуссан „питӗ пысӑк айлӑмпа“ ту икӗ пая пайланассине ӳкерсе кӑтартать.

Малахия пророк Авалхи Сӑмах кӗнекене Турӑ таврӑннипе вӗҫлет, Ун ҫинчен вӑл акӑ мӗн калать: „Вӑл ирӗлтерсе яракан ҫулӑм пек, кӗлтӑрри пек тасатать, хӗвел пек пӗтӗм ҫӗре ҫутӑ сапалакан“, тет. Авалхи Сӑмахра Христос иккӗмӗш хут килесси пирки питӗ нумай ҫырнӑ.

Ҫӗнӗ Сӑмахра вара Вӑл килесси ҫинчен тата та сӑнарлӑрах, тата та ӑнланмалларах ҫырнӑ. Евангелие ҫырнӑ тӑватӑ ята аса илер-ха. Пӗрремӗшӗ — Матфей, Иисус

Христоса Хӑйӗн хӗрӗ патне килнӗ каччӑпа танлаштарать.

Иккӗмӗшӗ — Марк, Ӑна инҫе ҫула тухса кайнӑ ҫурт хуҫи пек, тарҫисене Хӑй мӗн таврӑниччченех тумалли ӗҫӗсене хушса хӑварнӑ пек курать.

Лука ҫырнӑ Евангелире Иисус Христос аякри ҫӗрсене хӑйӗн ӗҫӗсемпе тухса кайнӑ пуян та чаплӑ хуҫа пек, Хӑй таврӑниччен хуҫалӑхне тытма тарҫисене хушса хӑварнӑ ҫын пек курӑнать.

Евангели ҫыракансенчен тӑваттӑмӗшӗ — Иоанн Иисус Христос сӑмӑхӗсене илсе парать: „Эпӗ сирӗн валли вырӑн хатӗрлеме каятӑп. Кайсан, сирӗн валли вырӑн хатӗрлӗп те... сире Хам пата илсе кайӑп“.

Рим ҫыннисем патне янӑ ҫырура Вӑл килсен пӗтӗмпех Хӑйне мӗнле пӑхӑнтарнине куратпӑр эпир.

Коринф ҫыннисем патне малтан янинче Павел апостол каланӑ: Турӑ вилнисене чӗртме килет, тенӗ; Коринф ҫыннисем патне иккӗмӗш хут янинче пирӗн ҫӗр ҫинчи пӳрт ҫӗмӗрӗлнӗ хыҫҫӑн пире валли пурӑнма ҫӗнӗ ҫурт хатӗрленине пӗлтерет.

Колоссы (3:4) ҫыннисем патне янинче ҫапла каланӑ: „Хӑвӑра чӗрӗлӗх паракан Христос килсен, эсир те вара Унпа пӗрле мухтавлӑ пулса тӑрӑр“, — тенӗ.

Фессалоники ҫыннисем патне малтан янӑ ҫырура (5:23) Павел апостол Турӑ Ывӑлне пӗлӗтрен кӗтмелле, тет. Фессалоники ҫыннисем патне иккӗмӗш хут янинче (1:7) Турӑ Хӑйӗн мӗнпур святойӗсемпе килнине ҫырса кӑтартнӑ.

Тимофей патне янӑ ҫырура Турӑ Хӑй килнине юратса кӗтсе илнисене чӑнлӑх пуҫ илемӗ тӑхӑнтарӗ, тенӗ.

Тит патне янӑ ҫырура „телейлӗ ӗмӗт“ ҫинчен каланӑ.

Еврейсем патне янинче иккӗмӗш хут килнӗ чухне Вӑл ҫылӑхсене тасатма килмест, тенӗ.

Иаков апостол Турă килессе чăтăмлăн кĕтмелле, тет.

Петр апостол Турă каçхине вăрă килнĕ пек вăрттăн килсе кĕрес кун çывăхарни çинчен асăрхаттарать.

Иоанн апостол пур таса çынсене те çапла калать: „Эпир ĕнтĕ Турă ачисем, пире мĕн пуласси паллă мар халĕ. Пĕр çакна анчах пĕлетпĕр: вăл паллă пулсан, Христос евĕрлĕ пулăпăр, мĕншĕн тесен Вăл еплине курăпăр", тенĕ (1 Иоан. 3:2).

Иуда апостол калать: „Турă Хăйĕн мĕнпур святойĕсемпе килет", — тет.

Иоаннăн Пĕлтерни кĕнекинче пĕтĕмпех Иисус Христос килесси çинчен каланă.

Христос иккĕмĕш хут çĕр çине килнине кĕтсе Авалхи Сăмахпа Çĕнĕ Сăмахра кăна мар çырнă, пирĕн тĕнĕн историлле тĕн документчĕсене тĕпченĕ çын çакна курать: тĕн вĕрентĕвне тытса пыракансем пурте çак ырă хыпара ĕненсе йышăннă.

Иисус Христос çĕр çине иккĕмĕш хут килни тĕнчери тыткăнлакан, чи хаваслă чăнлăх пулĕ. Пире, шанчăксăрлăхпа тĕттĕмлĕх çавăрса илнĕскерсене, унта пуласлăх пулассине шантарать. „Мĕн пулĕ пире, ăçта илсе каяççĕ пире?" — тесе ыйтсан çынсем, Библи вĕсене тĕрĕс, тӳрĕ хурав парĕ. Вăл калать: юлашкинчен Иисус Христос килĕ, Турă суйласа илнисене парнесем пулĕç, тет!

Çак мухтавлă ĕç хăçан пулассине эпĕ каламăп. Святой Апостолсен Ĕçĕнчи 1:6-7 стиха эпĕ питĕ лайăх астăвакăп: „Эй Вĕрентекен, Израиль патшалăхне Эсĕ çавăн чух пуçтарса тăвас теместĕн-и? тенĕ. Вăл вĕсене каланă: Аттем Хăй ирĕкĕпе хунă вăхăта çула пĕлесси сирĕн ĕçĕр мар", — тенĕ унта.

Вăл хăçан килнине пире пĕлмесен те юрать. Пирĕн пурăнăçăмăрти кашни самантрах çав вăхăта кĕтсе илме хатĕр пулмалла! Иисус Христос каланă: çак вăхăта пĕлĕт

çинчи ангелсем те пĕлмеççĕ, труба сасси илтĕнсен пĕлĕт уçăлса Иисус Христос Хăйĕн пĕлĕт çинчи çарĕпе этемлĕх умне анса тăрас вăхăта Турă Хăй çеç пĕлет.

Анчах иккĕмĕш хут килни умĕн паллăсем пуласси çинчен Иисус Христос каланă: „Çаксем пула пуçласан, эсир пуçăра çĕклесе, çӳлелле пăхăр, мĕншĕн тесен сирĕн çăлăнас вăхăтăр çывăхарать вара, тенĕ. Унтан вĕсене юмах каланă: смоква йывăçĕ çине, ытти пур йывăçсем çине те пăхăр-ха: вĕсем çулçă кăлара пуçласан, эсир çавсене курса, çу çывăххине хăвăр та пĕлетĕр вара. Çавăн пекех, çаксем пула пуçланине курсан, эсир Турă патшалăхĕ çывăххине пĕлĕр вара“ (Лук. 21:28-31).

Иисус Христос пире сăнама хушса хăварнă паллăсем мĕнле пулса пыраççĕ-ха? „Хĕвелре те, уйăхра та, çăлтăрсенче те паллăсем пулĕç; çĕр çинче халăхсем хуйха ӳкĕç, аптрĕç; тинĕс шавласа пăлханса тăрĕ; çӳлти вăй-хăватсем хускалĕç те, тĕнчене килес асапсене кĕтсе, çынсем хăраса виле пуçлĕç“ (Лук. 21:25-26).

Вĕçсĕрлĕхе пăхса тăракан ангелсем вăхăта пирĕн пек, çĕр çинчи календарьпе, виçмеççĕ. Пирĕншĕн вара, хамăра ярса панă „çитмĕл, çирĕпрех пулсан, сакăрвунă çула“ пурăнса ирттерес текенсене, иртнĕ кунсене çĕр çинчи хамăр пурăнăçпа кăна хаклакансене, çĕр, икçĕр, пилĕкçĕр çул питĕ нумай çул пек туйăнать. Анчах çак çĕршер çулсем Турăшăн пĕр кун пек анчах пулма пултараççĕ.

Таса Çырăва вуланă ăсчахсенчен чылайăшĕ эпир халĕ çĕр çинче юлашки кунсем пурăнатпăр, эпир юлашки эрăна çитрĕмĕр — пиншер çул каялла рай пахчинче пуçланнă аслă драмăри юлашки акт пуçланнă теççĕ.

Çывăх Хĕвелтухăçĕнче йĕрке çук. Авалхи Перси нефтье пула каллех пысăк наци пулса тăчĕ.

Израиль çĕрĕ хăйĕн укçиллĕ, çарĕллĕ, гражданствăллă, хăй тĕллĕн патшалăх, хăй тĕллĕн наци пулса тăнипе

истори урапи хăйĕн аслă çаврăмне вĕçлет. Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи шăп çак пуян та тухăçлă çĕр çинче пирĕн цивилизаци пуçланнă. Çак пысăк лаптăкран вăл пур еннелле те сарăлса пĕтĕм çĕр чăмăрне çавăрса илнĕ. Вăл вĕçĕмсĕр куçнă, хăш чухне кăна вăй илмелле чарăнса тăнă, хăш чухне вара этемлĕхĕн тĕттĕм ĕмĕрĕнчи тискерлĕх, нимĕн пĕлменлĕх, сехре хăппи тыткăнне кĕрсе ӳкнĕ. Юлашкинчен вара, паянхи куна, вăл хăй ăçтан тухнă çавăнта таврăнма çула тухнă.

Кунсăр пуçне, халь мĕн пулса иртнине кура çак ăсчахсем Иисус Христос каланă ӳкерчĕке питĕ лайăх кураççĕ, Вăл каланă: „Ной вăхăтĕнче епле пулнă, Этем Ывăлĕ килнĕ чух та çаплах пулĕ: çĕр çине шыв тулас умĕнхи кунсенче Ной кимĕ çине кĕрес куна çитиччене хсем ĕçнĕ, çинĕ, авланнă, качча кайнă, шыв тулса пурне те пĕтеричченех нимĕнне те пĕлмен; Этем Ывăлĕ килни те çаплах пулĕ. Ун чухне хирте иккĕн пулсан, пĕрне илĕç, тепĕрне хăварĕç; ал арманĕ авăртакан икĕ хĕрарăмран пĕрне илĕç, тепĕрне хăварĕç. Çавăнпа ĕнтĕ сыхă тăрăр: мĕншĕн тесен Туррăр хăш сехетре килессине пĕлместĕр", тенĕ (Матф. 24:37-42).

Çак ăсчахсем Даниил пророк кĕнекине (12:4) те асăнаççĕ, унта юлашки кунсенче „пĕлесси ӳсет" тет пророк, вĕçĕ çывăхарса килнине çакă та палăртать. Тăшман пысăк вăйпа килет те „çĕрсем çине тапăнать, шыв тулнă пек тулса вĕсем витĕр тухса каять" тенĕ пророк. Кунта пĕрпеклĕх курма йывăр мар: пирĕн пĕлӳ питĕ ӳссе кайрĕ, юлашки аллă çул хушшинче çынсем вырăнтан вырăна куçма пултарассине те асра тытмалла.

Эпир пĕлекен историре ĕç-пуçсем хальхи пек нихăçан та хăвăрт аталанман, çынсем тăвакан тĕлĕнтермĕшсем те хальхи пек час-часах пулса пыман.

Юлашки çирĕм пилĕк çул хушшинче ĕçленĕ врач-

семпе психиаторсем каланӑ тӑрӑх, ҫын ӳчӗ хальхи вӑхӑтра нумай вӑй хурать, ҫакӑн пек хӑвӑртлӑха, хистеве вӑл чӑтаймасан та пултарать, анчах та эпир ҫаплах пӗр чарӑнми чупатпӑр. Ҫак хӑвӑртлӑха хӑйсен ӗҫӗсемпе пурӑнӑҫа кӗртме май туса панӑ ӑсчахсенчен чылайӑшӗ хӑйсен ӗҫ сӗтелӗ хушшинчен вилнӗ, хӑйсем шутласа кӑларнӑ хӑрушӑ япаласене пулах вилнӗ вӗсем!

Аслӑ пӗлӳллӗ ҫынсем нумай пулмасть кӑна-ха Петр апостолӑн иккӗмӗш ҫырӑвӗнчен (3:10-12) кулатчӗҫ, анчах водород бомби сирпӗнни, унтан та хӑрушӑрах кобальт бомби шутласа кӑларни вӗсене шухӑша ячӗ, Библире тӗрӗс каланинчен тӗлӗнеҫҫӗ вӗсем халӗ.

„Турӑ кунӗ ҫӗрлехи вӑрӑ пек килсе ҫитӗ, вара пӗлӗт кӗрлесе пӗтсе ларӗ, тӗп япаласем вутпа ялкӑшса ишӗлсе анӗҫ, ҫӗр те, ун ҫинчи пур ӗҫ те ҫунса пӗтӗ. Ҫаксем пурте ҫапла пӗтмелле пулсан, сирӗн, Турӑ килес куна кӗтсе, ӗмӗтленсе тӑракансенӗн, Турра хисеплесе мӗн тери таса пурӑнас пулать? Вӑл кун ялкӑшса ҫунакан пӗлӗт ишӗлсе анӗ, вут хыпнӑ тӗп япаласем шӑранса пӗтӗҫ“ (2 Петр. 3:10-12).

Эпӗ Вильям Миллер тата ун йышши ҫынсен йӑнӑшне тумӑп, Христос вӑхӑтне каламӑп. Эпӗ чунтан ӗненсе калатӑп: эпир пурӑнакан вӑхӑт ытти вӑхӑтсенчен тӗпрен уйӑрӑлса тӑрать. Хӑвӑртлӑх ӳсрӗ, тем тӗрлӗ ӗҫсем те питӗ нумай пулса иртеҫҫӗ, нумаях та пулмасть кашни ҫакӑн пек ӗҫ вуншар ҫуллӑх тӗлӗнтермӗш пулнӑ пулӗччӗ, халӗ вара вӗсем пӗр-пӗрин хыҫҫӑнах пулса пыраҫҫӗ, вӗсен хушшинче пушӑ вырӑн та ҫук. Кӑмӑл-сипет пӗтсе пырать, вӑл пӗтсе пынине пытарми пулса ҫитрӗмӗр. Ертсе пыракансене укҫа тӗртни, укҫа парса хӑйсем май ҫавӑрни йӗркене кӗрсе ҫитрӗ ӗнтӗ.

Унсӑр пуҫне эпир тӗнсӗрлӗхӗн хӑватлӑ вӑйӗпе пырса ҫапӑнатпӑр — суя тӗнлӗ Римран пуҫласах христианствӑн

чи вӑйлӑ, пысӑк тӑшманӗ ку. Пророксем асӑрхаттарнӑ антихрист пирӗн куç умӗнчех ӳсет пулӗ: сӗмсӗр, лайӑх хӗçпӑшалланнӑ антихрист, вӑл хӑй камне те, хӑйӗн чӑн тӗллевӗсене те пытарма пултарать.

Апокалипсис юлташӗсем (Иоанн Пӗлтернинчен): вӑрçă, выçлӑх, чирпе вилӗм — эпир пурте питӗ лайӑх пӗлекен пулӑмсем халӗ тӗнчипех сарӑлнӑ. Вӑхӑт виçекен çӳлти ӳтсем пире тепӗр вунӑ, çӗр е пин çул парӗç, е пӗр кун, эрне е уйӑх анчах. Тен, çакна пирӗн вӑхӑт çинчен каланӑ пуль: „çавсем пурте пуличчен çак ӑру та пӗтмӗ“ (Матф. 24:34).

Çак аслӑ кунччен пур христиан та хавхаланса, кӗтсе пурӑнмалла. Иисус Христос каланӑ: „Çавӑнпа ӗнтӗ сыхӑ тӑрӑр: мӗншӗн тесен Туррӑр хӑш сехетре килессине пӗлместӗр“, тенӗ (Матф. 24:42).

Çак шанӑç паракан япала пире, ӑна ӗненекенсене, Туррӑмӑршӑн ӗçлесе пурӑнма хистемелле. Иисус Христос каланӑ: „Эпӗ тавӑрӑниччен çак минасемпе тупӑш тӑвӑр“ (Лук. 19:13). Христианшӑн çак вӑхӑт кӗтессипе хатӗрленӳ вӑхӑчӗ пулмалла. Иисус Христос каланӑ: „Эсир та çапла хатӗр тӑрӑр: Этем Ывӑлӗ эсир шухӑшламан сехетрех килӗ“, тенӗ (Лук. 12:40).

Пирӗн истори вӗçне çитсе пырать, ун чухне вара Унӑн пур тӑшманӗсем те Унӑн ури умне ӳкӗç, Иисус Христоса Патшаналартӗç. Библире каланӑ: „Давид патшалӑхне паянтан пуçласа ӗмӗрлӗхе çирӗплетсе лартма, ӑна тӳрӗ сутпа тӗреклӗлетсе пыма Давидӑн аслӑ вырӑнӗпе патшалӑхӗнче Турӑ ирӗкӗпе канӑçлӑх вӗçӗмсӗр ӳссе пырӗ“, тенӗ (Иса. 9:7).

Çак мухтавлӑ кун пур вӑрçăсемпе хирӗçӳсем те чарӑнӗç. Текех çылӑх та, нуша та пулмӗ. Çав кун пур хуйхӑ та, пур чир те çухалӗ. Çав кун суя тӗнлисем тӗне кӗрӗç. Турӑ çинчен пӗлмен пӗр çын та юлмӗ. Çав кун пӗтӗм

çутçанталăк рай пахчинчи пек чаплă та илемлĕ пулĕ. Çав кун тискер кайăксем те пĕр-пĕринпе туслă пулĕç, Турă юратăвĕ пĕтĕм çĕре сарăлĕ. Çав кун эпир яланах ялкăшса вуланă кĕлĕ: „Санăн Патшалăху килтĕр“, тени вырăна килĕ.

Тĕнчен тăвата енне
Хĕвел çутă сапаланăн
Турă Патшалăхĕ ĕмĕрлĕхе
Çĕре çăтмах туса çутатĕ.

Акă мĕнре христиан шанăçĕ!

ВУНСАККӐРМӖШ СЫПӐК

# ...ЮЛАШКИНЧЕН – КАНӐҪЛӐХ

„Сывлӑшӗпе тӗреклине Эсӗ пӗтӗмпех ырӑ канӑҫлӑхра усратӑн, мӗншӗн тесен вӑл Сан ҫине шанса тӑрать“

Иса. 26:3

Турӑпа канӑҫлӑ тӑрасси мӗне пӗлтернине эсир лайӑх пӗлетӗр. Христиан мӗнле пулмаллине те пӗлетӗр. Канӑҫлӑхпа телее мӗнле шыраса тупмаллине пӗлетӗр. Канӑҫлӑхшӑн миллион долларлӑх чек ҫырса пама пултаракан ҫынсене те эпӗ сахал мар пӗлетӗп. Миллионшар ҫын туртӑнать ун еннелле, анчах та вӗсем эсир Христосра тупнӑ канлӗ пурӑнӑҫ патне ҫывхарсанах сатана вӗсене илӗртсе суккӑрлатать, канлӗ пурӑнӑҫра тӗттӗм чаршавӗпе хупласа хурать те вӗсене улталать. Вӗсем хӑйсем илес тенине илеймесӗрех юлаҫҫӗ. Анчах та эсир канӑҫлӑх тупрӑр пулсан, вӑл ӗмӗрлӗхе сирӗн пулӗ. Эсир пурӑнӑҫ вӑрттӑнлӑхне тупӑр.

Эсир ӑнланманни те нумай. Вӑрттӑнлӑхӗсем те нумай. Эсир татса парайман ыйтусем те нумай. Апла пулин те эсир канӑҫлӑ, ку вара сире пӗр иккӗленмесӗр ӗненесси патне илсе ҫитерӗ. Христиан пурӑнӑҫӗн идеалӗ пур философилле пӗтӗмлетӳрен те пысӑкрах пулнине курса ӗненӗр. Материализм, атеизм тата ытти филосифилле ӑнлантарусем мӗн панипе Иисус Христос мӗн сӗннине танлаштарма та ҫук.

Тиссен доктор хӑйӗн „Христиан этики“ ятлӑ ӗҫӗнче

çак япаласене палăртать: пĕрремĕшĕ — ывăллăх тăвать. Иисус Христоса хăвăра Çăлакан тесе йышăннă самантран сире Турă кил-йышне илнĕ. Халĕ эсир те Унăн ачи. Эсир халĕ, патшамăр çынни пулнă май, ыттисенчен çӳлерех тăратăр, сирĕн тивĕçĕр те пур. Сире усрава илнĕ пирки, патшасен Патшин, хуçасен Хуçийĕн кил-йышне кĕнĕ пирки халĕ сирĕн юн тымарĕсенче патша юнĕ юхать.

Иккĕмĕшĕ: эсир — аçăр пурлăхне илекен. Библире каланă: эсир çӳлтен çуралатăр пулсан, эсир Христосăн пурлăхне илекен пулатăр, тенĕ. Пурин пурлăхĕ те халĕ сире юлать.

Виççĕмĕшĕ: канăçлăх. Турă каçарсан, Турăпа килĕшӳ тупсан, хăвăрпа хăвăр тата çывăх çыннăрсемпе, уйрăмах Турăпа лайăх пулсан кăна эсир канăçлăх тупайăр. „Усал çынсемшĕн канăçлăх çук, тет манăн Турă“ (Иса. 57:21). Иисус Христос хăйĕн юнĕпе хĕрес çинче пирĕншĕн Турăпа канлĕх килĕшĕвĕ çырнă, Хăй те пирĕн канлĕх пулса тăнă. Эпир ăна ĕненетпĕр пулсан, пире Турă тӳрре кăларать, тек нимле майпа та тупма çук шалти çураçу пулĕ çакă пирĕншĕн. Иисус Христос пирĕн чĕрене кĕрсен эпир çылăхран тасалатпăр. Хамăра пăсăк, пултарусăр тесе шутланинчен хăтăлсан, эпир пуçа çĕклесе хамăра çывăх çынсене куçĕсенчен тӳррĕн пăхма пултаратпăр. „Çыннăн пурăнăçĕ Турра юрăхлă пулсан, Вăл унăн тăшманĕсене те унпа килĕштерет“ (Юм. 16:7). Унтан та ытларах: вилсен те эпир Турă умне çав лăпкăлăха çухатмасăр пырса тăрасса пĕлетпĕр эпир. Нимĕнле парти те, нимĕнле философи те пире çакăн пеккине шантарма пултараймасть.

Ыттисенчен уйăрса тăракан тăваттăмĕш паллă вăл — сывлăшшăн пурăнни. Хăйĕн иртнĕ пурăнăçĕ тĕрĕс мар пулни пирки никам та татса калаймĕ, анчах та чунĕ вилĕмлĕ пулнине ăнланать кашниех. Турă сăмахĕсене

пӗлмен ҫын, тен, хӑйӗн шалти туйӑмӗсене ӑнлантарма та пултараймӗ, анчах та ӑна вӑл пӗрех туять. Нимпе те уйӑрӑлса тӑман ҫынсемех хӑйсем вӑхӑт-вӑхӑтпа ырӑпа усала уйӑрайманнинчен тӗлӗнеҫҫӗ, тӗрӗсмарлӑхпа килӗшӳ тума пултарнинчен, тӗрӗс ӗҫшӗн мар, усӑллӑрах ӗҫшӗн хыпӑннинчен аванмарланаҫҫӗ. Пуҫӗпех ҫылӑх ӑшне путнӑ ҫыннӑн та хӑш чухне лайӑх ҫын пуласси килет. Тем пек пӗтсе ҫитнӗ ҫын та, намӑсне ҫухатнӑ ҫӑмӑлттай хӗрарӑм та — пурте пӗлеҫҫӗ: чун тӗпӗнче вӗсен кӑшт та пулин хӑйсенчен лайӑхрах пуласси килни пур. Йӗркеллӗ пурӑнӑҫпа пурӑнас тесе шухӑшлакан тӗне кӗмен арҫын-и, хӗрарӑм-и унта, пурте ӑнланаҫҫӗ: хӑйсен тӗллевӗнчен вӗсем питӗ аякра тӑраҫҫӗ, вӗсен асапӗ ҫылӑхпа лайӑх мар ӗҫсем айне пулнинчен килнине, малтан вӗсен Христоспа чӗрӗлмеллине, унтан тин сывлӑш законӗсемпе пурӑнма пултараяссине ӑнланманнинче.

Иисус Христос каланӑ: „Эпӗ: чӗрӗлӗх тупчӑр, чӗрӗлӗх вӗсенӗн ытлашшипех пултӑр, тесе килтӗм", тенӗ (Иоан. 10:10). Павел апостол ҫапла каланӑ: „Ҫапла ӗнтӗ кам Христоспа, вӑл ҫӗнӗрен пулнӑ ҫын, авалхи иртсе кайнӑ, халӗ пурте ҫӗнӗ", тенӗ (2 Кор. 5:17).

Христоспа ҫӗнӗрен ҫуралмалла тени вӑл ҫӗнӗ идеалсемшӗн, ҫӗнӗ ӗмӗтсемшӗн, шанӑҫшӑн, ҫак ҫӗнӗ тӗллевсене килтерме ҫӗнӗ пултарулӑхшӑн ҫуралмалла тенине пӗлтерет. Христос, Хуҫӑр тата Вӗрентекенӗр пек пулса, сире ҫӗнӗ пурӑнӑҫ пачӗ. Эсир ҫӳлтен ҫуралтӑр.

Пиллӗкӗмӗшӗ: чуна кирлӗ хутшӑну савӑнӑҫӗ, ку вӑл эсир христиан пулнинчен килет. Пӗчченлӗх — чӗмсӗр хӑрушлӑх, этемлӗхӗн чи пысӑк асапӗ. Халӑх хушшинче те хамӑра пӗччен туйни ҫинчен калаҫатпӑр эпир. Урапа ҫулӗпе пӗччен утнинчен те ытларах пысӑк хулара хӑйне пӗччен туякан ҫынсем те сахал мар. Эпир хамӑра ӑнланма пултаракан, хамӑрӑн чи вӑрттӑн шухӑш-кӑмӑла пӗл-

терме пултаракан çынна шыратпăр, унпа каласма пултăр, пурăнăçа вăл пирĕн пекех ăнлантăр, пирĕн пек тĕллевсемпех пурăнтăр, ăна пирĕн пекех хаклатăр.

Пирĕн çĕршывра час-часах çапла каланине илтме пулать: „эпир пирĕн чĕлхепе каласакан çынна шыратпăр“, ку вара Мухтав юррисене юрлакан пĕлтернинех эпир тепĕр хут каланине пĕлтерет: „Сылтăм енне çаврăнса пăхатăп та, куратăп: мана пĕлекен никам та çук; хӳтĕ вырăн пулмарĕ мана, чунăмшăн тăрăшакан никам та çук“ (Псал. 141:4).

Эсир ĕнтĕ ĕнентĕр: Иисус Христос — сирĕн пĕртенпĕр Тус, Вăл сирĕн кашни шухăшăра ăнланать, эсир Унпа хутшăнма пуçласан текех хăвăра нихăçан та пĕччен туйăмăр. Иисус Христос сирĕн чĕрĕрте тивĕçлĕ вырăн йышăнсан Турăран аякра тăрасси пĕтĕ. Эсир Турă умĕнче тăратăр. Унпа хутшăнасси — каласа ăнлантарма çук чаплă савăнăç. Нимле философи те çакăн пек пуян пил параймĕ сире.

Улттăмĕшĕ: Иисус Христос хыççăн кайса эсир çĕнĕ вăй тупатăр. Этем хăй умне хăй лартнă тĕллевсене те пурăнăçлаймасть те, Турă лартнă пысăкрах та йывăртарах тĕллевсене вырăна килтересси пирки сăмах та пулма пултараймасть. Моисей панă законсем Турра юрăхлă пурăнмалли чи çăмăл йĕркесем пулин те, эсир ытла та вăйсăр пулнипе, ăна та пулăшусăр тăваймастăр. Этемлĕх историйĕ тăршшĕпех çын пĕр шухăшран тепĕр шухăш çине куçнă, вĕсене тытса тăма вăй çитерессе шаннă вăл, анчах шалта ăнланнă: унăн вăйĕ вăхăтлăх тӳрлетӳ валли кăна çитĕ, тĕпренех вăл нимĕн те улăштараймĕ. Этем вăйсăрлăхĕ „çĕнĕ çул ĕмĕчĕсенче“ лайăх палăрать, кун пирки ĕнтĕ тĕнчипех шӳтлесе каласаççĕ, Турă пулăшмасăр çын хăйĕн пурăнăçĕн пĕр страницине те усăйманнине кăтартать ку. Христоспа çĕнĕрен çурални кăна çынна

хӑйӗн пурӑнӑҫне улӑштарма кӑна мар, ҫӗнӗ ҫын пулма пулӑшать.

Дамаска кайнӑ чухне Савл каланӑ сӑмаха эпир пурте пӗлетпӗр, ҫавӑн чухне ӗнтӗ Иисус Христос унӑн чӗрине кӗрсе Хӑйӗн хаяр тӑшманӗнчен чи вӑйлӑ пӗлекенӗ туса хурать. Паянхи кун та ҫын ҫапла тӗлӗнмелле улӑшӑнни тӗл пулать, пурте вӗсем Савлпа Павла улӑштарнӑ мелсемпех пулаҫҫӗ — Иисус Христос урлӑ ҫӗнӗрен чӗрӗлни ҫакӑ!

Нимле философи те ҫакӑн пек улшӑнусем тума пултараймасть, тата ҫакӑн пек вӑй параймасть. Ҫак хӑватлӑ вӑй сирӗн яланах пулӗ, ун еннелле аллӑра тӑсса хӑвӑр патӑра килме кӑна ыйтӑр. Турӑ каланӑ: „Ан хӑра, мӗншӗн тесен Эпӗ — санпа; ан шиклен, мӗншӗн тесен Эпӗ — санӑн Турру; Эпӗ сана тӗреклӗлетӗп, пулӑшӑп, сана Хамӑн тӳрӗлӗхӗн сылтӑм аллипе тытса тӑрӑп", тенӗ (Иса. 41:10).

Кирек мӗнле лару-тӑрура та, кирек мӗне суйласа илсен те, кирек мӗнле тивӗҫ пулсан та, кирек мӗнле тупӑшпа ҫухату пулсан та, нуша ҫитсен Унӑн вӑйӗ сирӗн вӑй пулса тӑрӗ.

Ҫиччӗмӗшӗ: христиан пурӑнӑҫне тытса пыни пиллӗх парӗ. Ҫылӑх тата шалти тивӗҫсӗрлӗхе туйни ӳтпе сывлӑш хал-туйӑмне пусарса тӑрать. Ӳтпе таса мар пулни, хамӑра хамӑр тытма пӗлменни, ҫывӑх ҫыннӑмӑрах курайманни, хамӑр тытакан тӑлевсем патне ҫитеймессине ӑнланни — акӑ ӳтпе нервӑ чирӗсен сӑлтавӗсем. Ҫылӑхпа айӑпа туйни ахаль ҫынна хӑйӗн тивӗҫӗсене тума чӑрмантарать, чунпа та, ӳтпе те ӑна чирлӗ тӑвать. Ӑнсӑртран мар Иисус Христос ҫӗр ҫинче пулнӑ чухне сиплес ӗҫне Хӑйӗн кӗллисемпе тата вӗрентӗвӗсемпе ҫыхӑнтарнӑ, Сывлӑш пурӑнӑҫӗпе ӳт сывлӑхӗ тата ӑс-тӑн хушшинче ҫирӗп ҫыхӑну пур.

Этем чĕринче Турăсăр канăçлăх çук. Иисус Христоспа хутшăнни хăех ăс-тăнпа ӳте лайăх витĕм кӳрет, ӳт-пӳпе чун-чĕре вăйне сыхлать, вĕсене аталантарать. Çапла майпа Иисус Христос ӳт-пӳпе чун-чĕре вăйне кăна мар, сывлăш вăйне ӳстерет. Шалти тĕнче — сывлăш пурăнăçĕ аталанни, Унпа савăнса хутшăнни тата çĕнĕ вăй илнĕ хыççăн çын çĕнĕрен çуралать.

Чăн ĕненекен христиан кăна усă курма пултаракан япаласем те пур. Сăмахран, сирĕн пысăк ăс пулĕ, пурăнăçра Турă ертсе пырĕ сире. Библире каланă: „Сиртен камăн та пулин ăсĕ çитеймест пулсан, вăл пурне те уçă кăмăлпа, сăмах тĕртмесĕр паракан Турăран ыйтăр, вара илĕ“, тенĕ (Иак. 1:5).

Христиан яланах ырра шанать, Турă пĕлтернине пула пурăнăçра пĕтĕмпех пиллĕхлĕ вĕçленнине ĕненсе тăрать.

Христианăн, çавăн пекех, тĕнче тавракурăмĕ те пур. Çав тавракурăм Турă мĕн тума шутланине тата пурте тума ĕметленекен ĕçсене курса пырать. Çынсем пĕрпĕринпе çапăçнине, пире хăйĕн хĕскĕчĕпе тытма тăрăшакан çутçанталăк арканăвне пăхмасăр Турă Хăйĕн аслă вырăнĕ çинче ларать, пуринпе те хуçаланать. Сатанана та Турă хăйĕн вăйĕпе Турă ирĕк панă чухлĕ кăна усă курайрать. Таса Çыру пире вĕрентет: Туррăмăрăн историн кашни тапхăрĕ, кашни халăх, кашни уйрăм çын валлиех палăртса хуни пур, тет. Таса Çыру Иисус Христос килмеллине Турă палăртса хунине те уçса парать пире, ун чухне Унăн Патшалăхĕ пулассине те. Çапла майпа христиан пурăнăçĕ палăртса хунипе йĕркеленсе пырать, юлашкинчен пур тĕрĕсмарлăха та Турă çĕнтерессе вăл шанса тăрать.

Христиан пурăнăçĕн урăхла пурăнăçсемпе танлаштарсан лайăхрах енĕсем пур тетпĕр пулсан, христиан ĕмĕрсем хушши лайăх пурăнасси пирки те каласа хăвармаллах.

Иов каланӑ: „Этем пӗрре вилсен тек пурӑнасси пур-и?“ (Иов 14:14). Унтан хӑех каланӑ: „Эпӗ пӗлетӗп: мана Ҫӑлакан чӗрӗ; юлашки кун ҫитсен, Вӑл манӑн ҫак ҫӗрсе тӑракан ӳтӗме тӑпраран каллех чӗртсе тӑратӗ“, тенӗ (Иов. 19:25).

Мӗнлерех малашлӑх! Мӗнлерех пуласлӑх! Мӗнлерех шанӑҫ! Мӗнлерех пурӑнӑҫ! Эпӗ хамӑн вырӑна ҫӗр ҫинчи чи пуян та чи чаплӑ ҫын вырӑнӗпе те улӑштармастӑп. Эпӗ патшасен Патшийӗн ывӑлӗ, Христос пурлӑхне илекенӗ, пӗлӗтри Патша кил-йышӗн ҫынни пулса юлатӑп!

Эпӗ хам ӑҫтан килнине пӗлетӗп, эпӗ мӗншӗн кунта килнине те пӗлетӗп, эпӗ ӑҫта каяссине те пӗлетӗп, — ҫавӑнпа та манӑн чунра канӑҫлӑх. Канӑҫлӑх манӑн чӗрене юхса кӗрсе чуна тулать!

Тӑвӑл алхасатчӗ. Тинӗс хӑрушӑ хумсемпе чул тӑва ҫапӑнатчӗ. Ҫиҫӗм ҫиҫетчӗ, аслати авӑтатчӗ, ҫил вӗретчӗ; анчах та чул ту ҫурӑкӗнче пӗр кайӑк сӑмсине ҫунатти айне чиксе лӑпкӑн кӑна ҫывӑрать. Ҫакӑ — канӑҫлӑх: тӑвӑл вӑхӑтӗнче канлӗн ҫывӑрма пултарни!

Иисус Христоспа эпир лӑпкӑ, пурӑнӑҫри пӑшӑрханура, пӑлханура тата иккӗленӳре эпир канлӗ. Тӑвӑл алхасать, анчах пирӗн чӗресенче канлӗх хуҫаланать.

Юлашкинчен, килӗшӳ — тулли канӑҫлӑх!

Грем Билли

Мир с Богом
Перевод на чувашский язык
Переводчики П. Львов, Е. Степанова, О. Туркай
Редактор П. Львов

Д-р Б. Г.

# ТУРĂСĂР КАНĂÇЛĂХ ПУЛМĔ

ТУХĂÇРИ
ÇУТĂ

Д-р Б. Г.

# ТУРӐСӐР КАНӐҪЛӐХ ПУЛМЁ